Чăваш халăх ăс-хакăлĕпе ӳнер академийĕ

Ерагин Е.Е.

# ЙĔРĔХ

Шупашкар
«Çĕнĕ Вăхăт»
2017

УДК 398.3
ББК 63.5(2Рос.Чув)
Е 69

Чăваш халăх ăс-хакăлĕпе ӳнер академийĕн Президиумĕ
14.09.2017ç. пичетлеме ирĕк панă

Кĕнеке редакторĕ – Матвеев Г.Б., чăваш халăх ăсчахĕ,
истори ăслăлăхĕсен кандидачĕ

Кĕнеке рецензенчĕсем: Егоров Н.И., Станъял В.П., Ендеров В.А.

Кĕнекене кун çути курма çул уçаканĕ – академин хисеплĕ членĕ, РФ хисеплĕ строителĕ, ЧР тава тивĕçлĕ строителĕ Гордев В.Н.

Ерагин Е.Е.
Йĕрĕх. – Шупашкар: «Çĕнĕ Вăхăт», 2017. – 188 с.

Ĕçре чăваш хĕрарăмĕсен аталану чунăшне (туррине) Йĕрĕхе тĕрлĕ енчен тишкернĕ, пĕлтерĕшне, пулăвне, вырнаçнине, йăли-йĕркине т.ыт. те пăхса тухнă. Кĕнеке этнологи специалисчĕсене кăна мар, чăваш халăхĕн чăн пурнăçĕпе кăсăкланакансене те кирлĕ пулмалла.

ISBN 978-5-906983-52-7

© Чувашская народная академия
наук и искусств, 2017
© Ерагин Е.Е., 2017

Алҫырура актуаллӑ темӑна ҫӗкленӗ. ЧПГӐИ-ре этнологсем хальхи вӑхӑтра шӑпах чӑваш мифологи справочникне тӑваҫҫӗ. Мифологи персонажӗсене справочникре кӗскен ҫеҫ ҫырса кӑтартнӑ. Малашне монографи те хатӗрлесшӗн вӗсем. Анчах иккӗшӗнче те кашни турӑшпа (божества) чунӑша (духи) ятарлӑ анлӑ ҫутатса пама ҫук. Пысӑкрах пӑлтерӗшлӗ персонажсем ҫинчен уйрӑм кӗнеке туса кӑларасси те – этнографсен ӗмӗчӗ тата тивӗҫӗ. Е.Е. Ерагин этнограф пӗрремӗш ҫак тӗллеве пурнӑҫлама тытӑнчӗ. Йӗрӗхе пӑрремӗш кӗнеке халаллани ӑнсӑртран мар. Чӑваш культуринче – мифологире, философире, этнографире – Йӗрӗх пысӑк вырӑн йышӑнать.

Автор нумай литература тата архив фончӗсене пӑхса тухрӗ, паха та пуян материал тупрӗ. Вӗсене тишкерсе вырнаҫтарса тухса интереслӗ те тухӑҫлӑ алҫыру туса хатӗрлерӗ. Автор сӑмахӗсем вырӑнлӑ, техӗмлӗ, источниксенче «йӗрӗх» ӑнлав тӗшшине вӑл аван курать. Хӑй Йӗрӗх сӑнарне мӗнлерех курнине каласа парать, вулакана хӑйне те шухӑшлама тата хак пама источниксене пӑр улӑштармасӑр илсе кӑтартать. Ку енӗпе автор хӑйӗн тӗллевне пурнӑҫланӑ.

Сарӑту облаҫӗнче Йӗрӗх пирки вӑтам ӑру таран пӗлеҫҫӗ. Ача-пӑчана шыва кӗнӗ чухне амӑшӗсем асӑрхаттарнӑ, кунта Йӗрӗх пӑрахнӑ вырӑн, унталла ишсе ан кайӑр. Асӑрхамасӑр ишсе кайсан, аса илсе вӑл вырӑнтан «ах, Йӗрӗх» тесе васкаса тухнӑ.

Автора пысӑк тав каласа, никам тӑвайман, вӑл тунӑ ӗҫшӗн мухтаса алҫырӑва пичете сӗнетӗп. Е.Е. Ерагин этнограф ӗҫӗ питӗ сумлӑ та кирлӗ. Вӑл чӑваш культуришӗн, наци хӑйъевӗрлӗхӗшӗн пысӑк тӳпе пулӗ.

*Матвеев Г.Б.,*
*ЧПГӐИ истори енӗн ӑслӑлӑх ертӳҫӗ ӗҫтешӗ,*
*истори ӑслӑлӑхӗсен кандидачӗ,*
*8.11.2017.*

Йӑх аталанӑвӗнчи килйыша юрӑхлӑ йӑла-йӗркепе пӗрлешсе пулнӑ Йӗрӗх пирӗншӗн сӗм-авалтан ҫутҫанталӑкри ырӑ, таса Турӑ пулса тӑрать. Тӗрӗксен пӗрлӗхӗнчех ҫуралнӑскер вӑл

халĕ те чăваш хĕрарăмĕн пурнăçне çутатса тăрать. Несĕлсем патне йăли-йĕркипе пиçĕхнĕ, уйрăм халăхсен тĕнчекурăмне пĕтерес тĕлĕшпе опытлă ислам килсе патшалăхăн хăватлă пусмăр тытăмĕпе уса курса çивĕч кĕрешӳ пуçарсан та вăл упранса юлнă. Саманасем улшăнсан Вăтам Атăл тăрăхĕнче темиçе ĕмĕр хĕреслĕх витернине те Йĕрĕх чăтать. Çутçанталăкран уйрăлмасăр пурăнакан вырăнти халăхсене тăван çĕрĕнчен, ăсхакăлĕнчен писме Турă ан калатăр.

*ЧПГĂИ филологи енĕн ăслăлăх ертӳçĕ ĕçтешĕ,*
*Егоров Н.И.,*
*филологи ăслăлăхĕсен докторĕ.*
*12.10.2017*

Чăваш халăх академийĕн президенчĕ Евгений Ерагин сĕтел çине тепĕр кĕнеке алçырăвне кăларса хучĕ. Ăна «Çимĕк-çинçе çитсессĕн» кĕнекен малалли пайĕ тесе хаклама пулать.

«Йĕрĕх» кĕнекене вуласан чăваш тĕнĕ-ĕненĕвĕ çав тери тарăн та пуян иккенне кирек хăш çын та ăнланса илме пултарать. Ыра-хаярсем пирĕн 500 яхăн. Вĕсенчен пĕр чĕрĕкне çапла туллин тĕпчесен чăвашсен авалхи философине тĕнче шайне кăларма пулĕччĕ.

Кĕнекене тĕплĕ çырнă. Вулама кăсăк. Пупсем пĕр куçпа, чăвашсем тепĕр куçпа пăхнă авалхи ăс-хакăл еткерĕ çине. «Йĕрĕхсене тĕпчени» пĕрремĕш сыпăкра çавă лайăх курăнать. 8 пайлă тĕпчев-сăнав ĕçĕнче («Йĕрĕх ăçтан тухнă», «Йĕрĕх çулĕ-йĕрĕ», «Йĕрĕх вырăнĕпе сăнарĕ», «Йĕрĕх йăли-йĕрки», «Йĕрĕхлĕхри аваллăх паллисем», «Тӳркĕлли» тата ыттисем) истори, лингвистика, мифологи, топоними, медицина, эстетика, мораль тата ытти пĕтĕм ăслăлăх çаврăнать.

Питĕ пысăк ĕç тунă. Тав сана, ламшар! Часрах пичетлесе кăлар.

Таврапĕлӳçĕсем, тĕпчевçĕсемпе студентсем валли тĕслĕх пултăр. Ытти ыра-хаярсене те çаплах шĕкĕлчесе тухмалла вĕт...

*Станъял В.П.,*
*Чăваш халăх ăсчахĕ*
*19.09.2017*

Евгений Евстафьевич ячĕ – чăваш культуринче çĕнĕ ят мар. Унăн тăван халăхăмăрăн истори кунçулне, йăли-йĕркипе сăмахлăхне пухса-тишкерсе-хакласа-пичетлесе кăларнă ĕçсем сахал мар. Вăл хăйĕн кĕнекисенче ялан мĕн те пулин çĕннине калама, паллă ăсчах-тĕпчевçĕсем курманнине курма, ăшри туйăмпа çыхăннă ĕмĕчĕсене ыранхи ăрусем валли çырса хăварма тăрăшать.

Паянччен кун çути курнă вун-вун кĕнеки (Чулхула облаçĕнчи Воротынец р-не кĕрекен тĕрлĕ ялсене халалласа çырнă ĕçсем, 2003-2005; «Моргаушский край», 1994; «Юнкăпоç тата Спиридон Яндуш», 2006; «Тени тăрăхĕ», 2008, «Çимĕкçинçе çитсессĕн», 2010; «Земля Богатыревская», 2014 т.ыт.те, т.ыт.те) тĕрлĕ ӳсĕмри тата ăслăлăхпа хуçалăх отраслĕсенче вăй хуракансемшĕн те, вĕренекенсемпе вĕрентекенсемшĕн те, тавракурăмçăсемпе таврапĕлӳçĕсемшĕн те çав тери интереслĕ.

Алçыру пирки нумай çырас шухăшăм çук, мĕншĕн тесен кĕнекене Йĕрĕхпе çыхăннă нумай япалана кĕртнĕ. Кунта пурĕ 8 пысăк сыпăк, вĕсем хăйсем тата пĕчĕкрех пайсем çине вакланаççĕ, асăннă пулăма тĕпченин кĕске кунçулĕ те, аваллăх паллисем те, йăли-йĕркипе çул-йĕрĕ те, унăн паллисемпе сĕвĕрĕлнин кунçулĕ те, т.ыт.те.

*ЧПГĂИ истори енĕн ăслăлăх аслă ĕçтешĕ,*
*Ендеров В.А.,*
*филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ,*
*1.11.2017*

## Кӳртĕм

Чăваш турри-чунăшĕ тенисенчен Йĕрĕхе эпир уйрăм тĕпчеме палăртрăмăр, çынсен ку чунăш пирки пĕлӳ туллирех пулмалла тетпĕр. Тĕпчевре çемье, килйыш пурнăçĕн малтанхи пĕр опытне кăтартни те паянхи обществăри хĕрарăм вырăнне ăнланма пулăшать, турăш-чунăшсен халăх тĕнчекурăмĕнчи пĕлтерĕшне, Йĕрĕхĕн săваплăх шайне, çыхăнăвĕсене уçăмлатать.

Хальхи обществăра цивилизаци хăнăхнă çемье тытăмĕ йăшни пурне те пăшăрхантарать. Хĕрарăмпа арçын пĕлтерĕшĕсем те малтанхи мар. Çапах çемьери, килти чунлăх шăнăрне малтанхи пекех ытларах хĕрарăм тытса тăрать. Çавна май та пулĕ тахçан авал çакна йĕркелекен, сăнарлакан ятарлă чунăш – Йĕрĕх – çирĕпленнĕ. Унăн витĕмĕ халĕ те пур. Çавăнпа та халăх кунçулĕнчи çак опыта шута илни паянхи çемьене те тĕреклетме пулăшмалла.

Йĕрĕх пирки ку таранчен пухăннă пĕлĕве эпир пĕтĕмлетсерех кăтартма тăрăшрăмăр, уçăмлăрах пултăр тесе уйрăм темăсем тăрăх та вакларăмăр, сăмахран, йĕрĕх пĕрни, тӳркĕлли т.ыт.те. Кашни сыпăкра унти тĕп шухăша çирĕплетме архиври е литературăри тĕслĕхсене илсе панă, ахаль сăнланисемпе пĕрлех тиркешсе çырнисене те кĕртнĕ. Материала йĕрĕхлĕхĕн аталанса çитме пултарнă хапине кура йĕркелеме пикентĕмĕр.

Саманасем, ăрусем улшăнаççĕ пулин те çынсем çутçанталăк вăйне, турă хăватне, асамлăха ĕненме пăрахмаççĕ. Килйыш таврашĕнчи чунăш-чĕмсене те этем асрах тытать, кулленхи пурнăçра вĕсем хăйсемех çынна аса илтереççĕ. Йĕрĕх, Хĕртсорт, ыттисем малтанхи пекех, хамăрăн авалхи несĕлсене тимленĕ пекех, пирĕн лăпкăлăха, тăнăç кунçула упраççĕ, килти çынсене инкек-синкекрен, хаяр куçран, куç ӳкесрен хӳтĕлеççĕ. Вĕсемпе туслă, килĕшӳллĕ пурăнсан, эппин, килте лайăх пулсан, çыннăн пурнăçĕ, пĕтĕм ĕçĕ-хĕлĕ пур енчен те ăнмалла..

Çутçанталăк йĕрки, çĕр çинчи пурнăç, уçлăхпа вăхăт, пур япалапа пулăм та хăй тĕллĕшшĕн çуралса тата пĕтсе пыни çынна яланах шухăшлаттарать. Тĕнчере пурте пĕр-пĕринпе

çыхăннă. Уйрăм тенĕ кирек мĕнле япала, пулăм, юхăм пин-пин çыхăнупа, куçăмпа тепĕр тĕслĕ уйрăммипе çыхăнать. Час-часах тата курни-туйни чăнлăхпа тӳр килмест. Япаласен, чĕрĕлĕхĕн те тĕрлĕ еннелле çеç мар, шалалла, ăшнелле шухăша илсе каякан пĕлтерĕшĕ пур. Унăн чиккине шырама çăмăлах мар. Çĕр çинчен çухалакан, вилекен çын чунĕ те çуралакан ачара палăрать. Çĕр çинчи япаласене, пулăмсене тарăн тинкерсе те этем Çӳлти вăй хăватне ăша илет. Çут тĕнчене тимлесе эпир тем те куратпăр, хамăр шухăша ним çинче те тӳрех тытса тăраймастпăр. Çапах пĕрпеклĕхсене асăрхаса, тӳссе ирттернине, курни-илтнине пĕтĕмлетсе, халăх ăс-хакăлне, лару-тăрăва шута илсе пуçри арăш-пирĕшлĕхе йĕркене кĕртме пикенетпĕр.

Хĕвел-атте пурин çине пĕрпек çутатать, пĕрпек ăшă парать, Торă ырлăхĕ пурин валли те çитет. Çут тĕнче, çутçанталăк пурне те аталанма, хунама, ĕрчеме хистет. Çак уçлăхра Чăваш амăшне Йĕрĕх вăй хушать, хавхалантарать. Хамăр йăла-йĕрке пирки калаçма, ăна хаклама пирĕн чĕлхен хăвачĕ те çителĕклĕ. Мĕншĕн тесен çак ырă пурнăç ĕç-пуçĕ, ваттисем пилленĕ çул-йĕр, Торă хушнă йĕрке тăван чĕлхепе калаçакан тăван халăх хушшинче калăпланнă.

Чăваша Йĕрĕх пурри иккĕлентермест, нихăçан та иккĕлентермен – вăл пур. Малтан та пулнă, халĕ те пур. Лере те пур, кунта та пур. Вăл ку тĕнчере: килйышпа, йăхпа, ăратăпа пĕрле, малта, çӳлерех. Анчах хăйне уйрăм мар.

Йĕрĕх уйрăм çын шухăш йĕркине вырнаçмасть, логикăна та пăхăнмасть. Йĕрĕхлĕхре авалхи е хальхи çук. Авал та, кайран та хĕрарăм ача çуратса ӳстерме, ăна çунатлантарма чунне панă. Çын пур вăхăтра та тĕпренчĕкĕсемшĕн тăрăшнă, вĕсенче хăйĕн несĕлĕсен ахрăмне курнă.

Йĕрĕхлĕхри ĕç-пуça, япалисене, вырăнне пайăррăн уйăрмаççĕ, пĕлтерĕшĕсем, сыпăкĕсем тăрăх вакламаççĕ – ăшĕ, кăкĕ, чунăш таппи – пурте пĕрле. Çак вăхăтрах Йĕрĕхĕн уçăмлă сăн çук, вăл тулли сăнар, пĕр евĕр кӳлепе илмен, ăна вăл кирлĕ те мар.. Вăл тата тĕрлĕ çĕрте тĕрлĕрен сисĕнет, ялйыш

пурнăçĕнчи вырăнĕ те пĕр пекех мар. Çыннисем хирĕççен те Йĕрĕхсем пĕр-пĕринпе вăрçăнмаççĕ.

Киремете вăхăтпа тата ялйышпа пĕрле каяççĕ, ытларах арçынсем тата аслăрах хĕрарăмсем. Йĕрĕх патне вăхăчĕпе е нуша килсен утаççĕ, ытларах çамрăк хĕрарăмсемпе ачисем. Пуçтайса ыйтма пĕлсен вĕсене вăл пулăшать. Хĕрарăм çутçанталăка ӳчĕпе çеç мар, чунĕпе те çывăхрах. Йăха тăсассишĕн вăл ытларах пăшăрханать, епле пулсан та ăру хăварма тăрăшать. Ахальтен-им, мăшăрлă пурнăçа хатĕрленсе тӳшекĕ çинче те хĕр варринче мар, айккинче (ытларах сулахай енче) выртса çывăрма хăнăхать, чĕри енче пулас упăшки валли вырăн хăварать. Ăна ача çуратма пулăшакан Ама (Омай) турă та хĕрарăм сăнарлă. Йĕрĕх те, чи малтанах, хĕрарăма йăха тăсма, йыша аталантарма хавхалантаракан турăлăх, ырă чунăш. Вăл хĕрарăма ваттисем сĕм авал суннине, пилленине пурнăçлама пулăшать, пурнăçа, килйыша тытса тăма хистет, килĕшӳллĕ лăпкă кунçул сунать. Авалтанпа хурăнташсене – хĕрарăм тăрăх кайнă тăхăмсене – çураçтарать, пĕрлештерет, çыхăнтарать. Хĕрарăм хăйне мĕнле хаклани Йĕрĕхе тимленинче палăрать.

Йĕрĕх кил, йăх ырри пулса сĕм-аваллăхран, матриархатран, ку тарана çитнĕ. Çак чунăша чăваш хăйне те çемьеллĕ туять. Ку илĕртӳллĕ йыш çын, уйрăмах, хĕрарăм ăшĕнче, умĕнче çуталса, выляса тăрать, килйыша, ăратăна сӳнме, çĕр çинчен çухалма памасть. Ахальтен мар йăх ĕрчевлĕхĕ, татуллă аталанăвĕ, ĕçме-çиме çитсе пыни, хĕрарăм чирĕсенчен сывалса пыни, касу чирĕнчен, тăшман усалĕнчен хăтăлса юлни, çичĕ ют мăшкăлĕнчен хӳтĕленме пултарни Йĕрĕх тĕрĕс-тĕкел упранинчен килет теççĕ. Вăхăтпа Йĕрĕхе парне те кӳмелле. Ĕмĕртен çыннăн йĕркеллĕ, тăнăç кунçулĕ турра асăнма, пуçтайма пултарнинчен, йăла-йĕркене çирĕп уянинчен, хутшăнусене кăмăллă, хирĕçӳсемсĕр туса пынинчен, хамăрăн çĕр çинчи тивĕçе манманнинчен килнĕ.

Йĕрĕхлĕхпе çыхăннă йĕрке, çутçанталăкри килĕшӳ, чĕрĕлĕх пĕрьевĕрлĕхĕ, Йĕрĕхрен хăрани, шикленни те çынна асăр-

ханullă пулма вĕрентет, хăйне йĕркеллĕ, тирпейлĕ тытма хистет. Çак чунăшпа туслă пурăнас тени, ăна таса чунпа ĕненни, шанни тивĕçлĕ йăла-йĕрке туса пыма хушать. Йăла-йĕркере, вĕсемпе çыхăннă сăмах-юмахпа тĕшмĕш-ĕненӳре çын халăх ăс-хакăлĕнчи, кунçулĕнчи пулăмсене те, хăй пурнăçĕнче пулса иртнине те курать, малашлăха та туять. Турра юрăхлă irttерне йăла – асар-писерленнĕ ку тĕнчене, хамăр таврана, чун-чĕрене йĕркене кĕртес, малтанхи ырлăха та тавăрас, çума илес, ĕлĕкхи ăс-хакăл йăлисене çĕнетес тесе тунă асамлă ĕç. Йĕрĕхпе çыхăннă йăла-йĕрке кил таврашĕнчен аякка тухмасть.

Хальхи вăхăтра Йĕрĕхе ятлă тулли пĕлӳ, тивĕçлĕ ĕненӳ халăхăн кулленхи пурнăç йĕркинчен тухма пуçланă пек, манăçни те пур. Халь хĕрарăмсем ача сахал çуратаççĕ, тăван-хурăнташсен çыхăнăвĕсем те ансăрлансах пыраççĕ. Йĕрĕх пĕлтерĕшĕ, обществăри вырăнĕ патриархат çитсен – арçын пуç пулса тăрсан – улшăнма тытăннă теççĕ. Тутарлăх, хыççăн хĕреслĕх килсе кĕрсен ытти чăн турă-ырăсемпе пĕрле вăл та хăшпĕ-



Хĕрарăм сăнарлă Йĕрĕх пуканисем[1]

рисемшĕн пачах сумсăра тухать. Социализм саманинче те вăл кирлĕ пулман. Халăх тĕнчекурăмĕпе Христос чиркĕвĕ уйрăмах ăнăçлă кĕрешет, «йĕрĕх» ăнлава «турамăшь» тенĕ сăмахпа ылмаштарма хăтланса чăваш пуçне минретет.

Йĕрĕх килйышпа пĕрлех пулма, çӳреме тăрăшать, çут тĕнче пуçланнăранпах; тен, унсăр унта килĕшӳ те пулаймасть. Йĕрĕх чатăрта (юрттăра, пӳртре) тĕпелте тăнă е килйышăн, хĕрарăмсен урапи çинче. Саманасем улшăнсан унăн хыçкиле, ампара, лаçа куçма тивнĕ, хыççăн – пахчана та, çывăхри хӳме е йывăç çине. Чăваша юратман вăйсем ăна ял хапхинчен те хăваласа кăларма хăтланнă: ял таврашĕнчи катана, çырмана, таса уя е улăха. Çавна май та пулĕ паян Йĕрĕх арканури ăнлав пек курăнать, халăхри сумĕ, килйышри, ăратнери пĕлтерĕшĕ чылай сĕвĕрĕлнĕ пек; ăна ăнланни, ĕлки-кӳлепи, пур çĕрте пĕр пек мар пулин те, улшăннă.

Тĕпчевçĕсемпе, чăвашлăха сăнанă çулçӳревçĕсемпе, тĕрлĕ çыравçăсемпе кунта, хамăрăн çак ĕçре, тупăшăва кĕрес темен, май килнĕ таран вĕсем асăрханисене, шухăш пĕтĕмлетĕвĕсене кĕнекене кĕртнĕ. Тепĕр вырăнта «йĕрĕх» пĕлтерĕшлĕ ăнлава «тӳркĕлли», «тӳрĕ», тен, «кĕлĕ» те, сăмахсемпе палăртаççĕ. Çавнашкалах «чи хисеплĕ» Йĕрĕхе е «асли», «утаман» тенĕ, е Тӳрĕ, Тӳркĕлли тесе каланă. Хамăр ĕçре эпир çак тата ытти сăмахсен (терминсен) çак пĕлтерĕшĕсемпе усă куртăмăр:

вăйпитти хĕрарăм – ача çуратма пултаракан çулсенчи хĕрарăм; женщина фертильного возраста;

ирĕлчĕк – тимĕр çине юхса сарăлнă, йăла валли усă куракан вак укçа пысăкăшь (шурă) тăхлан; слиток;

йĕрĕхлĕх – Йĕрĕхпе çыхăннă тĕрлĕ ĕç-пуç, йăла-йĕрке;

калай – шурă тăхлан; олово;

кап – фигура, изображение, идол; объем, величина, внешний вид; ку сăмахран кивĕ славянла «капище» сăмах та пуçланнă;

киремет – турра асăнмалли, кĕлтумалли, çӳлти вăй-хăватпа çыхăнмалли çутçанталăкри вырăн; капище;

кошак коçĕ – тĕрлĕ тĕслĕ, йăлтăркка пĕчĕк çаврашка (-5-15 мм); блестка;

кӳлепе – тело, туловище, стан; форма, вид; скульптура;

орхамах – тутлă чустаран пĕçернĕ чĕрчун ĕлкиллĕ пĕчĕкçеç çиме;

плашши – капăрлатма (ытларах, ăйăр çинчи ут таврашне) усă куракан лаптак çаптарккă (штамповка) е шăранчăк (отливка) – пăхăр хутăшĕнчен, ытларах, йĕсрен; (медная) пайетка;

пукане – çын евĕрлĕ тетте, Йĕрĕхе хĕрарăмпа курăмлă çыхăнтаракан япала; кукла;

пӳрнеккей – сăмахлăхри пĕчĕкçеç ача; «мальчик с пальчик»;

пӳрнелли – пӳрне тачкăшь тăршшĕ виçи, вăтамран 2,1 см;

сăркăч-çĕрĕ – печатка (сăркăч – печать, штамп)

çутанкка – вак укçа пысăкăшь, çуталса тăракан, металл çаврашки; блестка;

турăш – чунăша, турăлăха палăртакан, сăнарлакан япала, кĕлетке, ӳкерчĕк; икона;

тотарлăх – Магомет тĕнĕ; магометанство, ислам;

Тӳрĕ – аслăрах, хисеплĕрех Йĕрĕх

Тӳркĕлли – темиçе (нумай) ăрупа пурăннă Йĕрĕх;

халал – малашлăха туйса-ăнкарса ăрăвăн тивĕç ăс-хакăлне, пурнăç çул-йĕрне чун-чĕререн палăртни, ыр сунни; посвящение, завещание, завет;

халăхлăх – уйрăм халăха кăтартакан паллăсен (тĕнчекурăмĕ, йăли-йĕрки, ташши-юрри, чĕлхи, ĕç тăваслăхĕ, çипуçĕ, кунçулĕ, çĕрĕ-шывĕ т.ыт.те) пĕрлĕхĕ;

хĕреслĕх – Христос тĕнĕ; христианство, православие;

хунтă – хӳтлĕх, хӳтĕлевçĕ; помощь, содействие, поддержка; влияние, авторитет; защитник, заступник, покровитель;

хунтăла – защищать, заступиться, покровительствовать; поддерживать, оказать содействие, помогать;

Хорачон – леш тĕнче ахрăмĕ, сивĕлĕх; çын ăнкарайман хăрушă ĕç-пуç; усал, шуйттан;

хывăм – пожертвование, вклад;

чĕм – леш тĕнче шевли, пайăрки;

чĕмлĕх – непознаваемая действенность духов, ожидаемая неосущаемость организма;

чун – чĕрĕлĕхĕн турра юрăхлă палли; этем туякан чĕрĕлĕхĕн ăш-пиллĕ хавхи;

чунăш – çынна витерекен ырă е усал сывлăш, ансат турă; дух (добрый, злой), божок;

чунлăх – чун-чĕре ăшши; душевность;

Ĕçе сыпăксем çине пайлани, пĕтĕмĕшле илсен ирĕклĕ, условно. Алла лекнĕ пур материала та кĕнекене кĕртме тăрăшнăран пĕр япала е пулăм пирки калани темиçе çĕрте пулма пултарать. Тĕслĕхсене хăш вырăнтан пулнине е кам, хăçан çырнине палăртнă. Хамăр шухăша ăçтан е камран, мĕнле литературăран е архивран илнине, е ăна çирĕплетнине предложени е абзац вĕçĕнче апострофри цифрăпа кăтартнă (сноска).

# I. Йӗрӗхлӗхе тӗпчени

Чӑвашсем пирки хӗреслӗх тӗнчинче XVI–XVII ӗмӗрсенче калаҫма-ҫырма пуҫланаҫҫӗ. Европа цивилизацийӗшӗн ун чух чӑвашсем ытлах пӗлмен халӑх шутланнӑ. Малтанах ку ют ҫӗршыв ҫыннисен ӗҫӗсенче пулнӑ пулсан, XVIII ӗмӗр хыҫҫӑн хамӑр енчи ӑсчахсем те Чӑвашъене тӗпченӗ. Сӑнавӗ-тӗпчевӗсенче «йӗрӗх» ӑнлав та курӑнма пуҫланӑ. Пӗрисем ӑна кӑсӑклӑ пулӑм е япала пек асӑрханӑ, теприсем кӗҫӗн турӑсен е усал ретӗнчи чунӑш евӗр палӑртнӑ, тӗн-тӗшмӗш енчен хакланӑ. Тӗпчевҫӗсене йӗрӗхлӗхӗн кулленхи пурнӑҫри пӗлтерӗшӗпе пӗрле ҫынсен тыткаларӑшӗ те, вырӑнта упранса юлнӑ уйрӑмлӑхсем те, хӗреслӗх е тутарлӑх витӗмӗллӗ ӗлкесемпе паллӑсем те кӑсӑклантарнӑ.

Паллах, пӗтӗм йӑла-йӗркене ӑнласа илме, халӑх чунне туйма чӑваш мар ҫынсене ҫӑмӑлах пулман ӗнтӗ тата ку вӑхӑтсене йӗрӗхлӗх пӗлтерӗшӗ те Атӑл тӑрӑхӗнче улшӑнма пуҫланӑ. Ҫапах пӗрисем Йӗрӗхӗн пӗр енне курнӑ, теприсем тепӗр ӗлки тӗлне лекнӗ. Хӑйсем кунти чӑваш пурнӑҫӗпе пурӑнманран, ытларах чух иртсе кӑна кайнӑ, тата чӗлхине пӗлменрен тӑлмачсемпе ҫул кӑтартакансем каласа панипе ҫырлахма тивнӗ.

Татӑкӑн-сыпӑкӑн пулсан та ӗмӗрсем хушшинче Йӗрӗх пирки пӗлӳ самаях пухӑннӑ. Пӗрремӗш хут ӑна XIX ӗмӗр вӗҫӗнче Магницкий В.К. пӗтӗмлетет. XX ӗмӗрте чӑваш ӑс-пурлӑхне тата анлӑрах, тӗплӗнрех тӗпченӗ. Ку енӗпе уйрӑмах Ашмарин Н.И., Никольский Н.В. тата ыттисем пухнӑ материал хаклӑ, Акимова Т.М., Дзенискевич Г.И., Трофимов А.А. йӗрӗх пуканисем пирки ҫырнисем те пӗлтерӗшлӗ.[2]

Акӑ, Миллер Г.Ф. (1705–1783) 1733 ҫулта Чикмепе Шупашкар хушшинче чӑвашсемпе ҫармӑссене сӑнанӑ. Вӗсенне турӑшсене те, турӑ-чунӑш кӗлеткисене те асӑрхаман.

Хĕрарăмсем ялйыш ирттерекен чӳксене те, килти тĕрлĕ чӳклевсене те хутшăнмаççĕ, киреметсене каймаççĕ. Чăвашсем тутарсем евĕр килĕнче сăрланă пуканесене те, касса тунисене те тытмаççĕ. Çав вăхăтрах хăйсен тĕн-ĕненĕвĕпех пурăнакан ытти халăхсен вăл пур. Çармăссем акă çăка хуппи çине тăмхасем касса ӳкереççĕ. Вăрманта çакăнса тăракан çак сăваплă çăка хуппisene вĕсем *кутă-вотăш* «лаç, ӳпле, кил тавраш чунăшĕ» теççĕ.[3]

Паллас П.-С. (1741–1811) Чĕмпĕрпе Самар хушшинчи, Çарăмсан тăрăхĕнчи чăвашсенне тутарлăх пачах асăрхаман (1768 çулта).

Эрнекун арçынсем уявлаççĕ. Унччен кашни килтех, уйрăмах хĕрарăмсем, Йĕрĕх («ирих», «ерих») умĕнче кĕлтăваççĕ. Йĕрĕх тенĕ пĕр ывăç çӳçе хулли кашни килтех таса вырăнта тăрать. Ăна çуллен улăштарса тăраççĕ, киввине шывпа юхтарса яраççĕ.[4]

Георги И.И. (1729–1802) чăвашсем хушшинче 1773 çулта пулса курать.

Сăваплă кап, пукане темеллисемех вĕсен çук. Удмуртсен мудорĕ евĕр Йĕрĕх çеç («ерих», «ирих») кăшт çавна майлăрах. Пӳртри кĕтесе вырнаçтарнă çӳçе хуллисен пĕчĕк çыххи Йĕрĕх пулать. Вăл питĕ сăваплă е хăрушă шутланать те ун патне çывхарма та хăймаççĕ. Хăйсен Йĕрĕхне çуллен çĕнетеççĕ, киввине шывпа юхтарса яраççĕ.[5]

Милькович К.С. хăшпĕрисен килĕсенче (Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи тури чăвашсем) Йĕрĕх («ирих») тата Тӳрĕ («тюря») чунăшĕсен пуканисем («идол») пуррине асăннă (1783 çулта).

Хуçи ыйтнипе Йĕрĕх кӳршисене сиен кӳме тата чирлеттерме пултарать. Йĕрĕхсем варринчен витĕр хĕрлĕ çăм çип кăларнă тăхлан куркасенче пурăнма кăмăллаççĕ. Çип вĕçне пилеш çырлисен сапакине çыхнă, ăна çуллен çĕнĕ çырла пиçсен улăштараççĕ. Хăйсем сума сăвакан çак кӳлепене таса пирпе тата хурăн хуппипе чăркаса чăвашсем мачча айне çакаççĕ. Ун çумне тĕрлĕ калай тата тăхлан плашшисем çирĕплетеççĕ, таса тытаççĕ. Йĕрĕхсем хаярисем, йăвашшисем, тӳррисем пулаççĕ.

Йӗрӗхсемпе Тӳрӗсене шурӑ кӑвакал, ҫуллӑ салма тата тутлӑ пашалу хываҫҫӗ. Чӳкне килтех ирттереҫҫӗ.[6]

Кӑрмӑшри Протопопов А. миссионер чӑвашсем халӗ те, хӗреслӗхе кӗртнӗ пулин те, хӑйсен йӑли-йӗркипех («идолопоклонство») пурӑнаҫҫӗ тет (1828 ҫулта).

Чӑвашсен тӗнчекурӑмне, пурнӑҫ йӗркине пӗтӗмпех юмӑҫсем тытса тӑраҫҫӗ. Киреметре пуҫҫапаҫҫӗ тата Каҫхи вопкӑн, Эсрелпе Йӗрӗх («ирих») ятлӑ усалсене ӗненеҫҫӗ. Йӗрӗхӗ тӗрлӗ япалапа тултарнӑ пушӑ пӗрне кӑна. Тупа тунӑ чухне ҫӑкӑрпа эрехе ӑша ярса, йӑсӑрланса выртакан пуччушши урлӑ каҫса ҫӗре чуптунӑ, хӑйсем суйманнине, чӑнлӑха ӗнентернӗ.[7]

Фукс А.А. (1792–1853) Атӑл хӗрринчи чӑвашсем (Хорӑнҫол тӑрӑх) Йӗрӗх («ирих») пирки каласа пама кӑмӑлланине палӑртать (1834 ҫулта).

Йӗрӗх – калая ирӗлтерсе ӗлкене («формочка») юхтарса юмӑҫ («йомӑҫ») тӑвакан ҫын евӗрлӗ кӳлепе («маленький идол с руками ногами, глазами и величиной в вершок»). Куҫ, шӑл, хӑлха ыратсан е ӳт ҫине тӗрлӗ чир тухсан ӑна ҫуллӑ урпа нимӗрӗпе тутлӑ чуста пашалӑвӗ хывса кӗлтӑваҫҫӗ, вунӑ ҫулта пӗрре – така параҫҫӗ. Йӗрӗх ҫакӑнса тӑракан пилеш е ҫӑка туратне ҫулленех ҫӗннипе ылмаштараҫҫӗ, киввине шыва пӑрахаҫҫӗ.[8]

Фукс К.Ф. (1776–1846) вара Йӗрӗх тесе пӳрт алӑкӗ ҫинчи пилеш тураттисен ҫыххине калать (1840 ҫулта). Ӑна чӑвашсем мӑшӑрсене арлӑ-арӑмлӑ пурӑнма чӑрмантаракан усал чӗмрен сыхланма вырнаҫтараҫҫӗ-мӗн.[9]

Сбоев В.А. (1810–1855) шучӗпе, Йӗрӗх («ирих») тесе ампар кӗтесне вырнаҫтарнӑ каткана е пӗрнене калаҫҫӗ, унта чӳкленӗ выльӑх шӑммисене хураҫҫӗ (1840 ҫулсем).

Фукс япала паллине япала ячӗпе улӑштарнӑ ӗнтӗ. Чӳкленӗ выльӑх шӑммисемпе тултарнӑ пӗрне ҫине туратсем хушӑран хунӑ пулин те ҫапах вӗсем ҫине пӗр калай татӑкӗ кӑна мар, нумай ҫутанкка, пуянраххисем кӗмӗл укҫа та ҫакаҫҫӗ. Йӗрӗхӗн пукане евӗр кӳлепи пирки те, кивӗ Йӗрӗхе шыва пӑрахас йӑла ҫинчен те эпӗ илтме. Усал турӑсем шутне Эсрел,

Арҫури, Йӗрӗх, Ие те кӗреҫҫӗ – вӗсем шуйттанӑн тӳрӗ тӑхӑмӗсем. Йӗрӗх – ҫынсем ҫине тулашри чирсем (чечче, хӗрлӗхен, ҫӑпан, кӗсен, куҫ чирӗ т.ыт.) яракан чунӑш. Кама та пулин ҫавнашкал чир лексен, унӑн Йӗрӗхе пӑрҫа нимӗрӗ тата, йомҫӑ палӑртнипе, темиҫе путек хывмалла. Пӗр путекӗн пуҫне татса ятарлӑ пӗрнене хураҫҫӗ. Ку пӗрнене ялан тенӗ пекех ампар кӗтесне ҫакаҫҫӗ, тӗрлӗ туратсемпе, ҫутанккасемпе тата вӗтӗ кӗмӗл укҫапа капӑрлатаҫҫӗ. Ҫакна та пӗрле Йӗрӗх тесе асӑннӑ чирсенчен хӳтӗленме усӑ кураҫҫӗ.[10]

Вишневский В.П. (1804–1885) чӑвашсене хӗреслӗхе вӑйпа кӗртни ҫӗр ҫул ҫитет пулин те вӗсем хӑйсен йӑли-йӗркине пӑрахманнине, хӑйсен тӗнчекурӑмӗпе пурӑннине ҫирӗплетет (1844 ҫулта).

Киремет вӑл – япӑх, усал. Ҫавнашкалах Кириметпе унӑн ҫумӗсемсӗр пуҫне Хытӑм, Эсрел, Йӗрӗх тата Виляшки ҫынна усал тӑваҫҫӗ, чир-чӗр кӳреҫҫӗ. Йӗрӗх шатра, кӗсен, ҫӑпан ертет, куҫа чирлеттерет. Ӑна ыр пулас тесе пӗрне тӑваҫҫӗ, унта пилеш турачӗ, калай татӑкӗ, чӗрне, ҫӳҫ, нимӗр хураҫҫӗ те кӗлетре усраҫҫӗ.[11]

Золотницкий Н.И. (1829–1880) шучӗпе, Йӗрӗх тесе чӑвашсем тӗрлӗ япаласем ҫине халалласа ҫакнӑ металл пластинкӑсене каланӑ (1875 ҫулта). Теччӗ-Пӑва еннелли чӑваша тухнӑ тутарсем ӑна Йӑрӑх («йырых») теҫҫӗ-мӗн. Ҫак чунӑшпа кӑсӑкланса вӑл А.А. Фукс, В.А. Сбоев, П.-С. Паллас, И.И. Георги ҫырнисене те тишкернӗ.

Вӗсем ҫырнисем тӑрӑх Йӗрӗх хура халӑх килӗштерекен ырӑ пек туйӑнать. Фетиш пек курӑнсан та ҫапах Йӗрӗх кӗҫӗн ырӑ шайне те ҫитеймест. Сӑмахӗн хӑйӗн чӑн пӗлтерӗшӗ, ытти тӗрӗк чӗлхисенчипе («изык», «ийик», «ытык») ҫыхӑнтарсан, «(турра) пилленӗ, халалланӑ, хывӑннӑ» тени пулать. Ҫавна май кӳлепи те, ӑна чӳкленӗ вырӑн та, упраннӑ хуралтӑ та, вырнаҫнӑ кил те (ял, ҫырма-ҫатра) Йӗрӗх пулать. Парнене юмӑҫ мӗнле сӗннине кура хываҫҫӗ. Хӑй мӗнлине пӑхса е ялне кура, е кил хуҫи, авалхи пӗр-пӗр ҫын, ҫвяттой ячӗпе ҫыхӑнтарса ячӗсене параҫҫӗ. Шупашкар уесӗнчи Тӗрлемес прихутӗ-

нчи пĕрин килĕнчи Мелĕм-хуҫа тени Пӳлерти сăрт тăрне пытарнă мохаммедансен пĕр шейхĕн, Маалюм-Ходжан, ячĕпе ҫыхăнать. Ҫавнашкалах Карач прихутĕнчи Толпайра Маюм-хуҫа тени пур.

Нумаях пулмасть тата Оренбург енчи чăвашсем те, киремете ҫӳренисĕр пуҫне, килĕсенче йывăҫ пуканесем тытни пирки сăмах пулчĕ. Унашкалах пулсан, вĕсем халăх тĕнĕ-ĕненĕвне кĕлеткесене пуҫҫапнипе пăтраштараҫҫĕ. Ҫакă ҫапах кĕлеткесене пуҫҫапнипе ҫеҫ пурăннине пĕлтермест.[12]

Мальхов П.М. халăхлăха пĕтерес тĕллевпе Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи чăвашсен тĕнчекурăмĕнчи турăсене, ырă тата усал чунăшсене пăхса тухнă (1877 ҫулта).

Шуйттанпа тӳреммĕн ҫыхăннă усал чунăшсен ретне Эсрел (е Каҫхи вопхăн), Йĕрĕх, Хытăм, Арҫури, Хĕртсорт (е Ие), Вопăр кĕрет. Тĕрлĕ киреметсем пур. Куҫ тата ӳт ҫинчи чирсене яракан чунăша Йĕрĕх теҫҫĕ. Йĕрĕх пĕрни кашни килтех пур. [13]

Каменский Н.Т. (Никанор, 1847–1910) чăвашсен йăли-йĕркин хăй вăхăтĕнчи лару-тăрăвĕ пирки ҫырнă (1878 ҫулта).

Вĕсен киремечĕсене аркатса пĕтернĕ. Хăйсем малтанхи пирки пĕлместпĕр теҫҫĕ. Вĕсен тĕрлĕ уявсем, выльăх усрассипе, уй-хирпе ҫыхăннă турăсем пур. Кил таврашĕнчи тĕп турă Хĕртсорт шутланать, ăна хирĕҫҫи – Вопкăн. Чирсен чунăшĕ е турри Йĕрĕх тата ҫĕрле сывлама йывăрлатакан Вăпăр Вопкăна ҫывăх тăраҫҫĕ.[14]

Смелов В.Я. пĕр-пĕр йывăҫа е тата кивĕ ампара та Йĕрĕх тет, вăл кӳрекен тулаш чирсенчен сипленме пир татăкĕ, кĕмĕл укҫа, ҫăпантан вара калай ҫаврашкисене хывмаллине калать (1880 ҫулта). Орхас Кошкă пачăшки ҫавнашкалах чăваш тĕнĕ-ĕненĕвĕ пирки информаци илме йывăрланнине те палăртать (1892 ҫулта).

Йĕрĕхе килте ирпе ирех, йывăҫ ҫинчине икĕ кун чӳклеҫҫĕ. Малтан тăвансемпе шур сурăх пусса ҫиеҫҫĕ, тепĕр кунне пăтă пĕҫереҫҫĕ. Хывăмра нухратпа («тухланка») пилеш турачĕ те пĕлтерĕшлĕ.[15]

Архангельский И. Ие («йыя»), Йĕрĕх («йыйх»), Ырă («йыйра») кил чунăшĕсем шутланаççĕ тет (1886 çулта).

Вĕсене чăвашсем хăйсен çĕр ĕçĕпе туса илнĕ тĕп ырлăхне – тĕш тырăна – упранă çĕрте, ампарта, усраççĕ. Тухăç славянсем вара хăйсен кил чунăшĕ («чур») вучах е кăмака айĕнче, юлашки вăхăтра тĕпсакайăн малти кĕтесĕнче пурăнать теççĕ. Чăвашсен тĕп тырпулне палăртакан «ыраш» сăмах та «йĕрĕх» сăмахран пуçланнă. Пурте пĕлекен япаласемпе тултарнă йĕрĕх пĕрни ампарта тăрать. Кунта хуракан тăхлан вырăнĕнче авал чăвашсен фетишĕ – калайран тунă çын хапиллĕ пĕчĕкçеç пукане – пулнă текелеççĕ. Халапланă тăрăх, чăвашсен несĕлĕсем ял пуçаракансене («садчик») асăнса йывăçран е калайран вĕсем сăнлăрах пуканесем тунă. Пуканисем кайран вĕсен ячĕпех упраннă. Ие е Йĕрĕх пиллетĕр тесе кил-терĕшри пур çĕнĕ япалан паллине (татăк-касăк, турпас) пĕрнене хураççĕ. Тулаш енчен ăна капăрлатаççĕ тата яланах унта пилеш турачĕ пур. Йĕрĕхре ваттисен, леш тĕнчене кайнă несĕлсен, асăмĕ пуçтараннă. Çавăнпа та вĕсене хисеплемесен, йăли-йĕркине мансан Йĕрĕх чăвашсене ӳт-тир, куç чирĕсемпе асаплантарать.[16]

Охотников Н.М. (1860–1892) Йĕрĕхе Киреметпе тата «Микул-турă» тенипе пĕр шайра пăхать (1889 çулта).

Николай Чудотворец е унăн сăнне ӳкернĕ турăш хăйне евĕрлĕ хурачун (усал) шутланать, вăл Йĕрĕхпе е Киреметпе танах. Вĕсен уйрăмлăхĕ пĕр çакăнта кăна: Николай Чудотворец – вырăс турри, Киреметпе Йĕрĕх – чăвашăн. Хăшпĕр ялсенче таçтан «хăй тĕллĕн» килсе ларнă Микул-туррăн сăнĕсем пур. Çав ялсене вара чăвашсем темиçе уесран пуçтаранаççĕ. Микул-турра çырлахтарма темĕн чухлĕ укçа тăкаççĕ, чустаран йĕрĕх пуканисем пĕçерсе пыраççĕ.

Чăвашсем час-часах тĕрлĕрен çиелти чирпе чирлеççĕ – çăпан-кĕсенпе, кăрчанкăпа, куç чирĕпе аптраççĕ. Çав чирсене пурне те Йĕрĕх текен усал турă ертет-имĕш.[17]

Михайлов В.И. хирти чăвашсен тĕрлĕ йăли-йĕркине, тĕн-тĕшмĕшпе çыхăннă ĕç-пуçа, халăх сăмахлăхне кĕскен пăхса тухнă (1891 çулта).

Хăшпĕрисен ампарĕнче Йĕрĕх пур, вăл кунта Хусан енчен килнĕ хĕрсемпе пĕрле ҫитнĕ. Вăл куҫпа ӳт ҫинчи чирсенчен хӳтĕленме кирлĕ. Ҫынна хаяр, йывăр чирсем ярса тăракан усал чунăша Тӳрĕ теҫҫĕ. Вăл пур ялта ҫук. Ăна хывнă укҫапа ваттисем ҫулталăкра пĕрре пухăнса сăйланаҫҫĕ.[18]

1860 ҫулсенче ҫĕршывра пур енĕпе те демократиллĕ пысăк улшăнусем пуҫланаҫҫĕ, капитализм хăвăрт аталанма тытăнать. Ҫавна май православи позицине чакарас мар тесе патшалăхăн тĕн тытăмĕ те хăйĕн ĕҫĕ-хĕлĕнче нумай ҫĕнĕлĕх кĕртет. Хура халăхпа витĕмлĕрех ĕҫлеме епархисенче миссионерла ятарлă обществăлла организацисем йĕркелеҫҫĕ, Хусан епархийĕнче, сăмахран, «Братство святого Гурия» (Чулхула епархийĕнче – «Братство святого Креста»). Вырăс мар халăхсене, тĕслĕхрен, чăвашсене хĕреслĕхпе тарăнрах пиҫĕхтерес тĕллевпе тĕн кĕнекисене, библи халапĕсене чăвашла куҫараҫҫĕ, ҫаксене вĕрентме тăван чĕлхепе усă курма та чармаҫҫĕ. Учительсене хатĕрлемелли программăра ҫуррине яхăн хĕреслĕх предмечĕсемпе тексчĕсем пулнă. (Ку енĕпе Чĕмпĕрти чăваш учителĕсен шкулĕ малта пынă, унтан тухнисем чиркӳре те ĕҫлеме пултарнă).

Вырăнти халăх тĕнчекурăмĕпе, ăс-хакăлĕпе витĕмлĕрех кĕрешмелли, ăна хăвăртрах путармалли мелсене шыраса пултаруллă ăсчах-миссионерсене, пачăшкăсене чăваш тĕнне, йăли-йĕркине, ăс-пурлăхне тĕпчеме, хăйсен опытне сарма анлă майсем туса параҫҫĕ, ятарлă «Известия по Казанской епархии» журнал та кăларнă. Ҫак ретре палăрнă Вишневский В.П., Золотницкий Н.И., Ильминский Н.И., Яковлев И.Я., Каменский Н.Т., Филимонов Д.Ф.,Смелов В.Я., Малов Е.А., Архангельский И. т.ыт. чăвашсене тăван чăвашлăхран пистерсе пымалли ҫула ăнăҫлă такăрлатнă. Ҫав вăхăтрах вĕсем этнологишĕн те пысăк ĕҫ туса хăварнă, тарăн сăнавĕсем, тĕплĕ ҫырса хунă статйисем паянхи кун та ăслăлăхшăн пĕлтерĕшлĕ.

XIX ĕмĕр вĕҫнелле Йĕрĕх пирки пухăннă пĕлĕве Магницкий В.К. (1839–1901) пĕтĕмлетет. Чăваш ĕненĕвĕ ҫинчен ҫырнă

кӗнекине (1881) тарӑнлатса «Об Ирихах у чуваш» ятлӑ тӗплӗ статья пичетлесе кӑларать (1891 ҫулта). Хӑй шухӑшне палӑртиччен кунта вӑл малтанах унчченхи тӗпчевҫӗсен ӗҫӗсене, хӑйӗн корреспонденчӗсен материалӗсене тишкерет, хӑйӗн ҫӗнӗ сӑнавӗсемпе, шухӑшӗсемпе паллаштарать.

Унччен ҫырнисене вӑл кашнине пайӑррӑн пӑхса тухать, тӗп шухӑшӗсене палӑртать. Ҫав хушӑрах XVIII ӗмӗрти паллӑ мар ҫыравҫӑн этнографи очеркне те тупса кӑларать. Анлӑ тӗпчеве 1870-1880 ҫулсенче ялти учительсемпе чиркӳ ӗҫченӗсене те явӑҫтарнӑ. Йӗрӗхпе ҫыхӑннӑ пур япала та, пур ӗҫ те, пур сӑмах та ӑна кӑсӑклантарнӑ: чунӑшӑн пӗтӗмӗшле ӗҫӗ-хӗлӗ, халӑхри пӗлтерӗшӗ, унпа ҫыхӑннӑ ӗҫ-пуҫ, хывӑм йӗрки, килӗнче ҫуккисем мӗн ятлӑ вырӑна каяҫҫӗ, тӑхланне хӑҫан тата хӑш тӗле хураҫҫӗ, пӗрнине мӗн каласа алла илеҫҫӗ, каялла лартаҫҫӗ, малтан мӗнле, халь епле, Йӗрӗх ячӗсем, топонимӗсем т.ыт.те. Ҫӗннине пӗлсен каллех тепӗр статья ҫырать (1893 ҫулта).[19]

Дюла Месарош (1883–1975) ятарласа килсе 1906-1908 ҫулсенче чӑваш тӗнӗ-ӗненӗвне тӗпченӗ. Шупашкар уесӗнчи Алькешри, Чӗмпӗр уесӗнчи Таяпари тата тӗне кӗмен Улхашри Йӗрӗхпе ҫыхӑннӑ йӑла-йӗркене кӑтартнӑ, сӑмахлӑхне илсе панӑ.

Йӗрӗх пирки тӗрлӗ ҫӗрте тӗрлӗрен калаҫҫӗ, ҫурҫӗр енче ун ҫинчен ытларах пӗлеҫҫӗ. Кунта каланӑ тӑрӑх, вӑл тахҫан авал ватӑ хӗр пулнӑ, юмласа-ӑрӑмласа пурӑннӑ. Сиплеме пултарнипе вӑл ӗмӗрӗ тӑршшӗпе тӗлӗнмелле чапа тухнӑ та вилсен те ҫынсем ӑна хисеплеме пӑрахман. Шыҫсан тата пуҫ ыратсан кӗлтунӑ чух ӑна асӑннӑ. Кӗлеткипе Йӗрӗх курӑнмасть, тепӗр чух тӗлӗкре кӑна ват хӗр сӑнарлӑ тухать. Вӑл ырӑ чунӑш шутланать, мӗншӗн тесен чиртен сыватать. Кӳрентерсен сиен кӳме пултарать.[20]

Никольский Н.В. (1878–1961) йӗрӗхлӗхре уйрӑмах ӳт-тир чирӗсенчен хура халӑх сипленнӗ мелсене тӗпченӗ. Тӗрлӗ ырӑсемсӗр пуҫне вӑл килти Йӗрӗхсем пуррине, Йӗрӗх вӑл чунӑш пулнине палӑртать (1908 ҫулта).

Хуҫи ыйтнипе йӗрӗх кӳршине сиенлет. Вӗсем пӗвенӗ ҫӑм ҫипе варринчен витӗр кӑларнӑ тӑхлан куркара пурӑнаҫҫӗ. Ҫипӗ

вĕçне пилеш тупкине çыхаççĕ, пилеш каллех пиççен тупкине улăштараççĕ. Çак чунăша таса пирпе тата хурăн хуппипе тĕркесе çӳле çакаççĕ, ун çумне тĕрлĕ калай тата тăхлан плашши çирĕплетеççĕ. Йĕрĕх таврашĕнче яланах таса.

Хаяр, йăваш тата тӳрĕ (тĕрĕс) Йĕрĕхсем пулаççĕ. Ку Йĕрĕхсен кӳлепи ĕне пуçĕ евĕр. Вĕсене пĕчĕк хăма таткисем çинче тăваççĕ.

Нухраткăсене – чӳклеме тесе авалхи кĕмĕл укçа вырăнне шăвăçран каснă çаврашкасене – чăваш тимĕрçисем тăваççĕ. Чӳлмекçĕсем лотăпа усă курса чӳклемелли выльăх евĕрлĕ тăм орхамахсем калăплаççĕ.

Çăпан шăннипе тухать е Йĕрĕх ăна кăларать теççĕ (ун патĕнче тула тухсан, вăрçăнсан). Йĕрĕх тытсан (ӳте кĕсенçăпан ерсен, пит-куç кăрчанкăлансан) нимĕр пĕçерсе кайса чӳклеççĕ.[21]

Ашмарин Н.И. (1870–1933) хăйĕн «Чăваш сăмахĕсен кĕнекинче» «йĕрĕх» сăмахпа чылай тĕслĕх илсе панă. Магницкий В.К., Месарош Д. çине таянса хăйĕн шухăшне те пĕтĕмлетнĕ (1923 çулта). Йĕрĕхпе ытти ырăсем чăвашсен чăн, авалтараххи кульчĕн асăмне упраса хăварнине вăл уйрăмах палăртать.

Йĕрĕх – хăйне уйрăм ырă, малтан чӳке халалланă выльăха пĕлтернĕ, кайран ырă ятне куçнă, ăна халалланă япала ятне те пĕлтерет. Вăл куккăрта, алăк хыçĕнче пурăнать, хурама хуппинчен тунă кунтăкра, курăнмасть. Тулта ампар, лаша вити, ытти хуралтă стени çинче те пулма пултарать. Йĕрĕхрен хăранă, ун таврашĕнче ачасене выляттарман. Хăйĕнчен мăшкăлласан вăл ӳт-тире чирлеттерет. Вара юмăçпа канашламалла та тулă нимĕрĕ пĕçерсе, пăшал йĕтрине ирĕлтерсе, шăранчăкĕ витĕр çип кăларса йĕрĕхлĕ киле каймалла. Çав килти çын илсе килнĕ парнесемпе кĕлете кĕрсе Йĕрĕхе пуçтаять, нимĕрне пĕртак кунтăка хурать, тăхланне пăти çине çакать. Ытти нимĕрне килхуçисем йышпа ларса çисе яраççĕ.

Анатри чăвашсем Йĕрĕх («ирех») тесе йĕрĕх пĕрнине калаççĕ, вăл кашни килтех пур. Ялта тата унта-кунта паллă,

сумлă Йĕрĕхсем пур. Кача каякан хĕр килтен Йĕрĕхпе тухса кайнă, ашшĕ тепре тунă. Тури чăвашсен халапĕ тăрăх, Йĕрĕх ăрăмçă ват хĕртен пулнă, ăна вĕсем кĕлĕре те палăртаççĕ.[22]

Акимова Т.М. (1898–1987) Сарăту кĕпĕрнинчи ялсене 1920 çулсенче тĕпчесе кунти чăвашсем тĕрĕслĕх тытакан Йĕрĕхе ĕненме пăрахманнине, вăл чи анлă сарăлнă чунăш (турă) пулнине палăртать.

Кĕпе тăхăнтартнă ку пĕчĕк пуканесене пир татăкĕсенчен е йывăçран тунă. Ăна хупă ещĕке е çатана çын куçне тăрăнман çĕре – ампар айне, хапха айне е чăлана пытарнă, Йĕрĕх вырăнне хисепленĕ. Тавращĕнче киревсĕр калаçни е варалани Йĕрĕхе чăтма çук кӳрентерни пулать, уншăн вăл тавăратех. Халĕ те Йĕрĕх пулнă вырăнсенчен шикленкелеççĕ. Кашни килте тенĕ пекех Йĕрĕх пулнă, темиçе килĕн пĕрле е касĕпе (куккăрĕпе) пĕрле чи аслă Йĕрĕх шутĕнче Тӳрĕ («тюри»)» пулнă. Ватăрах Йĕрĕхсене ытларах сума сунă. Тепĕр ялтан качча килекен хĕрсем, яланах темелле, хăйсен Йĕрĕхне илсе килнĕ. Анчах кунта вăл хисепре пулман, пĕр-пĕр кĕтесре, кровать айĕнче йăваланнă – çынсем хăйсен киввинех пуççапнă.

Йĕрĕхе, чирлесе ӳксен е кама та пулин кӳренсен, кĕлтунă. Çын Йĕрĕх патне кайнă та ун умĕнче патакпа виç хут сулласа: «Ил ăна, ил ăна», – тенĕ. Айăплă çын вара чирлесе ӳкнĕ. Йĕрĕх вак-тĕвек куç чирĕсем, шатра, çăпан т.ыт. янă. Ун пек чир-чĕр Йĕрĕхрен лекнине пĕлеççĕ те, çын тӳрех юмăç карчăкĕ патне утать. Лешĕ хăш Йĕрĕх ун çине çиленнине палăртать, ăна мĕнчуль юсман, хура е шурă чăх, çын евĕр чуста кӳлепи е тата мĕн те пулин хывмаллине калать. Парнисене илсе пырсан Йĕрĕх умне лартнă та чирлĕ çын çапла кĕлтунă: «Çырлах, ăçтан ман çине тапăнтăн, арçын вăрçăнничен пулсан та, хĕрарăм е хĕртен пулсан та, çырлах. Манăн тасалмалла пултăр, Çтаппан пуçĕнчен чире сир. Тӳрĕрен асли, сана пренĕксемпе хăналатпăр-чӳклетпĕр». Йĕрĕх усалĕнчен епле хăтăлмаллине нумайăшĕ хăйсемех пĕлнĕ, халĕ те пĕлеççĕ. Тепĕр чух чирлĕ çын питне чустапа хупласа маска тунă та шыва пенĕ. Никам ан куртăр тесе ку ĕçе çĕрле пурнăçланă. Ну-

майăшĕ астăваççĕ, ку ялта упраннă юлашки Йĕрĕхсене Паккин мучи пĕтернĕ. Малтан вăл халăх йăли-йĕркипех пурăннă, Йĕрĕхсене, Киреметсене сума сунă. Кунçулĕн вĕçĕнче пачăшкă витĕмĕпе вăйлă улшăнать – пĕррехинче, шыв кайнă вăхăтра, ялĕпе çавăрттарать, Йĕрĕхсене тупса кăларса шывпа юхтарса ярать. Халĕ çапах, пуканисем çук пулин те, Йĕрĕхе сума суни ялта пур. Пĕри çакăн пек тĕслĕх каласа пачĕ. Унăн пиччĕшĕ ĕлĕк Йĕрĕх тăнă вырăнта шăнă-мĕн те темиçе сехетренех çак чирлесе ӳкет, çавăнта кайса пуççапмасăр та чир иртсе кайман. Хĕрарăмсем халь те кам та пулин çиленнишĕн тата вăрçăннинчен шикленеççĕ – çак усал ĕçе Йĕрĕх, чир туса, кам çине пулин яма пултарать-çке.[23]

Денисов П.В. (1928–2014) Йĕрĕх культне чăвашсен тĕн-тĕшмĕшĕн малтанхи тĕслĕхĕсем хушшинче курать. Унăн сăнарĕ килйышпа хуçалăха хӳтĕлекен ытти чунăш-ырăсемпе танлаштарсан (Хĕртсорт, Карта поçĕ, Карта кĕтӳçи, Нӳхреп кĕлли, Авăн кĕтӳçи, Ие) кăткăсрах пулнипе палăртать (1959 çулта).

Ӳт-тир чирĕн сăлтавне çынсем унра курнă. Йĕрĕхе нимĕр, нохрат хывса çырлахтарнă. Ăна хисеплени, сума суни чăвашсен несĕлĕсем хушшинче Азире пурăннă чухнех, матриархат тапхăрĕнче çуралнă. Кӳлепине туни, сăнарĕ, халапĕсем – пĕтĕмпех – пуçра хĕрарăм тăнă йăх йĕркине, шухăшлавне кăтартаççĕ. Йĕрĕх – йăх хунтисене, вилнĕ несĕлсене халаллани.

Йĕрĕх кӳлепине тăвассипе килйышра ытларах аслăрах хĕрарăмсем аппаланнă, арçынсем пулăшнă кăна. Хĕрачасем те туни паллă. Качча каякан хăйпе пĕрле хăй ача чухне тунă пуканене илсе кайнă, хыççăн ăна юратнă хĕрне панă. Пукане, хĕрарăм тăрăх кайса çичĕ сыпăка çитсен, Тӳркĕлли йĕрĕхĕ пулса тăнă. Йĕрĕх ячĕсем пур. Кӳлепи-кĕлеткисенче уйрăм хĕрарăмсем сăнланнă. Хушăран тĕл пулакан арçын сăнарлисем кайранхи патриархат витĕмне палăртаççĕ, ун чухне йĕрĕх пуканине та майĕпен пăрахăçланă, йĕрĕх пĕрнине тĕрлĕ хывăмпа (тăхлан, турат, пир, укçа т.ыт.те) тултарнă. Юлашкинчен Йĕрĕх пĕлтерĕшне улăштарнă, усалрах чунăша куçнă, кил тулашне, ял тулашне тухнă, çырмаçатра ячĕ те пулса тăнă.[24]

Кудряшов Г.Е. (1924 ç.ç.) йĕрĕх пĕрнине турăшпа пĕр шайра курать, йăха, килйыша хӳтĕлекен Йĕрĕх матриархат чухнех тухнине унăн кӳлепи ялан тенĕ пекех хĕрарăм сăнарлă пулнипе çирĕплетет (1961 çулта).

Йĕрĕх йăх йывăçĕ патĕнче е кĕлетри тăхлан куркара е ятарлă пĕчĕк каткара, пĕрнере пурăннă. Чăваш ялĕсенче чутласа тунă çын евĕрлĕ йывăç кӳлепесем нумайччен упраннă, пуçтайса парне хывмалли пĕрнесем çакнă ăратă йывăçĕсем халĕ те тăраççĕ. Йĕрĕх патĕнче шавлама, вăрçăнма юрамасть, ача-пăчан ăна курмалла мар. Ку йĕркене пăсакана чир лекет, парне кӳрсен тин унтан хăтăлма пулать. Çак тĕшмĕше ĕненекенсем сахаллансах пыраççĕ, йĕрĕх йывăççисем те сахал юлнă, йĕрĕх пĕрнине пур çĕрте те курма çук, пуканисене кăларса ывăтнă.

Çавнашкалах чăвашсен, XVIII ĕмĕр варринче турăлăх ĕçне туса пыракансемпе пĕрлех (кĕлĕ пуçĕ, кĕлĕ шăлакан т.ыт.те), кĕçĕнрех ырăсене тимлекенсем те (киремет пăхакан, йĕрĕх пăхакан т.ыт.те) халăх ĕçне туса пынине калать (1974 çулта).

Йĕрĕх – йăха хӳтĕлекен чунăш. Нумай музейре хĕрарăм сăнлă, хĕрлĕ çыхăллă, татăк-кĕсĕкрен е улăмран тунă пуканене Йĕрĕх тесе кăтартаççĕ. Нумайăшĕн пичĕ çинче урлă-пирлĕ хăюсем тата хура çип пур. Йĕрĕх пуканине ытларах юмăç хатĕрленĕ. Ирĕлтернĕ калая калăпа юхтарнă та икĕ пӳрнелли пысăкăш çын кĕлетки пулса тăнă. Ăна алăк хыçĕнчи çуллен улăштарса тăракан пилеш е шăлан турачĕ çине çакнă.

Йĕрĕхе сума суман çынна чир лекет. Унăн вара тулă çăнăхĕнчен нимĕр пĕçермелле, пĕр пăшал йĕтрине ирĕлтерсе укçа пек çутă шăранчăк тумалла та ăна шăтарса витĕр çип кăлармалла. Çакна йĕрĕхлĕ киле илсе каймалла. Çын ыйтнипе кил хуçи е урăххи, килекен сывалтăр тесе, кĕлетре кĕлтăвать. Виçĕ хут пуçтайса йĕрĕх кунтăкне пĕртак нимĕр хурать, калайне пăта çине çакать. Ытти нимĕрне килте çисе яраççĕ.[25]

Каховский В.Ф. (1916–1993) П.В. Денисовпа (1959) тата Д.К. Зеленинпа (1936), С.В. Ивановпа (1951) килĕшсе чăвашсен Йĕрĕхе пуççапасси матриархат тапхăрĕнче, авалхи

тĕрĕк йăхĕсемпе пĕрле е кӳршĕлле, Алтайра пурăннă чухне, йĕркеленнине палăртать (1965 çулта).

Ку йăла монголсен, бурятсен, Çĕпĕрти ытти халăхсен онгон кульчĕпе тачă çыхăннă. Чăвашсен вăл ваттисене – йăха хунтăлакан вилнĕ несĕлсене – сума сунинчен пуçланнă. «Йĕрĕх» сăмах, Н.И. Золотницкийпе Н.И. Ашмарин тăрăх, тĕрĕк чĕлхисенчи «изык», «ийик», «ытык» сăмахсемпе пĕрле пĕр ăнлавлă пулнă, малтан вăл чунăша хывнă, халалланă япалана, кайрантарах хăйне, ыррине, пĕлтерме тытăннă. Чăвашсен Йĕрĕхĕпе алтайсен тонкăр çине, телеутсен пир-авăр касăкĕсем çине, хакассен пир çине ӳкернĕ çын сăнĕсем генетикăлла çыхăнура тăраççĕ пулмалла. Вăхăтсем иртсен Йĕрĕхе Хорачон (шуйттан) йышне кĕртеççĕ, ют йăхрисене ӳт çинчи тата ытти чир яракан усал чĕм вырăнне хума пуçлаççĕ.[26]

Иванов Л.А. (1931– 1990) кил таврашĕнчи чунăш-чĕмсем хушшинче Хĕртсурта, Пирĕштие, Йĕрĕхе т.ыт. кăтартать (1970 çулта).

Йĕрĕх – хаяр, сĕмсĕр чунăш, килйышăн лайăх таврăру хатĕрĕ шутланать. Тăшмана çăпанпа е йывăр чирлеттерес тесен ун еннелле йĕрĕх пуканине суллани те çителĕклĕ.

Тепĕр çĕрте Йĕрĕх тесе пуçтайнă вырăнта хывмалли çимепе пĕрле пăрахнă калайран шăратнă чĕрчун кӳлепине, харпăрхăй тунă пуканене каланă. Ытларах чухне чунăшне хăйне Йĕрĕх тенĕ, килте ăна калайран тунă хĕрарăм евĕрлĕ пукане сăнарланă. Патриархат пуçлансан арçын сăнарлă йĕрĕх пуканисем те тухнă.

Йĕрĕхе ача-пăча тытмалла мар вырăнта упраççĕ. Хĕрарăм пуканесене кунтăкра усранă, калайран тунă кӳлепесене йĕрĕх хутаççинче тытнă, кивĕ çăпатара тытни те пулкаланă. Хăшпĕр килсенчи ăруран ăрăва куçса пынă пĕрнесенче капăрлатса пĕтернĕ арăм тата хĕр тумĕллĕ Йĕрĕхсем тăп-тулли тăнă. Пĕрнене çуллен пĕр пукане хушнă.

Хăшпĕр килсенчи Йĕрĕхсем е Тӳркĕллисем пĕтĕм кас е ялĕпех пуçтаймалли вырăнсем пулса кайнă. Качча каякана хĕр тупри шучĕпе йĕрĕх пуканине парса ярас йăла пулнă. Тепĕр çĕрте Йĕрĕх сăнарĕ хаяр Киремет турăпа пĕрлешнĕ.[27]

Дзенискевич Г.И. (1933–2002) Питĕрти этнографи музейĕнчи пир татăкĕсенчен тунă 22 тата тăмран тунă 8 йĕрĕх кӳлепине (пуканине) тата Йĕрĕхпе çыхăннă ытти япаласене тĕпченĕ: мĕнле тунине, пайĕсен çыхăнăвĕсене, тĕсĕ-виçине, усă курнине т.ыт.те. Ку экспонатсем пĕтĕмĕшле XX ĕмĕр пуçламăшĕнче тĕрлĕ çĕрти чăваш ялĕсенчен лекнĕ, ытларах хĕрарăм сăнарлă пуканесем. Тăмран калăпланисенче уйрăм çын сăнĕ палăрать (1972 çулта).

Йĕрĕхе малтанах тĕрлĕ йывăç-тĕмре тенĕ, кайрантарах çеç ăна çын евĕрлĕ кӳлепесене куçарнă. Ахальтен мар пир пуканесен кăшкарне йывăç турачĕ-турпасĕсенчен пуçтарнă.

Çак сăваплă пуканесене тăвакансем, Йĕрĕх чунăшĕ унтан тухса ан кайтăр, тесе питне хĕрлĕ хăюпа хĕреслетсе çыхнă, куçне, сăмсине, хăлхине палăртман. Шанчăклăрах пултăр тесе пирпе е тирпе чăркаса пĕрнене хунă, ăна та кил-çуртри пĕр-пĕр курăнманрах вырăна çакнă. Пуканен йĕрĕхлĕх хăватне унăн çĕлĕкĕ шĕвĕрри те хунтăлать.

Хĕрарăм сăнарлă хăшпĕр пуканесем çине пĕр см пысăкăш шурă шăвăç çаврашкисем («нохратка») е калай муклашкисем («тухланка») çĕлесе лартнă – анчах капăрлатма мар, вĕсенче Йĕрĕх вырнаçнă. Вĕсене çынсем чирлĕ вырăна тытнă хыççăн йĕрĕх тĕмĕ çине е йĕрĕх кӳлепи çине кайса çакнă, е йĕрĕх пĕрнине кайса хунă пулнă.

Йĕрĕх кунти те пĕлтерĕшлĕ. Вĕсем кашнинчех хăйне евĕрлĕ – материалĕ те, виçи те, ĕлки те пĕр пек мар. Пурин те çакки пур. Хăшпĕрисене вара тем те тултарнă.

Йĕрĕх – çынсем çине ӳт тата куç чирĕсем яракан курăнман усал чунăш. Çак чирсенчен хăрани тата вĕсенчен хӳтлĕх шырани те ĕнтĕ ăна матриархат тапхăрĕнчех халăхра çуратнă. Арçын сăнарлă пуканесене те хĕрарăма тивĕçтерме кăна тунă, вĕсем çинче тăхлан ирĕлчĕкĕсем те çук. Кайрантарах çынсем Йĕрĕхре ваттисен ахрăмне те курнă. Кашни килйыш Йĕрĕхе хăйсен килĕн хунти тесе шутланă, çавăнпа ăна упранă, ун патне пыма та шикленнĕ.

Йĕрĕх юта кăмăлламасть. Çавăнпа та унăн чирĕ анратсан çыннăн юмăç патне кайса кам Йĕрĕхĕ тытнине, ăна мĕнле

çырлахтармаллине пĕлмелле пулать. Çын вара кăтартнă çĕре кайса тивĕçлĕ йĕркепе, кучченеçпе Йĕрĕхе çураçтарать. Хывмалли савăт-сапана – лаптак тирĕкпе çăпалисене – йывăçран чутласа тунă.

Тăмран тунă кӳлепесенче малтанхи ӳсентăран йĕрĕхĕсемпе кайранхи çын сăнарлă пир пуканесен çыхăнăвĕ сĕмленет. XIX ĕмĕр пуçламăшĕнче Йĕрĕхсене ĕçне кура уйăрнă: хĕрарăма хĕсĕрлĕхрен сиплекенни, сунарта ăнăçу сунаканни, выльăха хунама пулăшаканĕ т.ыт.те. XIX ĕмĕр вĕçнелле йĕрĕх ĕненĕвĕ халăхра пĕтĕмĕшле сĕвĕрĕлет. Хăшпĕр кил хуçисем ун ячĕпе пайта та илме пикенеççĕ. Пăрахăça тухнă йĕрĕх пĕрнисем нĕрсĕрленни те пулнă. Çапах халĕ те унта-кунта Йĕрĕхпе çыхăннă тĕшмĕшлĕхе асăрхама пулать.[28]

Фокин П.П. (1947–2007) Йĕрĕхре матриархат тапхăрĕнчен упранса юлнă паллăсенчен пĕрне курать. Кĕлĕсенче Тĕнчене çуратнă Амана, тĕп турăсен амăшĕсене калани те, улăпсен амăшĕ çеç пурри те, Хĕртсурт хĕрарăм сăнарлă пулни те, хĕр аки туни те, хунькассипе тата хăйматлăхпа çыхăннă йăласем те, кукамай тата ытти сăмахсен пулăвĕ чăваш несĕлĕсен çав саманине аса илтернине палăртать (1975 çулта).

Патриархат çĕнтерсен Йĕрĕхе урăхларах хаклама тытăннă. Вăл, тăван йăх хунти, юта кăмăлламасть, хăйне сума сумасан чир-чĕр ярать. Ытларах чух Йĕрĕх чăваш çипуçне тăхăннă хĕрарăма кăтартакан пукане пулать. Ячĕсенче – тăванлăх терминĕсем.

Качча тухакан хĕр пĕрле Йĕрĕх илсе кайнă. Хĕр çӳпçине тултаракан амăшĕ çак пуканене тĕпне вăрттăн хунă, тепĕр чух пĕрле арçын пуканине те пĕрле хума пултарнă. Йĕрĕхĕн, тăван килĕн, хурăнташсен хунти пулса, çĕн çынна упăшки патĕнче те хӳтĕлемелле. Унăн тулли пĕлтерĕшĕ манăçса пынăран XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче хĕр Йĕрĕхе кӳнĕ япаласем хунă пĕрнепе е пĕчĕк çатанпа çеç кайнă, хыççăнхи çулсенче – «турамăшь» ӳкерчĕкĕпе.

Йĕрĕхе, чирсенчен шикленнипе тата вĕсенчен хӳтĕленес тесе, шутласа кăларнă тени тĕрĕс мар.[29]

Лойко Л.М. Питĕрти Патшалăх этнографи музейĕнчи чăваш экспоначĕсене тĕпченĕ, вĕсем унта пайтах-мĕн (1988 çулта).

967-мĕш коллекцири (Самар кĕпĕрнинчи Вязовкăра 1906 çулта туяннă) тăмран тунă пиллĕк йĕрĕх пукане уйрăмах кăсăклă. 1416 номерлĕ коллекцире (Самар кĕпĕрнинчи Пĕкĕлме уесĕнче 1908 çулта туяннă) Йĕрĕхпе çыхăннă пуканесем, пĕрнесем, ятарлă савăт-сапа пур; хуçи вĕсемпе Хусан кĕпернинчи Чистай уесĕнчен куçса килнĕ. 1239-мĕш коллекци те (Чикме тата Çĕрпӳ уесĕсенче 1907 çулта туяннă) Йĕрĕх япалисемпе пуян: пуканесем, кунтă, нохратсем, орхамахсем.[30]

Салмин А.К. (1952 ç.ç.) йĕрĕх чӳкне килти чунăшсене халалланă йăла-йĕрке хушшине лартать (1990 çулта).

Йĕрĕх чӳкĕ тесе çынсене тĕрлĕ чир-чĕр, канăçсăрлăх яракан йĕрĕх кĕлеткине парне панине калаççĕ. Тĕп ӳтĕмĕ: кĕсен, çăпан тухни, куç пăсăлни, пӳрленни, ытти амак. Йĕрĕх кашни килĕн пулмалла, тĕп килти асли шутланать. Йĕрĕх хăй пурăннă килти тăнăçлăха килĕштерет. Ăна авалтан нимĕ-рпе чӳкленĕ, нохраткăсем те хывнă.

Йĕрĕх вырăнĕ йĕрĕх кĕлетĕнче, ампар айĕнче, лаçра, сарай ăшĕнче е çийĕнче, пахчара. Хывăма кил таврашĕнчи пĕр-пĕр пĕрене патне те хăварма пулать. Кил айккинче пулсан ку чунăш хăвăллă хăрнă йывăçра, çырмара, кĕпер таврашĕнче е улăхри пĕр-пĕр улах кĕтесре. Унăн вырăнĕнче салат, хăмла, кăмрăк юлашкисене те курма пулать. Кĕлĕ каламасăр чӳклемен. Ăна çырлахтармалли тĕп парне – тăхлан татăкĕ.

Тӳркĕлли кĕлеткине çын евĕрлĕ скульптура пек, тата тĕрĕсрех, хĕр евĕр пукане пек йывăçран касса тунă. Ку пукане вырăнĕ яланах кĕлетре.[31]

Вăл, Г.И. Дзенискевичпа килĕшсе, йĕрĕхĕн пуçламăш вырăнĕ ешерекен йывăç-тĕмре пулнине, кайран, тин, этем сăнарлă пуканесем тухнине палăртать (2003 çулта).

Йĕрĕх ĕлкин аталанăвĕ çапларах пулмалла, йывăç – йывăç хулли – пуканесем (татăк-кĕсĕкрен – тăмран – металтан)[32]

Трофимов А.А. (1935 ç.ç.) йĕрĕх пуканисен, уйрăмах тăмран тата йывăçран тунисен, пĕчĕк кӳлепесен ӳнерĕнчи вырăнне, пĕлтерĕшне тĕпченĕ (1993 çулта).

Чăвашсем йĕрĕх кӳлеписенче илĕртӳллĕ пукане е уйрăм ҫынна палăртакан кап кăна мар, вĕсенче ятарлă хунтă, калама ҫук вăйлă чунăш курнă, туйнă. Йĕрĕх йăли-йĕркинче усă куракан нумай япала тарăн пĕлтерĕшлĕ. Сăмахран, тăхлан татăкĕ хĕрарăмăн кĕмĕл капăрĕсене сăнлать, пилеш е ҫĕмĕрт турачĕ пуканене хăйне евĕр чĕрĕлĕх кĕртсе турăш тăвать т.ыт.те. Питĕрти патшалăх этнографи музейĕнче упранакан чылай чăваш экспоначĕ йĕрĕхлĕхе ăнкарма пулăшать. Кунти хăшпĕр коллекцисем ҫав енчен уйрăмах кăсăклă: 967, 1205, 1239, 1416, 2032, 2846, 3468, 5238, 6105, 6215, 6326 №№. Музей фондне вĕсем чăваш ялĕсенчен 1906-1938 ҫҫ. ҫитнĕ.[33]

Егоров Н.И. (1949 ҫ.ҫ.) «йĕрĕх» сăмах сĕм-авалхи тĕрĕк чĕлхинчи ыдук/ыдык «таса, сăваплă» сăмахран тухнине уйрăмах палăртать. Ҫак ăнлава ҫывăх якут, тува, хакас, алтай, киргиз чĕлхисенчи ҫакăн евĕр сăмахсемпе те паллаштарать (2001 ҫулта).

Ăру сыхчине те, вăл пурăннă вырăна та, ҫак чĕме халаллавă япалана та, унпа ҫыхăннă йăла-йĕркене те, чӳклевĕнче усă курмаллисене те (укҫа, шăранчăк, чуста урхамах, пукане т.ыт.те) – пурне те «йĕрĕх» сăмахпа ăнлантараççĕ.

Кĕҫĕн ҫын ашшĕ-амăшь килĕнчен Йĕрĕхе сăнарлакан япаласенчен пĕрне илсе кайнă е ун валли ҫĕнĕ йĕрĕх пукани тунă. Йĕрĕхĕн чăкăртăш енĕсем халăхра хĕреслĕхе йышăнтарсан ҫуралнă.

Шонтал районĕнчи (Самар облаҫĕ) Кивĕ Ухинккелте ĕлĕк кашни ҫуркунне, мăнкун умĕн, Ҫарăмсанта кивĕ йĕрĕхсене юхтарса янă. Хыҫҫăн ҫĕннине тунă. Татăк-кĕсĕкрен тунă пукане кунта йăх чунăшне сăнарлакан Йĕрĕх шутланнă.[34]

Матвеев Г.М. (1933 ҫ.ҫ.) малтанхи тĕпчевҫĕсен ĕҫĕсене тишкерсе йĕрĕхе пуҫтаясси сĕм-авалтан килнине ҫирĕплетет (2012 ҫулта).

Йĕрĕх Киремет евĕр ырă, виҫĕ пĕлтерĕшпе ҫӳрет: 1) чунăш, 2) япала, 3) вăл пурăннă вырăн. Хĕреслĕх килсен Йĕрĕхе киреметпе пăтраштарма пуҫлаççĕ. Йĕрĕхе сумлани тĕмсемпе йывăҫсене сумланипе ҫыхăннă. Унтан хăрани ҫынна авал сă-

ваплă йывăçсемпе пĕрле ларса çисе е вĕсене хывса килĕшӳ тума хистенĕ. Кайран вара йĕрĕхленнĕ, çын евĕр кĕлеткесене пуçтайнă. Йĕрĕх тавращĕнче çынсем асăрхануллă пулнă.

Йĕрĕхе сăнарлакан пуканесем ытларах хĕрарăм евĕрлĕ, чăвашсен асамлă тĕнчекурăмĕнче Йĕрĕх-хĕрарăм тĕп вырăнта тăрать. Хĕрарăма сума сунă, хисепленĕ, унра кăкри таса вăя курнă. Йĕрĕх пуканисене çын пек калăплама XIX ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринче пуçланă.

Тĕрлĕ функциллĕ Йĕрĕхсем пулнă. Ĕмĕрсем хушшинче кӳлепи-сăнарĕ улшăнса пырсан та тĕшши улшăнман: çак чунăш çаплах çынна сиен кӳнĕ. Çавăнпа та унпа чăвашсем килĕшӳллĕ пурăнма тăрăшнă (тăрантарнă, тумлантарнă, упранă, мухтанă), ăна килйыш хунти вырăнĕнче хисепленĕ.

Çын Йĕрĕхĕнчен асăрханнă. Чирĕ лексен, кам Йĕрĕхĕ тытнине пĕлме тăрăшнă, юмăç патне кайнă. Мĕншĕн тесен ют Йĕрĕх тытсан тухтăрсем пулăшаймаççĕ. Йĕрĕхлĕхре ăна тăрантарни уйрăмах пĕлтерĕшлĕ.[35]

# II. Йӗрӗх ӑҫтан тухнӑ?

Ҫут тӗнчере пурри – ҫутҫанталӑк, этем ывӑл-хӗрӗ, уҫлӑх, турӑлӑх, кулленхи пурнӑҫ ыйтӑвӗсем – ӑс-тӑна харпӑрхӑй майлӑ пӗр пӗрлӗхре вырнаҫать. Кашниех тӗнчене хӑйне евӗр курать. Паллах, кунҫул тӑршшӗнче ҫын, халӑх тӗнчекурӑмӗ пӗр вӗҫӗм кӑткӑсланса, тарӑнланса, аталанса пырать. Курӑнакан, туйӑнакан, тӑвӑнакан тӗрлӗ ӗҫе, япаласене ҫын малтанах пусӗнче уйӑрман пуль-ха. Пӗр-пӗр ӗҫ-пуҫпа унӑн курӑнӑвӗ, япалапа ӑна палӑртакан сӑмах е ҫынпа унӑн ячӗ те асамлӑ ӑнӗнче уҫӑмлӑ пайланман ӗнтӗ. Ҫавна май «йӗрӗх» тенинче те пурте пӗрле пулнӑ темелле, вырӑнӗ, тӗрлӗ пайӗ, асӑмӗ-сӑнарӗ, чирӗсем, ӑна лартни т.ыт.те, уйрӑмах йӑх аталанӑвӗнчи тата хутшӑнӑвӗсенчи пӗлтерӗшӗ.

## 2.1. Мӗн вӑл йӗрӗх

Авалтанах килйыш тенине, мӑшӑр йӑва ҫавӑрнин йӑлине Йӗрӗх вӗрентевӗ тытса пынӑ. Этем ывӑл-хӗрне, хӗрарӑма чун тӗкки, чуна хавхалантарса тӑракан яланах кирлӗ. Вӑл йӑх пурнаслӑхне, сывлӑхне, тасалӑхне, чысне хӳтӗлеме те кирлӗ.

Ҫав вӑхӑтрах Йӗрӗх тытса тӑни кил ҫине, килйыш ҫине пысӑк яваплӑх тиет, ҫын ӗретлӗ, тӗслӗхлӗ пурӑнма хистет. Кашнинех килтисемшӗн те, урамра пулнишӗн те, ялшӑн та хуравламалла. Йӗрӗх килйыша пурнӑҫ кукри-макри пирки, ӑна-кӑна уямаллине аса илтерет, харпӑрхӑйне тимлӗ, асӑрхануллӑ пулма сунать, тӗрӗс мар утӑмсенчен упрать. Ҫапах вӑл турӑ мар, пуҫтаймалли ырӑ, хӑйне евӗр чарса, упраса тӑракан чунӑш.

Хӑшпӗр йӑхсен, килсен Йӗрӗхӗ вӑйлӑ, йӑхӗ те чун хӑвачӗпе вӑйлӑ, ӗрчевлӗ, ӑнӑҫуллӑ. Чунӗпе хавшаккисен йӑхӗн малашлӑхӗ уҫӑмлӑ мар. Вӗсем паян пуян пулсан та ачи-пӑчин ырри курӑнмасть, пурлӑхне, кил-ҫуртне те пӗтерӗҫ. Йӗрӗхлӗхе ҫын халӑх йӑли-йӗркине тытса пыни те, тытса пырас йывӑрлӑхсене ҫӗнтерни те, ваттисем умӗнчи тивӗҫе манманни те, малтанхи ӑрусем тӑвайманнине хӑвӑн ҫине илме пултарни те кӗрет пулӗ. Унта ваттисен халалӗ, ҫутӑ асӑмӗ, пулас

ăрусене вĕсем ыр сунни те пур. Ахальтен мар, çĕн вырăнта кил пуçарнă çынна авал хăй пÿрчĕ айнех пытарнă.

*Юрри симĕс кăвак арчара,*

*Симĕс кăвак арчи маччара.*

*… Çăраççи аннеçĕм çумĕнче,*

*Аннеçĕм шур акка патĕнче…* (Хăна юрринчен – Чĕмпĕр облаçĕ, Барыш районĕнчи Степановка, 1969 çул)[1]

Йĕрĕхпе çыхăннă ĕç-пуçра çанталăк, кунçаврăм, халăх пурнăçĕ палăрмасть. Йăли-йĕркинче аш-пăш е сĕт-çу мар, çăкăр та çук. Этем организмĕ, ун кулленхи ĕçĕ-хĕлĕ, йăха малалла тăсасси хăйĕн йĕркипе пырать, юн хăйĕн çулĕпе чупать. Хуçалăх ыйтăвĕсем, халăхри вăрçă-харçă та пĕлтерĕшлĕ мар. Йĕрĕх çынсем хушшине тăнăç пурнăçа тытса тăракан чунăш, ун таврашĕнче хирĕçтăру-харкашу çук, ăна çын начар е пуян пурăнни те кирлĕ мар.

Йĕрĕхпе çыхăннă япаласем çăва таврашĕнче, виле шăтăкĕсенче, тупăкра тĕлпулмаççĕ. Йĕрĕх усал та пулма пултараймасть, унашкал пулсан эпир унтан каçару ыйтмăпăрччĕ. Усал вăйпа, Хорачонпа кĕрешеççĕ, ăна хăвалаççĕ.

Йĕрĕх вăл лайăх та мар, усал та мар, вăл хĕрарăмăн йăх тăсаслăхĕн чунăшĕ. Вăл – хĕрарăм ăнтăлăвĕ, ÿчĕ те, чунĕ те ыйтнине ăнкартакан вăй. Вăл пур, мĕншĕн тесен пирĕн кил пур, пирĕн йăх пур, пурăнас кăмăл пур. Хамăр кил, йăх пирки шутласа эпир ăна пуçтайса тăратпăр, саламлатпăр – аслă несĕлĕмĕрсен хамăр çумри хăватне, чăн халалне ыр сунатпăр. Ăнсăртран тĕрĕс мар тусан, çилентерсен каçару ыйтатпăр, лăплантаратпăр – этем ывăл-хĕрĕн çĕр çинчи тĕп тивĕçне, çутçанталăкпа пĕр тĕвĕре пулса хамăр йăха аталантармаллине манмастпăр, ăшрах тытатпăр.

Хăшпĕр тĕпчевçĕсем Йĕрĕхпе удмуртсен «воршуд» тенĕ чунăшĕн пĕрпеклĕхĕсем пуррине палăртаççĕ.

*Йерех – бабий бог.*

*Йĕрĕнмене йĕрĕх тивмен (каларăш).*[2]

*Пĕр чăваш ачине ÿслĕк ернĕ тата унăн ÿчĕ çине кĕсенçăпансем тухса ларнă. Амăшĕ ялти юмăç карчăкне чĕнсе*

*килне илсе килнĕ те ăна ачине кăтартнă. Юмăç ачан аллине тытса чĕре мĕнле тапнине тата çамкине тытса юн вĕриллĕхне сăнанă. Унтан хĕвĕнчен юмăç пăхмалли хатĕрне (çип вĕçне, çăкăр татăкне) кăларса сылтăм аллипе çиппине усăнтармалла тытнă. Хăй чĕлхипе пăшăлтатса темĕнле сăмахсем каланă. Çăкăр татăкĕ сулланма тытăннă. Карчăк кĕç шайне суллама чарса ачан амăшне каланă: «Ачуна Хурăн йĕрĕхĕ тытнă. Çав Йĕрĕхе пĕр çăмарта, вунă пус укçа тата виçĕ мамале парас пулать», – тенĕ.*

*Юмăç кайсан ачи амăшĕнчен ыйтнă: «Кам вăл Йĕрĕх;» – тенĕ. Амăшĕ каланă: «Йĕрĕх вăл куçа курăнмасть. Вăл çырмасенче, çăлкуçсенче, йывăç ăшĕнче, кивĕ çуртра пурăнать. Вăл çынсем панипе тăранса пурăнать. Çынсем ун çинчен мансан вăл вĕсем çине йывăрах мар чирсем (çăпан, шатра, кĕсенсуран) ярать. Вăл укçа, мамале, çăмарта, турăх, пир ыйтать. «Йĕрĕх» тесе вăл пурăнакан вырăна та калаççĕ. Тата хăшĕсем Йĕрĕх ячĕпе пӳрт тӳпине е пăлтăра лăпă е витре çакса хураççĕ: лăпă е витре ăшне пилеш туратти (ун çумне тăхлан çаврашки çакса) тата пир татăкĕ чикеççĕ. Çав лăпăпа витрене те йĕрĕх теççĕ»* (Пушкăртъен, 1920 çулсем).[3]

*Пĕрнине хăйне йĕрĕх тенĕ. Вăл ăçтан пуçланнине вара пĕлеймеççĕ. Унта юман çулçă сапнă, хĕррипе çипсем çине нухрат çакнă. Пӳртри чи çӳллĕ вырăна, пĕрене çине лартаççĕ – шыçă-çăпан ан лектĕр тесен ача-пăчан ăна илмелле мар, тĕкĕнмелле те мар. Чирлесен кашнинчех ăна пуçтайнă, çĕнĕрен çĕнĕ нухратсем çакнă.*

*Кашни килтех хăйĕн йĕрĕхĕ пулнă. Пĕлтерĕшлĕреххисем, çынсем çӳренисем, кĕперсем таврашĕнче, садсенче пулнă. Вĕсенчен ялйыш хăранă, ăнсăртран кӳрентерсе Йĕрĕх тытасран шикленнĕ, ачасене унта выляттарман.*

*Качча каякан хĕр килĕнчи хурама пĕрнене пĕрле илсе кайнă, çĕнĕ çĕрте вырнаçтарнă, ашшĕ ун вырăнне çĕнĕ пĕрне туса лартнă* (ТР Теччĕ районĕнчи Таяпа, 1907 çул).[4]

*Йĕрĕх пĕрнине тырă ампарĕн пĕр кĕтесне çакаççĕ, пӳлмесенчен çӳлерех çӳлĕк пулсан вара, унта тăратаççĕ. Пĕрнере*

*халаллакан ҫыннӑн ҫӳҫ таткисем, чӗрне – вӗсем нумайччен пӑсӑлмаҫҫӗ. Кунтах хӑвӑрт ирӗлекен металл – калай татӑкӗсем… Ҫакӑнтах пӗрнене пир, тӑлапир касӑкӗсене, пир-сӑран чӗнӗсене хураҫҫӗ, ҫӗн пура турпасӗ те – кирек мӗнле ҫӗнӗлӗх палли. Ҫакӑнтах вак укҫа хураҫҫӗ. Ҫиелтен пӗрнене тӗрлӗ тӗслӗ хӑюсемпе капӑрлатаҫҫӗ, пуяннисем – кӗмӗл укҫапа. Тата яланах шалта та, тул енче те пилеш турачӗ пур* (Шӑмӑршӑ районӗнчи Шӑмӑршӑ ялӗ, 1886 ҫул).[5]

*Ампарсене яланхи йӑлапа пӳртрен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫ енне лартаҫҫӗ. Вӗсенче ӗлӗкрех Йӗрӗхсем те вырнаҫтарнӑ… Йӗрӗх вӑл ампар кӗтесне лартнӑ е ҫакнӑ, чӳкленӗ выльӑх шӑммисемпе тултарнӑ катка е пӗрне кӑна. Чӑнах та чӳкленӗ выльӑх шӑммисемпе тултарнӑ пӗрнесем ҫине туратсем хуркаланӑ. Анчах вӗсем ҫине пӗр калай татӑкӗ кӑна мар, нумай кошак коҫӗ* (блестки) *ҫакнӑ, пуян чӑвашсем – кӗмӗл укҫасем те. Ҫын кӗлетки евӗр йӗрӗх ҫинчен те, кивӗ йӗрӗхе шыва пӑрахни пирки те эпӗ илтмен… Йӗрӗхе* (чунӑша) *хывнине ятарлӑ пӗрнене хураҫҫӗ. Пӗрнине, ӑна та йӗрӗх теҫҫӗ, ытларах чух ампар кӗтесне вырнаҫтараҫҫӗ, тӗрлӗ туратсемпе, кошак коҫӗсемпе тата вак кӗмӗл укҫапа капӑрлатаҫҫӗ* (Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Орхас Кошкӑ, 1830 ҫулсем).[6]

*Кӗсен-ҫӑпан тухсан Йӗрӗхрен пулнӑ тенӗ. Йӗрӗхе контӑ туса ҫакнӑ, нимӗрпе, тӑхланпа чӳкленӗ. Тӑхланне шӑратса туттӑрпа ҫыхса контӑ ҫумне е контӑ ӑшнех хунӑ, нимӗрне те ҫавӑнта янӑ. Кӗсен-ҫӑпан тухсан чӑваш ӑшӗнче шутланӑ: «Мана Йӗрӗх тытрӗ пуль», – тенӗ. Вара чӳкленӗ те кӗсен-ҫӑпан тӳрленнӗ. Халӗ Христос верие тытнӑ та ӑна пуҫҫапма пикенеҫҫӗ; киреметсене, йӗрӗхсене ҫурхи шывпа юхтарса янӑ* (Тӑрак районӗнчи Ҫеҫмер, 1905 ҫул).[7]

*Йӗрӗх – пилеш турачӗ ҫине ҫакнӑ калай татӑкӗ. Туратне ҫулленех улӑштараҫҫӗ, кивӗ Йӗрӗхне турачӗ-мӗнӗ шыва переҫҫӗ…Йӗрӗх ахаль калай татӑкӗ мар, ик пӳрнелли пысӑкӑш пӗчӗк ҫын кӗлетки – алли-ури, куҫӗсем пур* (Хорӑнҫол тӑрӑх, 1830 ҫулсем).[8]

*Йӗрӗх тени пукане пулмарӗ, кӗмӗл укҫана ҫыхнӑ пек ҫип ҫине тултарнӑ тӑхлан е калай шӑранчӑкӗсем пулчӗҫ, кивӗ*

*ампара куçарнӑ чухне пӗр çӗрӗк пӗрене ӑшӗнчен тухрӗç.* (Шутласа пӑхсан кунта икӗ тӑхлан тата 119 калай шӑранчӑкӗ тухнӑ, чи пысӑкки те çирӗм пусран (22 мм) мала мар. Хӑшпӗрисем муклашка анчах, плашши пекех лаптаках пулман. Кашнин витӗр çакма тесе йӗтӗн çип кӑларнӑ) *...Килте йӑх пӗрни çуккисем Йӗрӗх туса уя е вӑрмана тӗмсем çине кайса çакаççӗ* (Шупашкар районӗнчи Шоркасси, Яндашево, 1887 çул).[9]

*Йӗрӗх мӗн япала вӑл тесе ыйтсан вӗсем, Йӗрӗх мӗнлине эпир пӗлместпӗр, теççӗ. Çта пурӑнать вӑл тесе ыйтсан, эпир ӑна та пӗлместпӗр, теççӗ. Унӑн ячӗпе пирӗн чӑваш çыннийӗн хуралтисенче: кӗлетре-мӗнте е ытти çӗрте – пуркӑ çакӑнса тӑрать, çав пурка Йӗрӗх пӗрми тетпӗр, теççӗ. Унӑн ӑшӗнче пукане тавраш выртнине халиччен те эпир курма мар, илтмен, теççӗ. Йӗрӗх çынна тӗрлӗ ерекен чирпе аптратать-имӗш: кӗсен, çӑпан, кӑрчанкӑ, кашкӑр шатри тата ытти чирсемпе те. Çав чирсенчен хӑтӑлма Йӗрӗхе тесе тӑхлан шӑратса, сивӗ япала çине тумлатса, çав тӑхланӑн пӗр шӑтӑкӗнчен çиппе тирсе хай Йӗрӗх пӗрми çине тӑхланӗпе шал еннелле çакса хуратпӑр теççӗ. Йӗрӗх тытрӗ пулсан, тасалтӑр тесе, хӑшӗ-имӗш çав пӗрме ӑшне çуллен пилеш çупкӑнӗ татса пӑрахаççӗ, мӗншӗн пӑрахнине хатӗр те пӗлместпӗр, теççӗ* (ТР Пӑва районӗнчи Пӳркел, 1888 çул).[10]

*Ваттисем каланӑ тӑрӑх, чӑвашсем кунта килсенех вӗсенӗн каярахри пек пӗр Турӑ мар пулнӑ. Вӗсем ун чухне тӗрлӗрен йӗрӗхсене, киреметсене пуççапнӑ. Йӗрӗх пуканисене вара чӑваш хӗрарамӗ тумӗ тумлантарса хӑйсем тунӑ та ӑна Турӑ вырӑнне шутланӑ. Вӗсем, ваттисем каласа панӑ тӑрӑх, килти телее тытса усранӑ, пукане çӗмӗрӗлсе саланса пӗтсен кил-çурт та саланать тенӗ. Вӗсене клатавуйсенче, кӗлетсенче усранӑ. Çулталӑкра вӗсене виçӗ хут чӳк тунӑ: малтанхи чӳкӗ (çуркунне) ирхи апат, виççӗмӗш чӳкӗ (кӗркунне) каçхи апат çитерни вырӑнне шутланнӑ.*

*Кам пуканесене кирлӗмаршӑн тытнӑ, ӑна çав Йӗрӗх суккӑр, алӑсӑр-урасӑр тунӑ е урӑх чире ертсе хытӑ асаплантарнӑ. Ун пек чух вара сывалас тесе ку Йӗрӗх пуканисене çырлахтарнӑ та, çын сывалнӑ.*

*Çемьерен çын уйрăлса тухать пулсан (пĕлсех авланнă хыççăн) килти ваттисем Йĕрĕх пукани туса чӳклентернĕ те ăна уйрăлса тухакана парса янă. Ку пукани уйрăлса тухаканăн кил-çуртне инкекрен-синкекрен пăхса усранă тет* (Пенза облаçĕнчи Çăрттанлă районĕнчи Итĕм-Кура, 1961 çул).[11]

*Кусен килĕнче Йĕрĕх пур тенипе кĕрсен, ăна унта хĕрарăм кĕтсе илет. Йĕрĕхне кăтарт-ха, тен, ăна музее упрама парса яратăр, тесен вара килхуçи арăмĕ хăраса ӳксе аллисемпе сулкалашма пуçлать, унашкал тăваймастăп, тет. Çак килте 14 çул пурăнса вăл пĕрре те пĕрне патне çывхарман, никампа та ун пирки калаçман-мĕн (Сарăту кĕпĕрнинчи Кузнецки уесĕ, 1928 çул).*[12]

*Тот Ерех имеется у них в доме издревле, то есть более ста лет… В нем же де состоит непреодоленная ересь и волшебство на мнимую пользу и всякий вред человекам и скотам приложенное… Сами вынести и истребить его из своего дому жестоко опасались… В них начал действовать он силою имеющегося в нем волшебства онаго – то есть различными несносными и весьма для жизни опасными ранами поразил тело сей женщины, от них она и действительно теперь имеется расслабленна… И по чьему научению изъясненные привесы и жертвы приносят божку оному, производя в действо свои чуваские прежние нечестии и служа безрассудным и скотоподобным своим хотениям* (Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Токтамăш, 1768 çул).[13]

*Чăвашсем хăйсен кил вырăнне авал пĕрремĕш ларнă çынсем ячĕпе вĕсем майлăрах йывăçран е калайран кĕлеткесем тунă. Йĕрĕхре чăвашсен вилнĕ несĕлĕсем пĕтĕмленнĕ. Ĕлĕк сунса хăварнине мансан, несĕлсем туса хăварнă йĕркерен тухсан йĕрĕх чăвашсене айăплать: пилĕке ыраттарать, ӳт-тир чирĕ-суранне, куç чирĕсене ярать* (Шăмăршă районĕнчи Шăмăршă таврашĕ, 1870 çулсем).[14]

*Ĕлĕк пурăннă чăваш халăхсем пурте йĕрĕх тунă* (Чистай кантонĕнчи Якурккел вулăсĕнчи Куракъел, 1929 çул (ТР Нурлат районĕ).[15]

*Йĕрĕхе пур чăвашсем те ĕненсе пурăннă. Чăвашсем унтан пит хăрана: Йĕрĕх вăл кĕсен-çăпан кăларать, куçа та пăсать тенĕ* (Вăрнар районĕнчи Çĕнĕ Кипек, 1890 çулсем).[16]

*Йĕрĕх – Турăн чури, тет* (ваттисен сăмахĕ).[17]

*Йĕрĕх çулталăкра çичĕ хут Турă патне кайса хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕ пирки каласа парать. Çăпан, трахома, шывлă сар шатра тухсан Йĕрĕхе пуççапаççĕ, ăна çуллă нимĕр, васкана чух тухланккăсем кăна хываççĕ. Ирпе ирех хываççĕ, малтан Йĕрĕх тăракан кил хуçине сăйлаççĕ, кайран хăйсем çиеççĕ* (Сĕнтĕрвăрри р-нчи Орхас Кошкă, 1892 çул).[18]

*Йĕрĕх турри кил сыхлать.*

*Йĕрĕх турри карта сыхлать.* (Ваттисен сăмахĕсем)[19]

*Тĕпсакане ак çакăнпа çуртасем лартаççĕ – малтан вилнĕ çынсем, Пихампарсем, Хĕртсортсем, Кĕлĕсем килсене тĕпсаканче сыхласа тăраççĕ, теççĕ* (Элĕк районĕнчи Сарплат, 1934 çул).[20]

*Кил-çурта куçарсан Йĕрĕх те пĕрле куçать. Йĕрĕх, кӳлепинчи пайĕсене уйăрнипе, киремет пекех ĕрчет* (Золотницкий Н.И., 1875 çул).[21]

*Ирих – вещь родовая, наследственная; переходит он из роду в род. Но с того места, где раз назначено ему быть, не трогается до сгниения или случайного исчезновения амбара или лачуги, в которых он хранится. По мнению чуваш, Ирих есть какое-то целебное вещество или божество, предохраняющее их от глазных болезней, веретов и других подобных нарывов* (Шупашкар р-нчи Шоркасси (с. Яндашево), 1887 çул).[22]

*Йĕрĕх çынна паллать.*

*Йĕрĕх ухмаха тивмест.*

*Йĕрĕх ухмахран хăрана.*

*Йĕрĕх вырăса çулăхман.*

*Йĕрĕх вырăсран хăрана.*

*Йĕрĕх тутара палламан, тет.*

*Йĕрĕх тутартан хăрана, тет.* (Ваттисен сăмахĕсем)[23]

*Йирих – большею частью какое-нибудь дерево, редко – старый амбар. Йирих посылает наружныя болезни, особенно чирьи* (Сĕнтĕрвăрри р-нчи Орхас Кошкă, 1880 çул).[24]

*Не смешался ли Ирих с Турекилли… Все спрошенные говорили, что куклы ириховой нет в нашей местности, а есть-де такие куклы в Сотниковском и Тогаевском приходах… Но там, как я доподлинно знаю, именно и Турекилли, а не Ирихи* (Сĕнтĕрвăрри р-нчи Орхас Кошкă, 1892 çул).[25]

*Йĕрĕх («ерих») куç тата ӳт çинчи чирсене ярать. Унашкал чирлесен Йĕрĕхе пăтăпа çăмарта хываççĕ. Пур килте мар, хăшпĕрисен çеç ампарта Йĕрĕх çакăнса тăрать: калай плашшисемпе тата тĕслĕ пурçăнпа капăрлатнă пĕчĕк пĕрне. Чăвашсем каланă тăрăх, вĕсем патне çак Йĕрĕх ĕлĕк аякран, Хусан кĕпĕрнинчен, качча тухнă хĕрсемпе килнĕ. Вăл куçпа ӳт чирĕсенчен хӳтĕлет те ун тĕлĕнче тула тухма юрамасть* (Самар кĕпĕрни-?, 1891 çул).[26]

*Йĕрĕх – ытларах пĕр-пĕр йывăç, сайра хутра ампар. Йĕрĕх ӳт çинчи чирсене, уйрăмах, çăпан кӳрет. Ăна пирпе, кĕмĕл укçапа чӳклеççĕ, çăпантан хăтăлма – калай çаврашкисемпе. Ку çаврашкасене унччен çăпан çинче тытаççĕ* (ЧР Куславкка р-нчи Орхас Кошкă, 1880 çул).[27]

*Йĕрĕхе тăхлан шăратса тăваççĕ: çунакан хăйă çинче тăхлан тытса тăраççĕ, тумламĕсем тимĕр (пуртă е кусар çĕçĕ) çине ӳксе тĕрлĕ ĕлкеллĕ çăлтăр пек, вак укçа пек хытса лараççĕ. Кама та пулин тавăрас тесен Йĕрĕхе (тăхлан ирĕлчĕкне) çурмалла кукăль чусти пек аваççĕ, «Киремет, çак Йĕрĕхе эпĕ мĕнле авса лартрăм, манăн тăшмана* (ячĕ) *çавнашкалах авса ларт», – теççĕ. Тепĕр чухне юмăç-вĕрӳçĕсем хăйсем патне канаш илме пынисене пĕр-пĕр киремете кайса, чирĕ иртсе кайтăр тесе, хăйсене ятăн унта пăрахнă авăнчăк йĕрĕхе шыраса тупма сĕнеççĕ* (Магницкий В.К., 1881 çул).[28]

*Йĕрĕх – усал чунăш. Вăл темскерех мар, пилеш çулçисем, калай тата тĕрлĕ тĕслĕ пурçăн татăкĕсем хунă пушă пĕрне кăна. Ӳт çинче шатра, хĕрлĕхен, чечче, çăпансем тата çавнашкал урăх мĕн те пулин пулсан çеç ăна чӳклеççĕ – путексемпе, пăрça нимĕрĕпе. Чӳкне çапла тăваççĕ: темиçе така туянаççĕ те пусаççĕ, пĕрин пуçне пĕрнене хураççĕ, чунăша хываççĕ. Ытти ашне пĕçереççĕ те çисе яраççĕ, шăммисене çунтарса яраççĕ* (Кăрмăш уесĕ, 1828 çул).[29]

*Шойттанăн усал кăкĕнчен тухнă пĕр усал чунăшĕ вăл – Йĕрĕх. Сăмахĕн чăн пĕлтерĕшĕ – халаллани. Ку чунăш куç тата ӳт çинчи чирсене ярать. Ăна хывнă пăрçа нимĕрĕпе путек пуçĕсене хунă пĕрнене пилеш турачĕсемпе, тĕслĕ пурçăнсемпе, кушак куçĕсемпе тата кĕмĕл укçасемпе капăрлатаççĕ. Кашни килтех ампарта çакнашкал пĕрне куç тата ӳт çинчи чирсенчен хӳтĕленме кирлĕ* (Мальхов П.М., 1877 çул). [30]

Куратпăр ĕнтĕ, хăйĕн туртăм вăйĕпе Йĕрĕх сыпăкран сыпăка, ăруран ăрăва хĕрарăм урлă этем йăхне пĕр ĕмĕртен тепĕр ĕмĕре туртать, сĕтĕрет, пĕтме памасть. Çавах кашниех ун çине хăй енчен пăхать-те ăна тĕрлĕрен кураççĕ, туяççĕ, хаклаççĕ, ял çынни хăйне май, тĕпчевçĕ тепĕр тĕслĕ, тĕн ĕçченĕ тата урăхларах. Вăл пуррине пурте çирĕплетсен те вырăнне, сăнарне те тĕрлĕрен палăртаççĕ.

## 2.2. «Йĕрĕх ват хĕртен пулнă»

Ĕмĕрсем иртнĕ май «йĕрĕх» ăнлавăн, сăмахĕн те, чăн пулăвĕ халăх хушшинче кăштах тĕксĕмленнĕ, тĕссĕрленнĕ. Çапах та ун пирки калакан халаплăхра пĕрпеклĕх курăнать – пуçламăшĕнче хĕрарăм, ват хĕр тăрать.

Ватта юлнă хĕре килте те, ялта та, çын шутĕнче пулсан та, хăйне евĕр хаклаççĕ. Ялйыш ун çине пĕр енлĕрех пăхни, хĕрарăма пӳрнĕ мăшăрлă та ача-пăчаллă пурнăç тĕлĕшĕнчен хаклани кăмăлне урăхларах пиçĕхтерет, тĕрлĕ хутшăнусенче те ăна уйăраççĕ. Паллах, çак хĕрарăм та малтан качча кайма, масмак-сурпан сырса çын ĕретлĕ кĕмĕл – ама, шӳлкеме, хушпу – тăхăнасса кĕтнĕ, хăйĕн ачисене курас тенĕ, тен, халĕ те ĕмĕтленет. (Кашни хĕрарăм хăйĕн патне Торă хăвачĕ çитессе, арçын ыр тăвасса кĕтет, ăшне вăрлăх хывасса шанать). Шăпи пӳрмен, хĕр телейне тивĕçмен çак çын халь вара тахçан тăваннă чунне хытарнă. Ялйышпа сахалтарах хутшăнать, тен, хăйне катăк та шутлать, сăпайлăхпа, тараватлăхпа пĕрлех унăн кăнттамлăх та, тӳрккеслĕх те вирлĕ палăрать, тепĕр чух картран та тухать. Таврашри çынсене ват хĕр усаллăхĕ (хурачунлăхĕ) ытларах витерет.

Вĕсем ăна Хорачон (Хора торă) çуратнă пуль теççĕ. Каччăсем те Хĕвел (Хĕрлĕ торă) çуратнă хĕрлĕ хĕре, ара савса, кăмăлласа кĕтсе илме пултараканнине юратаççĕ-çав.[31]

*Йĕрĕх тĕрлĕ ĕненӳсемпе çыхăннă. Ытларах ун çинчен çурçĕр енче пуплеççĕ. Тахçан авал вăл ватă хĕр пулнă, çынсене сыватнă, сипленĕ тесе шухăшлаççĕ. Пурăннă чухне вăл çынсене сипленине пурте пĕлнĕ, вилсен те ăна çынсем хисепленĕ; шыçăпа куç чирĕсемпе чирлесен ăна кĕлтума тытăннă. Вăл хăй курăнмасть, хăш чух тĕлĕкре кăна ват хĕр пек курăнать* (Месарош Д., 1907 çул).[32]

*Ăна, Йĕрĕхе, ватă тăлăх хĕртен полнă теççĕ, çавăнпа ăна кĕмĕл укçа параççĕ* (Муркаш районĕнчи Кĕртекасси-Янасал, 1904 çул).[33]

*Ĕлĕк-авал пĕр Йĕрĕх ятлă карчăк пулнă. Йĕрĕх карчăк кĕсенлĕ-çăпанлă, чирлĕ-чĕрлĕ, ахлатса, йĕрсе çӳрекенскер пулнă теççĕ. Çавăнпа Йĕрĕх тенĕ тет… Йĕрĕх карчăк кĕсенçăпанĕпех вилнĕ теççĕ* (Вăрнар районĕнчи Çĕнĕ Кипек, 1890 çулсем).[34]

*Авалхи çынсен йĕрĕх ятлă чир пулнă. Вăл чире ак епле каланă: е çăпана, е кĕçене, е шăтан-юхана йĕрĕх тенĕ. Çынна е çăпан, е кĕçĕ, е шăтан-юхан ерсен, Йĕрĕх тытрĕ, тесе Йĕрĕхе чӳклес тенĕ. Авалхи çынсем хурама пĕрни ĕçленĕ те, Йĕрĕх çав пĕрнере пурăнать тесе çав хурама пĕрнене кĕлетре пĕр кĕтесе çакса усранă. Шăтан-юхан ерсен Йĕрĕх валли нимĕр пĕçерсе: «Ват аки, тытрăн-турăн пулсан, çырлах», – тесе хурама пĕрне ăшне пĕр кашăк нимĕр янă тата çуллă çатма тĕпне çутнă хăйăпа тăхлан тытса тумлатса çав пĕрне хĕрне пурçăн çакнă. Тăхланĕ шăтăклă пулмасан Йĕрĕх çырлахмаç тенĕ авалхи çынсем* (Элĕк районĕнчи Ярхуньошкăнь, 1900 çул).[35]

*Пĕр çыннăн виçĕ хĕр полнă. Çав хĕрсем виççĕшĕ те çитĕнсе çитнĕ, çапах вĕсем валли каччăсем тупăнман. Пĕр вăхăтра çавсем патне пĕр ватă старик хĕр пăхма пынă. Аслă хĕрĕ çак старике корнас мар тесе хоп пĕрне ăшне пытанса ларнă. Старик икĕ хĕрне каччăсем топăнччăр тесе пиллесе хăварнă, тепĕр хĕрне пытанса ларнăшăн ак çапла каланă: «Эсĕ ĕмĕрĕмĕрех çав пĕрне ăшĕнче порăн, сана кам хисеплемĕ, эсĕ*

*ăна кĕсен-çăпанпа асаплантарăн тата кам хисеплĕ, ăна тивмĕн тенĕ. Вара çав хĕр пĕрне ăшне Йĕрĕх пулса юлнă. Халь çав Йĕрĕх пĕрнисем хăш-хăш çынсен ампар айĕнче çакăнса тăраççĕ. Кам Йĕрĕхе пырса сĕртĕнет, ăна Йĕрĕх кĕсен-çăпанпа асаплантарать. Çак Йĕрĕхе çораçтарас тесе нимĕрпеле чӳк тумалла тата пĕрене çомне тăхлан татăксем çакса хумалла. Вăл Йĕрĕх патне тола кайма та юрамасть – кĕсен-çăпан ерет. Ĕлĕк пуян çынсем хĕрсене те Йĕрĕхсем парса янă, Йĕрĕхсĕр пĕр хĕр те кайман. Йĕрĕх парса ямасан пурнăç ăнмасть тенĕ авал* (Элĕк районĕнчи Тури Вылă, 1905 çул).[36]

*Ачасăр çынсем хăйсене темĕн тĕрлĕ телейсĕре хураççĕ (1929 çул).*[37]

*Йĕрĕх тата ак çапла пуçланса кайнă. Йĕрĕх те хĕр пулнă. Вăл пит ачаш хĕр пулнă, ялан йĕрсе ларнă. Çавăнпа ăна Йĕрĕх тенĕ. Пит йĕнĕрен ăна тутлă çимĕçсем панă, пит ачашланă. Çеçке вăхăтĕнче çеçкесемпе йăпатнă. Çапла хăтланса вăл пурне те хăратса çитернĕ. Вăл ялан, юхан-суран кăларап, тенĕ. Çавăнпа вăл вилсен те ăна кашни килĕре Йĕрĕх кунти туса хисепленĕ. Йĕрĕх кунти ак çапла тунă. Çĕрле çын çывăрнă вăхăтра хăва касса килнĕ. Çав хăвана авса кунтă тунă. Кунтине тунă чухне пĕр хĕрĕ йĕрсе тăнă. Амăшĕ ăна ан йĕтĕр тесе мимĕр пĕçерсе сар çу сапса çитернĕ. Кунтине туса пĕтерсен çав йĕрекен хĕрĕ малтан мимĕр янă, унтан вара пурте янă. Юлашкинчен пĕр нухрат янă. Вара Йĕрĕх кунтине ачасем пыман çĕре лартнă. Çеçке вăхăтĕнче Йĕрĕх кунтине çеçкесемпе илемлентернĕ. Ачасем астумасăр Йĕрĕх кунтине пырса перĕнсен çавăнтах çемйине чирлеттернĕ. Вара, Йĕрĕхе чӳк туса, мимĕр пĕçерсе çинĕ. Ку килĕренхи капла.*

*Унтан тата халăхпа пĕр пӳрт лартса панă. Пӳртне пушăт хуппинчен тунă, çеçке вăхăтĕнче вара ялĕпе кашней килĕрен пĕр çын çеçке татма кайнă. Ун пӳртне çав тĕрлĕ илемлентернĕ. Килти Йĕрĕх çырлахмасан çавăнта çырлахтарнă. Халĕ килĕрен çук, анчах ĕлĕк халăхпа лартса панă пӳрт вырăнĕнче чӳклекенсем нумай* (1911 çул).[38]

*Ĕлĕк-авал пĕр Йĕрĕх ятлă карчăк пулнă. Йĕрĕх карчăк кĕсенлĕ-çăпанлă, чирлĕ-чĕрлĕ, ахлатса, йĕрсе çӳрекенскер пулнă теççĕ, çавăнпа Йĕрĕх тенĕ тет. Йĕрĕхе пур чăвашсем те*

*ĕненсе пурăннă. Чăвашсем унтан пит хăранă. Йĕрĕх вăл кĕсен-çăпан кăларать, куçа та пăсать тенĕ. Кĕсен-çăпан тухсан е куç пăсăлсан юмăçа кайнă та, юмăç каланă: «Сана, ара, килти клетри е нӳхрепри, е лаçри Йĕрĕхӳ хĕн кăтартса усрать, уна парнесем парса çырлахтарас пулать». Йĕрĕхе асăнмалли йăла вырăнĕ килте: кĕлетре, нӳхрепре, лаçра – пулнă, Йĕрĕхе асăнса парнесем панă, пуринчен ытла ӳссе ларан хăвăл йывăçсенче пулнă. Чир-чĕр, кĕсен-çăпан кăларнăшăн юмăç каланипе е чăвашсем хăйсен ăсĕпех чир-чĕр, кĕсен-çăпан кăларнă Йĕрĕхе акă çакă япаласемпе çырлахтарнă. Пĕр мăйăр пек тăхлана çунакан вут çине тытса шăратнă, шăратнă чух тумланă вут айне кусар е кăмака питлĕхĕ тытса тăнă, тăхлан шăранса тумласа тимĕр çине шăтăклă сарăлса ансан вара Йĕрĕх çырлахнă, çав сарăлса аннă тăхлана шăтăкĕнчен çиппе тирсе, пурçăнсем çакса ытти япаласемпе тата 3 пус пысăкăш чуста, пурне пĕрле илсе кĕлете, нӳхрепе е лаçа пĕрене çумне пăтаран çакса янă е ӳсекен, ялти çырмари, уйри хăвăл йывăç çине çакса янă, кĕпер айне те çакни пур, капла тунипе вара Йĕрĕх çырлахнă. Тата ĕнтĕ шăратнă чух тăхлан чăмăртанса юхса ансан вара Йĕрĕхе чăмăртанă, шăтăксăр тăхлан кирлĕ пулман. Йĕрĕх карчăка кĕмĕл вырне пулнă сурпан çакки çакса паратпăр тенĕ. Тата пурçăн çипсемпе илемлĕ тумлантаратпăр тенĕ, кĕркунне пулсан Йĕрĕх ятне асăнса пит çуллă нимĕр пĕçерсе çинĕ, вара Йĕрĕх çырлахнă* (ТР Пăва тăрăхĕ, 1911 çул).[39]

*Кил (пӳрт) ăшшине упракан Хĕртсурт пулăвĕ те Йĕрĕх пулăвне çывăх тăрать темелле. Чулман Атăл тăрăхĕнчи чăвашсем каланă тăрăх, çак чунăш та вата хĕртен пулнă-мĕн. Çак ăслă хĕрарăма та пурăннă чух пурте хисепленĕ.* (Иванов Л.А., 1970 çул)[40]

Чирĕсене шута илсе те пулмалла, мăшăр тупайман хĕрсен пĕтĕмĕшпе кăмăлне пула та пуль, халăхра «Йĕрĕх ват хĕртен пулнă» тени çирĕпленнĕ. Хăйĕн тантăшĕсемпе пĕр вăхăтра качча каяйман хĕре «ватă хĕр» теççĕ. Ялйышăн кулленхи пурнăçне, тĕрлĕ йăла-йĕркене унăн урăхларах хутшăнма тивет. Хăйне çемьеллĕ хĕрарăм пек кăтартаймасан та çапах ăна хисеплемелле.

## 2.3. «Йĕрĕх» сăмах пулăвĕ

Ку сăмаха чĕлхеçĕсем сахал мар тĕпченĕ, унăн тăван чĕлхери фонетикăлла варианчĕсене те кăтартнă: ĕрĕх, йăрăх, йĕрăх, йĕрек, йĕрех, йĕрĕх, йĕрх, эрек, ереке, эрех. Авалтарах урăхларах формисем (ĕлкисем) те пулнă ĕнтĕ. Эпир ку чунăша XIX–XX ĕмĕрсенче пур çĕрте тенĕ пекех усă куракан «йĕрĕх» сăмахпа палăртатпăр.

Чăваш (пăлхар) чĕлхи хăй вăхăтĕнче, ик-виçĕ пин çул каялла, тĕрĕкпе монгол чĕлхисенчен уйрăлса аталаннă. Ахальтен мар, «йĕрĕх» сăмахăн фонетикăпа (сасăсемпе) уйрăлса тăракан ĕлкисем вăл чĕлхесенче пур – «й» протезăсăр (умсасăсăр) тата инлаутри (варринчи) «р» вырăнне «д», «з» е «й» сасăпа. Акă, тĕрĕк чĕлхисенчи (орхон-енисей, алтай, тува, хакас, авалхи уйгур, якут, кăркăс, телеут т.ыт.те) «ыдук», «ыдык», «ызых», «ыйык», «ытык» сăмахсен пĕтĕмĕшле пĕлтерĕшĕ: таса, сăваплă, телей кӳрекен, турра юрăхлă, турă янă, турă пани, турă пӳрни, турă панă ырлăх, турă кӳрекен, чӳке юрăхлă, чӳклĕх чĕрчун т.ыт.те – тĕрлĕ чĕлхесенче тĕрлĕ шайра. Чăваш чĕлхинче çак ăнлавсемпе çыхăннă малтанхи «йăрăх» сăмах кайран çемçелнĕ, «йĕрĕх» пулса тăнă. Çапах мишерсемпе хутăш пурăнакан анатри чăвашсем ăна велярлă (хытă) вариантра палăртаççĕ: йăрăх; туçиçармăссем çумĕнчи Хорачка-Пошкăрт тăрăхĕнче вара ауслаутри (вĕçĕнчи) «к» сасăпа калаççĕ: йĕрĕк.[41]

Йĕрĕх сăмах тĕпĕнче «ыр(ă)» сăмахăн паллаталлă (çемçе) ĕлки палăрать. Паллă ĕнтĕ, чăваш чĕлхинчи «р» сасă тĕрĕк чĕлхисенчи пĕр пĕлтерĕшлĕ сăмахсенчи «з», «т», «д», «й» сасăсемпе ылмашать. Тĕслĕхрен, туркăлла iyi (ийĕ) «лайăх, сывă, тĕрĕс»; iyilik (ийĕлĕк) «аван, ырă, ырлăх». Çавнашкалах авалхи тĕрĕк, якут, ногай, каракалпак т.ыт. чĕлхесенчи адгӳ, ăгӳ, айгӳ, ӳтӳö, ийгилик, ийги т.ыт. сăмахсем те. Нумай тĕрĕк чĕлхисенче «таса, ырă, лайăх, тĕрĕс (тӳрĕ)» ăнлава кăтартакан сăмахсем инлаутри «р» сасăпах юлнă: арык, арыг, арик, аруу, арыу. Авалхи тĕрĕк чĕлхинчи «ыд» («ыт», «ыз») глагола шута илсен унăн чăвашла ĕлки те (ыр, ĕр) «çӳлтен (тӳперен, çӳлти тĕнчерен) яр (пар)» тенине ăнлантарма пултарнă.[42]

Ытахальтен, «йĕрĕхпе» çывăх сăмахсем («ырă», «йăрăх») Х ĕмĕрте хăрăпла çырăннă «вырăх» тенипе те çыхăнма пултараççĕ. «В» умсасă сăмаха кĕрсе ларни е тухса ӳкни чăваш (пăлхар) чĕлхин историйĕнче час-часах тĕлпулать. Пирĕн Атăлçи Пăлхар патши 920 çулсенче çĕршыва тутар тĕнне (ислама) илсе килсен çакна хирĕçлекен тăрăна лăпах Вырăх ятпа палăртнă. Ку тăрăн (князь) хăйĕн йăхне ертсе тăван халăхăн «çĕнĕ йăла кăлармастпăр, авалхине пăрахмаспăр» сăмахне асра тытса Алмас (Джафар) патшана пăрахса кайнă-мĕн.

«Йĕрĕх» хăйĕн тӳрĕ пĕлтерĕшĕсĕр пуçне куçăмлă пĕлтерĕшĕпе, иккĕмĕшле сăмахсемпе, тата ытларах, тĕрлĕ сăмах майлашăвĕсемпе те тăван ăс-хакăлта пallă. Акă, иккĕмĕшле сăмахсем: кил-йĕрĕк, тимĕр-йĕрĕк, йĕрĕхлĕ (паллă ячĕ), йĕрĕх тытни «çăпан, кĕçĕ, шăтан-юхан ерни», йĕрĕх ларт «йĕрĕх чирне е камсен йĕрĕхне палăрт», йĕрĕх «кутăн çын, чăтăмсăр çын», йĕрĕх патши «каланине итлемен, кутăнланакан çын, ача», йĕрĕхлен «кутăнлаш», йĕрĕх пар (е йĕрĕх ту) «пĕр-пĕр ырра (чунăша) çырлахтар (чӳкле)», йĕрĕх çукки «несĕлĕсем паллă мар, йăх тĕпĕ уçăмсăр çын; тăванĕсем çук çын; хăйне (хăйсене) ятăн йĕрĕх çук çын (кил)». Сăмах майлашăвĕсем: йĕрĕх пĕрни (кунти, ленкесĕ, çаппи), йĕрĕх укçи (тенки, нухрачĕ, тăхланĕ), йĕрĕх пукани. Ку ретрех хăшпĕрисем кайран топонима куçнисем те пур: йĕрĕх çырми (варĕ), йĕрĕх çăлĕ (çăлкуçĕ), йĕрĕх шывĕ, йĕрĕх тĕми (тăвĕ), йĕрĕх ĕшни, йĕрĕх куçĕ, йĕрĕх касси.[43]

«Йĕрĕх» сăмах пулăвне урăхларах тĕшмĕртни те пур. Сăмахран, Малов Е.А. чăваш чĕлхине вăл еврей чĕлхинчен кĕме пултарнине палăртнă. Хасар патшалăхĕ тапхăрĕнче чăваш несĕлĕсен пĕр пайĕ иудаизм витĕмĕпе пурăннине шута илнĕ-тĕр. Хăйĕн шухăшне вăл симĕс чĕрĕлĕх, ешерекен курăк пирки каланă чух библире «йĕрĕх» евĕрлĕрех илтĕнекен «ерек» (Псал. 36,2; Быт. 9,3; Исх. 10.15) тата «ярок» (Иов. 39,8) сăмахсемпе усă курнипе ĕнентерет.[44]

Архангельский И. шухăшĕпе, «йĕрĕхпе» «ыраш» сăмахсем пĕр ретре тăраççĕ. Çакна вăл чăвашла Ие («йыя»), Йĕрĕх («йыйх»), Ырă («йыйра») – пурте тĕштырă упранă ампарта тăнипе тата

Йĕрĕх («йыйрих») – кашни ҫын пĕлекен япаласемпе тултарнă пĕрне – вĕсенчен чи палли пулнă тесе ĕнентерет. Ҫавăнпа та чăвашсем хăйсен тĕп тыррине «ырă ăш» («йыйра жь») – ыраш – тенĕ, тĕп юшкăнне – хывăха – «йырить» тенĕ-мĕн.[45]

Трофимов А.А. ҫак чăваш чунăшĕн ячĕн пулăвне армян чĕлхинче курать, «йĕрĕх» сăмах илтĕннипе те, пĕлтерĕшĕпе те армянла «ереха (пĕчĕк ача, алăри пепке)» сăмахпа тӳр килет тет.[46]

Йĕрĕхпе тачă ҫыхăннă «йăх» сăмах пулăвĕ те кăсăклантарать. Ăна варринчи *р* сасă тухса ӳкнипе «йăрăх» сăмахран пулнă теме пулать. Ҫакна икĕ сăлтавпа ҫирĕплетме пулать. Пĕрремĕшĕ, чăваш чĕлхинчи варринчи *р* сасă ытти хупă сасăсемпе танлаштарсан чи нумай тухса ӳкекенни, уйрăмах, ҫак сасăпа вĕҫленекен глаголсен тĕрлĕ формисенче. Иккĕмĕшĕ, икĕ пĕр пек редуцированнăй *ă* уҫă сасă хушшинче тăракан ялан янракан хупă сасă *р* малти вăйлăрах ялан янракан *й* хупă сасă витĕмĕпе ахалех вăйсăрланать.[47]

Словарьсенче кăтартнă «йăх» сăмахăн виҫĕ ăнлантарăвĕ те пирĕн темăна ҫывăх. 1) род, племя, порода, потомство; сперма. «Мĕнле йăхран тухса кайнă ҫав халăх» тенине, сăмахран, «мĕнле йĕрĕх аталантарса янă ку халăха» тесе каласан та пысăк йăнăш пулмасть. 2) оплодотворять «ҫие хăвар, хырăм хăвар, йăхлантар, пĕтĕлентер», оплодотворяться «ҫие юл, йăх»: *Камран йăхнă ҫынсем вĕсем*; 3) кожные заболевания; кожное заболевание, проказа, золотуха, гноящийся чирей; йăхлă – золотушный, прокаженный.[48]

Ҫапла вара, чăваш тĕнчекурăмне, ăс-хакăлне тарăн вырнаҫнă «йĕрĕх» пĕлтерĕшлĕрех ăнлав, пулăвĕпе ăна ҫывăх сăмахсем тĕрĕк халăхĕсен авалхи пĕрлĕхĕнчех пулнă. Хунсен (пăлхар е чăваш несĕлĕсен) чĕлхинче «ырă» пĕлтерĕшпе ҫӳресе юлашкинчен вăл «йĕрĕх» пулса тăнă. Унăн хытă сасăллă ĕлкинчен («йăрăх») «йăх» сăмах та калăпланнă пулмалла.

# III. Йĕрĕх çул-йĕрĕ

## 3.1. Йĕрĕхлĕхри матриархат витĕмĕ

Йĕрех пулăвне, йĕрĕхлĕхе пирĕн несĕлсен кунçулĕнчи амалăх тапхăрĕ – матриархат – витернĕ темелле. Малтанах, çутçанталăк ырлăхне пуçтарса тăранса пурăннă тапхăрта, çемьесем пысăк пулнă. Вăйпитти арçынсем ытларах сунара (кайăка) çӳренĕ, килте, йыш вырнаçнă çĕрте хĕрарăмсем ачисене тимленĕ, çимеллисене майлаштарнă, йăх пурнăçне йĕркелесе пурăннă. Ватă амăшĕ пуç пулса пĕтĕм çемьене тытса тăнă. Таврара ӳсентăран çимĕçĕ, тискер чĕрчунсем сахаллансан вăлах килйыша тепĕр вырăна ертсе кайнă.

Çемье аталанасси хĕрсенчен килнĕ. Тепĕр çемьери арçынсем вĕсем патне пырса, киле кĕрсе ача çураттарнă, вĕсен тарçисем пулса сунара çӳренĕ, ӳсентăран çимĕçне тупса хĕрарăма илсе килсе панă. Обществăри кун пек тытăм нумай вăхăта пынă. Хĕрарăм кил пуçĕ пулса пурăнакан халăхсем çĕр çинче хăшпĕр вырăнта XX ĕмĕрте те пулнă.

Чăвашсен кунçулĕнче те ку тапхăр пулнă, нумая пынă. Çакă халь сăмахлăхра, йăла-йĕркере, уйрăм сăмахсенче палăрать. Тĕслĕхрен, ял пуçланнă пирки калакан халапсенче нумай чух ял вырăнне малтан хĕрарăма килĕшӳллĕ выльăх – ĕне кăтартать, çӳресен-çӳресен лăпкă кавлесе тăраннăскер унта канма выртать. Хĕр аки йăли те пур. Çĕнĕ пӳрте малтан хĕрарăм кăмăллакан чĕрчун – кушак кĕрет. Кил (пӳрт) ăшшине упракан Хĕртсорт та хĕрарăм (ват хĕрарăм) сăнарлă. Тахçан хĕр хăйне тивĕçлĕ ара шырани çĕнĕ вăхăтра çурхи вăйă-ташăсенчи унăн пуçарулăхне, улах, ларма йăлисене куçнă. Тĕпчевçĕсем хĕрпе каччăн юратăвĕ çутçанталăкăн чарусăр аталанăвĕпе пĕр килнине, çамрăксен хăй йăхне хăварас тарăн туйăмпа пĕрле ирĕклĕ ар çыхăнăвĕсем пулнине те палăртаççĕ[1]

«Авлан» тени те пуçламăшĕнче «киллен», «киллĕ пул», «киле кĕр» тенине пĕлтернĕ. Йăх тĕпĕ, кăкĕ амăшĕн килĕнче

пулнӑран, унти аслӑ ҫынсене «кӑк» сӑмах хушса палӑртаҫҫӗ: коками е кукамай («кӑк амӑшӗ»), кокаҫи е кукаҫей («кӑк ашшӗ»), кокки е кукка («кӑк аки»). Ҫавнашкалах, юмахсенче ватӑ мӑшӑра пӗрле асӑннӑ чух хӗрарӑма пӗрремӗш калани те («пӗр карчӑкпа пӗр старик») матриархат сӗмӗ пулмалла. Тата ҫак карчӑках кил ӗҫ-хӗлӗнче мӑшӑрне хушусем парать, тӗрлӗ пуҫару тӑвать. Килте вӑйпитти арҫын – кукка – пӗлтерӗшлӗ пулни вара ваттисен сӑмахӗсемпе каларӑшсенче лайӑх курӑнать: *Авланиччен кокки паха, авлансан – хонькасси; Кокки пойтарнӑ, инки илтернӗ; Кокки полсан ан коллян; Охмах ача коккӑшне патак ҫитернӗ* т.ыт.те.[2]

Амалӑх (матриархат) тапхӑрӗнче пирӗн несӗлсем вӑрах хушӑ пурӑннӑ. Унӑн традицийӗсем, ытти алтай халӑхӗсемпе танлаштарсан, чӑваш аслашшӗсен (огурсен) витӗмлӗрех тата нумайрах вӑхӑта тӑсӑлнине тӑван чӗлхе историне тӗпчекенсем те палӑртаҫҫӗ.[3]

Чӑвашсен йӗрӗхлӗхӗ ку таранччене тытӑнса тӑнине ҫакӑнпа та сӑлтавламалла пулӗ.

Пур вӑхӑтра та аман, хӗрарӑмӑн тӗп ӗҫӗ ача-пӑча ҫуратса вӗсене ура ҫине тӑратасси пулнӑ. Унӑн йӑха тӑсас туртӑмне, ача ҫуратас хавхине, амалӑх вӑйне, сыпӑкран сыпӑка ҫуратса тӑрас юхӑмне этемлӗх ӑс-туйӑмпа та ӑнланса илнӗ, ӑна чунпа сӑвапланӑ, турӑлӑх ирӗкӗ пек ӑнланма пуҫланӑ. Ку ӑнлава чунӑша куҫарса «йӗрӗх» теме пуҫланӑ. Йӗрӗх хӗрарӑмран хӗрарӑм кайнине, ӗмӗрсем хушшинче тӑршшипе кайнине, пӗр чарӑнмасӑр пынине, ӗрчевлӗхе тимлет. Вӑл Амапа, Ҫӗр-аннепе ҫыхӑннӑ, патриархат тапхӑрӗнче кинӗн, кӗҫӗн ҫыннӑн хавхалантару тӗкки пулса тӑнӑ, халӑхра пукане сӑнарне те илнӗ.

Пиншер ҫулсем тӑршшӗнче ҫынсем вут тытма, чӗртме вӗреннӗ, чултан, кайран металтан та, ӗҫ хатӗрӗсем тума, выльӑх-чӗрлӗх усрама хӑнӑхнӑ. Арҫын ҫиеле тухать. Ҫӗнӗ мӑшӑр пӗрлешес йӗркере хӑйматлӑх тытӑмӗ ҫирӗпленет. Хӑйматлӑхсем, арҫын ялӗнчен е тӑванӗсем енчен пулса, качча тухнӑ хӗр ашшӗ-амӑшӗсем евӗр ҫӗнӗ ҫемьене хӑйсен хӳттине илеҫҫӗ.[4]

Чылай кайран, патриархатра, хӗрарӑмӑн кил-терӗшри ӗҫӗхӗлӗ пӗтӗмӗшле ҫаплах юлсан та, ун ҫине пӑхасси, ӑна хаклас-

си улшӑнать. Хӗрӗн халь хӑйӗн хӑйне арҫын суйласа илессе кӗтмелле. Унӑн ҫак ҫулсенчи тӗп шухӑш – арҫынна юрӑхлӑ пуласси, качча кайма ӗмӗтленни. Ӑна ват хӗр пулса юласси хӑратать. Кӗҫӗнрех хӗрсем вӑйӑра, улахра палӑрни, илемлӗрех, пултаруллӑрах курӑнни те ӑна кӗвӗҫтерет, пӑшӑрхантарать. Амӑшӗсен те вӑл шухӑш пуҫран каймасть, хӗрсене епле пулин те чыслӑ тыттарса вырнаҫтарма (качча пама) тӑрӑшаҫҫӗ. Халӑх пурнӑҫӗн пӗтӗм йӗркине арҫын тытса пыма пуҫланӑран хӗрарӑмӑн обществӑри пӗлтерӗшӗ тӗппипех улшӑнать. Революцилле ку ылмаш нумай ӗмӗре, пинҫуллӑхсене тӑсӑлнӑ ӗнтӗ. Килти, элти пурнӑҫа арҫын йӗркелеме тытӑннӑран кайран вӑрҫӑ-тем, синкер чухне кӑна хӗрарӑм, амӑшӗ ӑна ертсе пырассине хӑйӗн ҫине илкеленӗ, *йӗрке* (арҫын) *ҫук ҫӗрте йӗрӗх* (хӗрарӑм) *хуҫа* пулкаланӑ. Ҫав вӑхӑтрах тата хӗрарӑм перӗннӗ нумай япала вараланнӑ, ирсӗрленнӗ тесе те шутлама пуҫлаҫҫӗ. Уйӑх хушши каяшне перӗнсен ҫеҫ мар, вӑл ларнӑ ҫӗре ура ярса пуссан та кӗсен-ҫӑпан тухать теҫҫӗ.

Чӑвашсен турту (туртӑм, туртӑнкӑ, тӑван-хурӑнташ, тӑван-пӗтен) йӗрки кӑткӑс пулсан та несӗлсемпе тӑхӑмӗсене ҫичӗ сыпӑк таран пӗлмелле, хисеплемелле теҫҫӗ. Хамӑр ӑратӑрисем (юн тӑрӑх туртӑмрисем) тӑвансем пулаҫҫӗ. Анне тӑрӑх туртӑмрисем (хамӑр йӑхрисем) хурӑнташсем пулаҫҫӗ. Унсӑр пуҫне тата хонькасси – арӑм енчен тивекен турту – пур. Хӑйматлӑхпа кумалӑх тӑрӑх килекеннисемпе те ҫын ҫывӑх хутшӑнать.

Тӑван-пӗтен чӑвашшӑн питӗ пӗлтерӗшлӗ. Пур лару-тӑрура вӑл малтан хӑйӗн ҫинчен мар, тӑван-хурӑнташ, ялйыш, килйыш пирки шутлать, вӗсен сӑмахне шута илет. Ҫак пурнӑҫ йӗрки халӑх юррисенче лайӑх сисӗнет. Вӗсенче «эпӗ» сӑмах, унашкал шухӑш та, палӑрмасть. Эс хӑв пӗччен, хӑвӑншӑн, хӑвӑн канӑҫшӑн, киленӗҫшӗн асапланни, антӑхни ҫынсене кирлех мар. Халӑх сӑмахлӑхӗнче, юрӑсенче ӳт-пӳ, ӑш-чик ыйтӑвӗсем ҫук. Чӑваша выҫӑ е тутӑ пулни, арҫыншӑн е хӗрарӑмшӑн антӑхни, сивӗ е ӑшӑ, йывӑр е ҫӑмӑл пулни хумхантармасть. Ӑна ҫывӑхри ҫын, тӑван е хурӑнташ чун ӑшши кирлӗ, хамӑра сума суни, шута хуни хаклӑ, тӑванлӑха манманни паха. Чӑвашӑн

чун-чĕрери яланхи ырă шухăшĕ: ваттисем, атте-аннесем; тата хамăр ачалăхра, çамрăк чух мĕнле пĕрле пулнă, халь те, улĕм те çаплах пĕрле пуласчĕ; пурăнасчĕ пĕрле, вилесчĕ уйрăм.

*Тăван юрлать, юрлать, куçран пăхать:*

*Мĕн виличчен пĕрле пурнасшăн…* (Хăна юрринчен – Елчĕк районĕнчи Лащ-Таяпа, 1973 çул).[5]

*Мĕнле чĕнтĕр, мĕнле чĕнтĕр, тăвансем,*

*Мĕнле чĕнме манса хăвармарăр?..* (Хăна юрринчен – Шупашкар районĕнчи Шăмăш, 1974 çул).[6]

Паллах, Йĕрĕхе çывăх, пӳрт-çурта упракан, кил ăшшине тытса тăракан Хĕртсуртра та матриархат витĕмĕ палăрать. Хушăран Хĕртсурт çине Йĕрĕх функцийĕсене те куçараççĕ. Хĕртсурта ытларах пăтăпа юсманпа сăйлаççĕ. Вăл та хĕрарăм сăнарлă чунăш шутланать, пӳртре лăпкăн, уйрăмах çĕрле, арласа ларать. Килхуçи арăмĕ ăна хĕрарăм çипуçĕ хывать.[7]

Килйыша (çемьене) кил (пӳрт, хваттер, пӳлĕм) пĕр çыхăра тытать, пĕрлештерет. Çак пĕрлĕхĕн ырă чунăшĕ пулса Хĕртсорт кунта пурăнакансене тĕрлĕ усал-тĕселтен, кĕвĕçӳ-ăмсанăвăн хаяр чĕмĕнчен, куç ӳкнинчен, инкек-синкекрен хӳтĕлет. Вăл лăпкă лару-тăрăва кăмăллать те, килтен кам е мĕн те пулин çухалсан та лăпкăн, хăйне палăртмасăр тĕлне кăтартать – çынсем çакна хăйсем ăнкарса илнĕ пек ăнлансан та. Алăри ачасене вара уйрăмах хунтăлать, тепĕр чух, алхассах кайсан, паллах, хăратса та илет – турă хавхипе килнĕ çак тĕпренчĕксем çитĕннисем курманнине те кураççĕçке, илтменнине те илтеççĕ, Хĕртсорта вĕсем уççăнах туяççĕ.

*Хĕртсорт хĕрарăм сăнлă. Кăмака çинче вĕçĕм арласа ларать, йĕкĕрĕлчи вара кĕмĕлтен* (ЧР Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Хурапха, 1881 çул).[8]

*Хĕртсорт (е Ие) – сиенлĕ мар чунăш. Вăл пӳртри тата мунчари кăмака айĕнче лăпкă пурăнать. Ывăтса панă çăкăр е икерчĕ татăкĕпех çырлахать. Юратнă килне ыр сунать. Çывăракан çынна, выльăха та, пăвма (пулама) хăнăхнăран канăçсăрлăх та кӳме пултарать (Мальхов П.М., 1877 çул).[9]*

*Чăваш Хĕртсортне килти выльăх хумхантармасть (тепĕр чух лашана тухса пăхать-ха), вăл пӳртре пуррине çеç тимлет.*

*Ытларах хĕрарăм сăнарлă (кăмака çинче пурăнакан старик пек курăнсан та). Ӳсĕр килхуçине кĕтсе илет. Таврăнакан килхуçи, тараватлăхĕшĕн тавтуса: «Тавсси, Хĕртсорт», – тет. Çĕрле кăмака çинчен анса йĕркелĕхе пăхать, пурне те асăрхать. Çĕрле тăрса арлани те пур. Хĕртсортпа пĕрле ирех шăппăн тăрса арлакан хĕрĕн ĕçĕ ăнать. Хĕртсортсăр пурăнма çук* (Каменский Н.Т., 1879 çул).[10]

*Хĕртсурт усал мар, усăллă чунăш. Вăл кашни килте кăмака айĕнче пур. Килтисене ан чĕпĕттĕр, çывăрнă чух ан пăвтăр (пулатăр), выльăха лайăх усратăр, çĕнĕ пӳрт лартсан тата хĕре качча парсан е килте виле пулсан килйыша пăрахса ан кайтăр, тесе çуллен ăна пăтă хываççĕ. Кĕлтунă кун хĕрарăмсем пăтă пĕçерсе кăмака çине Хĕртсурта тутанма лартса параççĕ. Пĕртакран ăна илсе хăйсем çиеççĕ. Килйышпа выльăха синкер кӳрес мар тесе килнĕ тăвансемпе ытти çынсене пăтă çиме чĕнмеççĕ – кăçал качча кайнă хĕре кăна сăйлаççĕ* (Михайлов В.И., 1891 çул).[11]

*Килте кĕлтумалли, хĕрарăм пăхса тăракан, кĕтесри ку хĕртсурт çӳпçи килпе килйыш хунтине хывмалли пулнă. Вăл – çартне кĕртсе лартнă йывăç тĕплĕ тата хупран тунă хупăлчаллă, ăшне чавса кăларнă çӳллĕ çăка катка. Унта Хĕртсурта халалланă япаласем пулнă: усă курма пăрахнă кивĕ çипуç хатĕрĕсемпе (масмаксем, тухъя, кĕскĕсем, пилĕк капăрĕсем т.ыт.) тултарнă михĕ, вĕсем хушшинчех тĕрлĕ вак укçа тата икерчĕ-пашалу выртнă. Çак хĕрарăмран хĕрарăма еткерлĕхпе куçакан çӳпçе Хĕртсорт пурăннă вырăн та шутланнă* (ЧР Куславкка районĕнчи Картлуй, 1939 çул).[12]

*Качча тухакан хĕр туй вăхăтĕнче хăйĕн çипуçне тумланса пӳрте кĕрет те кăмака патне пырса: «Айта, Хĕртсорт, хампа пĕрле!» – тет, çав вăхăтра вăл кăмакаран тăм катса илет. Хыççăн ашшĕ-амăшĕпе сывпуллашма пуçлать* (Магницкий В.К., 1881 çул).[13]

Çапла вара, амалăх тапхăрĕнче амăшĕ йыш пуçĕнче тăни, хĕрарăм ача-пăча çуратса вĕсене уралантарас ĕç-хĕл, шухăштуйăмсем сăвапланса «йĕрĕх» ăнлав илнĕ темелле. Йĕрĕхлĕх

амаланса пынипе пĕрлех арçын килĕн ăшшине упракан ватă амăшĕсен ыр-сунăмĕ Хĕртсорт сăнарне куçнă. Юлашки ĕмĕрсене халăхра туртăвăн тăвата енĕ те аталанса çитнĕ, тăвансем, хурăнташсем, хăйматлăхсем тата кумасем. Ку вăхăтра хĕрарăмăн Йĕрĕхĕ патне йышăнасси, ăна хывасси, пухăннă укçине тыткаласси те йĕрĕхлĕ кил хуçин (упăшки е хуняçи) ирĕкĕ пулса тăрать. Ытахальтен, «йĕрĕх» ăнлав кунта, Вăтам Атăл тăрăхĕнче, хунсем, пăлхарсем çитиччен ех пулма пултарнă.

## 3.2. Масмак-сурпан

«Йĕрĕх» ăнлавпах хальхи хĕрарăм çинчи тĕрлĕ эреш-капăр та çыхăннă темелле пуль. Çакна, ытларах, масмак-сурпан, ун çинчи кăткăс тĕрĕ палăртмалла пек. Хĕрарăмăн малтанхи ăрăвĕсен аталанăвне, сыпăкĕсен çыхăнăвне çипуçĕ çинчи эрешлĕ япаласем курăмлă тăваççĕ. Вĕсем ăна илемлетеççĕ те. Туртăва чи малтанах вăйпитти хĕрарăм çинчи тум палăртать – масмак-сурпана вăл сырать. Эрешпе пĕрлех тĕссем те унта тарăн шухăшлă. Хура йĕрсем, акă, пĕтĕмĕшле, Çĕр-ама пулăхĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă; хĕрлĕ кĕтес-кукрашкасем вара хĕрарăмăн пурнăçри тĕп шăпине, юна çĕнĕ кунçул парассине, Хĕвеле, Вут хăватне кăтартаççĕ. Симĕс, сарă тĕссем те йăлтăртатса вылякан кукăр-макăр тĕрре хушăнса нумай япалапа пулăм çинчен, çут тĕнче çинчен шухăшлаттараççĕ.

Масмак, сарă, сурпан т.ыт.те тахçантанпах качча тухнă хĕрарăмăн халăх умĕнчи (çын çинчи) тĕп паллисем шутланаççĕ. Вĕсене вăл хăй качча кайнă (арçын тупнă) самантран пуçласа хăйĕн кирек хăш ачи мăшăрланиччен çын çинче, уявсенче сырса çӳрет. Çĕн çын чухне – малтанхи çулĕнче, хĕве (кĕлете) хупниччен (арăм туниччен) пуçласа ача çуратиччен – кашни кунах сырать, пĕрле пĕтĕм кĕмĕлне (ама, пуçхыç, шӳлкеме, авка т.ыт.те) тăхăнать. Кайран хăнана, туя, уява, акатуя вĕсемсĕр тухмасть. Хĕрне качча париччен е кин кĕртнĕ вăхăта тĕреллĕ çак япаласене вăл пĕтĕмĕшле сырса пĕтерет. Вăйпитти вăхăт иртсен, е ачаран юлнă арăм (ача

çуратма пăрахнă хĕрарăм) пулса тăрсан, ăна таса тум, кĕпе-аркă, тутăр çинчи тĕрĕсем тата хăшпĕр кĕмĕл кăна капăрлатать. Сурпан-масмак сырман çамрăк хĕрарăма вара «хĕрле тăхăннă», «хĕрле çӳрет» теççĕ. Сурпан пачах сырайман хĕрарăмăн ял хушшинчи хисепĕ вара салтак тумне тăхăнайман арçынна хакланă шайра кăна.[14]



1-3 – масмак валли хатĕрленĕ тĕрĕллĕ сентел (Элĕк р-нчи Чăваш Сорăм, Тăрак р-нчи Арçунакасси, XX ĕмĕр).

4-5 – масмак (Йĕпреç р-нчи Пысăк Упакасси тата Вăрнар р-нчи Кӳстӳмĕр, XX ĕмĕр пуçл.)





1. Авалхи йӑлапа (хура тата хӗрлӗ ҫиппе ҫеҫ) тӗрленӗ сорпан (Етӗрне р-нчи Кӑмаккасси-Шӑмат, XX ӗмӗр пуҫламӑшӗ).
2. Тӗрлӗ тӗслӗ ҫиппе тӗрленӗ сорпан (Шупашкар р-нчи Вуспӳрт-Чорачӑк, XX ӗмӗр пуҫламӑшӗ).

Килти эреш-чӗнтӗре килйышри тӗрлӗ ӑру ҫыннисем, юлашкинчен хӗр хӑй те ырри, ӑшши, илемли енне чун-чӗререн ӑнтӑлса халӑха килӗшӳллӗ тунӑ. Ҫавӑнпа та эрешлӗ япаласем, уйрӑмах хӗрӗн хӑйӗн ырӑнӗ таврашӗнчи, калӑпӑр, капӑр ҫытар пичӗ, чӗнтӗрлӗ ҫӳҫесем, чӳрече каррисем, тӗрӗллӗ тӗрлӗ ҫипуҫ т.ыт.те халь хӑйсем шалти хакӗ-пӗлтерӗшӗпе хӗр патне талпӑнаҫҫӗ, ӑна ырри, лайӑххи ҫывӑхне туртаҫҫӗ.

Тӗрӗ-эреше хӗр хӑй туни паха. Малашнехи кунҫулӗнчи нумай пулӑм, япала унтан хӑйӗнчен те килет-ҫке. Хӗрача пӗр

ултă çулта тĕрлеме пуçлать те качча тухичченех, кирек хăш пушă вăхăтра, тĕрлет. Масмакпа сарăна сентел (хĕрлĕ пир) татăкĕ çине, кĕпепе сурпана, çулăка, пĕркенчĕкне тӳрех хăйĕн çине тĕрленĕ. Туйччен çителĕклĕ тĕрлеме ĕлкĕрейменнисем, пуртарах çын хĕрĕсем, эрешлĕ, капăр çипуç кайран çителĕклĕ пултăр, тесе арăм чухне кирлĕ тĕрĕллĕ ытти япаласене те пасарта туяннă, çӳпçине тултарнă.

*Школа кайман, çа, ача чохне. Порнăçа тĕрленĕ май ăнланса пурнă. Йорла-йорла тĕрлесе, тантăшсампа. Темле йорă та. Мĕн поçа килет, çана йорласа* (Муркаш районĕнчи Вускасси-Акуча, 1900 çулсем).[15]

*Эпĕ хам тĕрленĕ çирĕм масмакпа, çирĕм сорпанпа, парня памалли виçĕ кĕпепе (арçын кĕпипе-?) качча тохрăм, 1938 çолта. Поян çын хĕрĕсем сакăрвонă масмак-сорпанпа тохатчĕç.* (Муркаш районĕнчи Карамалькасси).[16]

Масмак тĕррине тума, эрешне палăртма хĕрача амăшĕн масмакне илет, унпа пуçлать те кăштах улăштарса малалла тĕрлет. Çирĕм-вăтăр масмак тĕрлесен те эрешне пĕрпек тумасть. Ăна вăл йăхне чунпа туйса, хăйĕн шухăш-кăмăлне палăртса малалла çырать, аталантарать. Унта вăл мĕн хывни пуриншĕн те вăрттăнлăх. Пысăк туйăмсемпе тулнă хĕрачан шухăшĕсем çапах ĕçĕнче, тыткаларăшра, килти лару-тăрура палăраççĕ пулин. Тĕрленĕ чух вара яланах пĕр-пĕр çемĕ ĕнĕрлеççĕ, юрă юрлаççĕ. Тĕрĕри кашни йĕрĕн, кашни кукрашкин, тĕс вылявĕн хăйĕн кĕвĕ çаврăнăшĕ. Шухăшсем хĕрĕн сăмахĕсене йĕркелеççĕ, туйăмĕсене пиçĕхтереççĕ, палăртнине тума хистеççĕ. Ĕмĕтĕн, пысăк шухăшăн вăйĕ витĕмлĕ, вăл çĕнтеретех, ĕмĕтленни пурнăçланатех.

Етĕрне-Шупашкар-Çĕрпӳ-Сĕве хулисем хушшинчи масмак тăршшĕ вăтамран 53 см (21"), сарлакăшĕ ик пӳрнеллинчен (1,5") мала мар. Ăна пуç урлă ярса янах айĕнчен, хăлха тĕлĕнчерех, сурпанпа авка (алка) пулăшнипе е ятарлă йĕппе çыхăнтараççĕ. Çавал пуçĕнчи ялсенче вăл 30 см (12") вăрăм мар.

*Арăмсен пуçра масмак, мăйра сорпан* (Элĕк районĕнчи Яккошкăнь); *масмак – сорпан çыхмалли, холха тĕлĕнчен çыхаççĕ* (Шупашкар р-нчи Якутар); *апи масмак сотас, тит, калош илсе парас, тит* (Етĕрне р-нчи Çоткасси); *Асламас кĕпери авăнчăк*

(тупсăмĕ: масмак – Муркаш р-нчи Торай); *аллапки пек масмакăм та, – кĕçĕр пире вĕлерĕç, – сăрап кĕперри пултăр-и та* (1935 çул).[17]

Сарăна пĕтĕмĕшле масмак эрешĕсемпех тĕрлеççĕ, сентел çине е кăвак пир татăкĕ çине. Хыçал еннерех хăйĕн çыххипе пилĕк çине мăшăрлă çакаççĕ. Тĕрленĕ лаптăкĕ алă лаппи пысăкăшь. Тĕрлеме кăткăс та калăпăшлă ку капăра XIX ĕмĕртех хĕрарăмсем котхыç лентти тенипе ылмаштарма тытăннă. Котхыç лентти тесе (ячĕ урăхла та пулать) пилĕкрен çакнă аркă вĕçĕпе тан кушак куçĕсемпе эрешленĕ тĕрлĕ тĕслĕ хăюсене калаççĕ. Вăл (сарă) хĕрарăмсен пĕрремĕш ятарлă капăрĕ шутланать. Улах-лармара, уявсенче, хăнара-темре хĕрсем малтан унпа тухса палăраççĕ. Сарăна намăса ăнланма тытăнсан, хĕр шухăшĕ палăрсан, теприсем пĕр тăхăр çултан пуçласах, çакса çӳренĕ.[18]

Сорпан сырни качча кайнă хĕрарăма хăйĕн упăшки килĕнчи пурнăç çулне кăтартать. Ăна леш тĕнчене те сурпан сырса ăсатаççĕ. Упăшкинчен уйрăлас пулсан хĕрарăм сурпанне малтан урлă çурать, хыççăн – кашни пайне тăрăхла. Тăршшĕ-сарлакăшĕ тĕрлĕ çĕрте тĕрлĕрен. Тури чăвашсен сурпан тăршшĕ ытларах пĕр хăлаç (пурнăç тăршшĕ), сарлакăшĕ вăтамран пĕр шит çурă. Унпа мăя тачă хупласа çурăм тăрăх вĕçĕсене аялалла пĕр тан яраççĕ. Упи тăрăхĕнче (Тăрак р-нĕ) унăн тăршшĕ 7 чĕрĕке (125см) яхăн. Анатри чăвашсен сурпан масмак вырăнне те йышăнать, унпа пĕтĕм пуçа хупласçĕ. Унăн тĕсĕ те пĕтĕмĕшле хĕрлĕ, тĕртсе тăваççĕ. Хĕрĕ сурпан тунине, эрешленине ашшĕ-амăшĕн курмалла мар теççĕ. Мăшăрлă пурнăçне унăн хăйĕн пурăнса ирттермелле.

Сурпан тĕрри икĕ енчен пĕрпек, халăхăн авалхи тĕнчекурăмĕпе çыхăннă. Хĕрĕн хăйĕн шухăшĕ унта уçăмсăр, çамрăк хĕр пĕрчи кама качча каяссине те, пурнăçĕ мĕнле килсе тухассине те тĕшмĕртет кăна çав. Качча кайнă хĕр, акă, эрнерен-темрен е уйăхран, хăй халь пачах урăх кил çынни туллин пулса тăнине çирĕплетме, тăван ашшĕ-амăшĕ патне пĕрремĕш хут хăнана сурпан сăрипе килет – сурпан кăтартать. Ытахальтен, çавăн чухнех килĕнчи шильăка сӳтсе хăварса туй ĕç-пуçне вĕçлеççĕ.

Амăшĕнчен, арăмĕнчен юлнă сурпансене арçынсем çиелти тумтир çине пиççиххи вырăнне çыхса çӳрес йăла пур.

## 1980-2015 çулсенче кивĕ çăвасем çинче тупăннă сăркăч-çĕрĕсем



1. Аслă Пăлхар (VII ĕмĕр) патши Кубратăн, ылтăнран



2. Кубрат ашшĕ шăллĕн Орханăн, ылтăнран



3. Кубрат е Орхан арăмĕн, ылтăнран.[21]



4. Шупашкар р-нчи Чаканар, кĕмĕлтен[22]



5. Шупашкар р-нчи Çӳлтикасси, йĕсрен



6. Канаш р-нчи Шăхаль, кĕмĕлтен



7. Вольски р-нчи (Сарăту обл.) Калмантай, пăхăртан[23]



8. пăхăртан



9. пăхăртан



10. тойран[24]



11.



12.



13. тойран

8-13. Çĕрпӳ р-нчи Çĕрпӳел[24]



14. тойран



15. тойран



16. кĕмĕлтен



17. кĕмĕлтен



18. тойран

14-18. Çĕрпӳ р-нчи Тепикасси.[25]



19. кĕмĕлтен



20. кĕмĕлтен



21. кĕмĕлтен



22. кĕмĕлтен

19-22. Патăръел р-нчи Çĕнĕ Ахпӳрт.[26]

*Уй варринче сорпан чăсăлса выртĕ* (тупсăмĕ: утмаçул – Элĕк р-нчи Чаканар, 1936 çул); *Пĕр ен хуплăх, тепĕр ен пасарлăх* (тупсăмĕ: сурпан çакки).[19]

Хĕрарăмсем авал та тĕрлĕ капăра кăмăллана, вăл шутра, тĕслĕ металтан тунисене те. Вĕсем тата нумай çула, темиçе ĕмĕре пыраççĕ. Çакна Чăвашъенчи, несĕлĕмĕрсен çул-йĕрĕ çинчи археологи тĕпчевĕсем те çирĕплетеççĕ. Чăнкăртатса вылякан тĕрлĕ ярапа-çакăсăр, шăрçасăр, ал тунисем çинчи сулăсăр, пӳрнесем çинчи çĕрĕсĕр, ытти хитре япаласемсĕр çӳрекен сахал пулнă. Тĕслĕ металл (ылтăн Au, кĕмĕл Ag, пăхăр Cu, калай Sn, тăхлан Pb, сĕрме Sr) ăстисем вĕсен ыйтăвне пур енлĕн тивĕçтерме тăрăшнă.

Чăвашсем хушшинче тĕрленĕ çĕрĕсем (сăркăч-çĕрĕ; печатка, щитковосрединый перстень) тăхăнса çӳресси те анлă сарăлнă пулнă. Ăна хĕрарăмсем анчах мар, арçынсем те тăхăннă. Çак йăла XVIII–XIX ĕмĕрчченех пынă. Кунти чĕрне пысăкăш лаптăк çинчи ансатах мар эрешпе нумай шухăша, ĕçпуçа кăтартнă, ана паллипе, йăх е ăрата тăмхипе вăл тачă çыхăннă. Унта чăваш несĕлĕсен тотемĕсем те (кашкăр, сăвăр, чĕрĕп, юман, хурама т.ыт.те) палăрма кирлĕ. Пĕр пек ӳкерчĕклĕ çĕрĕ тупма, курма хĕн (хуласенчи анлă сутлăхшăн шăратса çырнă ăстасен ĕçĕсене шутламасан). Ятлă çынсем (патша-эльтеперсем, тăрăнсем, турхансем, пинпӳ-çĕрпӳ т.ыт.те) унпа сăркăч вырăнне усă курнă.

Ку çĕрĕсем çинче те, пир çине тĕрленĕ пекех, симметри тĕп вырăнта тăрать, эрешсем геометри ĕлкиллĕрех. Йĕрсемпе кĕтессем кукăрăлсарах çапăнни металл çинчи ĕç кăткăслăхне, хакне кăна палăртать. Ӳкерчĕксем те пĕр-пĕр пулăма, те йăх çыхăнăвне, тен, мăшăрланăва та кăтартаççĕ.

Сăркăч-çĕрĕн курăмлăхĕ, витĕмĕ хăйне евĕр. Ăна тепĕр çын кăна мар, хуçи те яланах тĕселет, унти ӳкерчĕк, унăн тарăн пĕлтерĕшĕ, шухăшĕ яланах çĕрĕ хуçи умĕнче. Çак çĕрре çынни вилсен те хывмаççĕ: çĕр çинче юлнисене чăрмантармасăр леш тĕнчере те турă хăйне пӳрнĕ çул-йĕрпе çӳретĕр теççĕ.

Кивĕ çăвасем (XVI–XVIII ĕмĕрсем) çинче тупăнакан тĕрĕллĕ çĕрĕсене ытларах кĕмĕлпе пăхăр хутăшĕсенчен (билон т.ыт.те, йĕс, той т.ыт.те) тунă. XVII ĕмĕрте Вăтам Атăл тăрăхĕнчи

халăхсен тимĕрçисене, кĕмĕлçĕ-пахăрçисене хăйсен ĕçне пăрахтарнăран сăркăч-çĕрĕпе пĕрле унти çырулăх йĕрки те, эрешкукрашкисен пĕлтерĕшĕ те манăçма пуçлать. Хăй вăхăтĕнче хĕрарăмсен тĕрлĕ ярапися, çӳç тыткăчисен, турасен, сурпан çаккисен ĕлкисем те, вĕсем çинчи эрешсем те сăнарлă, пĕлтерĕшлĕ пулнă.

*Кĕмĕлех те çĕрĕ те хура çыру*

*Ялтăраç-çке пӳрнесем, ай, сыппинче* (Вăйă юрринчен – Самар облаçĕнчи Исаклă районĕнчи Çĕн Якаль, 1900 çул).[20] Пиртен тунă (сĕм-авал, тен, сăрантан тунă) масмак, сарă, сурпан, кĕпе таврашĕн эрешĕсем, металл, шăмă япаласем çинчи тĕрĕсем, йĕрĕхлĕхĕн курăмлă сăнĕсем пулса, сулăмлă аталаннă, хальхи вăхăтра ӳнер шайне çитсе чăваш культурин витĕмлĕ палли пулса тăнă.

## 3.3. Йĕрĕх хĕрпе кайни

Хăйне юрăхлă ар тупса качча тухни хĕрарăмшăн шăпа татса паракан самант пулса тăрать. Çакă уншăн чи пĕлтерĕшли те ăна вăл тĕплĕ хатĕрленет. Хĕр пулса çитнĕ çĕре çын хăйне кирлĕ пур япалана, çипуç-тумтире, выртса тăмалли вырăнне те хатĕрлеме тăрăшать. Çӳпçине (арчине) вăл çителĕклĕ тĕрлесе, тĕртсе, шурă çипуç туса тултарать. Таса чун-чĕрепе, тулли кăмăлпа, паян ыр тăвакан суя пичине мар, пӳрнине тĕлпуласса кĕтет. Хăйсен Йĕрĕх хавхипе хăватланса çирĕп кăмăллă хĕр пурнăç çыннинех качча каяссине ĕненни, ача пăчаллă пулса тулăх пурăнассине шанни пурнăçланатех.[27]

Йĕрĕхпе çыхăннă йăла-йĕркере ăна качча тухакан хĕрпе парса яни кăсăклă, витĕмлĕ. Чи малтанах кунта таса пĕрнепе пукане кĕрет. Пур хĕрача та пĕчĕк чухне пукане туса выляма кăмăллать. Çак ĕç хăех, çутçанталăк хистесе тăнипе пулать ĕнтĕ. Ялан тенĕ пекех хĕрарăм сăнарлă пукане ытларах амăшĕ кĕпе-тем çĕленĕ май юлакан пир-авăр татăк-кĕсĕксенчен калăпланать. Çакна ача хăй аллипе пуçтарать те уншăн вăл питĕ пĕлтерĕшлĕ, парнеленĕ кирек мĕнле теттерен хаклă.

Туйĕ вăхăтĕнче хĕр çӳпçине (арчине) пуçтарса хупиччен ачалăхĕнчен упранса юлнă юратнă пуканине унта чикеççĕ. Пĕрнене те пĕрле парса яма пултараççĕ. Амăшĕсĕр пуçне çакна никам та курмасть. Амăшĕ хĕрĕ çынна (арçына) юрăхлă пулнăшăн савăннипе пĕрлех вăл унăн килĕнче йĕркеллĕ пурăнасса, хăй пекех ача-пăча çуратса çитĕнтерессе шанать. Çак Йĕрĕхпе тăван кил, ăратне пилĕ, пĕтĕм ырă сунăмĕ капланса каять.

Йĕрĕх кӳлепи çĕнĕ çĕрти киншĕн таса та хавхаланулла малтанхи чун уçлăхне тăсать: ачалăхăн çутă асăмĕ, тăван кил асамĕ, ачаранпа пуçтараннă, йăлкăшнă савăк та ырă туйăмсем. Тахçан черчен ĕмĕтпе тунă, юратса алла тытнă, шанăçпа вылянă пукане тепĕр самантра шухăшлаттарать те. Çапах вăл хĕрарăмăн кулленхи ăшши-пиççи пурнăçне кăштах илемлетет, чуна хытса ларма памасть, хуйхă-суйхăра ĕмĕтленнĕ пуласлăх та пуррине аса илтерет.

Ашшĕ-амăшĕ, тĕрлĕ сăлтавпа, çак чунăш кӳлепине параймасть пулсан, хĕре Йĕрĕхпе тивĕçтерессишĕн хурăнташĕсем енчи чи çывăх аслă хĕрарăм е кукамăшĕ (хреснамăшь, пысăк амăшь) ăшталаннă. Хальхи вăхăтра теприсем, йĕрĕх кӳлеписем çук пирки те пуль, чăвашла мар пулин те, качча каякан хĕрсене «Иисус Христос амăшĕн» тенĕ хитрелетнĕ сăнне парса яраççĕ.

Хĕр çӳпçине (е арчине) кĕçĕн кĕрӳсем, хăйматлăх ертсе пынипе, упăшкин килĕнче туй вăхăтĕнче вырнаçтараççĕ. Пĕрре вырнаçтарнă çĕрте унăн çулталăкран кая мар пач куçмасăр тămалла. Арча уççи ĕмĕрĕпех хуçи (çĕнĕ çын) аллинче упранать. Качча пынă хĕр хăйĕн пуканине, йĕрĕх пĕрнине хĕве хупнă çĕрте вырнаçтарма пултарнă, упăшкипе пĕрремĕш çĕр каçнă хуралтăра çакнă: сăваплă чунăш ача-пăчаллă пулма пулăштăр.

*Авал камăн та камăн килĕнче Йĕрĕх пулнă, çав кĕлетрен хĕрача ӳссе качча кайсан хăйсен хĕрне валли те йĕрĕх пĕрми туса уйăрса парса янă. Вăл та вара çав Йĕрĕхне ашшĕ-амăшĕ килĕнче епле, çуллен çавăн пек чир-мĕн çаклансан тăхлан шăратса çакса тирпейлсе хунă. Йĕрĕхе илсе пырсан хăш хуралта малтан хунă, вăл вара ялан çавăнта кăна çакăнса тăнă, урăх*

*хуралта ҫакса хума юраман. Пĕлме ҫук, пĕр-пĕр япала-мĕн пулсан е кил хуҫи пĕлсе ҫука юлсан, ҫав кĕлетне сутса ярсан илекен чăвашне ҫав Йĕрĕхне пăрахса хăварма юраман, ялан хуралтине ҫта куҫарнă, унта илсе кайнă. Кĕлечĕ ҫунса кайсан Йĕрĕхĕ те ҫунса кайнă, илсе тухма ĕлкĕрсен илсе тухма тăрăшнă. Ҫапла ерекен чирсем тĕшĕнчен хăтăласшăн унăн ятне те ҫавăнпа та «Йĕрĕх-тĕр» теҫҫĕ* (ТР Пăва районĕнчи Пӳркел, 1888 ҫул).[28]

*Качча каякан хĕрсене амăшĕсем ĕлĕк кашнинех икĕ пукане (арҫынпа хĕрарăм кĕлетки) парса янă. Вăл пуканесене амăшĕ темшĕн хăй хĕрĕ сисиччен, вăл курман ҫĕре ун япалисемпе пĕрле хурса янă. Качча каякан хĕр амăшĕ пуканесене ăҫта хунине пĕлсен те пĕртте чарман: хăй пĕлмен пек пулса ирттерсе янă. Амăшĕ вăл пуканесене е хĕрĕ ҫӳпҫи тĕпне хурса янă, е кĕпесем ҫыххи ăшне хурса янă. Хăшĕ тата тӳшек-минтер ăшне хурса ярать теҫҫĕ* (Вăрнар районĕнчи Оравăш, 1910 ҫул).[29]

*Йĕрĕхе хăйсемех тунă – ҫăка е хурама хуппинчен пĕчĕк кунтă ҫĕленĕ. Унта пуканесем туса лартнă… Пуянсен пĕр Йĕрĕх кăна пулман, теприсен вуннă тата ытларах та пулнă теҫҫĕ… Качча каякан хĕр йĕрĕх кунтине арчана хурса илсе кайнă* (ХХ ĕмĕр пуҫламăшĕ).[30]

*Йĕрĕх пĕр-пĕр хурама пĕрнере е пĕр-пĕр йывăҫра пурăнать теҫҫĕ. Ăна кĕсен кăларать теҫҫĕ. Пĕр-пĕр ача кĕсенленсе кайсан е ҫăпан тухсан чӳклеҫҫĕ, ăна нимĕр пĕҫерсе, е тата кĕмĕл окҫасем параҫҫĕ. Ăна ватă тăлăх хĕртен полнă теҫҫĕ, ҫавăнпа кĕмĕл окҫа параҫҫĕ. Тата ĕлĕк авалхи ҫынсем хĕрсене приданă вырăнне парса янă тет* (Муркаш районĕнчи Кĕртекасси-Янасал, 1904 ҫул).[31]

*Кашни каякан хĕрне, пурне те, Йĕрĕх парса яратчĕҫ. Хĕрĕ кайнă чухне алăк ҫине тăрса йĕрет. «Йĕрĕх парсан каятăп, алăк ҫинчен анатăп, Йĕрĕх памасан тухмастăп», – тет. Вара хурама хуппинчен пĕрме ҫĕлесе, акă сана Йĕрĕх, тесе парса янă* (ТР Нурлат районĕнчи Куракъел (д. Илюткино), 1929 ҫул).[32]

*Интересен лубяной короб «ват акай йĕрĕх кунти» – жилище Йĕрĕха – покровителя рода. К которому с одной стороны*

*были привязаны оловянные нохратки, обозначавшие число молений, с другой стороны – лепешки из теста зубчиками. Зубчики обозначали число лиц, отделившихся от данного рода* (Çĕрпӳ уесĕ, 1907 çул).[33]

*Когда они сватали невесту, то первым долгом они спрашивали, дадите вы невесте Йĕрĕх или нет. Если невесте Йĕрĕх не давали, то они кладки (*хулăм укçи*) давали меньше. Этот йĕрĕх они давали почти также, как у русских икону. Чуваши йĕрĕх, лукошку, клали в сундук невесты, чтобы ее родители не брали ее* (обратно-?), *кабы она не раздумала* (~1930 çул).[34]

*Когда брали невесту не из своего села, она обычно привозила с собой своего Йереха, но ему здесь почета не было, кланялись своему старому, невесткин же валялся где-нибудь в углу под кроватью* (Сарăту облаçĕнчи Вольски районĕнчи Касанлă, 1924 çул).[35]

*Пĕр пуканене пĕр пăсмасăр çичĕ сыпăка çititчен хĕртен хĕре парса ярсан Тӳркилли пулать* (1937 çул).[36]

Çак сăваплă куçăм йĕрĕхлĕхри паллă самант пулса юлать. Йĕрĕх е унăн турачĕ хĕрпе кайни, пĕр килтен тепĕр киле куçни чунăша, амăшĕн йăх аталанăвĕн сулмаклăхне çĕнĕ вăй парать.

## 3.4. Йĕрĕхлĕ кил

Йĕрĕхлĕ кил, йĕрĕхлĕ çын тенине турра юрăхлă кил, çын тенĕ пекех ăнланма пулать, хура халăх ăс-тăнĕпех, авалхи йăлапах вĕсем пурăнаççĕ ĕнтĕ. Ялта Йĕрĕхе пăрахнисем, Йĕрĕхсĕр килсем тухсан çапла калама пуçланă.

Кунашкаллисем нумайланни Йĕрĕхе упракан çынсем çине халăх ăс-хакăлĕ тĕлĕшĕпе хăйне евĕр çĕклем тиенĕ. Çапах вĕсем авалхине пăрахман, аслă ăрусен ăс-пурлăхĕнчен писмен, çĕнĕрен йăла кăларман, пулас ăрусем валли упранă, ялшăн, халăхшăн, çĕршывшăн çине тăнă. Йĕрĕхлĕ кил хуçин йăхăн, ăратăн хăйне евĕр пуçĕ пулма тивет.

Паллах, йăла-йĕркене çирĕп тытса пыни çăмăлттай çынсене тарăхтарать, çĕтĕлтерет, теприсене шиклентерет, хăратать те.

Малтанхи пурнăç йĕркинчен, япаласенчен хăтăлман çын тĕшмĕшлĕ те туйăнать – ун тавра ĕлĕкхи чылай-çке, çамрăкраххисем ăнланманни, пĕлменни пайтах. Тата йĕрĕхлĕхе юлашки вăхăтра нишлĕрех, чухăнрах çынсем тытса тăнă, упранă. Хăшпĕрисем ялта кун пеккисем çине тиркевлĕ пăхнă пулин те, анчах йĕрки-куркине тума вĕсемех кирлĕ, чӳклĕх нимĕрĕ те вĕсене чух пулать. Вĕсем кивĕ кил-çуртра кивĕ çипуçпа пурăнса кивĕ туйăнакан йăла-йĕркерен те вăтанмаççĕ, пулас ăрусенче йăласене туса йĕркелеме урăххисем тупăнаççĕ.

Чăвашсем, пĕр-пĕр кил пĕтсен, ăратă хăйĕн вĕçне тухсан, Йĕрĕхĕ макăрать теççĕ. Йăх ĕрчевлĕхне тытса пыма хăйĕн вăйĕ, мехел çитменнишĕн хурланать ĕнтĕ. Пĕтнĕ килте Йĕрĕх хăварма каламаççĕ. Ăна камăн та пулин илсе каймалла, унсăрăн вăл яла касу чирĕ ертет.

*Йĕрĕхсĕр кил çук; Йĕрĕх хĕрĕх тет* (Ваттисем каланинчен).[37]

*Вирĕм чухне: çапла пĕтĕм Йĕрĕхлĕ çынсем патне кĕрсе çӳреççĕ.* (1930)[38]

*Вирĕм чухне, Йĕрĕх çукки кĕрсен, ăна пĕр пысăк тирĕкпе сăра ĕçтереççĕ* (1930 çул).[39]

*Йĕрĕх Хĕветĕрĕ ятлă чăваш пулнă* (Куславкка районĕнчи Токанаш, XIX ĕмĕр варри).[40]

*Малтанах Йĕрĕхе тĕпелте тытнă. Алăк çинче, мачча кашти çинче, кĕлетре, лаçра усранине пĕлетпĕр. Кун пек кил хуçисенчен çаксене асăнма юрать, Çичĕпӳртри Таман* (Сĕнтĕрвăрри р-нĕ, 1913 çул), *Ассалля* (Патăръел р-нĕ, XIX ĕм. вĕçĕ – XX ĕм. пуçл.), *Ишекри Ласăр* (Шупашкар р-нĕ, 1926 çул). (Салмин А.К., 2003 çул).[41]

*Ялĕнче пиллĕк килте Йĕрĕх пур. Пĕрин хуçине Йĕрĕх-папай «Йĕрĕх упракан мучи» тесен пĕлеççĕ* (Канаш районĕнчи Кĕçĕн Меми (Кӳлпоç), 1880 çулсем).[42]

*Почти у каждой семьи был свой Йерех, у группы же дворов или у целого конца села был высший Йерех – Тюри. Чем старее был Йерех, тем больше его почитали* (Сарăту облаçĕнчи Вольски районĕнчи Касанлă, 1924 çул).[43]

Йĕрĕхлĕ кил тени пуçламăшĕнче пĕтĕм йăх тухнă кăкри киле е йăхăн Йĕрĕхĕ тăракан киле палăртнă пулмалла. Малта-

нах вăл хисеплĕ ят пулнă пулсан, каярах чухăнрах е тĕшмĕшлĕрех киле те кăтартнă. Ялта ку кил çавах пĕлтĕрĕшлĕ, сăваплă.

## 3.5. Йĕрĕх ячĕсем

Этнографи литературинче палăртнă Йĕрĕх ячĕсем пайăр ятсен (онимсен) тĕрлĕ речĕсенче тăраççĕ. Пулăвĕ енчен те, пĕлтерĕшĕ енчен те вĕсем пĕр пек мар. Пĕрремĕш ушкăнра чăн пурăннă конкретлă çынна, ытларах хĕрарăма, сăнарлакан пукане, йĕрĕх кӳлепи ячĕсем пулаççĕ. Çынсем килйышшăн, йăхшăн хăй вăхăтĕнче пĕлтерĕшлĕ, хаклă пулнă-тăр. Пуканесем вара вĕсене манма памаççĕ, вĕсен ĕçĕ-хĕлне, тыткаларăшне, ĕмĕтленĕвне аса илтерсех тăраççĕ. Çывăх çынсемех пулнăран пуканисене те, хăйсене малтан мĕнле чĕннĕ, çаплах калатпăр: «кукамиь», «Телтеç мăнаки», «Пиментей кукка».

*Вырăс патшалăх музейĕнче темиçе Йĕрĕх, йăх хунти, пур: №1416-1 «кинемей» (чăваш тумĕллĕ, хĕрлĕ пуçлă пир татăкĕсенчен тунă пукане), №1416-8 «Мăнакка», №1239-180 «Ват акай йĕрĕх» (хуп кунтă, ват хĕртен пулса кайнă Йĕрĕх), №1416-3 «Ĕмпичче» (пир татăкĕсенчен тунă кăвак çӳçлĕ, кăвак сухаллă арçын евĕр пукане), №1416-10 «Ĕмпичче» (1416-3 пекрех): №1416-5 (пĕчĕк ачана кăтартакан пир касăкĕн тĕркемĕ, кăвак çиппе çыхнă), №1416-6 (1416-5 пекех, анчах çиппе тата хăюпа çыхнăскер), №967-1 (Йĕрĕх кӳлепи), №967-2 (Йĕрĕх кӳлепи), №967-3 (Йĕрĕх кӳлепи), №967-4 (Йĕрĕх кӳлепи), №967-5 (Йĕрĕх кӳлепи), №968-24 (енчĕк – хĕрарăмăн пилĕк çинчи капăрĕ, хĕрарăмсем Йĕрĕх патне кайнă чух унта чӳклемелли укçа хураççĕ)* (Ашмарин Н.И., 1930 çул).[44]

Хăшпĕр Йĕрĕх вырăнĕсем ялăн, е тăрăхăн та, сăваплă вырăнĕсем пулса кайнă. Кунашкаллисем тепĕр чух киремет шайне те çитме пултараççĕ: Авански кĕлли, Аслă кĕлĕ, Ăвăслăх кĕлли, Мальăм-хоçа йĕрĕхĕ, Пикеми тӳрри, Пикăл кĕлли, Çутри касри тӳркĕлли, Тимĕр йĕрĕх, Хăнчăр Аха кĕлли, Хорăн йĕрĕх, Чемен кĕлли т.ыт.те.

*Чуваши не оставили еще совсем своих языческих суеверий…Мунă йерĕх – близ села Яндашева на берегу Цивиля. Место это и в больших равнинах не замечается. Здесь в старину бывало общественное моление с принесением в жертву крупных животных – лошадей, коров и т.д... Хăшка ту – за р. Цивилем «Мун йерĕх». Здесь происходит длинное моление. Каждый приходит по своей нужде и без всяких жертв* (Шупашкар районĕнчи Шоркасси таврашĕ, 1867 çул).[45]

Йĕрĕхсене ялти вăйлă, янранă йăх, ăрата ячĕпе палăртни те пур. Çакă ваттисен ялйыш пĕлнĕ ертӳçисене асăннипе танах: *Илюхха йĕрĕхĕ, Малакай йĕрĕхĕ, Ятмăрса йĕрĕх, Силевер йĕрĕхĕ, Силевер тӳрри, Кукша йĕрĕхĕ, Кукша тӳрри, Çтаппан йĕрĕхĕ, Уçка Терентей йĕрĕхĕ! Сире юсманпала, хурпала, ăшă чĕлхепеле асăнатпăр-витĕнетпĕр; айван-ашана каçар пире* (1930 çул).[46]

*Вăл йĕрĕхсен ячĕсем ак çапла: Саток, Тихăн арăм кокри, Якур арăм варĕ, Пакша, Хурлăхан варĕ.*

*Вăл Саток ял варринче выртать. Вăл пысăк столпа çинче. Онта ĕлĕк пусăк сат полнă. Çав столпа çине пĕр Торă алтса лартнă. Çав сат халь çонса кайнă та, он вырăнче хăрăк омлоççисем лараççĕ. Çавсем хушшинче Йĕрĕх юпи выртать. Унăн омлисене татса çисен çăвара кĕсен тапса тухать. Çавна кайса чӳклемесен нихçан та çав кĕсен пĕтмест. Ăна чӳклеме пăтă-нимĕр пĕçерсе каймалла. Çав пăтă-нимĕрсене шапа хуранĕ çинче пĕçереççĕ. Çавна чӳкленĕ чух пĕр кашăк, тепĕр кашăк Йĕрĕхе тăкса парать. Çавăнпа та çырлахмасан кулачпа-пĕремĕкпе чӳклеççĕ, унпа та çырлахмасан çавна çырлахтарма пукане туса ăсатма каяççĕ. Çавăнта кайнă чух пĕр пĕчĕк арча туса, арчи çине пукане тутри тултарса та, ăсатса яраççĕ. Ăна ăсатма юпа кутне кайса пăрахаççĕ, çавăнпа уйрăлать теççĕ çынсем.*

*Тихăн арăм кукрине ак çапла киремет тăваççĕ, Йĕрĕхе, çав кукăр çăл кутĕнче. Унта шыв патне кайсан хĕрарăмсем пит хытă хăраççĕ. Кашни çул çĕн çынсем кайса Йĕрĕхе çырлахтараççĕ. Ăна шыв çулĕ пуçлаттарнă чух сăрапа, çӳхӳпе кайса: «Йĕрĕх, çырлах», – теççĕ. Вăл çĕн çын кашни шыв патне*

*каймассерен пӗр витре шыв тӑкса парать, пӗр ҫулталӑк. Ҫав Йӗрӗх, патне пырса витлесен, ҫынна пуплеми тӑвать. Ҫапла тусан Йӗрӗхе кайса ҫӑкӑр-тӑварпа чӳклеҫҫӗ. Ҫав Йӗрӗхе ҫӗн ҫынсем венчете кайиччен ҫурҫӗр вӑхӑтӗнче кайса: «Йӗрӗх, пире лайӑх ҫӗре вырӑн тупса пар», – теҫҫӗ.*

*Якур арӑм варӗ йӗрӗхне ак ҫапла ҫырлахтараҫҫӗ. Унта ӗлӗк Якур арӑм вилнӗ. Ҫавӑн вырӑнче халь Йӗрӗх пур. Вӑл унта лаша ярсан лашана ниҫта та ямасть, лашана ҫав кукӑра илсе кӗрсе вӗлерет. Вӑл вырӑнта питӗ тарӑн ҫыр юхса хӑпарать. Унта кашни ҫулах кайса лаша пусса чӳкленӗ. Халь кашни ҫулла кӗтӳ кӑларнӑ чух кайса пӗр чӑх, пӗр путек пусса параҫҫӗ. Унпа ҫырлахмасан пӗр виҫӗ эрнери мӑкӑр кайса параҫҫӗ. Якур арӑм варӗ питӗ тискер, кашни ҫӗн уйӑхрах унта Йӗрӗх вырӑнтан вырӑна куҫать теҫҫӗ. Куҫнӑ вӑхӑтра ҫынна ерсен виҫ-тӑват ҫулсӑр уйрӑлса каймасть теҫҫӗ. Ӑна уйӑрма питӗ кансӗр. Ӑна валли тӑмран ҫын пек туса пӑрахаҫҫӗ. Ҫавӑнпа анчах уйрӑлса каять теҫҫӗ.*

*Пакшана ак ҫапла чӳклесе ҫырлахтараҫҫӗ. Ҫав Пакша лапара – ял варринче. Ҫавӑнта кашни ҫулах ҫумӑр ҫусан шыв пухӑнса тӑрать. Унта ачасем выляма каяҫҫӗ. Унта вылянӑ чух кам ачи ҫав Пакша ҫине кӗрсе каять, ҫавӑн урине, тутиҫӑварне кӗсен тапса тухать. Ҫав кӗсен ҫырлахтармасассӑн нихҫан та пӗтмест тет, ӑна кашни пӗчӗк ача амӑшӗсем кайса чӳклеҫҫӗ. Ҫав кӗсен пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна сикет тет те арамасланса каять тет. Ҫавна чӳклеме юхмалла икерчӗ пӗҫереҫҫӗ те ҫырлахтарма каяҫҫӗ. Унта кайнӑ чух пӗр ҫынна курсан: «Ҫавна ер, Йӗрӗх, часрах», – тесе чӳклеҫҫӗ.*

*Хурлӑхан варне ак ҫапла ҫырлахтарса чӳклеҫҫӗ. Вӑл Хурлӑхан варӗ питӗ пысак пӗве. Ҫав пӗвере кашни ҫулах ачасем шыва кӗреҫҫӗ. Ҫимӗкчен ҫиччӗ кӗмелле теҫҫӗ ҫав пӗвере. Кам ачи шыва кӗмест, ҫав ачана кӗсен-ҫӑпан тапса тухать. Ҫав кӗсене пӗтерме йӑмра хупахӗ сӳсе килсе ҫынна вӗретсе ӗҫтереҫҫӗ. Унта йӑмра питӗ нумай, ҫавӑнта ҫӑмарта пӗҫерсе чӳклеҫҫӗ. Ҫавна чӳклесен ачисен кӗсен-ҫӑпанӗ пӗтет. Унта ҫулла хурлӑхан ҫырли питӗ нумай пулать. Ҫавна вӗремесӗр*

*татса çисен алли ним те тытайми пулать. Ăна илем иртсен ачасем кайса çиеççĕ пурте* (1913 çул).[47]

*В случае болезни пострадавший спешил узнать, чей именно Йерех его заломал, и обращался для этого к йомзе. По убеждению чувашей, только они, знахари и ворожеи, могли определить, какую жертву и какому йереху нужно принести для избавления от болезни.* (Дзенискевич Г.И.,1972 çул). [48]

Йĕрĕх ячĕсем теонимсен хăйне евĕр ретне тăваççĕ. Пĕр пек мар. Пĕрисем, топонимсене çывăххисем, Йĕрĕх вырăнне палăртаççĕ, теприсем Йĕрĕхлĕ кил хуçи ячĕпе çыхăннă, виççĕмĕшсем Йĕрĕх кӳлепин, пуканин ячĕсене кăтартаççĕ.

# IV. Йӗрӗх вырӑнӗпе сӑнарӗ

## 4.1. Йӗрӗх вырӑнӗ

Кил нумай япалана, ӑнлава пӗрлештерет: ырри-чунӑшӗсем, асӑмӗ-кунҫулӗ, йӑли-йӗрки, кил хуҫи (кил ҫулпуҫӗ, асли), килйышпа тӑван-пӗтен, ҫӗрӗ, пӳрчӗ-вучахӗ, хуралтӑсем, выльӑх-чӗрлӗхӗ т.ыт.те. Вӗсем пурте килшӗн, унӑн ҫирӗп тытӑмӗшӗн, аталанӑвӗшӗн пӗлтерӗшлӗ. Йӗрӗх те, килйыш хунти пулнӑ май, пӗлтерӗшлӗ, сумлӑ; кил таврашӗнче ҫак ырӑ чунӑшӑн хӑйӗн вырӑнӗ пур.

Пире паллӑ XVIII–XX ӗмӗрсенче ӑна килти чи таса та типӗ вырӑнта, ҫынна та, ача-пӑчана та тӳрех куҫа курӑнмалла мар, алӑ-ура ӑнсӑртран перӗнмелле мар ҫӗрте тытнӑ. Пӗрре лартсан ӑна урӑх ҫӗрелле куҫарман. Чи мелли, тӗрӗсси ӗнтӗ, ӑна арӑмӗпе упӑшки ҫывӑрса тӑракан вырӑнтах упрани пулмалла. Ҫавӑнпа та авалтарах Йӗрӗхе пӳртри пӗр-пӗр кӗтесре, чӑланта е мачча ҫинче упранӑ. Пӳртпе пӗр ҫий айӗнчи хуралтӑра тытни те ҫывӑхра пулнӑ: хыҫкил, шур ампар е ҫӳлти ампар, кӗлет. Килхушшинчех ларакан ампар е кӗлет, лаҫ та инҫех мар. Час-часах иртсе ҫӳрен е пыльчӑк-каяш пур вырӑнта Йӗрӗхе тытмаҫҫӗ: пӑлтӑр, ҫенӗк, выльӑх карти-сарайӗ, лаша вити, тӗрлӗ лупас, мунча та.

Сӗм-авал йӑх вырнаҫнӑ ҫӗр хӑвӑл е лапам ҫывӑхӗнчи асамлӑ, кӑсӑклӑ курӑнакан пӗр-пӗр ту, сӑрт, сӑмсах е пысӑкрах чул та Йӗрӗх вырӑнӗ пулма пултарнӑ. Ҫакӑнта пулса иртнӗ асра юлнӑ ӗҫ-пуҫ ҫакна витерме пултарнӑ. Ҫутҫанталӑк тунӑ вырӑна парне те ытлах кирлӗ мар.

*Кроме публичных мест жертвоприношений каждая семья или род имел «особливый Малый Киремет».*

*Кашни килтех пӳрт ҫӳмӗнчи таса хуралтӑн малти кӗтесӗнче йӗрӗх ларать* (Ҫарӑмсан тӑрӑхӗ, 1768 ҫул).[1]

*Йӗрӗх эп пӗчӗкҫӗ чухне пирӗн килте те пурччӗ… Йӗрӗх куҫа курӑнмасть. Вӑл хурама хупӗнчен ҫӗлесе тунӑ пӗрнере*

*пурӑнать. Ҫав йӗрӗх пӗрни пӗр-пӗр кӗлетре, алӑк хыҫӗнчи кӗтесре, ҫакӑнса тӑрать. Ку кунтӑк урӑх ҫӗрте те ҫакӑнса тӑма пултарать, калӑпӑр, ампар, лаша вити е урӑх хуралтӑн тулаш стени ҫинче… Йӗрӗх кӗлечӗ тирпейлӗ* (ТР Ҫӗнӗ Шуҫӑм районӗнчи Чӑваш Шупашкарӗ, 1889 ҫул).[2]

*Йӗрӗх – йӑх япали, еткерлӗх, ӑруран ӑрӑва куҫать. Анчах хӑй вырӑнӗнчен куҫмасть, ӑна тытмалла мар, вӑл ампарӗ е лаҫӗ ҫӗрсе кайиччене е ӑнсӑртран пӗтиччене унта упранать. Вӑл сиплӗ япала е чунӑш, чирсенчен хӳтӗлет. Куҫ чирӗсем, ӳт-тир чирӗсем пулсан ӑна пуҫҫапаҫҫӗ* (Шупашкар районӗнчи Шоркасси, с. Яндашево, 1888 ҫул).[3]

*Йӗрӗх текен пуканене ещӗке е ҫатана* («корзина») *лартнӑ та курӑнман вырӑна пытарнӑ: ампар айне, кил хапхи айне е чӑлана. Йӗрӗх упранакан вырӑнсем сӑваплӑ пулнӑ* (Сарӑту облаҫӗнчи Вольски районӗнчи Касанлӑ, 1924 ҫул).[4]

*Кил йӗрӗк. Она хуйне валли чӑлан туса парса. Тата йӗрӗк ҫаппи тунӑҫ чӑлання: пӑтӑ хорса, ҫаппи ҫине пӑтӑ хормалли вырӑн туса, кӑтӑр-катӑр аркакаланӑ* (Етӗрне районӗнчи Пошкӑрт, ХХ ӗмӗр пуҫламӑшӗ).[5]

*Йӗрӗхне чӳкленӗ, хампарсенче алӑк хыҫне ҫакаччӗҫ. Пӗрне хампарта ҫакнӑ (алӑк хыҫне) – ачапча ан кортӑр, тесе* (Шупашкар районӗнчи Алькеш, 1930 ҫул).[6]

*Йӗрӗх пӗрни ампарти пӗр-пӗр кӗтесре ҫакӑнса тӑрать, пӳлмесенчен ҫӳлерех ҫӳлӗксем пулсан, ҫӳлӗк ҫинче тӑрать* (Шӑмӑршӑ районӗнчи Шӑмӑршӑ таврашӗ, 1870 ҫулсем).[7]

*Пирӗн кивӗ кӗлетре, алӑк хыҫӗнче, пӗр ленкес ҫакӑнса тӑрать. Ҫав ленкесре Йӗрӗх пур теҫҫӗ* (Елчӗк районӗнчи Кармал, 1910-? ҫулсем).[8]

*Пошчуш патак ҫомня вӑл чӑмакня ҫыкса ҫакса, хыҫ-киле тӑратса* (Муркаш районӗнчи Хорачка, 1930 ҫул).[9]

*Лаҫра хиҫ-кил полнӑ, хиҫ-киле тӑрӑхла пӗрне ҫакнӑ; пусса ҫисессӗн, аш татӑкне яраччӗ* (Муркаш районӗнчи Туҫи Олкаш, 1930 ҫул).[10]

*Кил-йӗрӗк лаҫра порӑнат вӑл* (Муркаш районӗнчи Хорачка, ХХ ӗмӗр пуҫламӑшӗ).[11]

*Çак хĕрарăма сăнлакан, килте тунă «Йĕрĕх» ятлă пукане лаçра, кĕтесри çӳлĕк çинчи вылямалли çунара тăнă* (Куславкка районĕнчи Чашлама, 1885 çул).[12]

*Йĕрĕхе чӳклеме хурама хуппинчен кунтăк туса лаçăн пĕр кĕтесне çӳллĕ çĕре лартаççĕ, курăнса ан тăтăр тесе хăмаран пĕчĕк хӳме туса хуплаççĕ. Ăнсăртран алăпа ан перĕнччĕр тесе çӳлерех вырнаçтараççĕ… Кунтăк айне кĕтесе аврине аяла, турачĕсене çӳлелле туса шăпăр хураççĕ. Шăпăр турачĕсем Йĕрĕх валли нохрат çакма кирлĕ* (çурçĕр енчи чăвашсем, 1907 çул).[13]

Ывăлсем çитĕнсе авлансан ĕлĕкрех пĕр килхушшинчех темиçе пӳрт лартса пурăнни пулнă. Халь çеç пуçарнă ялта килйыш аталанса сарăлни яла та сарать. Çапла вара тĕп килти Йĕрĕх нумай киле е пĕтĕм ялйыша хунтăлакан чунăш – Тӳре – пулса юлать. Кун пек чухне, вăй çитнипе, пуриншĕн те пĕлтерĕшлĕ Йĕрĕхе уйрăм пӳртре е хуралтăра та тăратнă. Пысăк йăха ăна тытса тăма йывăрах мар ĕнтĕ.

XVIII–XIX ĕмĕрсенче тата хĕреслĕх пусарнипе çĕнĕ çемьесен кулленхи пурнăçĕнчен, уйрăмах тĕп чăваш çĕрĕнче, хăйсене ятăн Йĕрĕх йĕркелесси йăларан тухма пуçланă. Вăл вăхăтра, хăшпĕр йăхсен Йĕрĕх хăвачĕ сĕвĕрĕлнĕ май е тата Йĕрĕхĕ çухалнă, пăрахăçланнă-и унта, ялта тимиçе Йĕрĕх çеç хăйĕн тулли пĕлтерĕшĕпе тăнă. Хăшпĕр çĕрте вăл майĕпен уйрăм çын кил-çуртĕнчен те тухать: кил çывăхне, ял таврашне. Никам та кайран хурламалла мар пахчана, таса уя, улăха, ĕшнене вырнаçать, унти пĕр-пĕр тĕме е йывăçа, уйрăмах, хăвăллă ватă йывăçа (ытларах хурама) йышăнать. Килтен кăларса ывăтнăран е çурхи шывпа юхтарса янăран та, пулмалла, Йĕрĕх паллине, тен, хăватне те, теприсем кайран çывăхри çырмара е кĕпер таврашĕнче те курнă.

*Масакки хушаматлă çыннăн мунча умĕнче йăмра çитĕнет. Çак йăмра çинче Йĕрĕхе халалланă çӳхе кĕмĕл укçа çакăнса тăрать... Çавăнтах, унта Йĕрăх пурăнать, текен пӳрт пур. Кунта укçа, суккăрлатнă чĕрĕ выльăх, кайăк-кĕшĕк, тĕк, шăмăсем кайса пăрахаççĕ, икерчсем лартаççĕ* (Елчĕк районĕнчи Арланкасси, 1900-? çулсем).[14]

*Йӗрӗх ӑçта та пулин мачча çине е сарайӗнче çакнӑ пӗрнере пурӑнать. Пӗрнине улӑмпа тултараççӗ. Инкек ан пултӑр тесен ачасен ӑна тытма юрамасть. Пирӗн ялта хӑйне евӗр тухатмӑш Толмачев Сергей пурӑнать, сачӗ унӑн урамра. Ачасене вӑл садне Йӗрӗх хураллать тесе хӑратать. Кам та пулин унта улма патне кӗрсе каять пулсан е çатан карти çумӗнче тула тухсан пӗтӗм ӳтне кӗсен-çӑпан ярса илет, тет* (Муркаш районӗнчи Пӑсӑрман-Оринӑ, 1926 çул).[15]

*Йӗрӗх пӗр-пӗр хурама пӗрнере е пӗр-пӗр йывӑçра* (Муркаш районӗнчи Кӗртекасси-Янасал, 1904 çул).[16]

*Малтан Йӗрӗх çулçӑллӑ йывӑç-тӗмре пурӑннӑ* (Дзенискевич Г.И., 1972).[17]

*Йӗрӗх ялта, пахчара, картара пурнакан усал. Йӗрӗх ыйхӑллӑ çын евӗрлӗ* (Елчӗк районӗнчи Хочаш, 1909 çул).[18]

*Йӗрӗх турри сарай хыçӗнче* (Тӑрак районӗнчи Яманак).[19]

*Пирӗн ялта, ял варнерех, пӗр çыннӑн пахчинче ӑвӑс кӗтти пур. Çав ӑвӑс хушшинче Йӗрӗх пур теççӗ… Мӗншӗн тытать çав вырӑн, тесен пире аттесем, ку вырӑнта усал турӑ пур, тесе калать тет, тетчӗç* (Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Чӗнер, 1927 çул).[20]

*Йӗрӗх пӗрни ялан тенӗ пекех хурама çинче çакӑнса тӑрать, килте мар* (Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Энӗш-Кошкӑ, 1892 çул).[21]

*Тӑвайӗнче Яките Çемен пахчинче питӗ пысӑк хурама пулнӑ тет (халӗ лараканни мар, унччен малтанхи). Çав хурама айӗ Йӗрӗх вырӑнӗ пулнӑ. Хурама кутне сысма ларма та юраман. Сыссан çӑпан тухнӑ теççӗ. Хурама çине тенкӗсем, нухратсем, шӑрçасем çака-çака пӗтеретчӗç тет. Хурама хӗвелпе йӑлтӑртатса çеç ларатчӗ теççӗ* (Тӑвай районӗ, XX ӗмӗр пуçламӑшӗ).[22]

*Çавӑнта Йӗрӗх пурӑннӑран çаранӑн çав пӗчӗк пайне Йӗрӗх теççӗ* (Чӗмпӗр облаçӗнчи Чӑнлӑ районӗнчи Чӑвашкасси, Средние Алгаши, 1907 çул).[23]

*Якор арӗм варӗ Йӗрӗхне ак çапла çырлахтараççӗ. Онта ӗлӗк Якор арӗм вилнӗ. Çавӑн варӗнче халӗ Йӗрӗх пор. Вӑл, онта лаша ярсан, лашана ниста та ямаç, лашана çав коккӑра илсе кӗрсе вӗлерет* (1930 çул).[24]

Ялта та, килте те чӑвашшӑн чи сӑваплисенчен пӗри, Йӗрӗх вырӑнӗ шутланать. Йӗрӗх яланах унта пӗр вырӑнта тӑрать,

çын, уйрăмах, ача-пăча сахал çӳрекен çĕрте. Вăл вырăн куç тĕлне тӳрех лекмест, ал-ура унта часах çитмест.

## 4.2. Йĕрĕх кӳлепи

Йĕрĕх кӳлепи хура халăха пĕр-пĕр Йĕрĕхĕн пĕтĕмĕшле сăнне, тулаш енне кăтартать. Вăл чунăшăн, унпа çыхăннă ĕç-хĕлĕн тĕрлĕ япалисемпе палăртнă кăтартмăшĕ. Çав вăхăтрах вăл Йĕрĕх вырнаçнă тĕле те палăртать, унта таса та типĕ. Кӳлепе шутĕнче тем те пулма пултарать: пĕрне, пукане, тĕрлĕ хывăм, туратсем т.ы.те – пурте Йĕрĕх валли хунă, ăна халаллана япаласем. Йĕрĕх вырăнĕ тесе палăртакан йывăç, çырма, сăрт е сăмсах, чул та пĕлтерĕшлĕ. Кунти кукăр-макăр мăйрака е йывăçран, шăмăран тунă пĕр-пĕр муклашка, тен, чĕрчун е çын евĕрлĕ кĕлетке те Йĕрĕх кӳлепи пулать. Кашни кил, йăх хăйне евĕр пулнăран кашни йĕрĕх кӳлепи хăйне евĕр. Анчах ятарлă хапи пулмасть. Вăл курăк-йывăç пек те, чĕрчун пек те мар, пысăк та, пĕчĕк те мар, тăваткал та, çаврака та мар, тĕсĕ те, шăрши те çук. Ахальтен мар ваттисем Йĕрĕх пирки: *Икĕрчĕк, кокăрчăк ехветер ватти кокăрчăк*, – тесе шахвăртнă (Тупмалли юмах – Элĕк районĕнчи Орпаш).[25]

Йĕрĕхĕн чăн сăнĕ, кĕлетки, хапи пĕлтерĕшлĕ мар. Вăл малтанхи, темиçемĕш сыпăкри ĕнтĕ, тăван кăк амăшĕ. Унăн сăнне, кĕлеткине, хапине, ытах пĕлес килсен, аннене, кукамая, хамăр хĕрсене пăхса чухламалла. (Ытахальтен, Торăн та, Хорачонăн та кĕлетки-сăнĕ çук, вĕсем этем е чĕрчун сăнарлă та мар; çын вĕсене пăхăнмасть – хисеплет, шута илет, вĕсемпе килĕштерсе пурăнма тăрăшать).

Этнографи литературинче Йĕрĕхе е унăн сăнарне тепĕр чух пайăррăн е пĕрне, е пукане, е тăхлан татăкĕ, е йывăç пек, е тата урăхла курас тени пур. Хăшпĕрисем хăй вăхăтĕнче хĕреслĕхри турăш пекрех те калăплама пикеннĕ. Çапах ку чунăша уйрăм япалапа, пĕр-пĕр ĕлкепе çыхăнтарсан тĕрĕсех пулмасть, килте те, ялта та унăн хăйне ятăн, халăхпа çирĕплетнĕ вырăн çук. Эпир ăна туйма çеç, хамăра пырса çапсан çеç пĕлме пултарат-

пăр. Çавнашкалах йĕрĕхлĕхпе çыхăннă япаласене çын умĕнче тумаççĕ, хывăма та ют çынпа пĕрле ирттермеççĕ. Кил тепĕр çĕре куçсан Йĕрĕхĕ пĕрле куçать, кӳлепи ун чух пĕрле куçни пĕлтерĕшлех мар. Унти япаласене вырнаçтарни, куçарни, хĕрпе парса яни – килти вăрттăнлăх, килйыш хӳтлĕхне, малашлăхне шанса чун-чĕререн тăвакан ĕç-пуç.

Йĕрĕх кӳлепин малтанхи амалăх тапхăрĕнчи ĕлки те уçăмлă мар. Çапах вăл хĕрарăмлăхпа, унăн пурнăçри пĕр-пĕр сăнарĕпе çыхăннă ĕнтĕ.

Куçса çӳренĕ вăхăтра йĕрĕхлĕхре лаша, тĕве, ĕне, сурăх усрас-тытас йăла-йĕрке самаях палăрма пултарнă. Кун çинчен пире кайранхи тапхăрта Йĕрĕхе «орхамах» туса пĕçерсе хывни те, ĕнери (ĕне ырри) çиес йăла та, сорхори (сорăх ырри) уявĕ упранса юлни те кăштах калать. Йĕрĕх япалисем урапа, ут таврашĕнче ытларах пулнă теме пулать. Ытахальтен, йĕвен, котлăх, орхалăх çинчи пăхăр е йĕс плашшисем кайран Йĕрĕхе хывнă шăтăклă тăхлан (калай) çаврашкасене аса илтереççĕ. Йĕнер, йăрана, сӳсмен (хăмăт), пĕкĕ эрешĕсем вара масмак-сорпан эрешĕсенчен кая юлмаççĕ. Уявра лашана, туртипе çунине (урапине) капăрлатни те хĕрарăм капăрланнинчен кая мар. Эреш-капăр чи малтан лашана, хĕрарăма та, куç ӳкесрен, усал витĕмĕнчен упрать, сыхлать. Вăл хăй куракана витерет, илемĕпе çĕнтерет, тĕлĕнтерет.

Ялсене вырнаçсан, Çĕр-аннепе çывăхланнă чăвашăн Йĕрĕхĕ малтанхи пекех ĕрĕхеймест темелле, çĕр çинерех анать. Йĕрĕх кӳлепинче йывăç пĕлтерĕшĕ ӳсет. Хĕрарăмлăхне палăртма çăка кĕлете вырнаçать, ĕç-пуçра çăка (пошчуш, пуччушши) патакпа усă кураççĕ, тир е пир пуканесен кăшкарне çăка турачĕ-турпасĕсенчен пуçтараççĕ, хывмалли савăт-сапине çăкаран касса кăлараççĕ. Тепĕр чухне çăка вырăнне хăва йышши йывăç та каять. Хĕрарăм пекех çемçе те чăтăмлă пилеш пур çĕрте те хурала тăрать. Хăвăллă (çурăк) ват хурама вара хаяр ват хĕр рольне илет. Йĕрĕх кунти-пĕрнине те хурама хуппичен тăваççĕ.

Мишша (çĕнĕлле: Алексей Иванов, арăмĕ Сентепи е çĕнĕлле: Агафия Федорова) кĕлетĕнче çĕр çултан кая мар тăнă йĕрĕх кӳлепине сăнлани: *Эрех оказался в следующем*

*убранстве: шест сучковатый мерою в длину например аршина два, на нем по сучкам повешено премножество на онем испещренных лык, сделанных петлями. Концы у оных вмелчайше раскроены на пучки, наподобие кистей, и одно за другое лыко неизобразимо переплетенных и кое свежею новостию, а иное многолетнею ветхостию одно другого превосходящих. Между ими на разноцветных льняных и шерстяных нитках прикреплено немалое число слитых оловяшек, подобно лыком перепутанных. Внутрь повешенных лык и ниток вмещена сухая от лба бараньева кость и неисчетное число прутьев, а какого они с показанным большим шестом дерева за неисчетнолетнею древностию признать невозможно. И так неистово обвешен сими безобразиями, что и смотреть мерзко и ужасно. И все оное к тем древним привесам прибавление бывает повсягодное в честь и утешение неистовому и лживому божку оному* (Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Токтамăш, 1769 çул).[26]

*Пĕрисем ялта ампар туянсан куçарса килнĕ пĕренесене килхушшинче купаланă чух пĕр çĕрĕк пĕренинчен кĕмĕл укçа пек çӳхе шур тăхлан ирĕлчĕкĕсем тăкăнчĕç, икĕ ывăçлăх. Кашниннех хĕрринчи шăтăкĕ витĕр вăтамран пĕр шит тăршшĕ шуратман йĕтĕн çип кăларнă (арланă çип, хушăран çĕлен çип те). Çамрăккисем, мĕн япали-ара ку, тесен пĕр мучи, çакă Йĕрĕх пулать те, тесе ăнлантарчĕ. Çакăнта 119 калай тата икĕ тăхлан çаврашки – пурĕ 121 ирĕлчĕк шутласа кăларнă, чи пысăкки те 20 пуслăх кĕмĕл укçаран иртмен, пиллĕкĕшĕ тата хуçланнă пулнă. Нумайăшĕн çип вĕçĕсене çыхма тесе пушă хăварнă, хăшпĕрисен вĕçĕсене çакмашкăн ункăланă. Ирĕлчĕксĕр çипсем те самаях тухнă. Кунтах тимĕр çине ирĕлмесĕрех ӳкнĕ темиçе калай муклашки пулнă* (Шупашкар районĕнчи Шоркасси, с. Яндашево, 1887 çул).[27]

*Хĕрарăмсем чӳк тунă çĕре хутшăнмаççĕ, пысăк уяв умĕн пурте килйыша явăçтарса Йĕрĕхе пуççапаççĕ. Кашни килтех пӳрт çумĕнчи таса хуралтăн малти кĕтесĕнче йĕрĕх ларать. Никам та ăна перĕнме хăймасть. Йĕрĕх тесе кунта курăспа варринчен çыхнă 15 яштака çӳçе хуллин сĕвĕмне (ывăçне) калаççĕ. Хуллисен тăршшĕ тăватă фута* (120 см) *яхăн, çыххи*

*çумне тата калай татăкне çакаççĕ. Кĕркуннепе, çулçисем тăкăнсан, çавăн чухлех хулă касса кивĕ сĕвĕме çĕннипе улăштараççĕ. Кивĕ йĕрĕхе, пуçтайса, юхакан шыва пăрахаççĕ* (Чĕмпĕрпе Самар хушши, Çарăмсан тăрăхĕ, 1768 çул).[28]

*Хăшпĕрисен килĕнче Йĕрĕх текен кĕлетке пур... Йĕрĕхсем тăхлан куркара пурăнма кăмăлласçĕ. Куркаваррипе вĕçне пилеш сапаки çыхнă хĕрлĕ çăм çип кăларнă. Пилешне çулленех çĕнĕрен пиçнипе улăштарса тăраççĕ. Хăйсемшĕн çак сăваплă япалана таса пирпе тата хурăн хуппипе чăркаса вĕсем мачча айне çакаççĕ. Ун çумне тĕрлĕ калай тата тăхлан плашшисем вырнаçтараççĕ, тирпейлĕ упраççĕ* (1780 çулсем).[29]

*Йĕрĕх – алăпа тунă хĕрарăм ĕлкиллĕ пукане. Вăл лаçра, çӳлĕк çинчи кĕтесре, вылямалли çуна çинче упраннă* (Куславкка районĕнчи Чашлама, 1885 çул).[30]

*Йĕрĕх тесе чунăша калаççĕ. Унăн сăнарне хĕр евĕр пуканепе палăртаççĕ. Пĕрнере тăракан çавăн пек пуканене тĕрлĕ хывăмпа пĕрле ялти ача-пăча пĕрисен ампарĕнче курса ярать. Çийне çил вĕçтерсе кайнă та кусем, унта Йĕрĕх пур тенине илтнĕскерсем, ятарласа çав ампара кĕрсе пăхнă.*

*Пилеш усал тăвакан пур чунăшран хӳтĕлет. Вупăр чăмласан ачасен мăйĕ çине пилеш татăкĕ çакса яраççĕ. Йĕрĕх таврашĕнче тула тухма пачах юрамасть* (Вăрнар районĕнчи Авшак Элмен, 1870 çулсем).[31]

*Йĕрĕх – идол. Йĕрĕх килĕн хушма хуралтисенче пурăнать: йĕрĕх кĕлетĕнче, ампар айĕнче, сарайĕнче, сарай çийĕнче* (Салмин А.К., 1990).[32]

*Вăл пĕр ватă салтак килĕнчи ампарта Мелĕм-хуçа тесе ят панă Йĕрĕхе курать. Çакă пуртăпа чутласа тунă нимле ӳкерчĕксĕр хăма çеç пулнă: тăршшĕ-сарлаккăшь 12-шер пӳрнелли* (~26,7 см), *хулăнăшĕ пĕр пӳрнелли* (~2,22 см). *Вăл ампарти пӳлмере, шурă пирпе карнăскер, стена çине çапнă пăтасенчен турăш пек çакăнса тăнă. Çумĕнчех тата, пăтасем çинче, икĕ пысăк хуп пĕрне çакăнса тăнă. Хăмине кил хуçи хăех тунă, ятне те хăех панă. Ăна пуççапма çынсем аякран та çӳренĕ. Вĕсен кĕллинчи пĕр йĕрки çапла: «Мелĕм-хуçа, çырлах мана! Кивĕ кĕмĕл нохрат парня парам». Çакăн евĕр халаллăхсем*

*ытти чăвашсен те пур-ши? Ытахальтен, пĕрнисене пăхсан, пурĕ 270 тĕрлĕ пир касăкĕ тухнă, кашнинех çиппе çыхнă. Вĕсем хушшинче вара пилĕк пуслăх икĕ кĕмĕл, виçĕ тенкĕ те* $97^1/_4$ *пуслăх пăхăр укçа, вунă нохрат, икĕ тăхлан шăранчăкĕ, тăвата чуста чăмакки, пĕр ăвăс чăмакки тата ыраш çăкăрĕн пĕр сăмси пулнă. Хăнăхнă йăлапа ултă çулта пĕрре пĕрнесене силленĕ, пĕтĕм хывăма кил хуçи илнĕ* (Куславкка районĕнчи Кивьял, Тĕрлемес прихучĕ, 1870 çул).[33]

*Йĕрĕх вăл вĕсен тĕшмĕшĕ пулнă. Ăна вĕсем хăйсемех тунă: çăка е хурама хуппинчен пĕчĕк кунтăк çĕленĕ, пуканесем тунă та унта хун*ă (ХХ ĕмĕр пуçламăшĕ).[34]

*Çынна е çăпан, е кĕçĕ, е шăтан-юхан ерсен, Йĕрĕх тытрĕ тесе Йĕрĕхе чӳклес тенĕ. Авалхи çынсем хурама пĕрни ĕçленĕ те, Йĕрĕх çав пĕрнере пурăнать тесе çав хурама пĕрнене кĕлетри пĕр кĕтесе çакса усранă* (Элĕк районĕнчи Ярхуньошкăнь, ~1898 çул).[35]

*Турăшсем пулсан та вĕсем тусан, эрешмен карти айĕнче, лампадăсăр тăнă. Килсерен пуççапмалли кӳлепесем усранă. Сăмахран, пирĕн кĕлетре Йĕрĕх* («ирих») *тăратчĕ. Çак усала киле телей кӳтĕр тата хуйхă-суйхăран хăтартăр тесе чӳклетчĕç. Вăл, татăкпа витнĕскер, кунтăкра вырнаçнăччĕ. Эпĕ ăна нихăçан та курман. Ытти пӳртсенче те усал кӳлеписем пурччĕ, вĕсене эпĕ куркаланă. Вĕсем этем кĕлетки евĕр пулман, пуççапма, чӳклеме тивĕçлĕ тăхлан, йывăç татăкĕсем пулнă… Килйышра чирлесен тухтăр патне каймастчĕç, юмăççенчен пулăшу ыйтатчĕç… Пирĕн ял çумĕнчи удел вăрманĕ хĕрринче хăвăллă вата хурамасем ешеретчĕç. Мана çавсем патне, вĕсене сăваплаcа кĕлтунă çĕре илсе каятчĕç. Унта тĕрлĕ ырăсене чӳклетчĕç, йывăççем кутĕнче купи-купипе кĕмĕл, пăхăр укçа выртатчĕ* (Теччĕ районĕнчи Кăнна Кушки, 1850 çулсене аса илни).[36]

*Хусанти миссионерсен приютĕнче çаврака пĕчĕк кунтăк хапиллĕ Йĕрĕх пур. Унтах тата хальхи Куславкка районĕнчи Кивьялта (Маслово) тупнă Мелĕм-хуçа ятлă Йĕрĕх япалисем упранаççĕ* (Магницкий В.К., 1891 çул).[37]

*Семенов Василин Йĕрĕх пурăнакан пĕчĕк пĕрне пур… Ытларах унта укçа пăрахаççĕ, çулталăкĕпе тăвата тенкĕ та-*

*ран пуçтарăнать* (Патăрьел районĕнчи Кивĕ Катек, 1900 - ? çулсем).[38]

*Пĕрнине хăйне Йĕрĕх теççĕ. Унта кăштах юман çулçи хунă, хĕррипе çип çине нухрат çакса тухнă. Ачасем ăнсăртран ан перĕнччĕр е тата, тур ан калатăр, ан тытчăр, тесе йĕрĕхе (йĕрĕх пĕрнине) пӳртри чи çӳллĕ вырăна, пĕрене çине, лартнă* (Теччĕ районĕнчи Таяпа (Тайба-Таушево), 1907 çул).[39]

*Крешĕн ялĕнче, Семенов Василий Семенович кĕлетĕнче, колхозсем пуçланиччен ял Йĕрĕхĕн кунти пулнă. Ял халăхĕ вăл кĕлете суйласа илнĕ. Йĕрĕх кунти ялан ун патĕнче пулнă. Кунтинче йĕвен, çăпата пĕр мăшăр, пуканесем, сурпан. Кунтăкне чи çӳлти каштаран çакса янă. Никамăн та тĕкĕнме юраман.*

*Пирĕн атте, Петр Григорьевич Гурьянов, коммунист пулнă. Ял советĕнче ĕçленĕ 1927-1928 çулсенче. Активист пулнă. Атте патне В.С. Семенов пынă. Хăй иккĕмĕш хут авланнă та, арăмĕ çĕрле кĕлете кĕме хăранă. Атте каланă: «Эп салтса илме пултаратăп», – тесе. Вара Семенов çавăншăн ултă пăт тулă пама килĕшнĕ. Атте салтса антарнă. Ултă пăт тулă илнĕ. Йĕвенне хамăр лаша çине тăхăнтарса çӳренĕ. Кунтине тата ыттисене те çунтарса янă. Çавăн хыççăн ял Йĕрĕхĕ пĕтнĕ* (ТР Аксу районĕнчи Кивĕ Саврăш, 1961 çул).[40]

*Йĕрĕх чирĕсенчен (шатра, кĕсен, çăпан, куç чирĕ) сыхланма пĕрне майлаштараççĕ, унта пилеш турачĕсем, тăхлан татăкĕсем, чĕрне касăкĕсем, çӳç, нимĕр хураççĕ те тырă патĕнче упраççĕ* (Вишневский В.П., 1846 çул).[41]

*Пĕрнере халалланă япаласем пур – халаллакан çыннăн нумайччен çĕрмен пайĕсем – çӳçпе чĕрне. Кунтах ытти металсенчен хăвăртрах ирĕлекен калай татăкĕсене* («тухлан») *хураççĕ. Çавнашкалах пĕрнене пир, çитсă, тăлапир, тир-сăран татăкĕсене, çĕнĕ пура турпасне хураççĕ. Пур çĕнĕ япалана: атă-пушмака е çипуç-тумтире, е пĕр-пĕр хуралтăна Ие е Йĕрĕх пиллетĕр. Вĕтĕ укçа та хураççĕ. Тулаш енчен пĕрнене тĕрлĕ тĕслĕ хăюсемпе, пуянсем кĕмĕл укçапа капăрлатаççĕ. Тата яланах шалта та, тул енче те пилеш турачĕ пур* (Шăмăршă районĕнчи Шăмăршă таврашĕ, 1870 çулсем).[42]

*Йӗрӗхӗ пӳрт маччи ҫинче ҫакӑнса тӑнӑ пӗрнере упраннӑ. Пӗрни пысӑк мар, хупран тунӑскер… Пачӑшкӑ силлесен ку пӗрнерен тӗк, мамӑк, килти кайӑк-кӗшӗк шӑммисем, темиҫе пӑхӑр укҫа тата ҫӗҫӗпе каскаласа тунӑ йывӑҫ кӗлетке тухрӗ. Кӗлетки ҫын евӗрлӗ. Алли-урине уйрӑм касса лартнӑ. Шӑмӑсем хушшинче улт-ҫич ҫулхи ачан хул шӑмми те пурччӗ* (Самар облаҫӗнчи Кошкӑ районӗнчи Кивъял Ысмах, Старое Юреево, 1900-? ҫулсем).[43]

*Йӗрӗх пӗрни ӑшӗнче 15 шӑранчӑк, вунӑ нохраткӑ, ҫичӗ урпа йӑви тата ҫурри, тӑватӑ ӑвӑс ҫурта. Шӑранчӑкӗсем тӑхлантан, пысӑк* (6-8 см - ?)*, ҫипписемпе пӗрле, чей чӑрканӑ хутран ирӗлтерсе тунӑ пулмалла. Нохраткисем иккӗшӗ пӑрҫа пысӑкӑшь, ыттисем кӗмӗл пилӗк пус пысӑкӑшь* (15,2 мм)*. Пӗрпуслӑх булка евӗр, анчах икӗ хут пӗчӗк йӑвасене варринче лакӑм туса, хӗррипе ҫиччӗ таран чӗпӗтсе пӗҫернӗ. Пӗрин варринче нимӗрӗн, пулмалла, шурӑхса кайнӑ палли пур. Ҫуртисем пиллӗк пӳрнелли (икӗ вершшук ҫурӑ) тӑршшӗ, ҫӑхан тӗкӗн туни тачкӑшь, пӗри шурӑ ӑвӑсран, виҫҫӗшӗ – чӗртсе пӑхнисем – сарӑ* (Шупашкар районӗнчи Апаш тӑрӑхӗ, 1887 ҫул).[44]

*Йӗрӗх тесе ытларах чухне мӗнле те пулин йывӑҫа, сайра хутра кивӗ ампара калаҫҫӗ. Вӑл ҫынна ӳт-тир чирӗ, уйрӑмах ҫӑпан кӳрет. Ӑна пир татӑкӗпе, кӗмӗл укҫапа чӳклеҫҫӗ. Ҫӑпан тухсан вара калай ҫаврашкине ҫӑпан ҫинче тытмалла та хывмалла* (Смелов В.Я., 1880 ҫул).[45]

*Йӗрӗх вӑл – икӗ-виҫӗ уйрӑм ҫитӗнекен йывӑҫ, ытларах хурама. Унта пурӑнакан чунӑш чӑвашсемшӗн Киремет чунӑшӗ пекех сиенлӗ мар* (Тӑвай районӗнчи Чутей, 1889 ҫул).[46]

*Йӗрӗх. Ватӑ, хӑрӑк йӑмрапа хурама таврашсенче, е пӗчӗкрех тӑвайкки тӑррисенче, е ҫырма-ҫатра, кӗпер таврашсенче часчасах ҫут тенкӗсемпеле мӑтатмаса (арпаштарса) пӑрахнӑ хӑюсем курма пулать. Ҫав хӑюсем нумайӑшӗ е шерепе, е хӗрсем ҫакса ҫӳрекен ҫурӑмхыҫ евӗрлӗ пулаҫҫӗ. Ҫут тенкисене хӑйӑвӗ вӗҫӗсене ҫыпӑҫтарса пӑрахаҫҫӗ. Тенкисене час-часах тӑхлантан шӑратса тӑваҫҫӗ. Ку япаласемсӗр пуҫсӑр тата ҫурта тӗпӗсене тупма пулать. Ҫурти тӗпӗсене пӗр-пӗр кӑнтӑрка пек ҫаврашка*

*хăма татăк çине лартаççĕ те çунтарса тĕпне кĕшт анчах хăвараççĕ. Çак таврашрах тата салат-хăмлапа кăмрăк чăмăртаккисем тупма пулать. Çакнашкал япаласем пурте Йĕрĕх таврашсем пулаççĕ* (Вăрнар районĕнчи Кĕçĕн Кипек тăрăхĕ, 1910 çул).[47]

*Василий Иванов килĕнче обыск тунă чухне – Сала (Богородски) вулăс старшини, ял старости, поняттойсем – ампара кĕрсен сылтăм енчи пӳлмере стена çине çапнă икĕ пăта çинче хурама хуппинчен тунă икĕ пысăк пĕрне çакăнса тăнă. Пĕрнесенче çиппе çыхнă тĕрлĕ виçеллĕ 270 пир касăкĕ пулнă. Вĕсем хушшинчен пурĕ 3 тенкĕ* $97^1/_4$ *пус кĕмĕллĕх укçа, 5 пуслăх икĕ кĕмĕл тата* $^1/_4$ *пусран пуçласа 2 пус таран вак пăхăр укçа, 10 нухрат, икĕ тăхлан муклашки, тăватă чуста муклашки (иккĕшне лапчăтнă), пĕр ăвăс муклашки, хура çăкăр сăмсин пĕр хуçăкĕ тата Мелĕм-хуçа «турăшĕ» тухнă. Турăш пекки вершшук çурă хулăнăшь, чĕрĕкшер çурă (~27 см) тăршшĕ тата сарлаккăшь хурăнтан пуртăпа чутласа тунă тăваткал хăма пулнă, ун кĕтесĕнче ăвăс юлашкисем пулнă* (Куславкка районĕнчи Кивьял, 1870 çул).[48]

Курăнать ĕнтĕ, Йĕрĕхĕн хăйне ятăн уйрăм кӳлепе çук. Вăл – чунăш сумĕпе тăракан сăваплă вырăн та, упранакан япала(сем) те, хăйне халалласа хывни те. Çапах йĕрĕх пĕрнипе таврашне кӳлепи пĕлтерĕшĕпе палăртни ытларах.

## 4.3. Йĕрĕх пĕрни

Йĕрĕх пĕрнине е кунтине час-часах килти Йĕрĕх пурăннă е ăна хывнă япаласене хумалли тĕп вырăн пек асăнаççĕ. Вăл ĕнтĕ «пысăк мар», «пĕчĕк» – 10-15 см ытла мар, хăйне евĕр шкатулка. Ăна йывăç хуппинчен тунă, Хурачун ан çулăхтăр тесе ялан тенĕ пекех хурама хуппинчен, ытларах тăваткал хапаллă. Хушăран çăка е хурăн хупĕ пулма пултарать. Асăннă музейрисен ĕлки: çийĕ ик айккиллĕ ӳпле пек (1416-2, 1416-9), тăсăкла çавракa (1416-15), çӳлтен хупланă кӳме евĕр (1416-17), тăсăкла тăваткаллисем (6326-43, 6326-44, 6326-45) т.ыт.те. Кашнинех çакки пур.[49]



*Йĕрĕх пĕрнисем*[51]



*Пĕрнери пуканесем*[52]



*Ахаль пĕрне (Муркаш р-нчи Вускасси-Акуча, çӳллĕшĕ пĕр шит).*[53]

*Йĕрĕхе* (пĕрнине) *хушпу пек тунă, нухратпа. Нухрат пăрахаççĕ. Йĕрĕх кĕсен-çăпан ярать* (ТР Çĕпрел районĕнчи Кивĕ Чакă, 1930 çул).[50]

*Ялта вĕрӳçĕ (юмăç) шутланакан хусах арăм килĕнчи Йĕрĕх пĕрнине хурама хуппинчен тунă. Çӳллĕшĕ виçĕ вершшук* (~13,5 см), *тĕпĕнчи сарлакăшĕ икĕ вершшук* (~9 см), *çакки çипрен. Калай ирĕлчĕкĕсене çаккине çыхнă вырăнта çирĕплетнĕ, икĕ енче те. Пĕр енче пилĕк калай, пĕр тăхлан, тепĕр*

*енче тăххăрăшĕ те калай ирĕлчĕкĕ* (Канаш районĕнчи Кĕçĕн Меми, Кӳлпоç, 1889 çул).[54]

*Ку пĕрнене нумаях пулмасть хурăн хуппинчен çĕленĕ: çӳллĕшĕ виçĕ пӳрнелли* (1,5 вершшук)*, сарлакăшĕ пĕр пӳрнелли* (çур вершшук)*. Ани хĕррине, хĕсĕнсе ларасран, шал енчен çиппе çĕлесе çыхăнтарса çĕмĕрт кăшăлпа çирĕплетнĕ. Пĕтĕрнĕ курăсран тунă çаккине тул енчен çыхăнтарнă. Çаккине çыпăçтарнă тĕлтех калай шăранчăкĕсем витĕр кăларнă çип вĕçĕсене (тăршшĕсем пĕр пек мар) çыхса лартнă. Вунпилĕк шăранчăкран иккĕшĕ тăхлантан, авăнчăк-хуçлатнисем çук. Пĕрне ăшне çичĕ нухратка (шурă шăвăç çаврашка) хунă: пĕри 15 пус* (2 см) *пысăкăшь, ыттисем – пăрçа пысăкăшь* (Шупашкар районĕнчи Чăрăшкасси-Апаш, 1888 çул).[55]

*Пушăтран хуçнă кивĕ йĕрĕх пĕрнине çуса тасатсах илсе пырса пачĕ. Тăвату кĕтеслĕ: çӳллĕшĕ 4 пӳрнелли ытларах* ($2^1/_4$ вершшук)*, сарлакăшĕ те пĕр енчен çавнашкалах, 4 пӳрнелли ытларах, тепĕр енчен 4 пӳрнелли* (2 вершшук)*. Ани çумĕнче вĕрен çакă пур. Шалта 15 тăхлан шăранчăкĕ, вунă нохраткă, çичĕ урпа йăви (пӳремеч) тата çурри, тăватă ăвăс çурта* (Шупашкар районĕнчи Апаш таврашĕ, 1887 çул).[56]

*Йĕрĕхе хывмалли хурамаран тунă пĕчĕк пĕрнесенче хачă, ăса, пир таткисем, пашалу, пăши çăмĕ, хуртпуççисем, нухратсем т.ыт.те пулнă* (Куславкка тата Элĕк районĕсем, 1940 çул).[57]

Юлашки ĕмĕрсенче йĕрĕх пĕрни килти Йĕрĕхе палăртакан тĕп япала пулса тăнă. Вăл пысăк мар, пĕрле пукане те пулма пултарать. Чи пĕлтерĕшли – ун çумĕнче Йĕрĕхе хывнă калай çаврашкисем пулни. Çавнашкалах унта хĕрарăм аллинче пулнă тĕрлĕ вĕтĕр-шакăр упранма пултарнă. Йĕрĕх пукани пулмасан е çухалсан пĕрне уйрăмах пĕлтĕрешлĕ. Йĕрĕх пĕрнине хĕрарăм хăйĕн ӳчĕн нумайччен упранакан, çĕрмен пайĕсене те – чĕрнине, çӳçне – хунă, Йĕрĕхĕн туртăм вăйне тытса тăнă.

Татăк-кĕсĕкрен тунă пуканесем[58]

Хĕрарăм сăнарлисем


1 (1416-1)


2 (1416-11)


3 (1416-16)


4 (1416-18)


5 (2845-128)


6 (2845-129)


7 (2845-130)


8 (2845-132)


9 (2845-133)


10 (2845-135)


11 (2032-6)


12 (2032-9)


13 (6576-269)

## Арҫын сӑнарлисем



14 (1416-3)



15 (1416-10)



16 (2032-7)



17



18

Ача сӑнарлисем

## Тӑмран тунисем[58]



20 (967-1)



21(967-4) хӗсӗр пуласран



22 (967-3) выльӑх чӗрлӗхе хӳтӗлет



19[59]

## 4.4. Йӗрӗх пукани

Тетте, пукане – чи малтан ачалӑхпа ҫыхӑннӑ япаласем. Ача пурнӑҫӗнче вӗсем пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Пукане тума, унпа выляма, паллах, ытларах хӗрачасем кӑмӑллаҫҫӗ. Кашниех ача чухне, май килнипе, юрӑхлӑ материал алла лекнипе ӑна калӑплать. Хӑй туни уйрӑмах хаклӑ. Ӑна хӑйне тӗнче (Турӑ) пултарнӑ та, хӑйне халь юратнӑ пекех, унпа кӑмӑллӑ пулнӑ пекех вӑл та хӑйӗн ӗҫне юрататать, кӑмӑллать. Унӑн пӗтӗм тӗнчи ҫавна курасшӑн пулнипе вӑл ӑна пултарнӑ. Ку япала – пукане – унӑн ҫутӑ ӗмӗтӗнчи чунӑш, вӑл ӑна пӗлет, ӑнланать. Ҫитӗ-ннисемшӗн мӗнле курӑнсан та пӗчӗк ача хӑй теттине чунлӑ туять. Вӑл ӑна хӑйне евӗр, хӑй шухӑшланӑ пек, харпӑрхӑй кӑмӑллӑ, хӑйӗнчен те пӗчӗк, кӗҫӗн, хӑйӗн хуйхи-суйхиллӗ ача пек шутлать. Хӑй пуканишӗн хӑйне асли пек шутласа, амӑшӗ пек туйса хӗр пӗрчи уншӑн вӗҫӗм пӑшӑрханать, ӑна ачашлать, хӳтӗлет, чылай хушӑ алӑран ямасть. Ҫак ырӑ туйӑм, пуканепе пӗрле ӗмӗтленни, хавхаланни ҫитӗнекен ҫынра ӗмӗрлӗхе юлать.

*Калӑпа пир таткисӗмпе чӳркесен, пӗчик ачасӗм, ача тесе, ҫӗклесе ҫӳреҫҫӗ* (Вӑрмар районӗнчи Ҫиҫтӗпе, 1928 ҫул).[60]

Ачасем хӑйсем тунӑ пуканере, уйрӑмах сӑн-питӗнче, конкретлӑ, палласа илмелли сӑн ҫук, ачашӑн ҫакӑ пӗлтерӗшӗ те мар. Пуканере вӑл унсӑрах, ахалех, хӑйне килӗшӳллӗ, тивӗҫлӗ чун курать. Ача, тӗрӗссипе, ашшӗ-амӑшӗнче те, ытти ҫынсенче те чун ӑшшине ҫеҫ курать, хӑйне ҫывӑх туять. Вӗсен сӑн-пичӗ, кӗлетки-мӗнӗ ӑна палласа илме кӑна кирлӗ.

«Пукане» ӑнлава пирӗн чӗлхери тӗрлӗ калаҫура ачасем тӗрлӗрен палӑртаҫҫӗ: поканя, покани, пукане, пукани, пӑкани, пухани, пуканя е тата ҫемҫетсерех: поканяк, поканик, пуканик. Калӑпӑшӗ унӑн ача ал лаппинчен ытла пысӑк мар. Ӑна ал айӗнчи пур материалтан та тӑваҫҫӗ, калӑплаҫҫӗ, касаҫҫӗ-чутлаҫҫӗ: тир-сӑран е пир касӑк-кӗсӗкӗнчен, тӑмран, йывӑҫран, чултан, тӑхлантан.

Пуканен кайранхи шӑпи тӗрлӗрен килет, тирпейлӗ килйышра вара чылайччен упранать. Нумай хӗр хӑйӗншӗн хаклӑ, ача-



23. Вучах хунти (14,5 см çӳллӗш, Самар кӗп. Пӗкӗлме уесӗнчи Вязовка, XVIII ӗмӗр).



24. Хӗсӗр пуласран (15 см çӳллӗш, Самар кӗп. Пӗкӗлме уесӗнчи Вязовка, XVIII ӗмӗр вӗçӗ)



25. Килти вучах хунти (10 см çӳллӗш, XIX ӗмӗр пуçл.).



26. Кил управçи (12 см çӳллӗш, вӗренерен каснӑ, Куславкка р-нчи Кивӗ Тӗрлемес, 1920 çулсем).



27.Кил вырӑн пуçаруçи. (10 см çӳллӗш, Самар кӗп, Пӗкӗлме уесӗнчи Вязовка, XVIII ӗмӗр пуçл.).[61]



28. (1040-14) Тасалăх хунти (16 см çӳллĕш, Самар обл. Шонтал р-нчи Кивĕ Ухинккел, XVIII ĕмĕр).



29. (1040-15) Вырьăх-чĕ рлĕх хунти (12,5 см çӳллĕш, Самар кĕп. Пĕкĕлме уесĕнчи Яшкино, XVIII ĕмĕр).



30. (1040-13) Сунар хунти (17 см çӳллĕш, Самар кĕп. Пĕкĕлме уесĕнчи Березовка, XVIII ĕмĕр).



31. (1040-12) Ака-суха хунти, хĕрарăма ача çуратма пулăшать (16 см çӳллĕш, Самар кĕп. Пĕкĕлме уесĕнчи Яшкино, XVIII ĕмĕр).[62]

лăхри туйăмсемпе, ĕмĕтсемпе тултарнă пуканене хăйпе пĕрле илсе кайнă. Хĕр çулне çитсен, паллах, унăн пуканепе киленсе ларма вăхăт çук. Халь вăл, пĕр-пĕр кĕтесре е ятарлă вырăнта, йĕрĕх пĕрнинче выртнăскер, ашшĕ-амăшĕн, тăванĕсен пилĕпе чунăш шайĕнче, Йĕрĕх шайне тухса тепĕр çĕре куçать. Пукане, ĕнтĕ, киленĕç çеç мар, аса илтерсе тăракан та, хĕрарăмăн халь тахçан унта чунпа хывăннине, унпа ĕмĕтленнине ӳтпе пурнăçламалла, пепкесем çуратса пăхса ӳстермелле.

Аслисем те пукане туса панă, парнеленĕ, уйрăмах, йывăçран, тăмран, металтан. Шăратмалли тăхлан (калай) тупсан арçын ачасем валли тĕрлĕ хапаллă пуканесем калăпланă. Аслăраххисене ятăн та вĕсене тунă. Чунăш чĕмĕ хывнă ку пуканесем умĕнче пĕрисем сунарта ăнăçу курма, теприсем выльăх ĕрчетме, кам хĕсĕрлĕхрен сывалма е тата ытти тĕллевпе чунне уçнă. Атăл тăрăхĕнчи халăхсене XVII ĕмĕрте металпа ĕçлеме чаракан законсем тухиччен ку ĕç анлă сарăлнă пулнă. Тăмран тунă калăппа, чĕртавар çитсен, тĕрлĕ тетте-пукане нумай шăратса кăларма пулать. Çакăн пек ĕç йĕрки ытти çĕрте те пулнă, сăмахран, пурте илтнĕ калай тĕкĕрçсем «оловянные солдатики».

Йĕрĕх ячĕпе вак укçа хывмалли пуканесене ăшне хăвăллă туса тăмран е ыттинчен калăпланă. Вĕсем пысăкрах, пĕр шит çӳллĕшех. Кусене хальхи халăх пухмач «копилка» тесен лайăх пĕлет. Çапах юлашки ĕмĕрсенче ытларах пĕрне ăшне хурса е çумне çакса çеç Йĕрĕхе хывни паллă. Тӳрешарапа чиркӳ хĕсĕрленĕрен йăла-йĕркере пуканесем сахалланнă, асăмра кăна юлнă.

Тĕрлĕ сăлтавпа çын пек кӳлепе – пукане – туни авалтанах килет. Тĕрĕксемпе монголсем те ĕлĕк çын вилсен ăна евĕрлĕрех пукане тунă. Пуканене тумлантарнă, çиеле тимĕр кĕпе, пуçне хошпу (шлем) тăхăнтартнă. Çакă (тăл) юрттăра вилнин кĕлне çĕре чикичченех тăнă. Тăл умĕнче амăшĕ, арăмĕ, хĕрĕсем кашни кун, хĕвел тухнă тата аннă вăхăтра вилнĕ çын ырă ĕçĕсене, пултарулăхне аса илсе макăрнă. Юлашкинчен тăла та çунтарса кĕлпе пĕрле пытарнă. Халĕ ку сăмах «тăлăх арăм» тенине

пĕлтерет. («Тăлăм» сăмах та – çăмне каснă чух сурăха паллама хăварнă çăм татки – «тăл» сăмахран пулнă).

*Йĕрĕх пĕрнине «тухлан» та, калай татăкĕ, хураççĕ. Вăл ик пӳрнелли çӳллĕш пуканене – авалхи чăвашсен фетишпе ылмаштарать теççĕ. Çавна кайран çын кĕлетки майлă шăратса калăпланă-мĕн. Анчах хальхи вăхăтра ун пек пуканесем пĕрнере çук, вĕсем мĕн пысăкăш пулнине, ăçта упраннине чăвашсем пĕлмеççĕ. Ĕлĕк вара ял вырăнне пĕрремĕш килнĕ çынсене* («садчик») *асăнса йывăçран е калайран вĕсем сăнлă пуканесем тунă, ятне те вĕсен ятнех панă теççĕ* (Шăмăршă районĕнчи Шăмăршă тавраш, 1870 çулсем).[63]

*Ĕлĕк пуянсен кĕлечĕсем нумай пулнă. Унта тырри-пулли тăкăнсах ларнă. Пуянсем пушăт сӳнĕ, пушăтĕнчен кӳме тунă, кӳми ăшне пуканесем лартнă. Çав пуканесене вĕсем кĕлете хунă. Йĕрĕх ан çулăхтăр тесе. Çак пуканийĕсем, имĕш, пуянсене хĕн-хур паман, кĕлечĕсене сыхласа пурăннă. Çак пуканийĕсенчен кайран Йĕрĕх пулса кайнă тет, çырма-çатрана пурăнма куçнă вĕсем. Кĕлетре те пурăнаççĕ тет Йĕрĕхсем* (ПР Авăркас районĕнчи Треппел, 1992 çул).[64]

*Çĕршыври тĕрлĕ управăшсенче «Йĕрĕх пукани» тенĕ экспонатсем те пур. Ытларах татăк-кĕсĕк пиртен тунисем, тăмран калăпланисем те пур, арçын сăнарлисем сахал. Пурте тенĕ пекех управа ХХ ĕмĕр пуçламăшĕнче çитнĕ. Тĕпчевсенче вĕсене Йĕрĕх ячĕпе ятарласа тунине, Йĕрĕх ытларах хĕрарăма хавхалантаракан чунăш пулнине палăртаççĕ. Пукане ăшĕнчен амалăх витĕмĕ-пусăмĕ, йăха тăсас сулмаклăх ан тартăр, ан çухалтăр тесе унăн питне хĕрлĕ хăюсемпе урлă-пирлĕ хĕреслесе хупласçĕ-мĕн. Пуканен çĕлĕкĕпе вăл шĕвĕр тăрăллă пулни те, пĕрни хăй те тата Йĕрĕх хăватне пĕтме памасть* (Дзенискевич Г.И.,1972çул).[65]

Йĕрĕх пуканинче тăван халăх çутçанталăкпа таса килĕшӳре тăни, Çĕр-ама сиплĕхĕ, тулăхлăхĕ, ăшпиллĕхĕ, Хорачонпа кĕрешӳри Хĕвел, этемĕн Торă çулĕ çинчи ăнтăлăвĕ т.ыт.те пуçтарăннă, çапах турă мар. Унăн сăнарĕ-кӳлепи те турăш шутланмасть. Ытахальтен, «турă синкел», «тур-сулу», «турă

алăкне уçакан», «турă амăшĕ», «турă ачисем» т.ыт. тенисем те турă (Торă) тĕсĕсем пулмаççĕ. Вĕсем – çӳлти тĕнчери çыхăнусене, пăхăнулăхпа карчĕсене кăтартакан ăнлавсем çеç. Чăваш тĕнĕ-ĕненĕвне Торăн çынна евĕр е урăхларах тунă ӳкерчĕкĕ-кĕлетки çырлахтараймасть, вăл вырăнлă та мар, ун пеккисем хура халăх ăс-хакăлне витерейместĕ.

Йĕрĕхпе çыхăннă йăла-йĕрке, ĕç-пуç тăван халăх юмахĕсенче те палăрать. Тĕслĕхрен, «Пӳрнеске», «Пукане» юмахсенчи тĕп геройсем лăп та шăп халăх курма хăнăхнă йĕрĕх пукани пысăкăшь. Паллах, кунта вĕсем чĕрĕ, хăйсен хуйхи-суйхи, ĕçĕ-хĕлĕ, кăмăл-сипечĕ, шăпи. Пукане, акă, «пӳрне пек пĕчĕкçĕ» кăна, çерçипе, шăшипе пĕр тан. Вăл *вĕр-çĕнĕ шап-шурă кĕпепе, çап-çут тухъяпа, сап-сар çăпатапа, шурă кĕпи вăр-вăр вĕçет, çутă тухйи шăнкăр-шанкăр тăвать, çĕнĕ çăпати пусмассерен шăтăртатать.*[66]

Хальхи вăхăтра пуканене ача ăс-тăнĕ панă пурнăç, çавнашкал юмахсемпе халапсем тĕрлĕ мультфильмсен сюжетне, курăмне куçнă.

«Юман-паттăр» юмах пуçламăшĕнчи ĕç-пуç пирĕн тĕнчекурăмри Йĕрĕхĕн тĕп вырăнĕпе, ĕçĕпе – этем ăрăвне малалла кайма, хĕрарăма, килйыша ачаллă тума пулăшассипе – тӳр килет. *Пĕр карчăкпа пĕр старик пурăннă… Анчах вĕсен ача-пăча тавраш**ĕ** пулман…* Йĕрĕх пулăшайĕ-и. Вăл килтех е ял таврашĕнчех пулин те, вырăнĕ сăваплă, унта ăшă пӳртрен çитме инçе (уйрăмах юмах итлекен ачашăн): *Çĕрпе пĕлĕт хушшинче вĕççĕр-хĕрсĕр тинĕс пур, çав тинĕс варринче пысăках мар утрав пур. Çав утрав çинче пĕр хăвăл юман янраса ларать. Ун тăрринче – кайăк йăви. Йăвара икĕ çăмарта выртать. Çав çăмартасене илсе килмелле.* Тумхахлă çулпа та пулин каланă çĕре çитсен çăмартана алла илме кăвакарчăн – арçынпа хĕрарăма юратупа пĕрлештерекен ырă кайăк – пулăшать. *Карчăкпа старик кăвакарчăн çăмартисене кӳлĕри шывпа çуса тасатрĕç те хурама кунтăк ăшне юнашар хучĕç.* Йĕрĕхĕн тĕп вырăнне, йĕрĕх кунтăкне, паллах, тимлесех, хывсах тăмалла*: Старикки çăмартасем çине чĕрĕлĕх шывĕ сапать, карчăкки*

*икçĕр çитмĕл çичĕ кун пусса ларать. Икçĕр çитмĕл çиччĕмĕш кунне пĕр çăмарти çурăлать те шĕшлĕ аври пысăкăш ача сиксе тухать…* Йĕрĕх пукани пысăкăшь ĕнтĕ вăл.[67]

«Туй-тупалак» юмахра та Йĕрĕхпе çыхăннă йăла-йĕрке, унăн усси курăнать, ăна сума суни çемьене ачаллă тăвать. *Ĕлĕк пĕр карчăкпа пĕр старик пурăнаççĕ тет. Вĕсен ача-пăча пĕртте пулман тет.* Йĕрĕхе, ĕнтĕ, нимĕр юрăхлă: *Карчăк пăрçа нимри пĕçерчĕ те старикне тепĕр кунне ăна сутма пасара ячĕ.* Çынна, ĕнтĕ, пурнăçра тем те кирлĕ. Çавăнпа та Йĕрĕхе кӳнĕ нимĕр хăвачĕпе старик çул тăршшĕнче качакаллă та пулса пăхать, хыççăн – ĕнеллĕ те, лашаллă та, туяллă та. Чи пысăк пуянлăх çапах – ача-пăча: *Вĕсен епле те пулин ачаллă пуласси килнĕ.* Парне тата кӳмелле – йывăç татки пулин те. *Карчăк туясене илчĕ те тапратрĕ старике хĕнеме… Туясем татăкăн-татăкăн ванса пĕтрĕç. Макăра-макăра старик туя ванчăкĕсене пĕр миххе пухрĕ те кĕлете каштана кайса çакрĕ… Тепĕр кунне ирхине… пăхать – ĕнер çакса хунă михĕ силленсе тăрать, ун ăшĕнче ача çарилеттерсе кăшкăрать…* (Вăрнар районĕнчи Ярмушка, 1911 çул).[68]

Йĕрĕх пуканине кунçул пани «Ачапа арçури» юмахра та курăнать. *Авалах пĕр ялта пĕр карчăкпа пĕр старик пурăннă. Вĕсен пукане пек пĕчĕк ача пулнă тет. Хăй çав тери вăйлă пулнă тет, хул-çурăмне, ал-урине вылятмасăр çӳремен те тет. Ялта ăна Шуйттан тесе чĕннĕ. Пĕрре çак ача юнашар яла хĕçпеле кайнă тет. Утса пыракан пĕр çын асăрхамасăр ăна чутах урипе пусса яман тет. Çак Шуйттан ятлă ача хĕçне йĕннинчен яшт! туртса кăларнă тет те уринчен чăшт! кăна касса илнĕ тет. Лешĕ хăрах урасăр юлнă тет. Вăл хăй вара арçури пулнă тет. Арçури калать: «Эпĕ таçта та çитнĕ, анчах сан пек Шуйттан ятлă ачана курман, илтмен. Эпĕ халь утаймастăп, утас пулсан сана çакăнтах вĕлермеллеччĕ», – тет. Унччен те пулмарĕ арçури чĕркуçленсе Шуйттан ятлă ачана хăвалама пуçларĕ… Шуйттан ятлă ача сисмен хушăра Тимĕр ту пулчĕ те тăчĕ. Арçури ăна тытаймарĕ* (Йĕпреç районĕнчи Эконом поселокĕ, 1959 çул).[69]

Йӗрӗхлетнӗ пукане паянхи кун та пӗлтерӗшлӗ ӗнтӗ. Пӳлӗмрех таса вырӑнта тӑрса вӑл килйыша, уйрӑмах ачасене тарӑн, малъӗмӗтлӗ шухӑш-туйӑм парать. Пир татӑкӗсенчен пуҫтарнӑши ӑна е пиччӗшӗ ҫӑкаран каснӑ, тен вӑл ҫутӑ металтан шӑранать. Ҫапах музейри темиҫе тӗслӗхе кура ҫын лӑпах пуканесен йывӑҫ кӑшкарӗнче (хӗрес евӗрлӗ-и вӑл е урӑхла) чунӑша туйнӑ теме кирлех мар пулмалла. Кунта вӑл типсе ларнӑ турат е ҫӳхе турпас кӑна. Тата мӗнле те пулин килӗшӳллӗ япалана калӑплама, вӑл ҫӑмӑл пултӑр, уншӑн ытлашши татӑккӗсӗк пӗтерес мар, ҫав хушӑрах тӑвӑма ӑпӑр-тапӑрпа тултарас мар тесен ӑшне кӑшкарлӑ тума тивет.[70]

*Предметы костюма и даже его уменьшенные модели (в виде наряженных фигурок) играли важную роль в жертвоприношениях божествам. Жители села Илим-Гора (Пенза обл. Ҫӑрттанлӑ р-нчи Итӗм-Кора ялӗ) изготавливали особые куклы, освящали их молитвой и относили на вершину одного из ближайших холмов. Подобные куклы, одетые в «женские костюмы» – в платьях с передниками, в хушпу и сурпанах, хранятся ныне в фондах Саратовского областного музея краеведения.* (Матвеев Г.Б., 2004 ҫул).[71]

*Пирӗн килте те йӗрӗх пулнӑ, ялӗпех пурччӗ, пулмалла. Вӑл кӗлетре, кӗтесре ҫакӑнса тӑратчӗ: пӗр икӗ шит ҫӳллӗш те пурччӗ пуль, кивӗ пукане, те пир татӑкӗсемпе хуплanӑ ӑна. Ӑна тытма каламастчӗҫ, кукамай ҫавна питӗ тимлетчӗ. Вӑл пукане эпӗ ҫарта чухне, 1950 ҫулсем варринче, пичче кӗлетӗн улӑм ҫийне тимӗрпе улӑштарнӑ май, ҫухалнӑ пулмалла.* (Тӑвай р-нчи Эльпуҫ)[72].

Хӗр пулса ҫитнӗ май пуканере ара ?арҫына% хӑй патнелле туртса тӑракан, юлашкинчен туртсах илекен хӑват капланать. Вӑл кайран та ҫумрине, мӑшӑрне ясарлӑхпа ҫуталтарса ҫак хӗрарӑм енне сулать. Пуканен туртӑм хавхи вӑрах хушӑ йӑшмасть.

# V. Йӗрӗх йӑли-йӗрки

## 5.1. «Йӗрӗх чӳке юратать»

Йӗрӗхре ваттисен хӑвачӗ пур – ҫак тӗнчере утса ҫӳрекенсене хӑйсен ӳчӗпе тахҫан пултарнисен ахрӑмӗ. Ҫавӑнпа та унта – уйрӑмах тӑван килтипе, тӑван касрипе, ялӑнпе – тимлӗ, асӑрхануллӑ пулмалла. Тепӗр чух ваттисене асӑнса кӑвайт чӗртни, асӑну ҫимине (нимӗр, пашалу) кӑштах вут ҫине пӑрахни те пӑсмасть. Ку йӑла пирӗн несӗлсен авалтанах, йӳркӗн пурнӑҫпа пурӑннӑ вӑхӑтсенченех килет.

*Йӗрӗхрен чӑвашсем питӗ хӑраҫҫӗ. Йӗрӗх пӑрахакан йывӑҫсем патӗнчен иртсе кайнӑ чух ҫав йывӑҫсем патнелле куҫпа та пӑхма хушмаҫҫӗ* (Вӑрнар районӗнчи Кӗҫӗн Кипек тӑрӑхӗ, 1910 ҫул).[1]

*Йӗрӗх йывӑҫне касасси чӑвашӑн пулмасть. Ӑнсӑртран кам та пулин ӑна касма хӑйсан вӑл ҫын ӗмӗрлӗхе кӗсен хуппипе витӗнсе ларӗ* (Тӑвай районӗнчи Чутей, 1889 ҫул).[2]

Куҫ умӗнче мар пулин те Йӗрӗхе асра тытмалла. Ӑна айӑпа кӗрсен ҫеҫ мар, ахаль чухне те, ҫулталӑкра пӗрре пулин те асӑнмалла, хӑв хисепленине, хамӑр килйыш сума сунине кӑтартмалла, парне ятне пулин те памалла. Унсӑрӑн Йӗрӗх хӑйӗнне ҫавах илет, кама та пулин е хуҫалӑха синкер кӳрет.

*Йӗрӗх чӳке юратать.[3]*

*Ҫав Йӗрӗх пахчи патӗнчен иртсе кайнӑ чухне, Йӗрӗх ан тыттӑр, тесен ак ҫапла сӑмахсем каласа иртсе каймалла теҫҫӗ: «Эсӗ, Йӗрӗх, манран нимӗн те ан шыра, ват майрапа ват вырӑсран шыра», – тесе иртсе каймалла теҫҫӗ. Ку сӑмахсене эпир пӗчиккӗ чухне пире анне вӗрентеччӗ: «Эсир ҫав Йӗрӗх патӗнчен иртсе кайнӑ чухне, аса килсен, нихҫан та ҫак сӑмахсене каламасӑр ан иртсе кайӑр», – теччӗ* (Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Чӗнер, 1927 ҫул).[4]

*Çав Йĕрĕх нумайййĕшне кĕсен-çăпан кăларат, суккăр тăват, шыçă парат, теççĕ. Çавăнпа вара ăна çулă нимĕрпе пырса чӳклеççĕ е тăхлан пырса шăратаççĕ. Çапла тусан вара ыратни чарăнат, теççĕ. Тата çĕнĕ кĕрӳсем пырса салам параççĕ. Тата, салам панă чух кулсан, килĕшмест теççĕ. Çĕнĕ кĕрӳсем салам памасан, вăсене Йĕрĕх тытат, теççĕ. Тата çав ленкесе, пырса тĕртĕнсен те, хĕн-хупăр парат, теççĕ* (Елчĕк районĕнчи Кармал, 1910 çулсем).[5]

*Минчет тутарса килекенсем итем карти патне чарăнаççĕ те, пĕри хуть вунçичĕ пус, хуть вунă пус (унта тиркев çук) укçа илет те, упăшкипе матки йĕри-тавра çав укçана çавăрса, аяккалла ывăтса ярат. Ăна вăл, пур маткипе упăшкине çакланнă тăшмансем, матки килĕнчи Йĕрĕхсем, упăшки килĕнчи Йĕрĕхсем çав укçапа килĕшчĕр, тесе пăрахат* (1930 çул).[6]

*Тойра çисе сĕт лешки; хыççăн, сĕт лешки çисессĕн, çинĕ чоня кĕçĕн кĕрӳ чăмак илнĕ. Вара она вată кил хоçи (ачин ашшĕ) каланă: «Ман пăтă çиес килет, кил-йĕрĕк туас». Онта чӧк туса пăтăпа, пашалупа чӧк туса: тӧрленет онăн çăпанĕ* (Муркаш районĕнчи Хорачка, 1930 çул).[7]

*Йĕрĕхе чӳклемелле пулсан, тăвансене пуçтарса шурă сурăх пусаççĕ. Ашĕ пиçсен, Йĕрĕхе чĕнсе илсе ашне çиме пуçлаççĕ, пĕри вара тухланккăсем тума тытăнать* (косар çине шăранчăксене тумлатса), *вĕсем витĕр çип кăларать* («продевает в них нитки»). *Çисе пĕтерсен пурте пĕрле тухланкăсене Йĕрĕхе кайса параççĕ. Каялла таврăннă чух, темиçе утăм тусан, каллех йĕрĕхе пуç таяççĕ – ун еннелле тайăлса* («онн янелле тойăлса») *салам параççĕ. Тепĕр кунне ирпе ирех тăвансем каллех пуçтарăнаççĕ те пăтă пĕçереççĕ. Пиçсен, пӳрт варрине пукан* («гнутый стул») *лартаççĕ, ун çине пăтăпа чашăк лартаççĕ, Йĕрĕхе чĕнсе пăттине çиеççĕ. Çисен, пуканне уя илсе тухса айне пилеш турачĕ хурса хăвараççĕ* (Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Орхас Кошкă таврашĕ, 1892 çул).[8]

*Кильăш пăтти-юсманĕ чӳклесен кирек кам та йĕрĕх лартаççĕ. Чустана чашăк пек туса, унăн ăшне кĕрпепе шыв хутăштарса, кăмакана лартса пĕçереççĕ. Пиçсен вара ун çумне*

*тăхлан тенкĕ çакаççĕ. Хăйне çакмалли те тăваççĕ, унпа пĕрле тата 41 икерчĕ. Пӳрне пуçĕ пек вĕтĕ пĕçереççĕ те – пурне те пĕр туттăрпа чăркаса хире кайса пĕр хулă çине-и е хытхура çине çакса хăвараççĕ* (ТР Аксу районĕнчи Саврăш-? тăрăхĕ, ~1895 çул).[9]

*Кĕркунне пулсан Йĕрĕх ятне асăнса пит çуллă нимĕр пĕçерсе çынă, вара Йĕрĕх çырлахнă. Йĕрĕхшĕн кĕлĕ кĕске пулнă: «Çырлах, Йĕрĕх. Сана нимĕрпе асăнатпăр, усал ан ту. Нимĕрне çуллă туса асăнатпăр. Çырлах, Йĕрĕх, ача-пăча çине кĕсен-çăпан ан яр. Акă, сана пурçăнпа илемлетнĕ парне паратпăр, сурпан çакки паратпăр. Акă, çав хурама хăвăлне пырса çакса яратăп. Ху юратса хăвах ил, çырлах. Текех кĕсен-çăпан ан кăлар. Çырлах»* (Вăрнар районĕнчи Çĕнĕ Кипек, ~1890 çулсем).[10]

*Ик-виç çулта пĕрре килте чӳк уйăхĕнче, çĕн уйăхла, Аслă ырра хур параççĕ. Çавăн чухне, хыççăнах, шыв мимĕрĕ, вут чӳкĕ тата йĕрĕх чӳкĕ те тăваççĕ – кил хуçи măн кĕлĕне хур шăммисемпе пĕрлех тирĕкре вĕсене тивĕç сĕлĕ е пăрçа нимĕрĕ тата виçĕ çăкăр татăкĕ илсе тухать. Тирĕкри нимĕре вăл виççе пайлать – виç куç тăвать. Малтан шыв хĕрне кайса шыв мимĕрне тата вут чӳкне ирттерет, хыççăн ял айккине тухать. Кунта Йĕрĕхĕн сăваплă вырăнĕ пур. Чирсемпе ан аптăраттăр, сиен ан кӳтĕр тесе çын Йĕрĕхе пуçтаять. Çĕр çине çăкăрне, нимĕрне, виçĕ кашăк туса, хурать, кашнинче пуçтайса: «Çырлах, çырлах, çырлах, Йĕрĕхе мимĕр чӳклетпĕр», – тет. Юлашки нимĕрне çисе ярать* (Чĕмпĕр облаçĕнчи Чăнлă районĕнчи Чăвашкасси, 1907 çул).[11]

Йĕрĕхе хисеплемелле, лайăх, сывă пурăнсан та ăна сума суса çулталăкра пĕрре чӳклемелле. Ку ĕçе хамăр йăхрисене чĕнсен, вăл ятпа така та пуссан вара тата аван пулать. (Тату пурăнас текен çын ахалех çулталăкра пĕрре тăван-хурăнташа пуçтарса ĕçкĕ тума тăрăшать). Качча кайнă хĕр килне (ялне) кĕрӳпе пĕрремĕш хут килсен малтан Йĕрĕхе хисеп тăвать.

## 5.2. Йӗрӗхе мӗн юрамасть?

Чӑваш пур ҫын ҫине, пур чӗрчун ҫине, пур ӳсентӑран ҫине, таврари пур япала ҫине хӑйпе тан пӑхать, кашни пайрӑмне юратса, ӑшӑ чунпа тимлет, сыхлать. Йӗрӗхпе унӑн вырӑнне те, пуканине, хывӑмӗ-парнисене те вӑл куҫ пек упрать. Унӑн япалисене тытма, ҫӗмӗрме, ӳкерме юрамасть. Килйышшӑн, ӑратӑшӑн, ялшӑн та кашни Йӗрӗх пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулнине, сӑваплӑ пулнине ҫын лайӑх пӗлет. Тасалӑхне, ырӑ ятне varаламалла мар, унтан мӑшкӑлламалла мар – уйрӑм килйышран, йӑхран кулмалла мар.

Чӑвашшӑн тӑван хурӑнташ, ҫынсен ырӑ хутшӑнӑвӗсем хаклӑ. Ҫамрӑк ӑрӑва та вӑл ҫак шухӑш-туйӑмпа ҫитӗнтерет. Ку тӗлӗшпе Йӗрӗхе тирпейлӗ тытни, пулас ӑрӑва унран пистерменни, чун-чӗрепе тимлеттерни уйрӑмах вырӑнлӑ. Ҫак ӗҫ-пуҫра, паллах, хӑратса илмелли те пулать, ача-пӑчапа унсӑр та май ҫук, ҫапах йӑвашшӑн асӑрхаттарса. «Апла тусан капла пулать…» тенӗ ҫӗрте те пирӗн айӑплав виҫи халӑх йӑвашлӑхне, сӑпайлӑхне кӑтартать.

*Йӗрӗх турри урлӑ кайма каламан; Йӗрӗхе ҫулӑхиччен, куштана ҫулӑх* (Тӑрак районӗнчи Яманак, 1980 ҫул)*; Ирӗх укҫине е нухратне илсессӗн ҫӑпан тухать, хӑйне пуҫҫапни ҫинчен каласан вӑл тытать* (Пӑва уесӗ, XX ӗмӗр пуҫламӑшӗ)*; Выльӑх пуснӑ ҫӗрте тула ларма юрамасть, Йӗрӗх тытать, кӗсен-ҫӑпан тухать* (Чӑнлӑ районӗнчи Чӑвашкасси, 1984 ҫул); *Йӗрӗх пур тетчӗҫ. Йӗрӗхне ӑна темскер туса тӑкнӑ тет-и. Ун ҫине тухма юраман тет. Пирӗн аппа ларма каятчӗ тет куккасем патне. Ҫанталла ҫыпӑҫнӑ тет – тухнӑ тет те. Ури ниҫта шӑтӑк пулса юхӗртет тет. Ӗлӗк нумай пулнӑ вӑл* (Самар облаҫӗнчи Исаклӑ районӗнчи Сепперел. 1984 ҫул)*; Йӗрӗх вӑл час тытать, ҫавӑнпа Йӗрӗх тӑракан кӗлет патне пырса тула тухма кирлӗ мар, тата унта вӑрҫма та юрамасть..; Йӗрӗх те ҫынна тытать, если Йӗрӗх тӗлне тӑрсан: е сыссан, е таптасан, е сурсан. Вӑл вара тӑрать те ҫав ҫынна кӗсен-ҫӑпан чирӗпе асаплантарать, вӗлерме те пултарать* (Етӗрне районӗнчи Хочаш, 1909 ҫулта).[12]

*Пирĕн кĕлетре пĕр Йĕрĕх пурччĕ. Вăл йĕрĕх пĕрнине хурама хуппинчен авса тунăччĕ. Çав йĕрĕх пĕрнине тивекене Йĕрĕх тытат, тетчĕç. Çавăнпа пурте вăл Йĕрĕхрен пит хăраччĕçĕ. Вăл Йĕрĕхе çемьесем ан пуççапчăр, тесе пиччесем теветкеллесе, Йĕрĕх тытасран хăрамасăрах, ăна çемьесенчен вăрттăн çурхи шывпа юхтарса янă… Пиччесем, хай, йĕрĕхе каяллех пĕтернине çемьесем пĕлсен, Йĕрĕх хăйсене тытасран хăраса, ăна татах çĕнĕрен чĕртнĕ* (1930çул).[13]

*Ял çумĕнче Йăрăх çырми пур. Çав çырмара ĕлĕк тула тухман. Тула тухсан суран ерет, тенĕ. Çавăнпа кунта вăкăрсем, сурăхсем пусса пăрахнă* (Елчĕк районĕнчи Ĕнел, XX ĕмĕр пуçламăшĕ).[14]

*Тăван ялта, çурçĕр енче, Хайпулла анатĕнче юханшыв урлă каçсан, ялăн Йĕрĕх ятлă тип çырми пур. Ачапча чухне пире аслисем çак çырмана выляма кайма чаратчĕç. Унта Йĕрĕх пурăнать, тĕрĕсрех каласан, Йĕрĕх тытать, чир-чĕр ярать, шавланине, тавлашнине юратмасть тесе астутарса калатчĕç. Анчах та пирĕн, шкула вĕренме çӳремен шăмпăлайсен, Йĕрĕхе хамăр куçпа курас килетчĕ* (ТР Аксу районĕнчи Çĕнĕ Аксу, 2014 çул).[15]

*Йĕрĕх кĕлечĕ тирпейлĕ – унта кирлĕ-кирлĕмар сăмах калаçмаççĕ, çын кăмăлне пăсмалли е тĕн йăлине кӳрентермелли ĕçсемпе япаласем çинчен пуплемеççĕ* (ТР Çĕнĕ Шуçăм районĕнчи Чăваш Шупашкарĕ, 1889 çул).[16]

*Урамра вылякан ачасем пĕррехинче çатан карта çине çакса хунă калай ирĕлчĕкне курнă та ăна илсе пăрахса хулăсемпе ислетнĕ. Тепĕр кунне пĕр ачин çăпан сиксе тухнă. Хăйсен ачи те çавăнта алхаснине илтнĕ ашшĕ-амăшĕ Йĕрĕхе çырлахтарас тесе васкасах çăмарта хывнă* (Канаш районĕнчи Кĕçĕн Меми (Кӳлпоç), 1880 çулсем).[17]

*Ун патĕнчен иртсе каякан вăрçăнсан е вăл вырăна мĕнле те пулин мăшкăлласан, çакă Йĕрĕхе хăрушла кӳрентерни шутланать, вăл уншăн епле пулсан та тавăрать. Йĕрĕх упраннă вырăнсенчен халĕ те хăракалаççĕ* (Сарăту облаçĕнчи Вольски районĕнчи Касанлă, 1924 çул).[18]

*Анне пĕчĕк чухне кукамăшĕ патне кайнă. Çакса хунă тет пуканесем: 4 пукане, кунтăпа. Анне пĕр кунтине çапса ўкернĕ те пуканисем пурте ўкнĕ. Эх, тытăнчĕ тет çăпан тухма çавăнтан. Пĕтĕм çанна-çурăма çăпан ернĕ. Йĕрĕх тытса тет. Тепре кайса çав кунтисене майласан çеç çăпанĕ иртрĕ тет… Тăвата пукане тет, тряпкăсенчен çĕлесе тунă тет, çав Еремкино ялĕнче пурăнать. Йĕрĕх кашни килтех пулман. Пăсакансен çеç пулнă* (Чĕмпĕр облаçĕнчи Чартаклă районĕнчи Калмайăр, 1984 çул).[19]

*Тата çав ленкесе (Йĕрĕх вырăнне) пырса тĕртĕнсен те хĕн-хупăр парать теççĕ. Пирĕн тете салтакран килсен пĕрре çав ленкесе пахчана кăларса ытнă иккен. Çав тĕлте манăн куç пĕр эрнеччен ыратса тăчĕ те тўрленчĕ. Манăн куçа вара хăйне кăларса ытнăшăн Йĕрĕх тытнă та вырăнне кўртсе çакса мимĕр чўклесен тин тўрленчĕ теччĕç. Тата тепĕре инкен куçĕ сем ыратса шур илме пуçланăччĕ. Ăна та тете кĕлет тасатнă чух йĕрĕхе перĕннĕшĕн пулнă теччĕç* (Елчĕк районĕнчи Кармал, 1910 çулсем).[20]

*Йăрăх çырмара пурăнать. Ăна турпас çине çăв сĕрсе памалла. Пĕр майра, Йăрăхран хăрамиш пулса, Йăрăх çырминче тула тухма ларнă. Хайхи майран тепĕр куннех кутне шур тăрăллă шатрасем тухса тулнă. Майра пулсан та Йăрăха парне парсанах тўрленнĕ. Çавăнтан вара тин хай майра Йăрăхран хăра пуçланă…* (Вăрмар районĕнчи Энĕшпуç, 1911 çул).[21]

*Вăл Йĕрĕх чăнахах та хăйне манакан çынна тытатех. Эпĕр пĕрре пĕр çыннăн кĕлетне пăсрăмăр. Кĕлетĕнче йĕрĕх пĕрми çакăнса тăратчĕ. Эпĕ пĕрене антара пуçласан хуçи, çав Йĕрĕхе шеллесе: «Ан яр-ха пĕренене, йĕрĕх пĕрмине илем», – тет. Эпĕ ăна кĕтсе тăмарăм, пĕренене ярса йĕрĕх пĕрмине салаттартăм. Вăл каларĕ: «Асту, сана Йĕрĕх тытать», – терĕ. Эпĕ ăна хирĕç: «Эпĕ хăрамастăп, эс ан хăра, вара хăрамасан тивмест», – терĕм. Вара мана ним те пулмарĕ, вăл çăпанпа аптăрарĕ. Вăл хăш та пĕр Йĕрĕхе шур пĕремĕк исе те чўклеççĕ* (ТР Нурлат районĕнчи Куракъел, 1929 çул).[22]

*Кусем иккĕшĕ кулса каланă: «Йĕрĕх ват çын пек шăлсăр, нимĕр çиять, нумай çурать». Вара вĕсене Йĕрĕх тытнă та*

*иккĕшне те кулнăшăн вĕлернĕ* (Етĕрне районĕнчи Хочаш, 1909 çул).[23]

*Йĕрĕх йывăçне чир ересрен, вилĕм посасран хăраса касмаççĕ, тула тухма юрамасть. Йĕрĕхе тăхлантан тунă нохратсене пăрахатчĕç* (Муркаш районĕнчи Купăрля-Янасал, 1904 çул).[24]

*Е тата эсĕ – çавăнта çырмара, çавă йывăç кутĕнче Йĕрĕх пур, эсĕ çавăнта ларса шăнă та çавăнти Йĕрĕх тытнă сана, тет* (1930 çул).[25]

*Йĕрĕх укçи – йĕрĕхе хывнă укçа. Йĕрĕх укçине е нухратне илсессĕн, çăпан тухать, теççĕ* (1930 çул).[26]

Йĕрĕх таса та черчен чунăш. Ăна юраман ĕç туни вăл пирĕн йăха е тепĕр йăха юраман ĕç туни пулать. Унтан кулни, мăшкăллани, ăна шута хуманни вăл – хамăртан, хамăр халăхран кулниех. Йĕрĕх пĕлĕвĕнче паянхи арăвăн çеç мар, малтанхисен те, сĕм-авалхи несĕлсен те ӳчĕ-чунĕн таса ăнтăлăвĕ пуçтарăннă. Ку çынсем те тахçан çакăнта пулнă, утса çӳренĕ, ĕçленĕ, савăннă, турă йăлине тытса пурăннă. Çавна халь пурăнакансен шута хумаллах, Йĕрĕхе питĕ çепĕç, алăри ачана пăхнă пек асăрхаса тăмалла. Ун пирки ним те калаçмалла мар, унпа çыхăннă пĕр япалана тытмалла мар, ун таврашĕнче килĕшӳсĕр пĕр ĕç тумалла мар, пĕр сăмах каламалла мар.

## 5.3. Йĕрĕх чирĕсем

Йĕрĕх хăйне юраман, килĕшмен ĕç тунă çынсене ӳт-тир чирĕсемпе, кĕсен-çăпанпа ытларах аса илтерет, айăплать. Хисеплемесен, мăшкăлласан вăл чирлеттерет (йĕрĕх çыпăçать). Çакă вăл пурăнакан киле, килйыша кăмăлламан, вăл йăха курайман çынна, уйрăмах тăрлавсăр ача-пăчана час-часах пырса тивет. Йĕрĕх ку айвана çапсах ӳкермест. Çын, тен, вăл кӳршĕ те, çапах кирлĕ, унăн усалĕ те вăхăтлăх кăна. Анчах унăн çак кил, çак йăх пуррине, хисепе тивĕçлине туймалла, хур тумалла мар.

Йĕрĕхпе çыхăнтарнă ӳт-тир çинчи чирсене (накожные заболевания) пĕтĕмлетсе чăвашсем кĕсен-çăпан, çăпан-шăтан (чирья

и нарывы), пӳр-сур (кожные гнойные болезни, пиодермия; пӳрлӗ-сурлӑ – болезненный), йӑх (кожные заболевания; проказа, золотуха; гноящийся чирей), суран-юхан (кожные болезни), юхан-суран (проказа, гнойные раны, язвы, болячки), юхан-шӑтан (гнойные раны), юханлӑ чир (гнойные болезни, свищ) теҫҫӗ. Кушӑрка – кӗсен-ҫӑпан: *Пултӑран ҫисен кушӑрка пӗтет*. Ытти амака та йӗрӗх чирӗсем йышне кӗртни пур, калӑпӑр: пыр шыҫни т.ыт.те.

Уйрӑммӑн ҫак чирсемпе паллисене (мифопатонимсене) палӑртаҫҫӗ: ҫӑпан (вереда, чирей, фурункул) тата унӑн тӗсӗсем: ахаль ҫӑпан (фурункул), йытпуҫ (золотуха), ҫӗленпуҫ (нарыв на пальце), ӳпне ҫӑпан (ҫӑпан амӑшӗ; карбункул); кӗсен (короста; короста на голове, мокрый лишай; кӗсенлен – покрываться коростами и струпом; ҫӑпан кӗсенленчӗ – чирей стал заживать и засыхать); шатра (кӗлӗ шатри, сыпь) тата унӑн тӗсӗсем: шывлӑ шатра, шӗпӗн евӗрлӗ пысӑк шатра, вӗт шатра (шатрашка; прыщ), лаптак шатра, кӑвак тӗплӗ шатра, капан (е шӗвӗр) шатра, шӑвала шатри т.ыт.те; пӳр (гной) тата унӑн тӗсӗсем: пӳрлӗ ҫӑпан (гнойный фурункул), пӳрлӗ шатра (гнойная сыпь), пӳрлешке (сыпь, угорь, прыщик); тимӗре (тимӗрчек, тимрел шатри, типен шатра; лишай, болезни щек) тата унӑн тӗсӗ – йӗпе тимре; кӑрчанкӑ е кӗҫӗ (чесотка); шыҫӑ (опухоль); шыҫӑ чирӗ (водянка). Суран (рана); пӳҫек (след болячки на теле); кӑрчанкӑллӑ (чесоточный, больной чесоткой); кушӑрка (сохнуть, черстветь; обветревать, огрубевать). Хаяр шатри, ясар шатри, вил шатри кунта кӗмеҫҫӗ.

Шӗпӗне (бородавка), чеччене (чеччи, чечек, хуйӑш, шатра; оспа), хӗрлӗхене (хӗрлӗ шатра, касуллӑ чир; корь), шатра чирне (ветрянка), хуратута (веснушки, родинки), чӗкеҫ шатрине (хӳптӗрле, сарӑ тут; веснушки), шатраллӑ вӗри чире (сыпной тиф) т.ыт. Йӗрӗхпе пӗрле асӑнмаҫҫӗ.

Кӗсен-ҫӑпан тӗсӗсене вырӑсла литературӑра ҫапларах асӑннӑ: вереда (ҫӑпан; верета, верет, чирей, фурункул), гнойник (пӳрлӗ суран, гной), золотуха (йӑх, йыт поҫӗ), короста (кӗсен), струп (кӗсен хуппи), нарыв (шыҫӑ, ҫӑпан), опухоль

(шыçă, măкăль), парша (кукша, кутăр, кĕсен), проказа, скорбут (больной скорбутом – вопăр чăмлать), сыпь (вĕтĕ шатра), гноевидная сыпь (шывлă сар шатра), чесотка (кĕçĕ, кăрчанкă), шелудивый (кĕсенлĕ, кĕçĕллĕ, кукшаллă), язва (юхан суран), лишай (кукша, тимĕре, тимре).

*Авалхи çынсен йĕрĕх ятлă чир пулнă. Вăл чире, ак епле пулнă чире каланă – е çăпана, е кĕçе, е шăтан-юхана йĕрĕх тенĕ. Çынна е çăпан, е кĕçĕ, е шăтан-юхан ерсен Йĕрĕх тытрĕ тесе Йĕрĕхе чӳклес тенĕ* (Элĕк районĕнчи Ярхуньошкăнь, ~1898 çул).[27]

*Йĕрĕхе чӳклес пулсан, тута хĕрне кĕсен тухать, теççĕ* (1930 çул).[28]

*Пĕр-пĕр япала ыратсан е çăпан тухсан вара, ăна Йĕрĕх тытнă тетчĕç. Унтан вара вăл пĕрми çине тăхлан шăратса тата мимĕр пĕçерсе хураççĕ* (ТР Нурлат районĕнчи Куракъел, 1929 çул).[29]

*Ăна, Йĕрĕхе, кĕсен кăларать теççĕ. Пĕр-пĕр ача кĕсенленсе кайсан е çăпан тухсан чӳклеççĕ, ăна нимĕр пĕçерсе е тата кĕмĕл окçасам параççĕ* (Муркаш районĕнчи Кĕртекасси-Янасал, 1904 çул).[30]

*Йĕрĕх çынсене çăпан кăларать тенĕрен, теприсем, çын кĕл çине шăрсан çăпан тухать, теççĕ. Выrăссем, çын кисĕп урлă ура ярса пуссан, пĕç хушшинчи парсем шыçаççĕ* («бобоны») теççĕ. (Магницкий В.К., 1881 çул)[31]

*Йĕрĕх чунăш çынна ӳт çинчи пӳрлĕ чирсемпе (шатра, çăпан, куç чирĕ т.ыт.те) сиенлет. Ăна çырлахтарас тесе çатан савăта типĕ туратсем, калай татăкĕсем, чирлин чĕрнисемпе (алăри те, урари те) пĕртак çӳçне хураççĕ те килте ăçта та пулин çакса яраççĕ* (Чĕмпĕр облаçĕнчи Чăнлă районĕнчи с. Средние Тимерсяны, 1880 çул).[32]

*Çав Йĕрĕх нумаййышне кĕсен-çăпан кăларат, суккăр тăват, шыçă парат, теççĕ. Çавăнпа вара ăна тулă мимĕрпе пырса чӳклеççĕ е тăхлан пырса шăратаççĕ. Çапла тусан вара ыратни чарăнат теççĕ* (Елчĕк районĕнчи Кармал, 1910 çулсем).[33]

*Йерех – бог болезни, например: чесотки, чирий, лишая, парши и всевозможных язв. Обидчик этого дома наказывается*

*одним из названных болезней* (Муркаш районĕнчи Пăсăрман-Оринă, ~1926 çул).[34]

*Асамлă вăя ĕненекенсем çăпана Йĕрĕх тытнипе тухать теççĕ… Çав Йĕрĕх тытсан çынна пĕтĕм кĕсен-çăпан ерсе тухать; пичĕ-куçĕ пĕтĕм кăрчанкă пулать. Çав чирсене тӳрлетес тесен мимĕр пĕçерсе кайса чӳклес пулать. Çăпан тĕрлĕрен пулать: ӳпне çăпан, çĕлен пуç, йыт пуç, ахаль çăпан. Ӳпне çăпана каюра шăтăкĕнче сăваççĕ, çĕлен пуç çăпанне – çĕлен пуçĕ çийĕн, йыт пуç çăпанне – йытă пуçĕ çийĕн. (Никольский Н.В., 1929 çул).*[35]

*Ялти Йĕрĕх йывăççинчен хĕрарăмсем халĕ те шикленеççĕ, ун патĕнче хăвна йĕркесĕр тытсан вăл чир-чĕр ярать. Çак йăх йывăçĕ ларакан пахча урлă пĕррехинче пĕр çамрăк хĕрарăм шыв патне утнă та ăна Йĕрĕх ярса илнĕ – вĕтĕ çăпан тăптулли сиксе тухнă. Юмăçпа канашланă хыççăн Йĕрĕхе вăл виçĕ татăк çӳхӳ кайса панă. Ун шучĕпе, Йĕрĕх тытсан тухтăрсем пулăшаймаççĕ* (Çĕрпӳ районĕнчи Елӳ, 1960 çул).[36]

*Йĕрĕх пек çыпăçнă.*
*Йĕрĕх çулăхсан кĕсен тухать.*
*Йĕрĕх çынна пĕлсе çулăхать.*
*Йĕрĕх айвана çулăхать.*
*Йĕрĕх имшере çулăхать*
*Йĕрĕх имшере юрататъ.*
*Йĕрĕх ачана юрататъ.*
*Йĕрĕх нăш-наша савать.* (Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем).[37]

*Йĕрĕх мĕлле те пулин çилентерсен, вăл пĕтĕм кĕсен-çăпансем кăларса пĕтерет тет. Хăш чухне этеме çап-çара чирлеттерме те пултарать тет. Анчах хытă чупакан çынтан çак Йĕрĕх те хăрать тет* (Вăрнар районĕнчи Кĕçĕн Кипек тăрăхĕ, 1910 çул).[38]

Сывлăхлă, хĕрӳ чухне Йĕрĕх тӳрех çулăхаймĕ ĕнтĕ. Япăх туйсан, япăх туйма хистекен шухăшсемпе тулнă айăплă çынна вăл вĕçертмест. Ача-пăча вара хăй чирленине ăнланмасть

те, амăшĕн ун пирки пăшăрханма тивет. Çак сăлтавпах вăл ачана аслисене, ваттисене пуçтайма, несĕлсене сума сума та вĕрентет. Йĕрĕхе çырлахтарас ĕç-пуçа ялан тенĕ пекех хĕрарăм йĕркелет.

Кунашкал чир лексен вĕрӳ-сурупа ытларах усă кураççĕ. Унпа пĕлсе, шанса усă курсан çын çапах, хăçан пулсан та, чиртен тасалатех. Чăвашсен уйрăмах çăпан чĕлхи (наговор против вереда) лайăх аталаннă.

*Ах, çырлах, Торă, çырлах, Пӳлĕх!*

*Кĕмĕл çӳçлĕ, ылтăн шăллă, шор сохаллă старик Атăл орлă, тинĕс орлă кисе çак çăпан чĕлхине вĕрет.*

*Çитмĕл те çичĕ тĕслĕ какăр чол пор. Хăçан та хăçан çав чол çине măккăль тохĕ, çавăн чохне тин тохтăр.*

*Çитмĕл те çичĕ тĕслĕ ĕне мыйри пор. Хăçан та хăçан çав ĕне мыйри çине măккăль тохĕ, çавăн чохне тин тохтăр.*

*Çитмĕл те çичĕ тĕслĕ шĕвĕр пăшатан пор. Хăçан та хăçан çав шĕвĕр пăшатан çине măккăль тохĕ, çавăн чохне тин тохтăр.*

*Çитмĕл те çичĕ тĕслĕ çĕрĕк каска пор. Хăçан та хăçан çав çĕрĕк каска çине măккăль тохĕ, çавăн чохне тин тохтăр.*

*Çитмĕл те çичĕ тĕслĕ ылтăн тоя пор. Хăçан та хăçан çав ылтăн тоя çине măккăль тохĕ, çавăн чохне тин тохтăр* (Етĕрне уесĕ, 1875 çул).[39]

*Арман чулĕ çине хăçан çăпан тухать, ман çине те çавăн чухне çăпан тухтăр. Тьфу, тьфу, тьфу.*

*Тимĕр питлĕх çине хăçан çăпан тухать, ман çине те çавăн чухне çăпан тухтăр. Тьфу, тьфу, тьфу.*

*Тимĕр сенĕк çине хăçан çăпан тухать, ман çине те çавăн чухне çăпан тухтăр. Тьфу, тьфу, тьфу.*

*Арман чулĕ çине нихăçан та çăпан тухмасть, ман çине те нихăçан та тухмасть. Тьфу, тьфу, тьфу.*

*Тимĕр питлĕх çине нихăçан та çăпан тухмасть, ман çине те нихăçан та тухмасть. Тьфу, тьфу, тьфу.*

*Тимĕр сенĕк çине нихăçан та çăпан тухмасть, ман çине те нихăçан та тухмасть. Тьфу, тьфу, тьфу.* (Каçал районĕнчи Тăманлă Выçли, 1911 çул).[40]

*Пуҫа ҫăпан тухсан, икшер-виҫшер ҫул шăтмасăр ҫӳресен, йăт пуҫĕ пулнă теҫҫĕ. Ăна йăт пуҫĕ шăммипе суран тавра ҫавăрса имлетнĕ чух ак ҫапла калаҫҫĕ:*

*Килен инкек йăт пуҫĕ,*
*Усал пирĕн асламĕш,*
*Пихампарăн сăвăҫĕ,*
*Пур суранăн тухатмĕш.*
*Тьфу, тьфу, тьфу!* (Сурса)
*Пихампара ҫӳл тăва*
*Укҫа прахап, пиллĕхӳ*
*Кисреттĕр антăр ҫĕр-шыва,*
*Килтĕр саптăр эмелне.*
*Ҫĕр чăмăрĕн патшинне*
*Сиртĕр ятăр усала.*
*Турă шутне шутлаччен*
*1, 2, 3, 4, 5, 6, 7, 8, 9.*

*Каялла тăххăртан пĕрер сиктерсе хăварса шутлаҫҫĕ: 9, 7, 5, 3, 1. Ҫак сăмахсемпех – пӳрне шыҫҫа тӳрленнĕ хыҫҫăн, пӳрне вĕҫĕ чăмăрланса* (чукмарланса) *юлать. Ăна ҫĕлен пуҫĕ пулнă теҫҫĕ, вара ҫĕленпеле ҫавăрса имлетеҫҫĕ, ҫав сăмахсенех калаҫҫĕ* (Тăвай районĕнчи Турикас Тушкил, 1927 ҫул).[41]

Куҫа асаплантаракан урпа чĕлхи те витĕмлĕ.

*Куҫа урпа тухсан ак ҫапла каласа урпана шутлаҫҫĕ:*

*Пĕрре, иккĕ, виҫҫĕ, тăваттă, пиллĕк, улттă, ҫиччĕ, саккăр, тăххăр. Тăхăр тĕле кайтăр.*

*Пĕрре, иккĕ, виҫҫĕ, тăваттă, пиллĕк, улттă, ҫиччĕ. Ҫичĕ тĕле кайтăр.*

*Пĕрре, иккĕ, виҫҫĕ, тăваттă, пиллĕк. Пилĕк тĕле кайтăр.*

*Пĕрре, иккĕ, виҫҫĕ. Виҫĕ тĕле кайтăр.*

*Пĕрре пĕрлĕхсĕр пултăр.*

*Кун таврăнать – таврăнтăр, ҫак чĕлхе сип пултăр.*

*Вара ҫĕре виҫ хутчен сурса урпине чӳречерен урамалла ывăтаҫҫĕ* (Елчĕк районĕнчи Ҫирĕклĕ Шăхаль, XX ĕмĕр пуҫламăшĕ).[42]

*Çак кăвак куçа тухнă урпана пĕтерме килтĕм. Ман алăри 25 пĕрчĕ урпа мĕнле сапаланса пĕтет, çапла пĕттĕр çак Пикенеш куçĕ çине тухнă урпа.*

*Куçри чире пĕр çĕре пухатăп. Пĕр урпа, ик урпа, виç урпа... тăхăр урпа* (алă çине хурса пырать).

*Халĕ Пикенешĕн куçĕнчи урпана сапаласа яратăп* (кутăнла сăвать). *Тăхăр урпа, сакăр урпа, çичĕ урпа,ултă урпа, пилĕк урпа, тăвата урпа, виçĕ урпа, икĕ урпа, пĕр урпа. Ан амалан, пĕччен пул та тухса кай.*

*Кашни каламассерен урпине ывăçран илсе шăпăр шăтăкне пăрахса пырать* (Каçал районĕнчи Аслă Чурачăк, 1978 çул).[43]

*Кăрчанкăран* (кĕçĕрен) *тасалма хăймапа ишлĕ сенкер хутăшĕпе е кӳкĕртпе услам çу хутăшĕпе усă кураççĕ. Çăпана начашка тесе асăнаççĕ – çăпан тесен çăхан пек пулать. Ăна услам çупа, опа саррипе, мунча милĕк çулçипе çемçетеççĕ. Чирлĕ вырăна пиçнĕ суханпа чăх каяшне тытаççĕ тата шăши тирне шал енĕпе хураççĕ. Çавнашкалах тапак çулçи, пиçнĕ паранкă, сăмала, услам çу сĕрнĕ ухмах курăк çулçи усăллă. Вĕрӳ-суру ĕçĕнче çăпан тĕсĕсене шута илеççĕ: ӳпне çăпан* (карбункул), *çĕлен пуç, йыт пуç, ахаль çăпан* (фурункул). *Ӳпне çăпан пулсан чĕлхине каюра шăтăкĕ патĕнче е хăйрапа шăпăр туратне тытса калаççĕ. Çĕлен пуç çăпан пулсан çĕлен пуçĕн шăммине тытса калаççĕ, йыт пуç çăпан пулсан – йытă пуçĕн купташкине тытса* (Никольский Н.В.,1929 çул).[44]

Паллă ĕнтĕ, йĕрĕх чирĕсем ытларах ача-пăчана лекеççĕ, вĕсен шăнни те пур, выляма пуçласан лапра-çĕпрене те пăхса тăмаççĕ. Кун евĕрлĕ амакран хӳтĕленмелли, тасалмалли мелсене халăх шыраса тупнă. Хăшĕсем, тен, хальхи саманара айваннăн туйăнсан та çынсем çавăнпах сывалнă, малалла пурăннă. Вĕрӳ-сурупа витерни, шанăç пани те кăсăклă. Çывăхри ансат япаласен тĕслĕхĕпех вĕрӳçĕ итлекене унăн ӳчĕ тасалса пымалли, сывă хĕрӳ юн чупмалли çине тимлеттерет, пуçне уснăскере хавхалану кӳрет. Сиплев усси йĕри-тавра никам пулманнинчен, шăплăх тăнинчен нумай килет.

## 5.4. Йĕрĕх лартни

Йĕрĕхе кӳрентерсен, ҫилентерсен, Йĕрĕх тытсан, ăна сума сунине палăртса йĕрĕх лартаҫҫĕ (йĕрĕхе ҫураҫтараҫҫĕ, йĕрĕх пăрахаҫҫĕ, йĕрĕхе чӳклеҫҫĕ, йĕрĕхе каҫарттараҫҫĕ, ие алпасне пăрахаҫҫĕ, йĕрĕхе пăтă ҫитереҫҫĕ, икерчĕ лартаҫҫĕ, йĕрĕх тăваҫҫĕ, йĕрĕх чӳкĕ тăваҫҫĕ т.ыт.те – ăҫта мĕнле калаҫҫĕ). Йăлине ĕненсе пурнăҫласан Йĕрĕх пулăшатех, вăл хăлăхсăр мар, ыйтнине тăватех.

Кӳреннĕ Йĕрĕхе палăртсан (ытларах, юмăҫ пулăшнипе) хатĕрленсе, ют ҫын кусне ӳкерттермесĕр, лăпкăн, сумлăн ун патне каяҫҫĕ, ҫав ҫын ампарне е пахчине, пӳртне кĕреҫҫĕ. Хуҫинчен ирĕк илсе Йĕрĕхне кĕлтăваҫҫĕ: *Ют турă, ҫырлах, тархасшăн, каҫар. Мана ватасси санăн ĕҫ мар – манăн хамăн турă пур. Эсĕ мана ан ват. Ҫырлах, каҫар.* Нумай чухне хăйне айăпланă чунăш вырнаҫнă киле кĕрсен инкеклĕ ҫын хăйпе пĕрле илсе килнине кама та пулин тыттарнă. Йĕрĕх хуҫи вара хăй кĕлтунă, чунăшран ҫак ҫынна каҫарма ыйтнă. Илсе килнине вăл пĕртак йĕрĕх пĕрнине пăрахнă та ыттине килйышĕ ҫисе янă.

Йĕрĕхе тăрантарни ку йăла-йĕркере чи пĕлтерĕшли шутланать. Нимĕрпе юрма пашалу ҫитерни анлă сарăлнă. Чунăша астивтернĕ кăна, тăраниччен ҫитермен. Ҫын илсе килнинчен Йĕрĕхе нумай лекмен, тепĕр чухне ăна хăйсене ҫиме юрăхсăррипе те ҫырлахтарнă. Сăмахран, Йĕрĕхе чăх памалла пулнă пулсан, пĕрнене пуҫне ҫеҫ ывăтнă. Йĕрĕх хуҫипе килйышĕ те чунăшпа пĕрле ларса ҫини унпа тачă ҫыхăну тунине ҫирĕплетет. Ҫинĕ чухне васкамасăр, тулли кăмăлпа чăмлаҫҫĕ, Йĕрĕхе ҫырлахтарнă пирки ҫеҫ шухăшлаҫҫĕ. Юратса ҫăтаҫҫĕ, ҫимепе пĕрле ҫынна шанăҫ кĕрет. Хăвна тивнĕ ҫиме тӳпи сана ыттиҫиттипех ҫитет.

*И халь те Йĕрĕхе чук туса пурнакан пур. Йĕрĕхлĕ картайа вара кайсан Йĕрĕх тытать те хуҫи пĕлет. Вара хуҫипе, Йĕрĕхпе ҫураҫма росхот кăларас полать* (Етĕрне районĕнчи Хочаш, 1909 ҫул).[45]

*Юмăçсем час-часах килти выльăхпа, кайăк-кĕшĕкпе чӳклеме ыйтнăран çынсем вĕсене орхамахсемпе – чустаран калăпланă çавăн евĕрлĕрех пĕчĕк кӳлепесемпе улăштарма тытăннă. Тепĕр чух тата йĕрĕхе хывма савăтне ятарласа тунă, йывăçран тирĕк-кашăк чутласа кăларнă* (Магницкий В.К., 1881 çул).[46]

Йĕрĕх – çăткăн, сĕмсĕр чунăш мар, вăл мĕн парнипе килĕшет. Ăна çемçе çиме, ват çын та кăмăллакан пăтăнимĕр юрăхлă – хисеп туни, сума суни паха.

*Йĕрĕх туррине çырлахтар.*

*Йĕрĕх çырлахĕ, пуп çырлахмĕ.*

*Йĕрĕх килĕшет, пуп килĕшмест.*

*Йĕрĕх татăкпа килĕшет, пуп пăтпа килĕшет.*

*Йĕрĕхе татăкпа, пупа пăтавккапа.* (Ваттисем сăмахĕсемпе каларăшсем).[47]

*Çав сарлса аннă тăхлана шăтăкĕнчен çиппе тирсе, тĕрлĕ пурçăнсам çакса, ытти япаласемпе тата виçĕ пус пысăкăш чуста – пурне пĕрле илсе клете, нӳхрепе е лаçа прене çумне пăтаран çакса янă е ӳсекен ялти çырмари, уйри хăвăл йывăç çине çакса янă; кĕпер айне те çакни пур. Капла тунипе вара Йĕрĕх çырлахнă* (Вăрнар районĕнчи Çĕнĕ Кипек, 1890 çулсем).[48]

*Йĕрĕх çынна кĕсен-çăпанпа, шăтан-юханпа асаплантарнă. Ăна вали пĕр-пĕр япалапа тĕслĕрен апат-çимĕç тултарса сарай тӳпине çакнă* (Элĕк районĕнчи Ярхуньошкăнь, ~1904 çул).[49]

*Ялта Йĕрĕхе ытти çĕрти пекех чӳклеççĕ тата пĕр пусĕнчен хăрăмланă çăмарта та параççĕ. Йĕрĕхсĕр килтисем Йĕрĕх валли йĕрĕхлисен карти-хӳмине парне чиксе хăвараççĕ* (Канаш районĕнчи Кĕçĕн Меми (Кӳлпоç), 1880 çулсем).[50]

*Çав пур кĕлĕсене туса пĕтерсессĕн тата йĕрĕх тăваççĕ. Ăна ак мĕншĕн тăваççĕ: е куç пăсăлнăшăн, е çăпан-кĕсен тухнăран, е тата юхана ерсессĕн тăваççĕ. Ăна ак çапла тăваççĕ: пĕçереççĕ икерчĕ (е хуплу пек, е пĕр-пĕр чӳлмек пек япала; ун ăшне хăшине сурса, хăшине хăшин ăшне çу тултарса лартаççĕ; унта тата пăртакă тăхлан шăратса пăрахаççĕ), пăртакă*

*тăхлан шăратаççĕ те вăсене çав Йĕрĕх вырăнне тăкаççĕ. Ăна вара икерчĕ лартрăмăр теççĕ. Хăш-хăш чухне, пит хĕн-асапа кайсассăн, така та пусаççĕ* (Анат енчи чăвашсем, 1903 çул).[51]

*Йĕрĕхсемпе Тӳрĕсене шурă кăвакалсем, салма, çу тата тутлă пашалусем хываççĕ. Ку чӳке килте ирттереççĕ* (Анатри чăвашсем, 1783 çул).[52]

*Алă-ура ыратсан ĕлĕк йĕрĕх пăрахнă. Малтан чуста çăраççĕ, варрине шăтăк тăваççĕ те хушпусен шăвăç татăкĕсене тата çу, кăмрăк хураççĕ. Вара çавна ăçта йĕрĕхлĕ çĕр – çавăнта кайса хураççĕ. Çавăнта хăраса чирлерĕм пуль те, çав Йĕрĕх тытрĕ пуль тесе. Ун пек те иртсе каймасан Йĕрĕхе каçарттарма хăшĕ нимĕр, хăшĕ икерчĕ пĕçереççĕ. Ăна йĕрĕх икерчи теççĕ* (ТР Нурлат районĕнчи Уксăмлă, 1992 çул).[53]

*Малтан, училищăна кĕриччен, эп астăватăп: пирĕн аттен темле киреметсем пурччĕ: пĕри Атăл леш енчеччĕ, тепри сăртра, виççĕмĕшĕ (Кирелĕ, Йĕрĕх ятли) килте, пахчара; çавăнта вĕсене чӳкленĕ те. Эпĕ çакăн йышши чӳксене астăватăп: анне пашалусем пĕçерсе тултарать те вĕсене варрине лакăм туса пăтăпа çу хурать. Пашалусемпе юнашар сĕтел çинче çу янă пăтă чашăкĕсем лараççĕ – асăнма тата чӳке хутшăннисене çитерме. Чӳк тунă чух пурте яланхилле пӳрт çине пăхса тăнă, унта çурта çуннă (турăшсен панче çук, вĕсен патне çурăмпа тăнă). Кĕлтунă чух атте хăйĕн çине тăхăнмасăр мĕн те пулин уртса янă – сăхман е кĕрĕк; хул хушшинче çĕлĕк пулнă.*

*Хăйсен туррисенни пекех, Атăл леш енчисем валли те укçасем прахнă; хăшĕсене укçа шел пулнă та укçа вырăнне улталаса кĕмĕл тенкĕ майлă тăхланран тунă çаврашкасем, нухратка, прахнă. Выльăхсене те чӳк тума пурин те май пулман: ун пек чухне чустаран лаша майлă урăхамак тунă, çавăнпа чӳкленĕ пулнă (паян кунччен те чӳклеççĕ). Илле пророк валли, лашисем ватăлнă пирки, выçлăх çул лаша е урăхамак та пулин чӳклемелле теççĕ* (Элĕк районĕнчи Çулавăç, 1903 çул).[54]

*Çав (йĕрĕхлĕ) ăвăс кĕтти патĕнчен ачапча Йĕрĕх çинчен шухăшласа иртсе кайсан çав ачана чирлеттерет теççĕ. Вара çав ачапча амăшĕсем чустаран çын туса, е çăмарта, е укçа*

*кайса пăрахмалла теççĕ. Çапла туса кайса пăрахсан çав ача чĕрлет теççĕ* (Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Чĕнер, 1927 çул).[55]

*Вот она мĕнпе çураçтармалла тит. Сĕлĕрен кĕсел пĕçермелле те кунтă е пĕрне ăшне хурса çав Йĕрĕх пурăннă тĕле кайса çакмалла. Çакнă чух каламалла: «Эй! Йĕрĕх, Йĕрĕх! Эп сана кĕсел те, çу та паратăп. Мана ан тив ĕнтĕ», – тесе йăлăнать те Йĕрĕхĕ вара вăл çынна каçарать, карян тивмест, çын та чĕрĕлет вара* (Етĕрне районĕнчи Хочаш, 1909 çул).[56]

*Йĕрĕхе урпа çăнăхĕнчен çупа тата шывпа хатĕрленĕ нимĕр хываççĕ. Тата тутлă чустаран пĕçернĕ пашалу параççĕ. Йĕрĕх пилеш е çăка туратти çинче çакăнса тăрать. Туратне кашни çул улăштараççĕ. Вунă çулта пĕрре Йĕрĕхе така кӳреççĕ* (Фукс А.А., 1834 çул).[57]

*Унтан тата, çак эпĕ çырнисене пурне те туса пĕтерсессĕн тата, йĕрĕх тăваççĕ. Ăна ак мĕншĕн тăваççĕ: е куç пăсăлнăшăн, е çăпан-кĕсен тухнăран, е тата юхана ерсессĕн тăваççĕ. Ăна ак çапла тăваççĕ: пĕçереççĕ икерчĕ, пăртаккă тăхлан шăратаççĕ те, вăсене çав Йĕрĕх вырăнне кайса тăкаççĕ – ăна вара икерчĕ лартрăмăр, теççĕ. Хăш-хăш чухне, пит хĕн-асапа кайсассăн, така та пусаççĕ (1930çул)*[57а].

*Йĕрĕх лартни – Йĕрĕхе (Йĕрĕх вырăнне) кайса хывни* (Пелепей уесĕнчи Хурамал, 1930 çул).[58]

*Кил-йĕрĕк лаçра порăнат вăл. Она пăтă парса. Вăл кăларат çăпан-кĕсен* (Муркаш районĕнчи Хорачка, 1930 çул). [59]

*Йăрăх тытать. Йăрăх кĕсен-çăпан кăлараканни пулнă, хĕрлĕ пилĕклĕ кăпăшка премĕк пăрахнă; хăш чух çуршар, чĕрĕкшер пуслăхсем е нухратсем пăрахнă* (1930 çул).[60]

*Йĕрĕх хăйне çителĕклĕ хисеплемесен чир ертет. Чăвашăн куçĕ ырата пуçлать-и е унăн ӳт-тирне шатра тапса тухать-и, вара вăл хăй ăсĕпех е юмăç хушнипе тулă çăнăхĕнчен нимĕр пĕçерет. Унтан пăшал пулькkипе (етре) шăратса пĕчĕкçеççĕ тăхлан нухрат тăвать. Нухратне (шăранчăка) шăтарса çип витерет те çиппин вĕçĕсене пурантарса çыхса тĕвĕлет. Нимĕрпе нухратне вăл хăйне чир ертнĕ Йĕрĕх пурăнакан кил-çурта илсе каять. Çав çурт килйышĕнчен пĕри, чирлĕ çын тархасланипе,*

*ун нимĕрне кĕлете илсе кĕрет, чирне-чĕрне тасаттăр, тесе Йĕрĕхе кĕлтăват. Унтан вăл, виççĕ ӳксе пуççапать те, йĕрĕх пĕрнине пĕр кашăк нимĕр хурать, нухратне пĕрне çакăнса тăракан пăтаран çакса ярать. Çапла пуçланă нимĕрне вара çав çуртăн çыннисем çисе яраççĕ. Çакнашкал кĕлтунă хыççăн Йĕрĕх ун чирне каялла илессе чăваш хытă шанса тăрать.*

*Сасартăк чĕриклетсе алăк уçăлать те пӳрте çуллă нимĕр йăтнă çын килсе кĕрет. Вăл пирĕн Йĕрĕхе чӳклеме килнĕ-мĕн. Эп савăннипе сак тăрăх сиккелесе çӳре пуçлатăп. Нимĕрпе тăхлан нухратне илсе асанне кĕлетелле тухать. Эп ун хыççăн утатăп: ман Йĕрĕхне те, ăна епле кĕлтунине пит курас килет* (Чистай уесĕнчи Искер вулăсĕнчи Чăваш Шупашкарĕ, 1860 çулсем).[61]

*Йĕрĕхе хывма хурама хуппинчен пĕрне тăваççĕ те лаçри пĕр кĕтесе çӳле лартаççĕ, куç тĕлне ан пултăр тесе хăмапа картлаççĕ. Çӳлерех лартаççĕ, ăнсăртран алла лексе шыçă-çăпан кăларĕ, кураканĕнне куçне ыраттарĕ. Пĕрне тĕлне аврине аялалла туса шăпăр тăратаççĕ, çӳлелли вĕçĕсем Йĕрĕх валли нохратсем çакма кирлĕ.*

*Килте хăшĕн те пулин ӳчĕ çине шатра тухсан, шыççан е куçĕ ыратма пуçласан Йĕрĕхе чӳкленĕ. Вăл ирттерсе ярать. Ун валли тулă çăнăхĕнчен нимĕр пĕçереççĕ, йăва тăваççĕ. Йăва варрине кăмрăк татăкĕ хураççĕ. Çакна пĕтĕмпех кăмакара типĕтеççĕ. Хыççăн, тăхлана ирĕлтерсе тумлатса, нохрат е тăхлан окçа тăваççĕ. Ку та хывăм шутланать. Пурне те хатĕрлесен пӳрт варрине сĕтел илсе тухаççĕ, пĕтĕм чӳк япалисене ун çине хураççĕ. Чирли сĕтел умне тăрать те алăк çине пăхса кĕлтăвать. Çак ĕç пĕтĕмпех хăнăхнă чӳк йăли-йĕркипе пулса иртет: чӳклекен тăлăп тăхăнать, сулахай хулхушшине çĕлĕк тытать, пӳрт алăкĕ кăштах уçă. Пĕчĕк ачашăн амăшĕ кĕлтăвать. Калаçма пуçлани амăшĕ хыççăн каласа пырать: «Йĕрĕх акай, çырлах, хаман ту. Эпĕ сана нимĕр паратăп, йăва та паратăп, окçа та çакатăп. Çырлах». Юлашки сăмахĕпе кĕлтăвакан пуçне тайса икĕ аллипе питне шăлать.*

*Нимĕрне хыççăн чирли çеç мар, килйышĕпех ларса çисе яраççĕ. Йăвине йĕрĕх кунтине хураççĕ. Нохратне, çип кăларса,*

*кунтă айне, шăпăрăн пĕр турачĕ çине çакаççĕ. Çакăншăн вĕсене Йĕрĕх сыватать* (Шупашкар районĕнчи Алькеш, 1907 çул).[62]

*Кĕлтăвас умĕн йӳçĕтмен тулă чустинчен пашалу пĕçереççĕ. Кăмакана лартиччен йĕтĕр вĕçĕпе варринче лакăм тăваççĕ, йĕри-тавра пӳрнепе пиллĕк çĕртен чĕпĕтсе илеççĕ. Пашалу пиçсен нимĕр пĕçерме те тытăнаççĕ. Вучах çинчи хурана шыв яраççĕ те кирлĕ чухлĕ тăвар хушса вĕретеççĕ. Вĕреме кĕрсен тулă çăнăхĕпе ĕне çу хушса малалла вĕретеççĕ. Чылай вĕретеççĕ, вара тин çу нимĕрĕ хатĕр пулать. Кун хыççăн пӳрт варрине сĕтел лартаççĕ, ун çине çу нимĕрне, пашалуне тата пуртă е косар çĕçĕ хураççĕ; турăшсен кĕтесĕнче ăвăс çурта çутаççĕ те йĕрĕх хатĕрлеме пуçлаççĕ.*

*Йĕрĕх тăвассине ытларах хĕрарăмсем йĕркелеççĕ, арçынсем пулăшаççĕ кăна. Пĕр-пĕр карчăк, тепĕр чух старик та аллине сарлака хăйă илет, ун варрине пĕчĕк калай е тăхлан татăкне хурать, хăйăна пуртă е косар çинче тытса тепĕр вĕçне чĕртсе ярать. Варрине çунса çитсен калая е тăхлана вут ирĕлтерет. Çемçе металл тимĕр çине тумласа çӳхен сарăлса хытса ларать. Йĕрĕх пулчĕ те. Калай е тăхлан ирĕлчĕкĕ пуртă е косар çинчен çăмăллăнах илĕннĕрен Йĕрĕхрен хăйне сыватма ыйтаканăн кĕсен хуппи те çавнашкалах çăмăллăн вистенĕ теççĕ.*

*Пуртă е косар çинчи ирĕлчĕке илеççĕ те витĕр çип кăлараççĕ. Кун хыççăн, вăл пĕр-пĕр чиртен хăтартăр, тесе Йĕрĕхе кĕлтума пуçлаççĕ. Ăна çапла кĕлтăваççĕ: «Çырлах пире, Йĕрĕх. Коçне тӳрлет (тата ытти те). Эпĕр сана, Йĕрĕх, мĕнле опратпăр, эсĕ те пере хăв тытса тăракан тĕрлĕ чирсенчен опра».*

*Кĕлĕ хыççăн малтанах пашалун лакăмлăваррипе чĕпĕтнĕ хĕррисене хуçса илеççĕ. Лакăмлă варрине пĕртак нимĕр хурса тата пашалун хуçса илнĕ касăкĕсене татăкпа çыхса йĕрĕх пĕрнине хураççĕ. Çавăн чухнех пĕрне çумне калай ирĕлчĕкĕсене çыхаççĕ. Кун хыççăн йĕрĕхе хывса пĕрнине ампара е лаçа илсе каяççĕ. Чӳклекенсем хăйсем вара сĕтел хушшине ларса Йĕрĕхе панă хыççăн мĕн юлнине çиме пуçлаççĕ.*

*Йĕрĕхе кӳршĕсенчен те, тăванĕсенчен те вăрттăн хатĕрлеççĕ тата пуççапаççĕ. Килте йăх пĕрни пулмасан, анчах*

*ĕненĕвĕ пулсан, хатĕрленĕ йĕрĕхе уя е вăрманти тĕмсем çине кайса çакаççĕ* (Шупашкар районĕнчи Шоркасси, с. Яндашево, 1888 çул).[63]

*Ял çумĕнчи çаранăн пĕр кукрине Йĕрĕх теççĕ. Хăйĕнчен ыйтсан Йĕрĕх сыватать, чӳклесен пулăшать. Унăн вырăнне лапăртасан, урасемпе хытă таптасан та, хур кӳрет (аптратать). Вара юмăç кăтартнипе нимĕр, вĕтĕ пашалу тата тăхлан укçасем хатĕрлеççĕ те парнине Йĕрĕхе кăтартма тухаççĕ. Нимĕрпе пашалăвĕсене кăштах çĕре пăрахса: «Çырлах, Йĕрĕх, чӳклетпĕр. Çырлах», – теççĕ. Юлашкине хăй çисе ярать, нухратне çывăхри пĕр-пĕр шалча çумне çыхса хурать* (Чĕмпĕр облаçĕнчи Чăнлă районĕнчи Чăвашкасси, 1907 çул).[64]

*Шăтан-юхан ерсен Йĕрĕх валли нимĕр пĕçерсе: «Ват аки, тытрăн-турăн пулсан, çырлах», – хурама порнешне пĕр кашăк нимĕр янă. Тата çуллă çатма тĕлне çутнă хăйăпа тăхлан тытса тумлатнă. Тăхлан шăтăклă тумласан Йĕрĕх çырлахмаст, тенĕ авалхи çынсем* (Элĕк районĕнчи Ярхуньошкăнь, ~1898 çул).[65]

*Ёлĕк тата çынсам кил Йĕрĕкне пăтă çитернĕ. Она хуйне валли чăлан туса парса. Тата йĕрĕк çаппи тунăç чăлання; пăтă хорса, çаппи çине пăтă хормалли вырăн туса, кăтăр-катăр аркакаланă. Кĕсен-çăпан кăларат* (Етĕрне районĕнчи Пошкăрт, 1930 çул).[66]

*Он может вредить людям только наружными болезнями, как-то, вередами, ранами и разною сыпью на теле, поэтому и жертва Йириху приносится скромная. Он довольствуется только перышками, косточками птиц, разными привесочками, как-то: шелковыми ниточками, разными тухланами (кружечками из белой жести или свинца) и разными обносками обуви и т.п.* (Тăвай районĕнчи Чутей, 1889 çул).[67]

Хушăран Йĕрĕх çемçе çимепе, йӳнĕ парнепе килĕшменни те пулать. Тĕрлĕ сăлтавпа çынтан час хăпмасть, чун ыйтать.

*Йĕрĕх çулăхсан чунсăр каймасть.*

*Йĕрĕх чун илет.*

*Йĕрĕх çулăхсан карта выльăхсăр юлать.* (Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем).[68]

*Ӳт ҫине мӗнле те пулин чир тухсан ҫыннӑн Йӗрӗхе пӑрҫа нимӗрӗ тата, юмӑҫ палӑртнипе, темиҫе путек памалла. Пӗр путекӗн пуҫне татса уйрӑм пӗрнене хумалла. Пӗрнине ампара ҫакаҫҫӗ, капӑрлатаҫҫӗ* (Сбоев В.А., 1840 ҫулсем)[69]

*Йӗрӗх полнӑ пирӗн ялта ватти, отаманӗ. Ялӗпех Йӗрӗх полнӑ, пӗри полнӑ отаманӗ. Она параччӗ такасам; ялти ҫын шӑпах килет те парат. Первей ҫӑнӑх хорат, икӗ пос окҫа хорат, кӗрпе хорат, асӑнса она: мана отнаккӑ ту тесе, хаман ту; эп сана така паратӑп тет; халях парап тет. Пасара каят, илет така, пӗр полтинник парса илет. Карян посаччӗ, пасартан кисен. Пуссан Йӗрӗхе поҫҫапаччӗ: ҫӑпан ан кӑлар мана, суат ҫӑпантан тет. Поҫҫапат та ашне ҫиет пӳрт-ӑш халӑхпа; шӑннине ҫонтарат. Вара ҫырлахрӗ, ҫӑпан тохмарӗ. Лаҫра хиҫкил полнӑ, хиҫкиле тӑрӑхла пӗрне ҫакнӑ; пусса ҫисессӗн аш татӑкки яраччӗ...*

*Йӗрӗхе ҫӗмӗртӗм, пӗрӗшне туйеккине исе тохрӑм, виҫ хут ҫавӑрса ҫапрӑм та, икӗ послӑх окҫасам тохса карӗҫ, ҫӗр полчӗ; мана ним те полмарӗ. Йӗрӗх ним те туимарӗ* (Муркаш районӗнчи Туҫи Олкаш, 1930 ҫул).[70]

Ялан тенӗ пекех пур ҫӗрте те, кӗмӗл укҫапа тата ытларах ӗнтӗ шурӑ тӑхлан ҫаврашкасемпе усӑ курни йӗрӗх лартнине хӗрарӑмӑн кӗмӗл тумӗпе ҫывӑхлатать. Чӑваш хӗрарӑмӑн ҫак ҫипуҫӗ Кепе-торӑн хӑватне те палӑртать, таса ӑшша упракан ҫири кӗпе хуппи ӳте сурантан хӳтӗлекен кӗпене те («колчуга») ҫывӑх. Кӗмӗлпе ӗҫлени, нухрат шӑратни хӑй те ҫынна турӑ патне ҫывхартать.

*Тӗрлӗ ҫӑпан, трахома тата шывлӑ сар шатра пулсан Йӗрӗхе пуҫҫапаҫҫӗ. Ҫуллӑ нимӗр, питех васкасан тӑхлан* («тухланка») *ҫеҫ, параҫҫӗ – ирпе ирех. Малтан Йӗрӗх пурнакан кил хуҫине ҫитереҫҫӗ, хыҫҫӑн хӑйсем ҫиеҫҫӗ* (Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Орхас Кошкӑ таврашӗ, 1892 ҫул).[71]

*Йирих посылает наружные болезни, особенно чирьи. В жертву приносятся куски холста, серебряная монета, а для избавления от чирьев – кружечки из олова. Кружечки эти предварительно накладываются на чирей* (Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Орхас Кошкӑ, 1880 ҫул).[72]

*...О том, что тот Ерех у них в доме имеется не знали. И в одно время у жены его Сендеби глаза и правая рука одержимы были болезнию. То по принесенном от них обыкновенном тому Ереху с привешиванием испещренных лык, манитках оловяшек* (в) *богопротивном и суеверством мольбище оная жена ево от той болезни получила свободность* (Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Токтамăш, 1768 çул).[73]

*Кĕлтунă чух çурта е хăйă тытнă, ун çине тăхлан. Тăхлан хĕрсе сак çине тумлать те хытса ларать. Çак ирĕлчĕке вĕсем кунтăка хураççĕ – Йĕрĕх капăрлантăр тесе. Çак тăхлан татăкĕсемпе вĕсем йĕрĕх çимине кĕлтунă. Çак ăшă нимĕре те вĕсем кунтăка хунă.*

*Çапла вĕсем ĕлĕк тунă – кĕçĕ е çăпан, е золотуха тухсан юмăç патне кайнă. Юмăç вĕсене суйса, çав Йĕрĕх сире чир янă, ăна кĕлтумалла тенĕ. Вара хăйсемех тăхлан ирĕлчĕкĕсене тата пăрçа нимĕрĕ тунă. Пуянсен Йĕрĕх пĕрре кăна пулман, хăшпĕрисен 10 таран, ытларах та пулнă* (1920 çулсем).*[74]*

*Юмăç каланипе ей чăвашсем хăйсем ăсĕпех чир-чĕр, кĕсен-çăпан кăларнăшăн акă çакă япаласем-парнесемпе Йĕрĕхе çырлахтарнă. Пĕр мăйăр пек тăхлана çунакан вут çине тытса шăратнă. Шăратнă чух тăхлан тăмланă вут айне кусар е кăмака питлĕхĕ тытса тăнă. Вара, тăхлан шăранса тумласа тимĕр çине шăтăклă сарлса ансан – вара Йĕрĕх çырлахнă* (Вăрнар районĕнчи Çĕнĕ Кипек, 1890 çулсем).[75]

*Йĕрĕх пĕрни хурама çинче çакăнса тăрать. Йĕрĕхе хывмалла пулса тухсан тăвансене пухса шурă сурăх пусаççĕ. Ашĕ пиççсен Йĕрĕхе чĕнсе илсе çиме тытăнаççĕ. Пĕри вара çак вăхăтра тухланкăсем тăвать (калай муклашкине çунакан хăйăпа ирĕлтерет, тимĕр çине тумлатса укçа евĕр çӳхе çаврашкасем тăвать), вĕсене çакма витĕр çип кăларать. Çисе пĕтерсен пурте пĕрле тухланккисене Йĕрĕх патне кайса çакаççĕ. Таврăннă чух темиçе утăм тусан каллех Йĕрĕхе пуç таяççĕ – «онн янелле тайăлса салам параççĕ».*

*Тепĕр кунне вара тăвансем каллех пĕрле пуçтарăнса пăтă пĕçереççĕ. Пиççсен, пӳрт варрине çыхнă сĕтел вырнаçтараççĕ,*

*ун ҫине тирӗкпе пӑтӑ лартаҫҫӗ те, Йӗрӗхе чӗнсе илсе, ҫиеҫҫӗ. Ҫисе пӗтерсен сӗтелне уя тухса лартаҫҫӗ, айне пилеш туратне хураҫҫӗ. Йӗрӗхе ҫӑмарта пани пирки никам та каламарӗ* (Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Орхас Кошкӑ, 1892 ҫул).[76]

*В Козьмодемьянском уезде есть производство орхамахов (глиняные изображения животных жертвенных – лошадей, баранов и т.п.). Гончарный прибор носит название – лотӑ (1927 ҫул).*[77]

*Йӗрӗхе – ҫӑнӑхпа чуста сарса, пӗчӗк кӑна чашӑк тӑваҫҫӗ, унтан кӗрпепелен пӑтӑ тӑваҫҫӗ; ӑна пӗҫереҫҫӗ вара. Унтан вара хӗрлӗ ҫиппеле тӑхлан шӑратса ҫакаҫҫӗ. Унтан вара ӑна кайса ҫакаҫҫӗ Йӗрӗх ҫта пур, ҫта асӑнсан: йывӑҫра пулсан йывӑҫ турачӗ ҫине кайса ҫакаҫҫӗ, ҫуртра пулсан ҫурт патне кайса пӑрахаҫҫӗ, хуҫисене пӗлтерес тиекенӗ кӗлетнех кӗрсе ҫакать* (ПР Пелепей уесӗнчи Хурамал, с. Новые Кармалы, 1930 ҫул)[78]

*Йӗрӗх тытсан ҫӑпан тухать, суккӑр пулать, шыҫӑнать. Мимӗр пӗҫерсе пит ҫуллӑ тӑваҫҫӗ. Тата тӑхлантан шӑратса укҫа пеккисем тӑваҫҫӗ. Вӗсене шӑтарса хӗрлӗ ҫиппе витӗреҫҫӗ. Укҫа пеккисене йӗрӗх кунти ҫумне ҫакаҫҫӗ. Мимӗрне кунти умне лартса ҫапла калаҫҫӗ: «Юк, куратни, курмасни; Эп сан патна ӑшӑ, ҫулӑ апатпа килтӗм. Мӗлле кӳрентернӗ пулсан та каҫар!» – теҫҫӗ те часрах пӑрахса каяҫҫӗ* (ПР Пелепей районӗнчи Кивӗ Сименкке, 1912 ҫул).[79]

*Ачана хытӑ макӑрсан Йӗрӗх тытнӑ, Ие алпасне пӑрахмалла теҫҫӗ. Вара чустаран этем кӗлетки туса пӑрахнӑ. Ҫапла каланӑ:*

*Пӳрт Ийи пулсан та,*
*Тӗпсакай Ийи пулсан та,*
*Картиш Ийи пулсан та,*
*Йӑран Ийи пулсан та*
*Хӑвӑр килӗре кайӑр, тасалӑр,*
*Ҫӑмӑллӑх парӑр.*

*Чуста кӗлеткине ача-пӑча аманнӑ-ҫӳренӗ ҫӗре, ҫул тӑваткалне пӑрахнӑ. Халь те пулкалать ун пек пӑрахасси* (ТР Ҫӗнӗ Малӑклӑ районӗнчи Малаел, 1984 ҫул).[80]

*Йĕрĕхе каçарттармалли кĕлĕ: Эй, пĕсмĕлле Турă, çырлах мана! Çак юхан-штана тасат. Кĕрхи-çурхи шывпа тасамарлăх-сем юхса кайнă пек ман çинчи юхан-шăтансем те тасалччăр! Çырлахупа тасаллăх пĕрлешӳллĕ пулччăр!*

*Çырлахах мана эсĕ те, Йăрăх! Хăвăн ырă кăмăллуна ман çине çавăтсам. Çак хурама кутне пĕлмесĕр сыснăшăн мана ан айăплах.*

*Малашне ĕнтĕ эпĕ те, ман ачан ачисем те, тата вĕсенчен пулас ăру та çак хураман, унăн вăрринчен шăтса ӳснĕ хура-масен кутне те урăх сысса варласа мăшкăл тумĕç. Хамăр вăй çитнĕ таран, çулталăкра пĕрре те пулса, çак хурама кутне сана, Йăрăх, парне кӳрĕç.*

*Çырлахсам, Йăрăх. Манăн кĕллĕм сиплĕхлĕ пултăр* (Тă-вай р-нчи Тăвай, ~1928 çул).[81]

*Тӳркĕллине кĕлтунинчен: манăн килйышне çăпан-шăтан тав-рашĕ ан кăлар* (Тăвай районĕнчи Енĕш Нăрваш, 1936 çул).[82]

*Трак ялĕн Валĕмхуçа киремечĕ пур, йĕри-тавра çырмаллă сăрт ялтан инçех мар. Çырмисенче çăлкуçсем юхаççĕ, чăрăш тĕмми нумай. Пĕр çăлкуçĕнче Йĕрĕх пур. Кĕлтума килнĕ чăвашсем чĕркуçленеççĕ те: «Валĕмхуçа! Эсĕ çырлах пире: килте порнакансемпе, пор выйльăх-чĕрлĕхсемпе, пор ачам-пă-чампа та. Çырлах мана!», – теççĕ. Хыççăн кĕлтăвакан çын киремете пир татăкĕсемпе чăрканă кĕмĕл укçасем ывăтать. Малалла Йĕрĕх пурнакан çăлкуç патне утать. Ăна вара пирпе чăрканă шур шăвăç çаврашкисене парать* (ЧР Трак районĕнчи Трак, Красноармейски, 1881 çул).[83]

Йĕрĕх лартни çын Йĕрĕхе сумланине, халăх йăли-йĕркин-чен тухманнине кăтартать. Чи кирли, астумалли кунта – ăçта хывмаллине пĕлесси тата унпа аппаланнине (хатĕрленнине, кайнине, чӳкленине) ют çын ан куртăр. Йĕрĕхлĕхри усал-тем витĕмĕнчен хӳтĕленни, чирĕсенчен сипленни çыншăн пĕлтерĕ-шлĕрех пулнăран йĕрĕх лартни пирки пĕлӳ халăхра нумай упранать.

Паллах, килтине те, ялти Йĕрĕхе те канăçтарма малтанах нимĕр (е пăтă), юсман тата ăна тивĕç калай (татăкĕ, ирĕлчĕкĕ,

çаврашки) хатĕрлемелле. Ансат, çăмăл чир-тем пулсан, пурне илмесен те юрать. Пысăкрах хуйхăпа вак укçа, пир татăкĕ, кайăк-кĕшĕк, тен, така кирлĕ пулать. Пусмалли выльăх пулмасан орхамах та каять. Нуша килнĕ çын хывăма пӳртĕнче хатĕрлет. Пысăк хывăм тунă чухне хурачун(лăх) çулăхасран кĕлĕ пуçĕ кĕрĕке тавăрса тăхăнать.

## 5.5. «Йĕрĕх тыттăр!»

Пурăнан пурнăçра çын хушшинче тем те пулать, уйрăмах, кӳршĕсем хушшинче. Хытах çиленмелле пулса тухсан тăшмана тем туса хурас пек, çав самантрах тавăрас кăмăл çаврăнса килет. Çапах юн юхтарас мар, кӳрше тĕппипех пĕтерес мар – малашне кампа пурăнăн, йĕри-тавра кам юлĕ, паян мар-тăк ыран вăл кирлĕ пулать. Кĕсъере кăтартнă чышкă ăна лăп чух пулать. Хытах калас тесен Йĕрĕхпе хăратас. Унта пирĕн йăхăн пĕтĕм хăвачĕ, хамăр хурăнташсен авалтан пуçтарăнса пынă вăйĕ. Хăйĕн чирĕсемпе çыннăнне тăнне те илĕ. Сăмахран, *кутна Йĕрĕх тыттăр, тенĕ вара тепĕр ялсенче* (ТР Çĕпрел районĕнчи Кивĕ Чакă, 1930 çул).[84]

Чĕререн каласан, сулса ярсан калани çитетех.

*Кама та пулин тавăрас тесен йĕрĕхе* (калай ирĕлчĕкне) *кукăль пек çурмалла аваççĕ. Çапла каласа аваççĕ: «Киремет, манăн тăшмана çак йĕрĕхе авнă пекех авса* (хоçса) *ларт». Çавăнпа та вĕрӳçĕсем (юмăçсем) хăйсем патне канаш илме килнисене, хуйхи иртсе кайтăр тесен, çав-çав киремете кайса ун инкекĕшĕн авса хунă йĕрĕхе тупса тӳрлетсе хума сĕнеççĕ* (Шупашкар районĕнчи Апаш, 1870 çулсем).[85]

*Чир пĕр-пĕр çын хушса янипе кăна чирлетет. Вăл çынна сулуçă теççĕ. Çынна чирлетекен Кĕлĕ (кĕлĕ) 12 тĕслĕ: Сурăм, Тӳрĕ кĕлĕ, Ял çинчи, Тӳрĕ çулĕ тăвайккинчи, Хĕртсурт, Йĕрĕх, Кепери, Картари, Тĕмĕ çинчи, Тарăн варти хыр кутĕнчи, Леш чӳк, Уй чӳкĕ.*[86]

*Кам та пулин теприн çине çилленĕ пулсан, вăл Йĕрĕх патне кайнă та патакĕпе виçĕ хут сулласа: «Тыт ăна, тыт ăна», –*

*тенĕ. Çавăн чухне вара ăна кӳрентернĕ çын чирлесе кайнă: куç пӳрленни, шатрашка, çăпан т.ыт.те* (Сарăту облаçĕнчи Вольски районĕнчи Касанлă, 1924 çул).[87]

*Ĕлĕк ват çынсем е тухатмăшсем йăмра çине пĕрне çакнă. Кама та пулсан çилли килсен, çавна Йĕрĕх тыт, тесе пĕрнине шакканă тухатмăш. Йĕрĕх тытсан çын чирлет: е алă сурать, е ура ыратать. Ăна нимĕнле тухтăр та чĕртеймест. Çын чĕрĕлтĕр тесе чустаран чӳлмек тăваççĕ, ун ăшне чустаранах юсман, пĕчĕккĕ йăвасем хураççĕ. Чӳлмекне пĕрне ăшне çын курман чухне хураççĕ. Чӳлмекĕ-юсманне тăва пĕлекен карчăк туса парать. Çакăн хыççăн çын чĕрлет. Юсманне хума кайнă чухне çын тӳр килсен сăмах чĕнмесĕр иртсе каймалла* (ТР Нурлат районĕнчи Уксăмлă, 1992 çул).[88]

Çынна кам та пулин кӳрентерсен, çын килне çитет те йĕрĕхне илет. Вучахра питне пĕçертет, хăрăмлать: «Манăн тăшман пичĕ, сан мĕнле çунать, çапла çунтăр», – тет. Леш вара питри юхан-суранпа вилме те пултарать.

*Тĕне кĕмен чăвашсен ĕлĕкхи вăхăтра кашни килĕрен Йĕрĕх пулнă тет. Ăна вĕсем тăнăç çĕрте, маччара е урăх çĕрте пĕрне ăшĕнче усранă.*

*Йĕрĕх хуçисем кама та пулин çилленсен йĕрĕх пĕрнине шакканă тет. Вара çиллентернĕ çыннисене Йĕрĕх чир-чĕрпе асаплантарнă. Çакна Йĕрĕх тытнă тенĕ. Йĕрĕхпе чирленисем Йĕрĕх хуçисене нимĕр пĕçерсе çитереççĕ. Хуçи апачĕпе кăмăллă пулсан Йĕрĕхĕ таврăнать, чир-чĕрĕ иртет. Кăмăллă пулмасан – татах пырса çитермелле тет.*

*Пĕр-пĕр çĕрте такăнса, ӳксе ыраттарса хĕне кайсан та Йĕрĕх тытнă теççĕ.*

*Чир-чĕртен хăтăлма Йĕрĕх туса лартаççĕ: чуста тăваççĕ, хĕррине чĕпĕтсе тухаççĕ, варрине путăк тăваççĕ. Унта кĕрпе, пуслăх укçа, çăнăх, кăмрăк хураççĕ те пуç йĕри-тавра çавăраççĕ. Кран урлă каçарса çĕр айне алтса лартаççĕ. Çакăнпа таврăнать тет Йĕрĕхĕ* (ТР Нурлат районĕнчи Уксăмлă, 1992 çул).[89]

Чун тăвăнсан та чăвашăн йăнăшнă çынтан хăрушă тăшман тăвас йăла сарăлман. Çапах хăйне лăпалтарса çăпанпа чирлеттерет,

тен, алă-урана та суртарать. Анчах асăрханайман çын çине хăйĕн Йĕрĕх хăвачĕпе хурачунлăх пайăркине вăхăтлăха кăна сулать. Асăрханайманскерĕн вара хăйĕн айăпне каçарттарма, тӳрлетме яланах май пур. Йĕрĕх те, хуçине канăçтарса, епле пулсан та ялта ырă хутшăнусем çавах юлччăр, ялйыш пурнăçĕ малалла кайтăр тет, айăплă çынна тивĕçлĕ асăрхаттарать.

# VI. Йӗрӗхлӗхри аваллӑх паллисем

Йӗрӗхе ыр пулса пурӑнасси, айӑпа кӗрсен, ҫырлахтарасси, ӳкӗте кӗртесси тӗрӗс, малтанхи пекех пӗр ӗҫне пӑрахса хӑвармасӑр хывнинчен, лартнинчен те килет – тытмаллине, усӑ курмаллине мӗнрен туни-пулнине уяни пӗлтерӗшлӗ. Чӑкӑртӑш Йӗрӗхе ҫемҫи, авӑнчӑкки ытларах тивӗҫтерет. Кӗмӗл ячӗпе хывӑнакан нухрат ун тӗслӗрех кирлӗ, ҫемҫе металтан пулмалла: калай, тӑхлан; ӑша ямалли ҫиме шӑл ҫеми пулмалла: нимӗр, пӑтӑ, кӗсел; пукане – пиртен, тӑмран, чустаран; сӗтел-пукан – хулӑран т.ыт.те. Ку материалсемпе авалах усӑ курнӑран Йӗрӗхпе ҫыхӑннӑ йӑла-йӗркене вӗсем туллинрех тивӗҫтереҫҫӗ.

Акӑ, пирӗн халӑхра хулӑран авса тунӑ япаласем – ҫатан – ӗлӗк хӑмаран тунинчен нумайрах пулнӑ. Авалтарах хӑма пачах пулман тесен те юрать. Ҫатан сӗтел-пукан тӑвасси XVII–XIX ӗмӗрсенче майӗпен чакса пырса XX ӗмӗр варринелле йӑларан тухать. Ҫатан эрешлӗхӗпе кил-ҫурт таврашӗнче халӗ пур ҫын киленеймест, мухтанаймасть.

## 6.1. Пуччушши

Йӗрӗх йӑли-йӗркинче ҫӑка йывӑҫ та пур. Йӗрӗх пуканин кӑшкарне унтан тӑваҫҫӗ, савӑт-сапи те ҫӑкаран. Ӑс-хакӑлта хӗрарӑма ҫӑкапа танлаштараҫҫӗ, вилсен те ун пуҫӗ ҫине ҫӑка юпа лартнӑ. Нумай халӑх унта хӗрарӑм кӑмӑлне тивӗҫлӗ паллӑсене курать, ҫепӗҫлӗҫ, чеченлӗх, ачашлӑх, калани-хушнине итлени т.ыт.те. Кулленхи пурнӑҫра та пӗлтерӗшӗ унӑн пысӑк. Ҫак ҫемҫе йывӑҫ вулли пӳрт е мунча пури тума чи юрӑхли шутланать: ӑшӑ лайӑх тытать, тутлӑ шӑршӑллӑ, шалти нӳрӗке витӗр лайӑх кӑларать. Выҫлӑх самантӗнче кӑчки (пӗрчи), хуппи, ҫулҫи ҫиме те юрӑхлӑ. Ҫӑка хысми те (пушӑт айӗнчи сӗткен) сӗтеклӗ. Ҫак йывӑҫа иленекен хурт-кӑпшанкӑ та илӗртӳллӗ, сӑмахран, кукамай тени (ҫӑка кӑтки, копшанки, йытти).[1]

*Ой варринче лаштра ҫăка, апи тесе ай кайрăм та…*

*Вăрман хĕрĕнчи ҫамрăк ҫăка, акай тесе пытăм та…* (Халăх юрринчен)[2]

*Вĕрене ҫулҫи вĕлкĕшет –*

*Паллах, кĕрӳ лартни пуль...*

*...Ҫăка ҫулҫи вĕлкĕшет –*

*Паллах, хĕрĕм лартни пуль…* (Хăна юрринчен – Шупашкар районĕнчи Томаккасси, 1934 ҫул).[3]

Ҫăка патак – шурă патак. Кил-терĕшре тĕрлĕ япала, авăрсем т.ыт.те тума пуччушшипе (почнуш, пушшиччи т.ыт.те) – хуппине сӳнĕ е сӳмелли ҫамрăк ҫăкапа – усă кураҫҫĕ. Вăл шап-шурă пулать. Ку сăмахăн ҫирĕпленнĕ ĕлки ҫук. Вăл «пушăт йывăҫҫи» (лутошка) тенинчен пулнăскер, Ашмарин словарĕнче кăна хĕрĕхе яхăн вариантпа тăрать, пур чăваш пушăт сӳме, выҫлăхра та ҫăка патне утнă. Йăла-сăлара вара почнуш Хорачон витĕмне лекет. Хуппине сӳнĕ йывăҫ ĕнтĕ урăх ешерес, ҫитĕнес ҫук, вăл малашлăхсăр, чечеке нихăҫан та லармĕ.[4]

*Пуччушшипе юмласан хĕрарăма хĕсĕр тума пулать.*

*Ҫамрăк хĕрарăма хĕсĕр тăвас текен ҫын вăрмана кайса питĕ ҫинҫе ҫăкана (почнуҫ) тупать. «Эпĕ ҫак почнуҫ ҫинчен тирне сĕветĕп. Ку почнуҫ лепле хăрса каять, ҫавăн пекех (вăл ҫын та) хăрса кайтăр. Ҫак почнуҫ виттĕр тохакан ҫыннăн ачи-пăчи те ан полтăр», – тесе пĕтĕм хуппине сӳсе пăрахать. Йывăҫĕ хăрсан вăл каллех кунта килет, ҫăкана касать, пӳрне хулăнăшшине пĕр шит татса илсе килне таврăнать. Туйра халăх нумай, такам та пур, ăншăрт кӳрес текен те ҫавăнтах. Унччен вăл хăй патакне тăрăхла варринчен ҫурать. Хĕр тухса кайиччен вăл пĕр пайне: «Ҫак почнуҫ лепле хăрса кайнă, ҫавăн пекех* (вăл та) *хăрса кайтăр, ачи-пăчи ан полтăр», – тесе ăшра каласа алăк патнерех пăрахать. Хĕр тухса кайсан ҫав татăка илсе кĕсйине тепĕр татăкĕпе пĕрле хурать. Унăн усал ĕҫĕ ҫакăнпа вĕҫленет. Ҫавăнпа та хĕрарăмсем, качча каякан хĕрсем те, хăйсене пăсасран ҫӳҫ хушшине, калпак-тутăр айне пилеш таткине хураҫҫĕ. Вăл усал витĕмрен лайăх хӳтĕлет* (Месарош Д.,1907 ҫул).[5]

*Хӑй чӑн каланине ӗнентерсе чӑваш ҫапла тупа тӑвать. Хуппинчен тасатнӑ хулӑн мар типӗ ҫӑка илеҫҫӗ, тӗтӗрсе тӑтӑр тесе икӗ вӗҫӗнчен вут хыптараҫҫӗ те ҫӗр ҫине хураҫҫӗ. Ҫӗр ҫине тата стакан эрех лартаҫҫӗ, пӗри ҫӗҫӗ вӗҫӗпе ҫӑкӑр татӑкӗ тытса тӑрать. Сӑмах параканӑн чӗререн шантарса ҫӑка патакӗ урлӑ каҫмалла, пӗкӗнсе эрехне ӗҫмелле те ҫӗре чуптумалла, тутапа ҫӗҫӗ тӑрринчи ҫӑкӑра илсе ҫисе ямалла. Ҫавнашкал тупа чуна лартать, пуччушши пек типсе ларасран шикленсе айӑпли ӑна тума хӑймасть* (Кӑрмӑш уесӗ, 1828 ҫул).[6]

Ҫакӑ йывӑҫ авалах ҫунтҫанталӑкри хӗрарӑм паллине илнӗ пулмалла. Ҫавна май ешерекен ватӑ ҫӑка ялӑн, йӑхӑн йӗрӗх вырӑнне, кӗлӗне палӑртнӑ. Нумай ҫӗрте халӗ те шильӑкра ҫӑка вырнаҫтарас йӑла тытӑнса тӑрать. Тата, килти хӗрарӑма йывӑр ан килтӗр, тесе кил таврашӗнче ҫӑка лартмаҫҫӗ – икӗ хӗрарӑма пӗр килте йывӑр килет, пӗри ҫавах хӑрса каять. (Юманпа арҫын тупӑшӑвӗ те ҫавнашкалах синкерлӗ вӗҫленет). Уйрӑм ҫамрӑк хӗрарӑма тӗллетернӗ хуппине сӗвнӗ ҫамрӑк ҫӑка патакӗнчи ылхан та унӑн шӑпишӗн пысӑк пӗлтерӗшлӗ.

## 6.2. Тӑхлан

Йӗрӗх хывӑмӗнче чи пӗлтерӗшли, пулмаллах тени нохрат, тӑхлан шутланать. Укҫа пекки, кӗмӗл укҫа вырӑнне усӑ курни. Чӑваш чӗлхине ку сӑмах икӗ пине яхӑн ҫул каяллах, зороастризм витӗмӗпе кӗме пултарнӑ. Персла вӑл (ногрэ) «кӗмӗл, ирӗлтернӗ кӗмӗл муклашки» тенине пӗлтерет. Укҫа, мул пӗлтерӗшлӗ «нохрат/нухрат» сӑмах халӗ те ҫӳрет.

Йӗрӗх ват хӗртен пулса кайнӑ тенӗрен ӑна та ӗмӗтне, ӑнтӑлӑвне ҫырлахтарма арҫынлӑ хӗрарӑмсен капӑрланӑвӗ йышши кӗмӗл кирлӗ. Анчах ҫакна пурнӑҫлама хакла ларнӑран ҫынсем ҫавӑн евӗр ҫуталакан йӳнӗ металпа усӑ курнӑ. Ӑна укҫа пек ирӗлтерсе тума та ҫӑмӑл. Ячӗ вара – нохрат – ҫаплах юлнӑ.

*Анне панӑ кӗмӗл укҫа*<br>
*Ҫӳлелле ывтам тенӗ чух*

*Тăхлан татăкĕ пулайрĕ* (Вăйă юрринчен – Самар облаçĕнчи Клевлĕ районĕнчи Çĕнĕ Ресеп, 1927 çул).[7]

XVIII–XX ĕмĕрсенчи этнографи ĕçĕсенче йĕрĕх лартнинче усă куракан калай ирĕлчĕкĕсене, шăвăç çаврашкисене синонимлă çак сăмахсемпе палăртнă: нохрат, нохратка, нухрат, нухратка, тухлан, тухланка, тăхлан окçа, йĕрĕх тăхланĕ, йĕрĕх укçи, оловяшка. Çак пĕр 10–20 миллиметр пысăкăшь çӳхе, укçа евĕрлĕ çаврашкасене йăлана хутшăнакан çынсем умĕнче тăваççĕ, çавăн чухнех çип шăтăкне те тăваççĕ. «Нохрат» тесе Йĕрĕхе кĕмĕл укçа та панă.

Калай е шур тăхлан (олово, Sn) 242 °С ирĕлет. Ун пекех çемçе тăхлан е хура тăхлан (свинец, Pb) 363 °С ирĕлет. Кунашкал ăшша килти условисенчех çурта е хăйă çунтарса тума пулать. Хальхи вăхăтра тăхлан тесе иккĕмĕш металне кăна палăртаççĕ.

Йĕрĕхĕн тĕп сулмаклăхĕ, йĕрĕхлĕх шăнăрĕ, йĕрĕх чирĕ те лăпах хывăмри нохратра пулать. Нумай тĕпчевçĕ çак шухăш патне тухнă. Йĕрĕх вырăнĕнчи, йĕрĕх йывăçĕ (тĕмĕ) таврашĕнчи, йĕрĕх пĕрнинчи, йĕрĕх пукани çумĕнчи нохратсем илемлĕх сĕмĕ куреççĕ пулсан та вĕсене унта капăрлатма вырнаçтарман.[8]

Тĕрлĕ металсемпе пирĕн несĕлсем ик-виçĕ пин çул каяллах анлă усă курнă, ячĕсене те лайăх пĕлнĕ. Калая, тăхлана, пăхăра, хаклăрах металсене тасараххине те, хутăш туса та шăратнă, тĕрлĕ япаласем, капăрсем тунă. Пăлхар хулисене тĕпчекенсем кунти ăстасем ылтăнпа, кĕмĕлпе, калайпа тĕрлĕ япаласене витме пултарнине, пăхăр хутăшĕсем (той, йĕс) вара тахçантанпах анлă сарăлнине палăртаççĕ. Пăхăра шăратса кăлармалли чĕртавар (пăхăрлă хăйăр чулĕсем, пăхăр колчеданĕ) вырăнтах çиелте пулнă – Уралпа Шупашкар хушшинче кăна 220 çĕрте. Тăхлана, калая, цинка, кĕмĕле, ылтăна вара аякран илсе килнĕ. Калай тăприне, сăмахран, Хĕвеланăç Çĕпĕртен турттарнă, Чулман Атăл тăрăх антарнă. Согдиана, Бактрия, кайран Хорезм, Бухара купсисем Пăлхар çĕршывне Алтайран таса калай турттарнă – унта вăл çиелте те, çĕр айĕнче те çителĕклĕ выртать.[9]

Авалтарах, чăваш несĕлĕсем Вăтаçĕр Азире пурăннă чух, калая (олово, Sn) «тăхлан» е «шурă тăхлан» сăмахпа палăртнă. Ăна евĕр сăмах (тогулга, туглага) çав пĕлтерĕшпех монгол чĕлхинче кăна пур. Тăхлан пăхĕ – калая шăратсан тухакан каяш, çунăк. Халĕ «тăхлан» (свинец, Pb) тесе каланине вара хура тăхлан теме пуçланăран малтанхине уйăрса шурă тăхлан тенĕ. Гунсем Европăналла çитнĕ вăхăтсенче пăлхарсем хушшинче (анăç енчи ытти тĕрĕк халăхĕсем хушшинче те) шурă е çутă тăхлана «калай» сăмахпа та палăртма тытăнаççĕ. Ун чухне Калай (Qualah) хулинчен çак метала пысăк калăпăшпа турттарнă. Малайзири çак хулара сĕм авалтанах ăна питĕ нумай туса илнĕ. Унтан калай (тăхлан) муклашкисем Китай урлă Пурçăн çулĕпе тухса, темиçе пин çухрăм туса, кунта та çитнĕ. Кайран шăвăçа, хĕçтимĕре, тимĕр листине, калайпа е цинкпа витнĕ листа та «калай» теме пуçланă.[10]

Кĕмĕлтен е калайран тунă «нохрат (нухрат)» тенĕ çавракаа е тăсăкларах вĕтĕ укçапа тăван халăх йăли-йĕркинче темиçе ĕмĕр ĕнтĕ анлă усă кураççĕ. Йĕрĕхе хывнисĕр пуçне ăна çул кукрисем çине, киреметре парне вырăнне, усал туса та пăрахаççĕ, хĕрарăм тумне капăрлатаççĕ тата нумай ытти те.

*Усал е хаяр тивни иртсе каймасан çип çине тăхлан* (олово) *тумлатаççĕ, пĕр пус илсе лаша кӳлсе уя тухаççĕ. Пĕр вырăнта унта укçипе çиплĕ тăхлана ывăтса лашипе виçĕ хут вĕсем çийĕн тухаççĕ те «кам илекен, çавна тивтĕр» теççĕ* (Самар кĕпĕрни - ?, 1891 çул).[11]

*Тата нухратсем шăратса, пуртă çине ярса çап-çутă шăтăклă-шăтăклă япаласем пулса лараççĕ. Вăсене вара çиппе витĕрсе хăйă çине çакрăçĕ. Йĕрĕхе чӳкленĕ чухне яланах çавăн пеккисене тăваççĕ… Пашалуне, юсмансене тата нухратсене те сĕтел çинех хучĕç* (1935 çул).[12]

*Нохрат пик çиç тесе пит çӳхе япалана калаççĕ. Нохрат – авалхи пĕрпуслăх кĕмĕл укçа; çĕн нохрат – шуçран тунă нохрата калаççĕ* (Вăрмар районĕнчи Пăвакасси, 1935 çул).[13]

*Вара ун хыççăн кил хуçи ăçта асăннă, унта нухратсем пăрахса çӳренĕ* (1935 çул).[14]

*Вуникĕ ярапа вĕçсене эп яртартăм вуникĕ чăн нухрат. Нухрат тĕрри е чапруш: кумми унăн 4 пĕрчĕ хĕрлĕ, унтан 3 – шурă, кĕсен хушшинче 2 пĕрчĕ хĕрлĕ; урасçи çаплах* (ТР Теччĕ районĕнчи Кăнна Кошки, 1935 çул).[15]

*Нухрат – капăрлатма усă куракан кĕмĕл е шăвăç укçа. Чăн нухрат – серебро, ахаль нухрат – жестянка* (Тăвай районĕнчи Чутей, 1935 çул).[16]

*Хĕç-тимĕр нухрат – лапчăтнă тимĕртен туни, пулмалла; çапса тунă нухрат – чăн кĕмĕл укçа (авалхи, тăсăкларах)* (Тăвай районĕнчи Енĕш Нăрваш, 1935 çул). [17]

*Пуян хĕрĕ нухратлă* (Куславкка районĕнчи Тĕрлемес, 1935 çул). *Акка, санăн тухъю пит нухратлă* (1935 çул). *Нухратлă çĕрĕ (1935 çул).*[18]

*Мелим-хуçа, çырлах мана! Аша каçар! Кивĕ кĕмĕллĕ нохрат парне парам* (Куславкка районĕнчи Кивъял, Маслово, 1881 çул).[19]

*Йĕрĕх тенки – Йĕрĕхе панă укçа. Йĕрĕх тенки – тăхлантан шăратса тунă укçа* (Шупашкар районĕнчи Алькеш, 1930 çул).[20]

*Йĕрĕх тăхланĕ – оловянная монетка, приношение Йĕрĕху. Йĕрĕх тăхлан тухйисем шăмăршăсен хĕрĕсен* (1930 çул).[21]

*Тата ĕнтĕ, шăратнă чух тăхлан чăмăртанса юхса ансан вара: Йĕрĕхе чăмăртаннă шăтăксăр тăхлан кирлă пулман – Йĕрĕх унпа çырлахман. Шăтарса çакнă тăхлан Йĕрĕх карчăка кĕмĕл вырне пулнă. сурпан çакки çакса пыратпăр тенĕ тата пурçăнсемпе-çипсемпе илемлĕ тăмлантаратпăр тенĕ* (Вăрнар районĕнчи Çĕнĕ Кипек, ~1890 çулсем).[22]

*Сюда же (в кузов) кладутся кусочки олова «тухлан» – металла, способного подниматься (плавиться) скорее других металлов. Есть мнение, что тухлан заменяет древняго фетиша чуваш, маленького вершковаго идола, имеющего человеческия формы, который приготовляется из олова* (Шăмăршă районĕнчи Шăмăршă таврашĕ, 1870 çулсем).[23]

*К числу изделий чувашских кузнецов относятся нухратки; это – круглые вырезы из жести, имеющие своей целью заменять древние (XVI и XVII века) серебряные монеты во время жертвоприношений кирεметям* (1927 çул).[24]

Каларăмăр, ĕнтĕ кĕмĕл вырăнне усă курма тивнĕ «тăхлан» тенĕ метала, сăмахĕ халь хура тăхлана (Pb) кăтартнăран, эпир «калай» сăмахпа палăртатпăр. Зороастризм витĕмĕпе гунсен чĕлхине пырса кĕнĕ «нохрат» сăмах малтан чăн кĕмĕле (серебро, Ag), унтан калая (олово, Sn), хыççăн шăвăçа та – кĕмĕл укçа евĕр йăлтăртататакан пур пĕчĕк çӳхе металл çаврашкине пĕлтернĕ, йĕрĕхлĕхе юрăхлă пулса тăнă. Пирĕн тимĕрçĕпăхăрçăсем çĕнĕ тĕслĕ нохрата (ахаль нохрат, хĕçтимĕр нухрат) шăвăçран тума XVII ĕмĕр таврашĕнче хăнăхнă ĕнтĕ.

## 6.3. Юмăç карчăкки

Йĕрĕх йăли-йĕркине тĕрĕс туса пыма халăх ăс-хакăлне шута илсе юмăç, ватă çын, ăсчах пулăшать. Вăл тăван çутçанталăка хакласа, ваттисен ăсне пĕлсе, ялйышăн кунçулне, йăх-ăратăсене астуса, сиенли-сиплине чухласа пурнăçа хаклать, хутшăнусене йĕркелет, сыватать, шанăç парать. Юмах тĕнчинче те вĕсемех çамрăка ăс параççĕ, тĕрĕс çул кăтартаççĕ. Ĕçĕ-хĕлне теприсем тиркевлĕрех хакласан та, вĕсем ĕлĕк те пулнă, халĕ те пур. Çапах йăла-йĕркене тĕплĕ тăвакан, уншăн çирĕп тăракан юмăçа хисеп туни те пĕлтерĕшлĕ. Пирĕн ĕç-пуç пĕтĕмпех ялйышăн ĕмĕртен килекен пурăнăçĕн, таса ĕненĕвĕн чиккинче пултăр. Эпир халăхран иртместпĕр, çĕнĕ йăла кăлартмастпăр, ĕлĕкхине пăрахмастпăр.

*Кил ăшчиккинче кирек кам сымар пулсан час-часах юмăç патне чупса каяççĕ. Юмăç патне пырсан, ман килте, çапла, ача сывмар пулчĕ-ĕçке, тесе каласа кăтартаççĕ. Вара юмăç пĕр çип вĕçне, çăккăр хытти çыхса, суллантарма тытăнать. Суллантарсан-суллантарсан калать: сан ачу Йĕрĕхрен, сана вăл пĕр така тумасăр та каçарас çук, тет* (Çĕрпӳ районĕнчи Чурачăк, 1929 çул).[25]

*Юмăç тесе ăста пĕлекен çынна калаççĕ* (Етĕрне районĕнчи Хочаш, 1909 çул).[26]

*Мулларан урăх кĕлĕ йĕркисене пĕлекен юмăç карчăксем пулнă. Вĕсем, çын чирлесен, чӳксем тунă, арçӳрисене çăкăр*

*тураса пăрахнă, тухса, киреметсене, йăрăхсене сулнă. Вĕсем уншăн укҫа е пĕр-пĕр япала илнĕ* (1929 ҫул).[27]

*…Юмăҫ пăхтарса килсессĕн киремете* (Йĕрĕхе - ?) *пăтăпа, юсманпа чӳклеҫҫĕ. Шăматкун пасара пĕр-икĕ пăт ыраш е сĕлĕ, нухрат илме парса ярассĕ. Килте вăл вăхăтра тайăн сăра тăваҫҫĕ. Тайăн сăра тусассăн пасартан нухрат исе килеҫҫĕ те пăтăпала, юсманпала киремете чӳклеҫҫĕ. Чӳкленĕ чухне юсманне пĕртак чĕпĕтсе илеҫҫĕ те нухратпа пĕрле уя, ăҫта киремет пур ҫав вырăна, пăрахаҫҫĕ* (1929 ҫул).[28]

*Юмăҫă юмăҫ пăхать. Вăл ҫăкăр татăкне йĕппе тăхăнтарать те сулласа ларать. Чирлĕ ҫын ун патĕнче пăхса ларать. Вăл вара, пăхсассăн, чирлĕ ҫынна: «Ҫав Тӳрĕ лекмен-и? – тесе ыйтать. – Ҫав Тӳрĕ лекнĕ пулсан, яр, кай», – тет. Яр каймасан тата сулласа ларать: «Тепĕр Тӳрĕ лекмен-и? – тет. – Вăл Тӳрĕ лекнĕ пулсан, яр, кай», – тет. «Мĕн ыйтать? – тесе сулласа ларать. – Ҫунатлă ыйтать-и? Пăтă-юсман ыйтать-и? – тет. – Пăтă-юсманпах юрать», – тет. Тăрсан-тăрсан: «Юрамасть, – тет. – Тата шалалла каять пулĕ-ха вăл. Вăкăр-тына ыйтмасть-ши вăл?» – тет. Сулласан-сулласан тупать вара мĕн пусмаллине. Вара вăл мĕн хушнă, ҫавна пусаҫҫĕ… (Самар кĕпĕрнинчи Пăхăрăслан уесĕнчи Микушкино, 1929 ҫул).[29]*

*Ҫын чирлесен юмҫăран юмăҫ пăхтараҫҫĕ, мĕнрен чирленĕ, тесе. Чăвашсем шухăшлаҫҫĕ: чир пурăнма пĕлменрен пулать, темеҫҫĕ; ун вырăнне, пĕр-пĕр япаларан пулĕ, теҫҫĕ. Е йĕрĕх тытнă, е турăш тытнă, е вилнĕ ҫын тытнă, теҫҫĕ. Ҫаксене пĕлесшĕн юмҫă патне каяҫҫĕ. Юмҫă тӳрлетеймесен, вĕрӳҫĕрен вĕртеҫҫĕ* (Н. Седяково, 1929 ҫул).[30]

*Чăвашсен акă ҫакăн пек туррисем пулнă: Чĕке ту, Тĕпе киремет, Исата киремечĕ, Ҫĕнир киремечĕ, Йĕрĕх, Сурăм, Кĕмĕл сурăмĕ, Ăру сурăм, Тӳр кĕлли, Хурлхан вар, Кăмăлсăр, Хĕрлĕ ҫыр, Ҫĕн киремет, Энĕш, Вĕт хурăн. Ҫав киреметсем чиртен сыватса тăнă. Юмăҫа каяҫҫĕ те, манăн ача чирлерĕ, теҫҫĕ. Юмăҫи калать, ҫанти киремет тытнă, ачуна часрах кайса пăрах, тет. Ачу Тӳр кĕлли кĕлечĕ патне шăнă пулĕ е мăшкланă пулĕ, ҫав тытнă, тесе суять. Ҫавăнпа питĕ хисе-*

*пленĕ киремечĕсене те, юмăçсене те. Вара часрах юмăçран таврăнать те кайса пăрахать юмăç хушнă пек… Юмăçсам çав киреметсене пуççаптарма питĕ тăрăшаççĕ. Тата чăвашсам тĕнчере виçĕ тĕслĕ халăх, виçĕ тĕслĕ тĕн теççĕ. Чăваш тĕнĕ, тутар тĕнĕ, вырăс тĕнĕ анчах теççĕ. Тата чăвашсам, пире Турах çапла пултарнă, калаçма та çавах вĕрентнĕ, теççĕ. Чăваша хăй тĕнпех пурăнмалла тунă, тутара та çаплах тунă, вырăса та çаплах тунă, чăвашăн вырăс тĕнне тытма юрамасть, теççĕ. Эпĕр чăвашсам чăваш кутĕнченех тухнă, вырăс кутĕнчен тухман, çавăнпа пире вырăс пулма юрамасть, теççĕ* (Канаш районĕнчи Мăкăр, 1911 çул.[31]

*Кĕсен-çăпан е куç пăсăлсан юмăçа кайнă та юмăç каланă: «Ку кĕсен-çăпан сана, а-р-а – килти кĕлетри, е нӳхреп, е лаçри Йĕрĕхӳ хĕн кăтартса усрать, уна парнесем парса çырлахтарас пулать». Йĕрĕхе асăнмалли йăла – килте: клетре, нӳхрепре, лаçра асăнса парнесем панă. Пуринчен ытла – ӳссе ларан хăвăл йывăççенче: йăмрара, хурамара, ытти йывăççенче пулнă* (Вăрнар районĕнчи Çĕнĕ Кипек, 1890 çулсем).[32]

*Своих предсказателей они называют йомзями и почитают слова и убеждения их велениями божественными в духе пророчества. Почти каждая деревня имеет особенную свою йомзю, а в иных находится их и больше, смотря по количеству жителей. Йомзями, по большой части, бывают престарелые женщины. Кои, снискавши к себе доверенность чуваш, пользуются слепым их повиновением. И, объявляя о себе, что они в сновидениях получили дар быть истолкователями божией воли, действуют будто бы во всех случаях непроизвольно, но по повелению божию. Есть мнение, что сопротивление их внушениям влечет на непокоривых гнев карающего Божества* (Протопопов А.,1828 çул).[33]

*Лешĕ, ултавăç, сан куçа çанти Тӳркӳлли (тиркӳли) тытнă, тет; сан унта пăртакçă тутăр çине çыхса, кĕрпепе пĕр-икĕ пус укçа кайса çакас пулать, вара тӳрленет, тет* (1937 çул).[34]

Йĕрĕх чирне хĕрарăм юмăç (юмăç карчăкĕ) ăнăçлăрах сиплет – чăн пĕлӳ шайĕпе çеç мар, мĕнле чир е хуйхă тĕлĕшпе

юмланипе те, мĕнле мелсемпе, мĕнле йĕркепе хăй ĕçне тунипе те, сăмахне витерме пултарнипе те. Юмăçсем тĕрлĕрен пулаççĕ, ăрăмçă, пĕлӳçĕ, витĕр куракан, сурманчă, тĕлĕкçĕ, чĕлхеçĕ, вĕрӳçĕ т.ыт.те. Юмăç патне пур-çук чирпе утмаççĕ, çăмăл йĕрĕх чирĕпе те утмаççĕ. Аслăрах, сумлăрах, Тӳркĕлли енне сулăннă Йĕрĕх янă чир вара йывăртарах.

Юмăç ялти, таврари пурăнăç юхăмне, тĕрлĕ хутшăнусене тимлет. Унăн ĕçĕ хăйнееверлĕ. Ыттисенчен вĕренсе юлнăскер чылай япалана чухлать, чирсен сăлтавне те унăн пĕлме тивет. Амăшне курса хĕрне хаклать, аслашшĕне астуса мăнукĕсен кунçулне курать. Паллах, ăна тӳлемелле, нумай чухне унăн ĕçне пулăшу ыйтакан хăех хаклать.

# VII. Тӳркĕлли

## 7.1. Кĕлĕ

«Йĕрĕх» ăнлавпа пĕр ретре «кĕлĕ» сăмах та çӳрет. Вăл Атăлçи Пăлхар çĕршывĕ вырăнĕнчи авалхи халăхсенчен юлнă йĕрĕх вырăнĕ, киремет пĕлтерĕшлĕрех сăмах пулмалла. Кайрантарах вăл пуççапнă (кĕлĕ тунă – кĕлтунă) май унта (кĕлĕре) чунтан калакан шухăша та кăтартма тытăннă, кĕлĕ (молитва, молитвословие). Ĕç-хĕл (глагол) та пулса тăнă, кĕле, кĕлле. Ку сăмах вырăс чĕлхине те кĕрсе кайнă: кĕл(ĕ) тăвать – колдовать – колдун.

*Унтан Хăрпан, Хĕрлĕçыр, Кĕлĕ, Мăн кĕлĕ, Çуртри аслă кĕлĕ, Вăталăх кĕлĕ, Кĕçĕн кĕлĕ, Такталăри кĕçĕн кĕлĕ, Аслă Сĕнче çинчи кĕлĕ, Илюхахун хĕр тăвĕ, Кĕмĕл султан кукăрĕнчи кĕлĕ, Хуракӳл çинчи, Хурашыв çинчи кĕлĕсем, Çилпе пыран кĕлĕ, Выляса пыран кĕлĕ, Выляса пыран кĕлĕ амăшĕ, Иртсе пыран кĕлĕ, Иртсе пыран ырă амăшĕ, …кĕлтăватпăр ăшă питле, тутлă чĕлхепе* (1934 çул).[1]

*Мăн кил илене çунатлă хур* (ТР Теччĕ районĕнчи Элшел, с. Альшеево, 1934 çул).[2]

*Ялваррăнчи тĕп Хурашыв мăн кĕл иленĕ, Ял варрăнчи вăталăх кĕл илен, Ял варрăнчи кĕçĕн кĕл илен, Уй варринчи кĕлĕ амăшĕ …* (1934 çул)[3]

Çыннăн турăлăх ĕç-пуçне те унпа палăртаççĕ: кĕлĕлĕ-хутăшлă *(Юмăç каланă сана, кĕлĕлĕ-хутăшлă тытнă, тенĕ);* кĕлли-чӳкки *(Турă çырлах! Кĕлли-чӳкки каçартăр, вилли-чĕрри çырлахтăр);* кĕл-кĕл(л)е *(Пĕçернĕ апат-ырлăха кĕл-кĕлесе, яшкипе кукăльсене, юсманĕсене валеçсе, ачисене киле парса яраççĕ; Вăл хăй пит турра кĕл-кĕлесе пурнакан çын; Пирĕн анне аттене пĕре анчах кĕл-кĕллетермен, темиçе хут та кĕл-кĕлеттерчĕç).*[4]

«Кĕлĕ» сăмах майлашăвĕнче те килйышăн, ялйышăн сăваплă, таса вырăнне кăтартать: Кĕлĕ карти – шурă йывăçпа

(хупăсăр çăкапа) картланă киремет вырăнĕ; Кĕлĕ лаççи – кĕлĕ (киремет) картинчи парне хумалли чӳречесĕр пура; Кĕлĕлĕ çĕр: *кĕлĕлĕ çĕр кунта теççĕ, такăнсан та хăрушă теççĕ* (1934 çул). Нумай чухне унпа япала ячĕ шайĕнче усă кураççĕ.[5]

*Унтан тата хыçалти тăватă кĕлле пилĕкшер нухрат илсе пăрахас пулать* (Вăрнар районĕнчи Кивъял Хапăс, 1934 çул).[6]

*Çав киремете пирĕн ялсем, чăн аслă хаяр кĕлĕ, тесе пит хисеплесе тăраççĕ* (1934 çул).[7]

*Аслă кĕлĕ – Шаврăшпа Чăвашъел хушшинчи киремет ячĕ* (ТР Аксу р-нчи Саврăш, 1934 çул).[8]

*Ăвăслăх кĕлли – ял варринчи катара вырнаçнă киремет ячĕ* (ПР Мияки районĕнчи Çĕнĕ Хурамал, 1929 çул).[9]

*Сире ни киремет, ни кĕлĕ, ни çăлкуç тытман* (1934 çул).[10]

*Юмăç калапă: кĕлĕ çинче е килемет çинче çĕмел çĕмĕрнĕ, тесе калапă* (Элĕк районĕнчи Ярхуньошкăнь, 1934 çул).[11]

Мăн килĕ – ятарласа картланă килхушшинчи выльăх пусмалли (выльăха чӳке памалли) вырăн.[12]

Кĕлĕре (кĕлĕ вырăнĕнче) тивĕçлĕ тытмасан, тĕрĕсех кĕлтумасан Кĕлĕ чирсем ярать: кĕл тумхаярĕ, кĕлĕ шатри.[13]

Çак сăваплă вырăна тытса тăраççĕ: кĕлĕ алăк уçакан (çынна кĕлле кайса çӳреме, кайса пуççапма хавхалантаракан ырă), кĕлĕсе(не - ?) пăхса çӳрекен, кĕлĕ пуçĕ, кĕлĕ хуçи (çак вырăна еткерлĕх йĕркине тытса тăракан çын), кĕл-кĕтӳçĕ *(«Мăн киремете пăхакан ăрасна кĕл-кĕтӳçĕ пурччĕ, вăл чурачăксемччĕ»)*, кĕлĕ шăлакан (çак вырăна тирпейлесе тăракан çын), кĕлĕ кĕтекен *(«Вăл çынна Кĕлĕ хăй суйласа илнĕ… Вăл çын ăçта кĕлĕ пур çĕрте, çулталăкра пĕре, тасатать… Унта кайнă чухне юсмансем çине пыл хурса каять… Вăл тарçă пек кĕлĕ вырăнĕсене тасатать»).*[14]

*Кĕлĕсем пулнă. Кунтан 3-4 кил урлă хыр пулнă, тăкăрлăкра. Ăна Кĕлĕ тенĕ, юсмансем, укçасем пăрахнă. Çар хурăн кĕлли, çăл кĕлли пулнă. Унта юсмансем, укçасем пăрахнă. Мĕн пăрахмаллине юмăç калапă* (ТР Аксу районĕнчи Саврăшпуç, 1961 çул).[15]

*Мăстай кĕлли питĕ чаплă кĕлĕ пулнă, хăраса пурăннă чăвашсем. Мăстайĕ – хăшĕ хусах пулнă теççĕ, хăшĕ мăкшă пул-*

*нӑ теҫҫӗ. Тӗлӗкре Кив Ӳсел панче, унта шур лашапала шур тумтирлӗ ҫын хӗҫпе-пӑшалпа курӑнать, ылтӑн йӗнерпе теҫҫӗ. Пӗр чӑваш хурӑнӗсене касрӗ те, вилчӗ – ҫав вӗлерчӗ, терӗҫ вара* (ТР Аксу районӗнчи Кив Ӳсел, 1935 ҫул).[16]

*Пикл кӗлли тунӑ кӗлетре Пикл хӑмӑчӗ, кутлӑхӗ, йӗвенӗ, пӗкки ҫакӑнса тӑнӑ. Пикл чаплӑ пулнӑ, лашасем нумай пулнӑ. Пикл вилнӗренпе ҫӗр ҫул та ытла. Вӑл пулни 1930-мӗш ҫулсенче ҫӗр ҫул пулнӑ. Вӑл Саврӑш шывӗ тӑрӑхӗнче пуҫлӑх пулнӑ. Мана кӗлӗ туса асӑнӑр тенӗ вӑл хӑй вырӑнне. Ӗлӗкрен юлнӑ пуянлӑх пулнӑ унӑн. Савгачра тата Атлашкинӑра икӗ пуян пулнӑ. Пӗри – Пикл. Вӑл ҫӗр тара тытса, аренда туса акнӑ. Ҫынсенчен пӗр-ик десятин илнӗ. Улпут ҫӗрӗ пек пысӑк ҫӗр акни пулман* (ТР Аксу районӗнчи Саврӑшпуҫ, 1961 ҫул).[17]

*Ялта кӗл кӗлечӗ пулнӑ. Пикӑл кӗлли тенӗ. Пикӑл пуян пулнӑ, ял хуҫи пулнӑ. Ун ампарне Пикӑл кӗлли тенӗ, ун вырӑнне никам та килсе ларман. Кӗлетне укҫа пӑрахнӑ. Пикӑла Тур вырӑнне хунӑ вилсен. Хӑрах куҫлӑ пулнӑ вӑл. Лашасем нумай тытнӑ. Суткӑра парпа Хусана ҫитсе ҫаврӑннӑ (ҫӗр алӑ ҫухрӑм). Пикӑлтан пурте хӑранӑ, чаплӑ ҫын тенӗ. Унӑн тарҫӑсем пулнӑ. Хурансем, савӑт-сапа пӑхӑр пулнӑ унӑн. Ун пек куштан ялта пулман. Развитой ҫын пулнӑ. Хӑмӑчӗ кӗлетӗнче ҫакӑнса тӑраччӗ. Унӑн хӑмӑчӗсем ҫӳме витнӗ, йӗс тӳмеллӗ пулнӑ, шерепеллӗ кутлӑхсем пулнӑ. Хырӑмлӑх ҫыхман. Пикӑл ҫӗрме пуян пулнӑ, ҫӗр нумай тытнӑ, тарҫӑсем тытнӑ, арман тытнӑ. Капансем ун ик-виҫӗ ҫул ларнӑ. Кушак кайӑксем ҫисе янӑ. Ҫук ҫынсене тырӑ парать. Кайран ӗҫлеттерет. Ҫук ҫын хӑй ҫӗрне сутать* (ТР Аксу районӗнчи Чӑвашъел, 1961 ҫул).[18]

*Пирӗн ялта виҫӗ ҫын пит аслӑ киремет тытса тӑраҫҫӗ, вӗсенчен чӑн аслине Куслав кӗлли, Тав кӗлли теҫҫӗ. Ҫав кӗлӗсене тытса тӑракан ҫынне те Куслав тесе виртлесе каланӑ, вара хушамачӗ тӑрӑх кӗллине те ҫаплах каланӑ. Аслӑ кӗлӗсене ҫулталӑкне тӑтӑшах парне кӳнӗ те, пит нумай тӑкӑннӑ. Ҫавӑнпа пуян ҫынсем анчах тытса тӑнӑ, начартарах ҫынсем тытса тӑма вӑй ҫитереймен. Куслав ӗлӗктерех пит пуян та – кӳмесемпе кӑна ҫӗмӗрттерсе ҫӳренӗ, халӗ начарланса ҫитнӗ те, ҫара ҫуна-*

*па кӑна тӗкӗртеттерсе ҫӳрет теҫҫӗ. Кайран кӗллине чӳклеме вӑй ҫитеймен. Вара вӑл ман турра ҫынсем те пуҫҫапса тӑччӑр тесе пӗтӗм халӑх ҫине сулса янӑ теҫҫӗ. Ҫавӑнтан кайран пур ҫын та пуҫҫапса пурӑна пуҫланӑ. Куславпа пӗр ҫын та вӑрҫмаҫҫӗ. Унта пӗр-пӗр ҫын вӑрҫсан вӑл ӑна хӑй кӗллине сулать теҫҫӗ. Сана, Кураслав, асӑнатпӑр, витӗ-неппӗр ашпа, пӑтӑпа, пашалупа чӳклетпӗр…* (1934 ҫул).[19]

*Аванскин киреметне – Иван Григорьев чӑвашӑн пахчинчи пилеш тӗмӗпе унта пурӑнакан Йӗрӗхе – Аванскi кӗлли теҫҫӗ. Иван Григорьев Аванскi текен хушма ята акӑ мӗн пирки илнӗ. Унӑн ашшӗпе амӑшӗн чылайччен ача-пӑча пулман. Иван ҫуралсан: «Ача мӗнлескер?» – тесе ыйтакансене амӑшӗ: «Аван-ҫке» – тесе хуравланӑ пулать. Аванскi хушма ят ҫакӑнтан тухнӑ та ӗнтӗ.*

*Аванскi хӑй – юмҫӑ, лаша вӗрӳҫи. Ялӗнчи ҫынсем пилеш тӗмӗнчи Йӗрӗхе чӳклеме пулупа (премӗк) ҫуллӑ ҫӑмах илсе пыраҫҫӗ, тӗмӗ ҫине пир тӑрӑхӗ тата ҫиппе ҫыхса тӑхлан татӑкӗсем ҫакаҫҫӗ.*

*Аванскин улма садне ваттисен мӑнкунӗ хыҫҫӑн тепӗр кунне* (23.04.1875) *ятарласах кӗтӗм, хӳми патне пытӑм. Ҫӗр ҫинче 32 ҫӗнӗ пир татӑкӗ тата 5 шурӑ ҫӗнӗ коленкор татӑкӗ, иккӗшӗпе пӗршер вӗтӗ нухрат* (мордовка-?) *чӑрканӑ, выртатчӗҫ. Аванскi кӗллине вӗтӗрех нухрат хываҫҫӗ-мӗн, Мелӗм-хуҫана, вӑл пӗлтерӗшлӗрех тесе – шултрисене. Хӳме ҫинче, пилеш тӗлӗнче, ытларах хӳме ҫине тайӑлнӑ улмуҫҫи турачӗсем ҫинче ҫипсем ҫакӑнса тӑратчӗҫ, ҫӗр ҫинче те кӑштах выртатчӗҫ. Тӑватӑ шурӑ ҫипӗ – ҫумӗнчи калай муклашкипе, вӗсенчен пӗринпе пӗрле касӑклӑ пир татки те пур.*

*Аванскин хӗрсем пулнӑ. Ашшӗ вӗсене качча тухнӑ чухне пурне те хӑйӗн тӗмӗнчи пӗрер пилеш туратне хӗр парни шучӗпе парса янӑ. Ҫавӑнтан вӗсен ҫӗнӗ киреметсем (йӗрӗхсем) хунаса кайнӑ. Ытти киремет (йӗрӗх) хуҫисем те хӗрӗсем качча тухнӑ чухне пилеш турачӗ парасси йӑлана кӗнӗ. Ҫакӑн ҫинчен вырӑнти юмӑҫсем кашни хутӗнчех халӑха пӗлтереҫҫӗ.* (ЧР Куславкка районӗнчи Кивьял, 1875 ҫул).[20]

*Савкай кĕлли те Аванский тĕмĕ пекех святыня. Ку киремет пĕр икçĕр ăвăс çитĕнекен йĕтем çинче вырнаçнă. Вăл тĕне кĕмен Савкай ятлă чăвашăн пулнă. Савкай кĕллине чăх, йосман, çуллă çăмах, нимĕр, икерчĕ, тăхлан, нохрат тата çипсем хываççĕ* (ЧР Куславкка районĕнчи Шăнчас, 1870 çулсем).[21]

*Сĕнчел çывăхĕнче Пăлхавăр, Тарлав ятлă пысăк варсем-çырмасем пур. Унта тар нӳхрепĕ те пур теççĕ. Ылтăн-кĕмĕл нӳхрепĕсем те пур теççĕ. Тата тимĕр пичĕкепе мул (ылтăн) çĕрле çĕр ăшĕнчен çиеле тухса йăл-йăл-йăл курăнса çунать. Унта пĕрле шап-шурă пысăк вăрăм çилхеллĕ лашапа, ылтăн йĕнерне утланса ылтăн тултарнă пичĕкен хуралçи тухать. Епле автан авăтнă, çапла çур çĕрте вĕсем пурте шăнкăртатса çĕре анса каяççĕ теççĕ.*

*Имеллĕ ялĕ патĕнче Хăнчăр Ака кĕлли пур, унта та çапла пулать теççĕ* (ТР Аксу районĕнчи Сĕнчел, 1925 çул).[22]

*Ялта пурте тенĕ пекех «Ярушка кĕлли» тенĕ Ярушка килйышĕн усал Йĕрĕхĕ пурăннă вырăна пуçтайнă. Унсăр пуçне ялта кашни ăратăн (йăхăн) хăйĕн кĕлли (турри) пулнă. Тĕслĕхрен, Сусметьевсен ăраттинчен тухнисем Слакçи кĕллине пуççапнă, анат енче пурăнакансем – Пирлĕ кĕлĕне, Павернай ăраттинчен тухнисем – Киремет кĕллине, ту енче пурăнакансем Хайпăрçи кĕллине сума сунă* (ПР Пелепей районĕнчи Слакпуç, 1969 çул).[23]

«Вăй(ă)-килли» сăмаха шута илсен «кĕлĕ» тахçан «кил» сăмахпа пĕр ретре çӳренĕ теме те пулать. Вăйă(вый) килли (кĕлли) – вăйă тумалли (теприсемпе, леш енчисемпе ăмăртса, тупăшса ташламалли, хамăр вăя, пултарнине кăтартмалли) вырăн, пӳртри кĕтес. Вый-килли кĕни тесе хĕр ларнă пӳрте кĕрсе ташланине калаççĕ (Кăрмăш уесĕ); *Вый-килле кĕрчĕç* (Муркаш р-нчи Туçи Олкаш); *Вăй килĕнчен сире салам яраççĕ* (Вăрмар р-нчи Энĕшпуç) – туй сикмелли вырăнтан, авланакан ларакан сĕтел патĕнчен, ваттисем патне сăра куркипе пынă кĕçĕн кĕрӳ калани. Вый-кĕл-поç (вый-килĕ-поç, вăйă-пуçĕ, вăй-пуçĕ) – туй халăхне йĕркелесе ертсе пыракан çын (Муркаш р-нчи Туçи Олкаш, Чĕмпĕр уесĕнчи Пухтел, 1930).[24]

«Кĕлĕ» сăмах йĕрĕх вырăнĕпе пĕр евĕрлĕрех килет, ялти уйрăм ушкăнăн, пĕр-пĕр килĕн, ăратăн сăваплă вырăнне кăтартать. Сумлă çынсен кĕлли ялта хисепре çеç мар, чунăш шайне те хăпарать. Пуçтаякан çак чунăш вăйне ĕненет, хăй ăна сумланине, хисепленине палăртать. Ăна уйрăммăн асăнмасть – çакăн шайри пур чунăш пĕрле пулсан çеç вĕсем хăйне тулли пулăшу пама, хӳтĕлеме хăват çитерĕç. Ку сăмах (кĕлĕ) ытларах чăваш несĕлĕсен «сăвар» тенĕ йăхĕн çыннисем вырнаçнă çĕрсенче упранса юлма пултарнă.

## 7.2. Тӳрĕ

Чăваш йăли-йĕркинче «йĕрĕх» ăнлава çавнашкалах «тӳр(ĕ)» сăмахпа та палăртаççĕ. Çак «тӳрĕ, яка, яштака, тикĕс, тĕрĕс, чăн» пĕлтерĕшлĕ сăмах варианчĕсемпе (*тӳз, тӳс, тӳзӳ, дӳз*) чылай тĕрĕк чĕлхинче усă кураççĕ. Кыпчаксемпе огузсен тăхăмĕсен чĕлхисенче хăрăпла догри «тӳрĕ, тӳррĕн» тенине çывăх çав пĕлтерĕшлех сăмахсем те пур: *тогри, тугри, догру, тогро, тувра, туура, тура.*[25]

Çак сăмахранах пуçланнă «тӳре (кади, судья)» сăмах çӳренĕрен тĕпчевçĕсем «тӳркĕлли» сăмах пулăвне «тӳре килĕ (дом судьи)» тенинчен тухнă тесе ăнлантарса пăхни те пур.[26]

Тăван чĕлхере «тӳр(ĕ)» япала ячĕпе, вăлах паллă ячĕ, тата унтан пулнă «тӳр(ĕ)ле» ĕçхĕл анлă сарăлнă. Пирĕн темăна ку сăмахăн çакнашкал ĕç-пуça ăнлантарнисем çывăх тăраççĕ: пĕр-пĕрне юрани, килĕшӳллĕ пулни, çутçанталăка, чăн пурнăçа вырăнлă пулни. Тĕслĕхрен, кама та пулин юрăхлă хĕре е качча ăна: *Иванпала тӳр хĕрне лаççа хупса хăвартăмăр; Тӳр хĕрĕпе тӳр ачи, хирĕç полсан, ытарими поплеççĕ; Манпа тӳрлĕ-варлă пурăнас тесен..; Ялта лайăх хĕрсем пур, теççĕ, епле тӳре кӳрес улахра; Ялта тӳрри порччĕ ман, кориман тăшман сивĕтрĕ; Çĕнĕрен тӳрри пур, теççĕ те, çĕнĕрен тӳрри пур, теççĕ.* Е тата: *Ĕлĕк пит вăрçса порнатчĕç те, халь тӳрленнĕ ĕнтĕ; Хунĕ патĕнчен ăшă хыпар килсен, ку арăмĕпе … хунĕ патне тӳрленме каяççĕ; Кам килĕштермесĕр вăрçса пурăнакансене*

*майлаштарса пӗр-пӗринпе тӳрлештерсе ярать, вӑл ҫын телейлӗ.* Паллах, «Арҫури» поэмӑри Карчӑк Микули те, тӑкаклӑ пулсан та, Тӳркӗллипе килсе тухнӑ хирӗҫтӑрӑва вӗҫлес, тӑнӑҫлӑ хутшӑнусем йӗркелесе ярас тӗллев лартни иккӗлентермест.[27]

«Йӗрӗх» сӑмах вырӑнне усӑ куракан «тӳр (тӳрӗ, тӳре)» сӑмах тепӗр чух аслӑрах е хаяртарах Йӗрӗхе кӑтартнӑ пулмалла. Ҫавнашкалах малтан ку сӑмах йӗрӗх йӑли-йӗркипех ырра халалланӑ, кӳнӗ япаласене ӑнлантарнӑ, кайран ятне куҫнӑ.

*Ехвер Иванин, Утан Ҫитӑрӑн тур хаяр тӳрри..; Сехтийӗн тӳрри..; Михеле хурт лартнӑ ҫӗрти тӳрӗ; Учук тунӑ ҫӗрти тӳрри; Кӗсен-ҫӑпанпа асаплантаракан тӳрре; Ӑш чирӗ тӳрӗрен; Чирлӗ ҫынна ҫав тӳрӗ лекмен-и;*[28]

*Пикеми (пикепи) тӳрри хӑвисем патӗнче Йӗрӗх* (ТР Ҫӗпрел районӗнчи Кивӗ Чакӑ, 1935 ҫул).[29]

*Почти у каждой семьи был свой Йерех; у группы же дворов и у целого конца села был высший Йерех – Тюри. Чем старее был Йерех, тем больше его почитали* (Сарӑту облаҫӗнчи Вольски районӗнчи Касанлӑ, 1924 ҫул).[30]

*Пӗр лаҫӑра шурӑ сурпан ҫакӑнса тӑрат. Унта укҫа хутаҫҫи ҫакнӑ. Ҫавна Тӳре теҫҫӗ. Ҫав Тӳре хутаҫҫине пӗр чӳк хыҫӗнчен килӗшпе, выльӑх-чӗрлӗхшӗн сывлӑх пар, тесе укҫа хумасан тытат теҫҫӗ. Кӗсен-ҫӑпан, юханлӑ чир ҫулӑхат теҫҫӗ. Ҫавӑнпала ӑна кӗркунне, кӗрхи сӑра иртсессӗн, пӗр ҫур яла яхӑн пулӗ укҫа пырса хураҫҫӗ. Ӗлӗк вӑл хутаҫра укҫа тулсассӑн вӗсем ӑна пӗтӗм ӑратнипе пӗр ҫӗре пуҫтарӑнса ҫав укҫапа пыл илсе йӳҫӗтсе, ҫавна асӑнса темӗн чухлӗ юсман, вӗт йӑвача пӗҫерсе, каҫхине ҫавна асӑнса, чӳк туса ҫӗрле ҫӗр хута ӗҫнӗ теҫҫӗ. Халӗ ӗнтӗ, эпӗ астӑвасса, вӑл хутаҫа укҫа нихӑҫан та тулман. Кам унтан хӑраманни ҫын курман чухне кӗрсе эрех ӗҫме илсе тухаҫҫӗ е ачасем выляма илсе каяҫҫӗ. Пирӗн асатте ҫунсан та ҫав Тӳрене пӑрахман. Унӑн укҫисене йӗре-йӗре пухса каллех пӗр кӗлете хунӑ. Ҫавӑн чухне вӗсем шухӑшланӑ: салтакран ҫав Тӳре ҫавӑрса килчӗ, халӗ те ҫурт тума пулӑшӗ тенӗ. Ҫавӑнпала ӑна ун чухне вӗсем пӗтӗм ӑратнипеле пуҫтарса пӗр аван икӗ хутлӑ (алҫиллӗ) кӗлет туса,*

*çав кĕлете сурпанпа укçа хутаççине çакса хунă. Çав хутаççа укçине хунă. Пурăнсан-пурăнсан, импичче салтакран килсен, пирĕн аттесем вăл кĕлетрен сурпанпа укçа хутаççине урăх начар çăнăх лаççине çакса хунă. Халь те çав лаçра çакăнса тăрат* (ТР Пăва районĕнчи Пӳркел, 1880 çулсем).[31]

*Тӳрĕ* («тюри») *тесе питĕ усал чунăша калаççĕ, вăл тем тĕрлĕ чир ярать: алă-ура тĕнет, хуçланмасть, мăй пăрнăçать, шалкăм çапать т.ыт.те. Пур чăваш унтан хăрать, ăна çуллен кĕлтăваççĕ. Кашни ялтах Тӳрĕ пулмасть. Çывăхра ун пекки пулсан, ытти ялсем унта килсе укçа хываççĕ. Ялта пĕр хресчен килĕнче Тӳрĕ пур, ампарта çăнăх миххинче çакăнса тăрать. Ку Тӳрĕне калайран е тăхлантан шăратнă. Ăна юсманпа* (çӳхе икерчĕ) *тата вак укçапа чӳклеççĕ. Çакна килти пĕр çын тимлет. Панă укçана тӳрĕ хуçи илет, çĕлĕкне хывса пăшăлтатса калаçать, чĕркуçленсе пуканене* («истукан») *пуççапать те укçине миххе чикет. Çуллен ялти темиçе хисеплĕ мучи пуçтарăнать те Тӳрĕ миххинчи укçапа эрех, пыл туянаççĕ, тутлă кăвас тăваççĕ, икерчĕ пĕçереççĕ. Çакна пĕтĕмпех хаяр чунăш ячĕпе ĕçсе-çисе яраççĕ, çăнăх миххинче Тӳрĕ лăпкă пурăнтăр, çынсем çине йывăр чир çине-çине ан ятăр теççĕ* (Самар кĕпĕрни - ?, 1891 çул).[32]

*Сар Павăл умĕнче урамра улмуççи ӳснĕ. Улмуççи патнерех кĕлет ларнă тет. Çав кĕлетре Тӳре пурăннă тет. Укçасем пыра-пыра пăрахнă тет. Кĕлетне куçарсассăн улмуççи çине пырса çака-çака янă тет е пырса пăрахатчĕç тет.*

*Тата Нилюк Çеменĕ тĕлĕнче, Ĕл хĕрринче, арман кĕлечĕ ларнă тет. Унта Тӳрĕ пулнă теççĕ. Укçасене çамрăк ачасем пуçтарса тапаксем, çимеллисем илнĕ теççĕ* (Тăвай районĕ, 1937 çул).[33]

«Йĕрĕх», «тӳрĕ», «кĕлĕ», «ырă» сăмахсене, вăхăтсем иртнĕ май харпăрхăй вырăнта пĕлтерĕшĕсем тĕрлĕрен улшăннăран, сăмахлăхра ăнлавлă пайĕсене тĕрлĕ шайра çыхăнтарса пĕрле те кăтартаççĕ, асăнаççĕ. Ку сăмахсене хутăштарни, уйрăмах кĕлтунă май, тĕрлĕ картри турă-ырăсен ячĕсене каланă чухне курăнать, чĕлхене пуянлатса кĕлле те витĕмлĕх парать. Тĕслĕ-

хрен: 1) *Мăн кĕлĕ, Мăн кĕл-илен, Учук тунă çĕрти мăн кĕл-илен, Вăталăх учук тунă çĕрти кĕл-илен, Кĕçĕн учук тунă çĕрти кĕл-илен, Кĕлĕ амăшĕ, Учук тунă çĕрти кĕлĕ амăшĕ, Учук тунă çĕрти тӳрри, Учук тунă çĕрти йĕрĕх, çырлахăр!* (XX ĕмĕр пуçламăшĕ), 2*) Ĕлĕк, ак, йĕрĕх лекнĕ. Мăнкĕлле лекнĕ тесе калатчĕç, ав. Çăпан-мĕн тухсассăн каланă ĕнтĕ* (Самар облаçĕнчи Шунтал районĕнчи Тăварăмри тĕслĕх, 1984 çул), 3)…*Иртсе пыран кĕлĕ, иртсе пыран ырă амăшĕ.*[34]

Акă, Теччĕ уесĕнчи пĕр ялта (1930 çул) палăртнă Йĕрĕх («йăрăх») ячĕ Ырутаман тени те «ырă» тата «утаман» сăмах-сен çыхăнăвĕпе пулнă теме пулать. Ăна ялти чи аслă Йĕрĕх (аслă Ырă, аслă Тӳрĕ) пек ăнланмалла.[35]

*Мăн кĕлĕ, Мăн кĕлилен, Учук тунă çĕрти мăн кĕлилен, Вăталăх учук тунă çĕрти кĕлилен, Кĕçĕн учук тунă çĕрти кĕлилен; Кĕлĕ амăшĕ, Учук тунă çĕрти кĕлĕ амăшĕ, Учук тунă çĕрти тӳрри, Учук тунă çĕрти йĕрĕх, çырлахăр. Сире айван чĕлхепелен асăнатпăр, витĕнетпĕр* (Çарăмсан сылтăм енчи ял, ~1900 çул).[36]

*Илюха йĕрĕхĕ, Малакай йĕрĕхĕ, Ятмăрса йĕрĕх, Силевер йĕрĕхĕ, Силевер тӳрри, Кукша йĕрĕхĕ, Кукша тӳрри, Стапан йĕрĕхĕ, Уçка-Терентей йĕрĕхĕ, сире юсманпала, хурпала, ăшă чĕлхепеле асăнатпăр, витĕнетпĕр. Айван ашана каçар пире.*

*Эхвер Иванин тӳрри, Эхвер Иванин, Уçан Ситăрăн турхаяр тӳрри; Авантейĕн мăн кĕлиленĕ, Вăталăх Авантейĕн кĕлиленĕ, Кĕçĕн Авантейĕн кĕлиленĕ, Тури Авантейĕн кĕлиленĕ, Вăрăм Хĕветĕрĕн пилĕк юсман кĕлиленĕ, Сехтийĕн тӳрри, Пилĕк юс-ман ывăл-хĕр чӳкĕ, Пилĕк юсман турă, Тĕп Хурашыв Аттав-Тимушка кукри, Ситимĕр кукри, Михеле хурт лартнă çĕрти тӳрĕ, Учук кукрĕнчи кĕлĕ, Ăнтимĕр кукри* (Çарăмсан сылтăм енчи ял, ~1900 çул).[37]

Юлашки кĕлĕ сăмахĕсенчен ку ялсенче темиçе пысăк сум-лă йăх-тăван пулни курăнать. Пайăррăн асăннă пĕр шай-ри чунăшсем кунта хурăнташсене хунтăланипе пĕрлех уйрăм арçын ăраттипе те çыхăннă темелле. Йăли-йĕрки пĕр пекрех пулсан та Тӳрĕ Йĕрĕхрен кăшт аслăхрах, сумлăрах шутланать,

пĕлтерĕшĕпе Тӳркĕлли енне сулăнать. «Йĕрĕх» пĕлтерĕшлĕ «тӳрĕ» сăмах урăх халăхсемпе хутăшларах пурăнакан хирти чăвашсем хушшинче сарăлнă, синонимĕ пулса тăнă. Пĕр кĕлĕрех «кĕлĕ» те, «тӳрĕ» те, «йĕрĕх» те калани вырăнти ялйыш тĕрлĕ çĕртен куçса килнипе пулнине те кăтартать.

## 7.3. Тӳркĕлли

Тӳркĕлли сăмах «Арçури» поэмăпа паллашнăранпах хальхи чăваша хăйĕн асамлăхĕпе тыткăнлать.

*Карчăк Микули…*
*Микул турра пуççапма*
*Ишекелле каймалла терĕ.*
*Тӳркĕллине тӳрлетме*
*Тиха тытса пусмалла, терĕ.*
*Арăм сывмар, суя мар,*
*Хĕл-çăвĕпех хĕн курать, терĕ…* (Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шĕнерпуç, 1874 çул).[38]

Сăмахĕ икĕ пайран тăрать, «йĕрĕх» ăнлавпа тачă çыхăннă «тӳр(ĕ)» тата «кĕлĕ» сăмахсенчен. Тӳркĕлли кӳлепи (пукани) хĕрарăмран хĕрарăма нумай хут куçса – «хĕрĕнчен хĕрне çичĕ сыпăк таран» – ялйыш, хура халăх ăс-хакăлне витернĕ. Халĕ вăл ялйышра, тăван-пĕтен хушшинче хисеп илнĕ хăйне евĕр «тава тивĕçлĕ» Йĕрĕх шутланать. Таврара Тӳркĕлли нумаях мар, ялта е темиçе ялта пĕрре-иккĕ çех. (Чаплă, паллă Йĕрĕх пур килйышсене пĕр-пĕрин çывăхĕнче пурăнма тăвăр, йывăр). Анчах Тӳркĕллине пур чухне те амалăхпа çеç çыхăнтармаççĕ, унта арçынлăх сĕмĕ те палăрать. Аслă Йĕрĕх хăвачĕ килтен ан кайтăр, ӳлĕм те унăн ырлăхĕпе, пайтипе те усă курса пурăнас тесе ăна авлантарма та пултараççĕ. Çапах Тӳркĕллипе çыхăннă йăла-йĕрке пĕтĕмĕшле ахаль Йĕрĕхĕнни пекех, чирĕсем те çавах. Çапах ăна чăн, çӳрекен укçа хывмалла, тăхланпа кайран укçа вырăнне усă кураймастăн-çке. Вырăнĕ унăн ялан

тенĕ пекех – кĕлетре: *Пирĕн Тӳркĕлли кĕлетре пурăнать теççĕ.* Ачасен тыткаларăшне, йĕрĕхпе танлаштарнă пекех, унăнпе танлаштарни те пур: *Тӳркĕлли, эсĕ те пулин вырăнта лара пулин пар* (Вăрнар районĕнчи Оравăш, 1937 çул).[39]

Тӳркĕлли сăнарĕ уйрăм пуканере çирĕпленсе ларнă. Ăна хума пултарнă пĕрне (çӳпçе, кунтă) йăлара пĕлтерĕшлех мар, ăна упракан сăпка пек кăна. Пуканине пир татăк-кĕсĕкĕсенчен, улăмран, çемçе ытти япаларан тунă. Урăх материалтан калăплани те пулма пултарать: *Тӳркӳлли – йывăçран тунă изображени.* (1937çул)[40]

Ку пукане тахçан малтан такама сăнарланă ĕнтĕ. Ăна, хăй вăхăтĕнче питĕ сума сунăскере, халь пӳтлĕ астăвакан та сахал. Пĕррехинче вăл ватăлса çитсе (тата парне хывтарса) йăлăхтарнă та, тен: *Тӳркӳлли – Йĕрĕх, усал турă, вăрăм калпакпа çӳретчĕ тет; Эсрел! Кив тӳркĕлли! Вилнĕ!* (1937çул)[41]

Паллах, Тӳркĕлли иртнĕ çулсен асăмĕпе, ăс-хакăл вăйĕпе хăватланнă. Вăл несĕлсен темиçе ăрăвĕн ыр сунăмне илнĕ, ăна ваттисем хăйсем пиеленĕ. Çак Йĕрĕх пĕтĕм йăха пĕлет, пурне те астăвать. Унпа килĕштерсе пурăннă çынсем тем те курнă, çывăхри пĕтĕм киреметре, кĕлĕре тасалса йăха тăснă, пурнăça пĕтермен. Турăлăх пусмипе çӳле хăпарнă Тӳркĕллине килхуçи яланах пуçтаять, киле çитсен малтан ăна сывлăх сунать.

Ахаль Йĕрĕх чухне Тӳркĕлли нимĕрпе, пашалупа, нухраткăсемпе килĕшнĕ пулсан, халь ăна çураçтарма кайăк-кĕшĕк те, путек те кирлĕ. Ытах пысăк айăпа кĕрсен тиха та кӳме тивет.

*Путек-сурăх е тиха пуснă пулсан тирне пуçĕпе пĕрле, ури-чĕрнисемпе пĕрле хĕвелтухăç енне туса йывăç çине е хӳме çумне çакаççĕ. Виç кун çапла тăратаççĕ. Çак вăхăтра унăн чунĕ хĕвел патне çитет тата нумай выльăх парать. Юнĕпе Тӳркĕлли кӳлепине сĕреççĕ. Хĕвелтухăç енне пăхса кĕлтăваççĕ, пӳртре пулсан вара алăк çине пăхса кĕлтăваççĕ* (алăксене авал хĕвелтухăç енне тунăран), (1907 çул).[42]

Тӳркĕлли халь пĕтĕмĕшле ырă, çутă чунăш, усаллăхĕнчен тасалнă. Йĕрĕхпе тепĕр чух хăратнă пулсан та Тӳркĕллипе хăратмаççĕ, çынна усал тумаççĕ, унпа сулмаççĕ.

*Тӳркӗлли – кӗпе тăхăнтартса улăмран калăпланă пукане. Пуçне пиртен тунă, питне икĕ улăм пĕрчипе хĕресленĕ. Чирсенчен хăтăлас тесе ăна çул çине пăрахаççĕ. Теприсен тӳркӳлли пӳртрех тăнă* (1937 çул).[43]

*Пĕр-пĕр хĕр хăй пĕчĕк чухне пуканесем тăвать; çав пуканесене качча кайнă çĕре илсе каять. Унтан вара вăл пуканесене юратнă хĕрсене парса янă, çавсемпе пĕрле Йĕрĕх кайнă. Çав пуканесем çĕмĕрĕлмесĕр çичĕ сыпăка çитсессĕн Тӳркĕлли пулнă вара* (1937 çул).[44]

*Йĕкерсен Тӳркĕлли – шыв хĕрринче, Тарăнвар урамĕ пуçĕнче... Миханькка карчăкĕ Тупăç сăрчĕ çине пăхса кĕлĕ калать: «Çырлах, турă, çырлах! Кепе, эс те çырлах! Туркĕллинчи ырă, сан умра калатăп...»*

*Тĕлĕнтерекенĕ çакă пулчĕ: «Телейĕме Атăл куçĕнчен, Сĕве пуçĕнчен, асатте çĕрĕнчен çавăрса кил!» – тени* (Самар облаçĕнчи Клевлĕ районĕнчи Йĕкер, 1990 çул).[45]

*Çутра пĕр карчăкпа ватă упăшки пулнă, усен ача-пăча пулман. Çавсен килĕнче Кĕлĕ теекен Тӳркĕлли пулнă, çавсен каски пуканĕ ăшĕ хăвăл пулнă, çӳллĕш пĕр аршăна яхăн. Çакă пукан ĕлĕкхи-ĕмĕрхи, пĕр ик çĕр çула яхăнхи пулнă, вара ялта кам шыçă чирĕпе, кăшне асат хуçнă, е урисем тукмак пек шыççан вара юмăçи çанта Тӳркĕллине пуççапма, парне кӳме, каски пуканĕ ăшне укçа яма хуша-хуша янă. Тӳркĕлли парни пăкани тунă, уна питĕ лайăх тумлантарса, вĕтĕ кĕмĕл тенкĕсем, нухратсем çакнă. Çапла вара, çакă каска пуканне пуççапма кайсан пăканине каска пуканĕ çумне тăратнă, ăшне укçа янă. Çакă парнесене кӳни ĕлĕкхи чăвашсен килĕнчи чирленĕ çын чунне вилес вырăнне пулнă. Вăл акă епле пĕлтернĕ: чăвашсен е пĕри-пĕри чирлесен, шыçă е асат хуçа пуçласан вара вĕсем каланă: ĕнтĕ Тӳркĕлли килсе кĕчĕ; пĕр киле кĕрсен пĕтерĕ ĕнтĕ вăл, вĕлермес çине килсе кĕрекен мар вăл. Часрах, çак чуна асаплантарнине курсан, чун вырăнне пăкани туса кайса лартнă, укçине каска пуканне янă. Ĕлĕк çын вилсен вилле укçа панине пĕлтернĕ. Çапла Тӳркĕлли ыйтнă чун вырăнне пăкани чирленĕ ячĕпе лартнă. Çынни çапах та чĕрлеймен, çакă*

*чирсемпех асапланса вилнĕ, вара кил-йышсем каланă: «Эй мăнтарăн Тӳрĕ кĕллийĕ, пирĕн парнене хапăл илмерĕ, çын чунех кирлĕ пулчĕ пуль!» – тесе шухăшланă. Çапла Тӳркĕлли ял хушшинче питĕ пысăк пăхăнтару пулнă теччĕç ваттисем* (Вăрмар районĕнчи Пĕчĕк Енькасси, 1929 çул).[46]

*Пĕр чăваш ялĕнче Петĕр Çтаппанĕ ятлă хресчен пурăннă. Пĕрре ирпе Çтаппан хăйĕн анкартине вырьăхсем пăхма кайнă. Итем патне çитсен вăл курах кайнă: итем çинче кушак тĕслĕ темле кайăк вылять, хăйĕн пуçĕнчен çутă тухса тăрать-мĕн. Çтаппан çавна курсан тĕлĕннĕ те, хăранă та. Вăл хăй курнине хăйсен ялĕнчи çыннисене каласа кăтартнă. Лешсем ăна каланă: «Эсĕ Мĕтри Микулайĕ патĕнче пурăнакан Тӳркиллине курнă пулмалла», – тенĕ.*

*Тепĕр кун çав Çтаппанах ĕçкеленĕ хыççăн хăй килĕнче çывăрнă. Сасартăк ун хăлхине алăка шакканă сасă илтĕннĕ. Вăл тăнă та çенĕк алăкне уçса пăхнă. Алăк умĕнче тепĕр ялта пурăнакан палланă хĕр тăрать-мĕн. Хĕр çак ялта пурăнакан Мĕтри Микулайăн пӳрчĕ ăçтине кăтартса пама йăлăннă. Çтаппан ăна Микулайăн пӳртне кăтартнă... Епле тепĕр хут çывăрма выртнине вăл пĕртте астуман. Ирпе вăраннă Микулайăн пӳртĕнче. Унта епле кĕрсе выртнине вăл хăй те пĕлмен, кил хуçи Микулай вăл кĕрсе выртнине курман та, илтмен те. Çтаппан та, Микулай та Çтаппана тепĕр ялта пурăнакан Тӳркилли чĕнсе Микулай патне илсе кайнине ĕненнĕ.*

*«А кам вăл Тӳркилли;» – тесе ыйтнă пĕр ача. Ăна пĕр чăваш ăнлантарса панă: «Тӳркилли вăл Киреметрен кĕçĕнрех, Йĕрĕхрен аслăрах сывлăш (Турă). Вăл, чăвашсем ĕлĕк ĕненнĕ тăрăх, халăха усал тăвакан сывлăш. Анчах ăна парнесем (укçа, пир татăкĕсем) памалла пулнă тата хурпа е кăвакалпа, пăтăпа, сăрапа чӳк тумалла пулнă. Вăл пĕр ялта е ялсен ушкăнĕсенче пĕрре çех пулнă. Вăл ялсен сыхлавçи пекки пулнă. Вăл этем сăнлă та, урăх чĕрчун сăнлă та пулма пултарнă. Тӳркилли пурăнмалли вырăнĕ ампар е мунча, е юри тунă пĕчик çурт пулнă. Хăшпĕр çĕрте Тӳркилли кĕлеткине пукане пек туса лартнă. Тӳркиллине пăхса усракан килте аслă ывăлне*

*авлантарнӑ вӑхӑтра Тӳркиллине те авлантарнӑ, ун валли хӗр пукане тата ҫӳпҫе тунӑ, ҫӳпҫи ӑшне пӗчиккӗ кӗпесем тата пир татӑкӗсем чикнӗ. Ҫав килтех хӗрне качча панӑ чухне пуканине упӑшкин килне туйипа ӑсатнӑ». Ҫапла каласа панӑ чӑваш* (Пушкӑртъен, 1920 ҫулсем).[47]

*Чӑвашсем чӑн аслӑ Турӑ ҫӳлте, пӗлӗт ҫинче, пурӑнать тесе ӗненеҫҫӗ. Вӗсенӗн Ҫӳлти аслӑ Турӑсӑр пуҫне ытти турӑсем те пит нумай. Ҫав турӑсем хушшинчен вӗсем хӑш-хӑш кил картинчи кӗлетсенче Тӳркӗлли пур тесе ӗненеҫҫӗ.*

*Ҫав Тӳркӗлли ҫынна ҫӑпан кӑларать те куҫа пӑсать теҫҫӗ; унтан ытла вӑл ҫынна ниепле сиен те тӑваймасть теҫҫӗ. Ҫавӑнпа куҫа тӳрлетес тесен вӗсем юмӑҫ патне каяҫҫӗ те юмӑҫ каласа янӑ тӑрӑх Тӳркӗлли кӗлечӗ умне е укҫа кайса пӑрахаҫҫӗ, е нимӗрпе кайса чӳклеҫҫӗ. Ҫапла тусан вара тӳрленет теҫҫӗ.*

*Кӗлетре Тӳркӗлли пуррине вӗсем тӗлӗкре курса пӗлеҫҫӗ. Вӗсем ӑна те асӑнса выртса кураҫҫӗ, те вӗсене хӑйсене курӑнать, ӑна лайӑхах пӗлейместӗп. Пӗрре ҫапла пирӗн пичче ҫывӑрса тӑчӗ те хӑйне тӗлӗкре Тӳркӗлли курӑннине каласа кӑтартрӗ. Пирӗн ҫумра пӗр Антун ятлӑ ҫыннӑн йывӑҫ пахчинче пӗр кӗлет ларать, вӑл кӗлетре пирӗн ялсем Тӳркӗлли пур тесе ӗненеҫҫӗ. Пирӗн пичче ҫав-ҫав кӗлетре куртӑм тесе каласа кӑтартрӗ. Вӑл вӑхӑтра пирӗн пиччене питӗ пысӑк ҫӑпан тухнӑччӗ, ҫав ҫӑпанпа вӑл каҫхине яланах йынӑшса выртатчӗ. Пирӗн пичче ҫав кӗлет шӑтӑкӗнчен ҫынсем Тӳркӗллине асӑнса пӑрахнӑ укҫана илнӗ курнать, унтан укҫа илсессӗн хирӗҫ е пӗремӗк, е кулач татӑкӗ пӑрахмалла тет те, вӑл вара ним те тумасть тет. Пирӗн пичче ӑна илнӗ те апла тума пӗлмен. Вӑл хӑйне часрах е укҫа памасассӑн, е нимӗрпе чӳклемесессӗн ҫилленсе ҫӑпан кӑларать тет те ҫӗрле ҫӑпан тухнӑ ҫын патне пырса унӑн ҫӑпанне чӑмӑртаса ыраттарать тет, ҫӑпан тухнӑ ҫын ҫав ыраттарнипеле йынӑшать пулать вара.*

*Пирӗн пичче ирхине тӑчӗ те акӑ ҫапла каласа кӑтартрӗ: «Эпӗ йынӑшса выртсан-выртсан пӑртак ыйха кайрӑм. Тӗлӗкре ман куҫа хамӑр кӳршӗри Антун пиччӗнӗн пахчинче ларакан*

*йывăç айĕнчен пĕр шур сухаллă ватă тутар тухрĕ пек, урине пушмак тăхăннă пек, унăн хыçĕнчен тата икĕ пĕчĕккисем тухрĕç пек те, ватти ик пĕчĕккисене: «Вăн çав килте пĕр кун пĕр ача пирĕн шăтăкран виçĕ пус укçа илсе кайнă, айта халь унăн çăпанне кайса чăмăртар», – тесе каларĕ пек те, тӳрех манăн патăма килчĕç пек. Ватти вара: «Е укçана час пырса пăрах, атту тата кăларатпăр», – тесе çăпана чăмăрта пуçларĕ пек тет. Эпĕ хай ыратнипе вăранса кайрăм та, нимĕн те курăнми пулчĕ», – тесе каласа кăтартрĕ.*

*Тӳркĕллине çавăн пек тĕлĕкре курнине нумайăшĕ каласа кăтартаççĕ. Ыттисем унăн сăмахне ĕненсе кĕлетре Тӳркĕлли чăнахах пур иккен тесе ĕненеççĕ* (Тăвай районĕнчи Енĕш Нăрваш, 1886 çул).[48]

*«Йĕрĕх» ăнлава «тӳрĕ кĕлли» ăнлавпа пăтратмаççĕ-ши – ун пирки хăшпĕр çыракан «пукане», «кĕлетке» сăмахсене асăнать те. Орхас Кошкă прихутĕнчи çынсем, темчуль ыйтса тĕпчесен те, йĕрĕх пуканисем пирĕн тăрăхра çук, вĕсем кӳршĕри Торханкассипе Нарат Чакки прихучĕсенчи ялсенче кăна пур, теççĕ. Анчах вĕсем асăнакан ялсенче Йĕрĕх мар, Тӳрĕ кĕлли пуррине вара эпĕ чăнласа пĕлетĕп* (Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Орхас Кошкă, 1892 çул).[49]

*Çемьере пĕри сывмарлансан чӳк тунă. Чӳк вăрăмми тата кĕски пулнă. Кĕске чӳкре асăннă: Турă, Турă çулĕ (сулу), Таса çĕр йышĕ т.ыт.те… Вăрмарти туйкеней тесе пĕр юсман панă. Умĕнчи тесе пĕр юсман панă. Ăвăс тесе тепĕр юсман панă. Мăнçырма маррĕнчи уйчук айĕнчи тӳркĕлли тесе пĕр юсман панă. Апраль тӳркĕлли тесе пĕр юсман панă. Иштукан арманĕнчи тӳркĕлли тесе пĕр юсман панă. Тимĕрпай тӳркĕлли тесе пĕр юсман панă. Кайми Ваçлей хурăн тӳркĕлли тесе пĕр юсман панă. Ăртемей тӳркĕлли хурăнĕ, Петрухха тӳркĕлли хурăнĕ тесе юсман панă. Çак чӳке пĕр кунта туса пĕтермен, эрнене яхăн çитнĕ* (Вăрмар районĕнчи Мăнçырма, 1911 çул).[50]

*Тӳркĕлли текенни – кĕсен-çăпан кăлараканни. Уна кĕлетре усраççĕ. Этем кĕлетки пек йывăçран тунăскерне, унта, укçасам*

*пырса яраҫҫӗ шӑтӑкран. Укҫи пухӑнсан халӑхпа кӑвакал илсе пусаҫҫӗ, пыл илеҫҫӗ, эрех илеҫҫӗ те асӑнаҫҫӗ. Ӑна иконана хисепленӗ пек хисеплеҫҫӗ. Кашни кил тӑрӑх йӑтса ҫӳресе, кӗрсе тухса, укҫа илеҫҫӗ. Укҫине каллах ӗҫеҫҫӗ* (Канаш районӗнчи Мӑкӑр, 1911 ҫул, ялта Йӗрӗх вырӑнӗ те пур).[51]

*Кӗш-кӗш чӗмре чунлӑ теҫҫӗ: тӳркилли чирӗ теҫҫӗ. Пирӗн ялта Тӳркиллине пӗр ял вырӑнӗнчи пахчара пурӑнать теҫҫӗ. Тӳркиллине пӗр ҫитӗннӗ питӗ муллӑ хӗр теҫҫӗ. Ҫав пахча патӗнче ҫынпа вӑрҫсассӑн, тула тухсассӑн, ҫӗнӗ ҫынсем ҫав пахча патӗнчен иртсе ҫӳренӗ чухне чӗркуҫленсе салам памасан ҫав Тӳркилли тытать теҫҫӗ. Тӳркилли тытсассӑн ҫынна е ҫӑпансем тухаҫ тет, е куҫне шур илтерет, е шӑлне суртарать, пӗчӗк ачасен пуҫне ҫӑпан – йытпуҫ текеннине ярать тет, вӗлерекен чирех ямас теҫҫӗ. Тӳркиллинчен хӑтӑлас тесен ҫав пахчана тенкӗсем, нухратсем, укҫасем пӑрахаҫҫӗ, кӑвакал, чӑх чӗпписем* (XX ӗмӗр пуҫламӑшӗ).[52]

*Вӗсем, хӑш-хӑш килкартинчи кӗлетсенче Тӳркӗлли пур, тесе ӗненеҫҫӗ. Ҫав Тӳркӗлли ҫынна ҫӑпан кӑларать те куҫа пӑсать, теҫҫӗ. Ҫӑпанпа куҫа тӳрлетес тесен, вӗсем юмӑҫ патне каяҫҫӗ те, юмӑҫ каласа янӑ тӑрӑх, тӳркӗлли кӗлечӗ умне е укҫа кайса пӑрахаҫҫӗ, е нимӗрпе кайса чӳклеҫҫӗ. Ҫапла тусан вара, тӳрленет, теҫҫӗ. Кӗлетре Тӳркӗлли пуррине вӗсем тӗлӗкре курса пӗлеҫҫӗ* (Тӑвай районӗнчи Енӗш Нӑрваш, XX ӗмӗр пуҫламӑшӗ).[53]

*Тӳркӗлли, назв. духа (из тӳрӗ + кӗлли). Лешӗ, ултавӑҫ, сан куҫа ҫанти Тӳркӳлли (Тиркӳлли) тытнӑ тет; сан унта пӑртакҫӑ тутӑр ҫине ҫыхса, кӗрпепе пӗр-икӗ пус укҫа кайса ҫакас пулать, вара тӳрленет тет* (1937 ҫул).[54]

*Тӳркӗлли киремет хаярӗ пекки пулнӑ.*[55]

*Тата пирӗн ялта Тӳркӗлли полнӑ тет. Ӑна вара е кӑвакал, е хор, е тин ҫоралнӑ путек панӑ тет. Ҫав Тӳркӗлли ҫорҫӗр ҫитсен вара тенкӗсем ҫакса ярса шӑнкӑрт! шӑнкӑрт! шӑнкӑрттаттарса орам тӑрӑшпе анчах ҫӳренӗ тет. Халь ҫав Тӳркӗлли ҫок, мӗншӗн тесен ӑна халь никам та пӑхмаҫ. Вӑл Тӳркӗлли, как хӑйне пӑхма пӑрахсанах, кайран вара орам тӑрӑшпе ма-*

*кăрса çӳренĕ тет, вара кайран просутăва качча кайнă теççĕ* (Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Нарат Чакки таврашĕ, 1937 çул).[56]

*Тӳркĕлли – ватă тутар тет. Вăл вара пĕр-пĕр çын кĕлетне кĕрет тет те ниепле те тухмасть тет. Пирвай Тӳркĕлли хуçасене пĕлмешкĕн тĕлĕкре ватă тутаррăн куранса хăй пурăнакан кĕлетне кĕрсе кайнă пек курăнать тет. Унтан вара пирвай ашшĕне е çăпан кăларать, е шыçтарать тет; унтан ывăлĕсенĕн пуçĕсене кĕсен кăларать тет. Вара ăна хуçи кăвакал илсе пăтăпа чӳклет тет те, тин тӳрленет тет. Çапла вара пĕрре чӳк туса çырлахтарсан хуçине пĕрре те тытмасть тет. Тăрсан-тăрсан вара кӳршисене тыта пуçлать тет. Хуçи вара çав тытать тесе каласа ярать тет те кĕлете чĕрес çакса ярать тет. Кӳршисем вара унта укçа кайса яраççĕ тет. Укçи нумай пухăнсан хуçи çав укçана пуçтарса каллах пасартан кулаç илсе чӳкĕ тăвать тет. Хуçи Тӳркĕллине çиллентерсен урине шыçтарса вара виличченех тӳрлентермест тет* (Вăрнар районĕнчи Оравăш, 1937 çул).[57]

*Тӳркĕлли – питĕ кутăн усал чунăш, ĕлĕк ăна чăвашсем хур, кăвакал тата тиха панă; ăна палăртакан пуканесем юмăçсен лаçĕсенче тăнă. Çакнашкал килтен качча тухакан хĕрĕн, чунăша çилентерес мар тесе тата хăйĕн йышне хушас тесе, пĕр пуканине пĕрле илмелле пулнă. Каччăсем çапах кун пек хĕрсенчен, пуяннисенчен те, асăрханнă* (1937 çул).[58]

*Йĕрĕх полнă перĕн ялта ватти, отаманĕ. Ялĕпех Йĕрĕх полнă, пĕри полнă отаманĕ. Она параччĕ такасам – ялти çын шăпах килет те, парат. Первей çăнăх хорат, икĕ пус окçа хорат, кĕрпе хорат, асăнса она: мана отнаккă ту, тесе, хаман ту; эп сана така паратăп, тет; халях парăп, тет. Пасара каят, илет така, пĕр полтинник парса илет. Карян пусаччĕ, пасартан кисен. Пуссан, Йĕрĕхе поççапаччĕ: çăпан ан кăлар мана, суат çăпантан, тет. Поççапат та ашне çиет пӳрт-ăш халăхпа; шăннине çонтарат. Вара çырлахрĕ, çăпан тохмарĕ* (Муркаш районĕнчи Туçи Олкаш, 1930 çул).[59]

*…Йĕрĕхе – çăнăхпа чуста çăрса, пĕчĕк кăна чашăк тăваççĕ. Унтан кĕрпепелен пăтă тăваççĕ, ăна пĕçереççĕ вара. Унтан*

*вара хĕрлĕ çиппелле тăхлан шăратса çакаççĕ. Унтан вара ăна кайса çакаççĕ Йĕрĕх çта пур, çта асăнсан: йăвăçра пулсан йывăç турачĕ çине кайса çакаççĕ, çуртра пулсассăн çурт патне кайса пăрахаççĕ. Хуçисене пĕлтерес тиекенĕ кĕлетне кĕрсе çакать.*

*Тӳркĕлли – пĕрнепе çакнă япала. Ăна чӳк тăваççĕ: кăвакал пусаççĕ, хур пусаççĕ, парнене тесе туттăр-сурпан параççĕ. Хуçине çилентерсессĕн, пĕрер çын тепре вăрççан е пĕрер сиен тусан хуçи кĕрет те пĕрнине силлет: «Çавна кайса кур», – тет. Унтан вара, вăл çын чирлесен, хурсем пусса чӳк тăвать те парне пырса парать, е укçа, е туттăр-сурпан парать. Хуçи вара пухăннă укçасемпе пыл хывать те хăна чĕнет те ĕçет е пасара каять те хăйне валли пĕрер япала илет.* (Муркаш районĕн çурçĕр енĕ, 1898 çул).[60]

*…Тӳркĕлли амăшĕ – Тимешри пĕр карчăк ячĕ…(1898 çул).*[61]

*Пирĕн ялта Тӳркĕлли Исай кĕлетĕнче пурăнать. Ăна хĕр евĕрлĕ е пăкани пек кураççĕ. Исай хăнаран таврăнсан: «Тав сана, Тӳркĕлли», – тет. Тӳркĕлли вара вăл тытать, ăна нухрат е тăхлан шăратса памалла. Манăн мункун умĕн кăкăр шыçса кайрĕ. Тӳсеймесĕр, кăкăра çĕçĕпе касса юхтаратăп. Юмăça кайрăм та, юмăç: «Сана, ачам, Тӳркĕлли тытнă, нухрат памалла», – терĕ. Чăнах та, нухрат кайса парсаннах тӳрлентĕм.* (Вăрмар р-нчи Энĕшпуç, 1911 çул).[62]

*Петров Степан ирпе авăн картине, выльăх кĕрсе кайман-и-ха тесе, кайса пăхсан йĕтем çинче кушак вылянине, унăн пуçĕ çуталса тăнине курать. Кун пирки каласа парсан çынсем ăна, Димитриев Николай килĕнче пурăнакан Тӳркĕлли мар-и-ха, теççĕ. Тепрехинче, килĕнче ӳсĕр выртнă чух, Петров алăка такам шакканипе вăранать. Тухсан крыльца çинче Вăтакасри паллана хĕре курать, лешĕ ăна Димитриев Николай патне ăсатса яма ыйтнăран, унпа пĕрле каять. Тăна кĕрет те – хăй Димитриев пӳртĕнче çара тар выртать иккен. Ыйтать те – хуçи мĕнле вăл унăн килне лекнине пĕлмест те мĕн. Эккея, ун патне Вăтакасри Эле Митри патĕнче пурăнакан Тӳркĕлли килнĕ пулнă, хĕрĕ те çав килтенех. Димитриевпа Эле Митри*

*тăвансем пулаççĕ. Эпĕ хам ыйткаларăм та: Эле Митрин Тӳркĕлли çук-мĕн, В.И. Альфонсов тиеччукăн çăка пур вара. Олмалуйри Н. Димитриев ампарĕнче малтан Тӳркĕлли пурăннă. Анчах çак ампара вăл хăйсен ялĕнчех Николай Митрофанова сутса ярсан Тӳркĕлли ун патĕнчен тухса тарать. Халь вара çапах Николай Димитриев патĕнчех, выльăх картинче, пурăнать. Çак Тӳркĕллине ялйыш çăпан-тем тухсан кĕлтăвать. Çăка турпасне çупа сĕрсе çăпан çинче тытаççĕ те Димитриев килхушшине хыçал енчен ывăтаççĕ. Ялта тепĕр Тӳркĕлли Кивçортра – хĕвелтухăç енчи уйра – пурăнать.* (Куславкка районĕнчи Çӳлти Олмалуй, 1870 çулсем).[63]

*Аялти турăсенчен чи паллисенчен пĕри хăшпĕр çĕрте Тӳркĕлли шутланать. Нумай чухне вăл – пĕрене çурăкне кĕмĕл укçа чикнĕ е укçине унти пĕрнене* (е пиштере) *хунă ампар* (е лаша вити). *Укçине çĕрлехи шăплăхра хураççĕ, унсăрăн усси çук. Теччĕпе Çĕрпӳ уесĕнчи хăшпĕр ялсенче хывнă укçана хуралтă хуçи çулталăкран пуçтарса илет. Вăл укçапа, пухăннине кура, пĕр-пĕр выльăх, салат, хăмла туянаççĕ. Сăра вĕретеççĕ, пăтă пĕçереççĕ – çакна пĕтĕм касĕпе пĕрле ĕçсе-çисе яраççĕ.* (Магницкий В.К., 1881 çул).[64]

*Килĕнче Тӳркĕлли тытнă çынна вилсен масар тӳркĕлли теççĕ. Вăл* (масар е çăва тӳркĕлли) *çăва çинче вилнисен тĕнчине ертсе пыракансенчен чи кĕçĕнни (*5-мĕш шайри), *çăва киремечĕ, шутланать.* (Магницкий В.К., 1881 çул).[65]

*Нарат Чакки прихутĕнчи Тӳркĕлли Траккассинчи хупах хыçĕнчи пушă çĕрте вырнаçнă. Çак вырăн хуçи Тӳркĕлли пукане евĕр пулни пирки те, унта пукане тавраш пулни пирки те нимĕн те калайман* (Сĕнтĕрвăрри районĕ, 1870 çулсем).[66]

*Тӳркĕлли тени чăвашсен чунăша пуçтайнине, унăн вырăнне тата пăрахăçланă хуралтăра е пĕр-пĕр пушă çĕрте пурăнакан нимле сăнарсăр чунăша пĕлтерет. Тӳркĕлли Йĕрĕхрен сумлăрах, пĕлтерĕшлĕрех* (Магницкий В.К., 1881 çул).[67]

*Йĕрĕхсене нохрат хываççĕ, Тӳркĕллисене – хурсем. Çапла калама пулать: Тӳркĕллине ыр хуçапа танлаштарсан, Йĕрĕх вара çыруçă кăна. Тӳркĕлли Палюк (Павел) ампарĕнче пурăнать.*

*Анчах Палюк ампарĕнче нимех те уйрăлса тăраканнине курмарăм, хывма килни те палăрмасть. Килхуçи карчăкĕ, сирĕн Тӳркĕлли ăçта тăрать, тесе ыйтсан килхушши тепĕр енчи паччалăк (хапха) çумĕнчи мунча çине кăтартрĕ. Анчах унта та нимĕн курмарăм. Пӳртпе пĕр çий айĕнчи икĕ хутлă ампарта та нимĕн те курмарăм* (Куславкка районĕнчи Ырашпулăх, 1870 çулсем).[68]

*Тӳркĕллилле килте ывăл авланать пулсан, Тӳркĕллине те авлантараççĕ. Хĕрарăм евĕр пукане калăпласçĕ, çăкаран çӳпçе (хĕр арчи вырăнне) туса ăна çипуçпа, пир татăкĕсемпе тултараççĕ. Хĕрĕ качча тухать пулсан, çавнашкал пуканене хĕр хыççăн уйрăммăн ăсатаççĕ. Кунашкал тĕслĕх пĕррехинче Шупашкар уесĕнче пулчĕ – Нарат Чаккинчен çывăхри Кушник прихутĕнчи Ăстакассине пукане ăсатрĕç.* (Сĕнтĕрвăрри районĕ, 1870 çулсем).[69]

*Тӳркĕллине килтисем те хываççĕ: хур е кăвакал. Унăн шӳрпипе пăтă пĕçерeççĕ. Хывнă чухне пĕр сас-чĕв те çук* (Магницкий В.К., 1881 çул).[70]

*Тӳркĕллисем ку енче татах пур: 1) тутарланнă Кармăшри шкул (медресе) çумĕнчи кивĕ пӳртре; 2) Энĕш хĕрринчи арманăн йăмрасем хушшинчи ампарĕнче (хуçи, Хусанти Жарков С.А. мещен, ампар кĕтесĕсенче тепĕр чух пăхăр укçа, ăвăс çуртасем тупать, йăмралăхра чĕрĕ кăвакалсене, чăхсемпе автансене, хăшпĕрисене йывăç çумнех урисенчен кăкарнă, курать); 3) Токанашри Йĕрĕх Хĕветĕрĕн çĕрсе йăтăнса аннă арпалăхĕ-нче (ку хуралтăна Хĕветĕр ни юсамасть, ни сутмасть); 4) Чашламари Лукоян Иванов пахчинчи улмуççире.* (Куславкка районĕ, 1870 çулсем).[71]

Çапла вара, амăшĕнчен хĕрне, хыççăн унăн хĕрне тата малалли ăрурисене нумай хут – «çичĕ сыпăк таран» – куçса Йĕрĕх Тӳркĕлли ятне илнĕ, кĕçĕнрех турă пулса тăнă. Килте çеç мар, ялта та вăл пур амăшсен амăшĕ вырăнĕнче хисепленет. Паллах, Йĕрĕхе ку шая хăпартма тирпейлĕ, сапаланса кайман, çирĕп кăмăллă хĕрарăмсем кăна вăй çитереççĕ, хăйсен йăхне çине тăрса тытса пыраççĕ.

Тӳркĕллин тĕп сăнĕ-палли – пукане, ытларах чухне йывăçран каснă хăвăллă пукане-пухмач, ăна хума пултарнă пĕрне е урăх савăт пĕлтерĕшлĕ мар. Асри сăнарĕ пĕтĕмĕшле – пуян хĕр. Амăшĕнчен куçнă йĕрĕх пуканин çипуçне тепĕр ăрури хĕрĕ çĕнетнĕ.

Тӳркĕллине сăнарлакан йывăç пукане темиçе хут ăшлă пулма пултарнă. Черетлĕ ăрури кĕрӳ мăшăрне сумласа çавăн пекех пысăкрах хăвăллă пукане касса унăн пуканине хупланă. Малтанхи пукани, хуняма парса янă йĕрĕх, шала юлнă. Килти хĕр пĕрчисене хавхалантаракан çак тетте, пĕрремĕш пукани пӳ рнеске пек çеç пулнăран, çичĕ хута çитсен те шитрен пысăк пулман. Çакнашкал Тӳркĕлли пуканисем Атăлăн ту енчи халь ырăсланнă ял-хулара «матрешка» ятпа упранса юлнă.

Кăмăлсăр пулсан Тӳркĕлли йĕрĕх чирĕсем ярать. Анчах унăн хурачунлăхĕ сĕвĕрĕлсе пĕтнĕ ĕнтĕ. Ăна ахаль Йĕрĕхе лартнă пекех çырлахтараççĕ, çапах пахарах ĕçме-çимене, кайăк-кĕшĕк, путек, сăра та; кĕмĕл укçа, пир-авăр хываççĕ. Амăшĕсен амăшĕ пулнăран йăх-ăратăшăн Тӳркĕлли хумханать, тепĕр ăрушăн та качча кайма çеç мар, кирлипе каччă пек авланма та пултарать. Халь вăл хурăнташсемшĕн кăна мар, пĕтĕм тăван-пĕтеншĕн хаклă. Ун ячĕпе пуçтарăннă хывăм та пĕтĕм ялйыш валли хăй пĕрлĕхне аса илтерме каять.

# VIII. Йĕрĕхлĕх сĕвĕрĕлнин çул-йĕрĕ

## 8.1. Йĕрĕхлĕхпе кĕрешни

XVIII ĕмĕрте Мускаври патша влаçĕ мăшкăлласа, пусмăрласа чăвашсене вăйпа Христос тĕнне кĕртнĕ, чиркӳсем ларттарнă. Пачăшкăсем салтаксем, казаксем пулăшнипе киреметсене çунтарнă, килсерен халăх ĕненĕвĕпе çыхăннă япаласене тустарнă, пăхăнман çынсене, тепĕр чух ялĕпех айăпланă. Ахальтен мар чăвашсем Пугачев вăрçи чухне чиркӳсене аркатнă, пачăшкă таврашне хĕненĕ, çакнă та. Ку вăрçă хыççăн Вăтам Атăл тăрăхĕнче  чиркӳ ĕçĕ-хĕлĕ пĕр çирĕм çуллăха лăпалнă пулнă.

XIX ĕмĕрте чиркӳ ĕçченĕсем, миссионерсем ӳкĕтлев мелĕпе ытларах усă курнă, хĕреслĕх кĕллисене, халапĕсене чăвашла куçарса та халăх ăсне минретнĕ, тăван чăвашлăхран пистерме тăрăшнă. Ĕмĕр вĕçнелле, XX ĕмĕрте ку енĕпе уйрăмах Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнисем палăрнă. Вăл çулсенчи пачăшкăсем халăх йăли-йĕркипе хăйсене тупăш кӳме те  ӳркенмен. Патшалăх пулăшăвĕпе XX ĕмĕр вĕçĕнче чиркӳ тепĕр хут çунат сарчĕ.

Кунçулăн кирек хăш тапхăрĕнче те халăха инемĕ-ĕнĕнĕвĕ, тĕнчекурăмĕ туллин тивĕçтернĕ. Анчах ют тĕн миссионерĕшĕн уйрăм халăх ăс-хакăлĕ, йăли-йĕрки ухмахлăх шутланать. Турри-чунăшĕсем те ниме юрăхсăр, пакăç япаласем, çавăнпа вĕсен асамлă ĕçĕ-хĕлне пачăшкă-мулласем çын пĕлме тивĕç мар усаллăха куçарнă.

*Новокрещенного села Воскресенского, Красные Четаи тож, священноцерковнослужители объявляли мне… о неисполнении имеющихся у них приходе новокрещенами христианских должностей, а углубляющимся больше в прежних своих чувашских нечестиях… А сего мая 13 дня означенные священноцерковнослужители при поданном своем ко мне объявлении показали найденного и вынятого ими из домовой клети*

*деревни Тохтамышевы новокрещена Алексея Иванова сына Миши старинного божка, называемого по их языку Ереха, да с годовалого жеребенка снятую и повешенную в новосежанной кремете на дереве кору с головою и ногами* (1769 çул).[1]

*Я жил псаломщиком в приходе села Кармалы Самарского уезда. В приходе есть русско-чувашская дер. Юреево. Во время хождения с крестом на пасхе по деревне мне пришлось присутствовать при уничтожении священником кузовка, в котором содержался Йӗрӗх. Он узнав, что у крестьянина N содержится Йӗрӗх, задумал уничтожить Йӗрӗх. В полном облачении, с крестом в руке он взобрался на подловку жилой избы и снял висячий там кузов и показал нам, присутствовавшим людям. При разорении Йӗрӗха женщины начали что-то причитывать и плакать. Трудно сказать, что заставило их плакать: страх ли пред разоряемым Йӗрӗхом или страх пред ответственностью за содержание его, т.к. по их предположению: священник мог привлечь к ответственности. Между тем, снявши кузов, священник торжественно понес к реке топить. У реки кузов был опрокинут… Деньги от Йӗрӗха были вложены в церковную кружку, а остальное все было сплавлено по реке Кармалке* (Самар облаçӗнчи Кошкӑ районӗнчи Кивъял Ысмах, с. Старое Юреево, 1900 çулсем).[2]

*Юлашки вӑхӑтра хӗреслӗхшӗн çунакан пӗр çын витӗмӗпе нумайӑшӗ йӗрӗхсене шывпа юхтарса ячӗ* (Чӗмпӗр облаçӗнчи Чӑнлӑ районӗнчи Тимӗрçен таврашӗ, 1891 çул).[3]

1840 çулсенче чӑвашсем хушшинчи хӗреслӗхӗн паллӑ миссионерӗ тӑван халӑха ют тӗн авӑрне путарма ятарласа вунпӗр текст хатӗрленӗ. 10-мӗш вӗрентсе каланине пӗтӗмӗшле çапларах шухӑшпа çырнӑ (Вишневский В.П., ун чухнехи чӗлхепе): *мӗн усси-ха хӑвӑр алӑпа касса тунӑ е шӑратса кӑларнӑ кӗлеткесенчен, мӗн усси куратӑр кӗлетӗрсенче кӑмӑлласа тытса усракан Йӗрӗхсенчен, качча каякан хӗрсене пӗрле парса яракан çӑмахсенчен, ӳт çинчи çӑпан-кӗçе хӑвӑр Йӗрӗхе нимӗр панипе пӗтет-и, пӗрнене каснӑ чӗрне, çӳç, пилеш турачӗ, тӑхлан татӑкӗ хунипе пӗтет-и, хӗрӗрсем упӑшкипе килӗшӳллӗ те тулӑх пурӑнаççӗ-и* т.ыт.те.[4]

*Мне самому не приходилось видеть обряды, совершаемые в честь Йӗрӗх-у. Я даже не видал, что за вещь это йӗрӗх... В настоящее время между стариками держится страх пред Йӗрӗх-ом, что видно из того, что они наотрез отказываются рассказывать о почитании Йӗрӗх-а из убеждения быть наказанным за откровенность о нем. Известно, что почитание Йӗрӗх-а, держится между чувашами даже устойчиво, напр. в деревнях Нижнем Тимерчееве и Котяково Буинского уезда... Местный священник села Большого Батырева не только не старается уничтожить Йӗрӗх-а, но напротив поощряют почитание его, т.к. пользуются деньгами, опущенными в кузовок йӗрӗх-у. В данном случае содержатели Йӗрӗх-а являются не только почитателями его, сколько пособниками священника по увеличению доходов* (Патӑръел районӗ, 1900 çулсем).[5]

*Василий Иванов ампарӗнче çынсем (тутарсемпе вырӑссем те) таçтан та кӗлтума çӳренӗ. Мелӗм хуçа ятлӑ киремет е Йӗрӗх пулнӑ. Ялти учитель хӗтӗртнипе ял старости çак сӑваплӑ вырӑна пӗтерме çӳлти пуçлӑхсенчен ыйтать. Кӗçех кунта Сала (Богородски) вулӑс старшини понятойсемпе килет. Тӳрелӗх тӗпчевӗ тапранса каять. Çакӑнти Йӗрӗх пирки пуçланнӑ ӗç* (следственное производство №816 судебного следователя 2-ого участка Чебоксарского уезда от 20.09.1870) *çинчен Хусанти окружной суд прокурорӗ патне çитет. Ампарти Йӗрӗхпе çыхӑннӑ пӗтӗм япалана 25.09.1870 Шупашкар уесӗн полици управленине упрама илсе каяççӗ* (№825). *Вӗсене следстви вӗçленсен çех, 1876 çулта, кил хуçине каялла тавӑрса панӑ, Иванова çавӑнчченех сӗтӗрнӗ. Ампарне вара Пӑва шывӗ хӗрринче çунтарнӑ, унта пулнӑ мӗнпур укçине чиркӗве илсе кайнӑ. Çак ампара çунтарнӑ вырӑна ялйыш Мелӗм-хуçа çырми теме тытӑннӑ* (Куславкка районӗнчи Кивъял, 1881 çул).[6]

*Йӗрӗх пӗрнисене пачӑшкӑсем пукани-мӗнӗ пуçтарнӑ, пурне те курмалла вӗсене аркатнӑ, урамра купаланӑ та çунтарнӑ. Кун хыççӑн, кам лайӑх пытарма ӗлкӗрнӗ, çавсен Йӗрӗхӗ кӑна юлнӑ.* (Оренбург обл., 1989 çул).[7]

Паллах, пур çĕрте те вăй илнĕ тĕн, уйрăмах патшалăх хӳттине лексен, ытти тĕн витĕмĕпе, ăс-хакăлĕпе, халăх тĕнчекурăмĕпе кĕрешет, тепĕр чух чи тискер мелсемпе. Тĕн ĕçченĕсем тĕллевне пурнăçлас тесе нимле чарăва та пăхмаççĕ, çынлăха та шута илмеççĕ. Мĕншĕн тесен хăйсем хăтланнине чи тĕрĕс, пархатарлă ĕç, хăйсем «Пултаракан», «Çăлакан» тесе хисепленине тĕнчене чи юрăхлă, чăн-чăн турă пек кураççĕ. Вĕсен усалне нумай чух чăтăмлăн, тен, чĕнмесĕр те çăтса янă пулин те чăвашсем иудаизма та, ислама та чунпа йышăнман. Хĕреслĕхе хирĕç те çĕкленнĕ, сăмахран, 1774 çулта. 1842 çулхи Шурча вăрçин сăлтавĕ те чиркӳ пусмăрĕпе çыхăннă. Коммунистла çăтмах пирки вара самантрах манса кайрĕç. Тăван халăха ку таранччен упранма чăвашлăх шăнăрĕ ăна çирĕп тытса тăни пулăшрĕ те пуль.

## 8.2. Йĕрĕхпе киремете уйăрманни

Чăвашсем (пăлхарсем) Алмас патша чухнех, X ĕмĕрте, тутарлăх (магометанство е ислам) витĕмне туйма тытăннă. Пăлхарсен пĕр пайĕ çак тĕне йышăнса урăх йăла-йĕркепе пурăнма пуçлать, чĕлхи те вĕсен улшăнать. Халь вĕсене тутар (Хусан тутарĕ) теççĕ. Исламри хăшпĕр сăмахсем чăваш чĕлхине кĕрсе кайнă, тĕслĕхрен: кепе, пихампар, хоçа, киремет т.ыт.те. Чăвашсем хушшинче çирĕпленсе çитеймен ислам манăçсах кайман халăхлăхпа пĕрлешсе, хутăшса кайнине нумай тĕпчевçĕ палăртать, йĕрĕхлĕх ĕçĕ-хĕлĕнче те ку пур. «Йĕрĕх» сăмах вырăнĕнче те, акă, хăшпĕр чух çав пĕлтерĕшпех «киремет» сăмахпа усă кураççĕ: кĕлетри киремет, киремет пătти.

Чылай вырăнта Йĕрĕх вырăнĕ киремете куçнă (киремет шайне çитнĕ). Пӳртрен, ампартан-килтен тухса вăл таврари (тăрăхри) пур çын кĕлтумалли, темиçе ялăн таса вырăнĕ пулса тăнă. Кунашкал куçăм нумай вăхăта тăсăлнă. XVIII ĕмĕрччен чăвашсен килйыш-ăратă киремечĕсем пулнине те калаççĕ. XVIII ĕмĕр хыççăн чăвашсем хушшинче çуралакан çĕнĕ сăваплă вырăнсене «йĕрĕх» сăмахпа мар, «киремет» тесе

палăртаççĕ. Йĕрĕхне хăйне те киреметри ансат пĕр чунăш шайĕнче шутлани пур. Çапах Киремет вăл турă ячĕ тени, Йĕрĕх вара киремет евĕр турăш (е чунăш) тата ячĕ çав вăхăтрах вырăнне те пĕлтерет тени тĕрĕсех мар пулĕ. Киреметри хывăмра Йĕрĕхе парнеленĕ нухратпа кĕмĕл вырăнне пăхăр укçа йышăнать. Йĕрĕхе малтан пир татăкĕ те хывман. Çавнашкалах «киремет» теме пуçланă çутçанталăкри хăшпĕр таса, сăванлă вырăнсенче турра, ырăсене чӳклеме пăрахнă.[8]

*Йĕрĕх сăнарĕ хăшпĕр вырăнта хаяр уй туррипе киреметпе те пĕрлешсе кайнă. Тĕслĕхрен, Авăркас р-нчи пушкăрт чăвашĕсем кунтăсенче упраннă килти пуканесене йĕрĕх те, киремет те тенĕ. Чистай уесĕнчи крешĕн тутарсем киремет тесе, чăвашсен Йĕрĕхĕсем пекех мачча çинчи хурăн хуппинчен тунă пураксенче упранакан япаласене (хывнă укçасем, пир татăкĕсемпе тĕркемĕсем) каланă.* (1887 çул).[9]

*Тĕрлĕ киреметсене, тĕрлĕ йăрăхсене хисеплесе, вĕсене парăнса пурăнаççĕ* (Елчĕк районĕнчи Корнавăш, 1930 çулччен).[10]

*Тимĕр йĕрĕк – пысăк киремет ячĕ. «Йăнкă вори киремет, Йăнкă воринче выртакан тимĕр йĕрĕк, çырлах! теччĕ, чӧк, çырлах!»* (Муркаш районĕнчи Хорачка, 1930 çул).[11]

*Хыçал тесе ял пуçĕнчи вăрмана калаççĕ. Ĕлĕк унта киремет, йăрăх нумай пулнă, халăх чӳк тунă* (Куславкка районĕнчи Муркар, 1941 çул).[12]

*Пысăк Çарăмсан çинче Чемен кĕлли ятлă киремет пулнă* (1941 çул).[13]

*Шокăль – Мальăм-хоçа çырминчи киремет ячĕ. Нумайĕшĕ чирлесен Шокăле асăнаççĕ, йомăçсем хошнă тăрăх, çортасем, апат татăксем, йĕрĕхсем пăрахаççĕ – каçартăр вăл тесе, мĕн осал ĕçсем тунă он омĕнче чирленĕ çын* (Шупашкар уесĕ, XX ĕмĕр пуçламăшĕ).[14]

*Пирĕн ялта, Ялавăрта, чӳк тунă вырăнсем икĕ тĕлте: пĕри ту çинче, тепри ял варринче. Малтанхине Киремет теççĕ. Çав вырăнсенче хурамасем лараççĕ. Вăл хурамасене никам та касмасть, вĕсене кассан çын вилет теççĕ. Йĕрĕх пусать теççĕ* (Чĕмпĕр облаçĕнчи Çĕнкил районĕнчи Ялавăр, 1930 çул).[15]

*Усал япаласене пуççапакансем сахал пирĕн Хочашра. Село Хочашра 8 çын киремет тăвать, 3 çын – ыттисене; Лапракассинче 11 çын киремет тăвать, 4 çын йĕрĕх тăвать, 6 çын – ыттисене; Симекейкассинче 9 çын киремет тăвать, 6 çын йĕрĕх тăвать, 2 – ыттисене; Хорамалăхра 7 çын киремет тăвать, 3 çын – йĕрĕх, 4 çын – ыттисене; Олешкината 6 çын киремет тăвать, 2 – йĕрĕхе чӳклет, ытти – çук; Хĕрлĕçырта 5 çын киремете, 3 йĕрĕхе чӳклет, 4 çын ыттисене чӳклет; Попăльта 10 çын киремете, 9 çын йĕрĕхе чӳклет, 8 çын – ыттисене; Анат Ачакра 9 çын киремете, 5 çын йĕрĕхе, пĕр çын – ыттисене; Тури Ачакра 16 çын киремете, 9 – йĕрĕхе, 5 – ыттисене* (Етĕрне районĕнчи Хочаш, 1909 çул).[16]

*Кĕлетри ырă – чунăш ячĕ. Кĕлетне усал ерсе хуçи пăрахса кайнă* (Вăрнар районĕнчи Оравăш, 1934 çул).[17]

*Хĕртсурта йĕрĕх патăмăр* (ТР Çĕпрел районĕнчи Упи, 1930 çул).[18]

*Пĕри* (тăванĕ) *каланă тăрăх, Йăван ятлă старик утсемпе çытармаран таврăнать тет ир çине. Йĕрĕх хурами патĕнчен пĕр чăх тухăрĕ тет те, лаша умне ӳксе, кĕç-вĕç лаша ури айне кĕрсе каяс пекех пырать тет. Лаши кунăн харт-харт! тăвать тет. Çапла мăталанкаласа, кускер, килне çитсе кĕтĕм тесе, калать тет. Кун хыççăн чăххи те çаплах кил картине кĕрсе карĕ тет те тек лаша ури айĕнчех çумхаланать тет. «Чим-ха, куна мĕн тăвам эпĕ», – тесе каларĕ тет Йăван старик. Пĕр сӳс пушă илчĕ тет те: «Ман килте-и кунта Йĕрĕх;» – тесе ку чăхха ну вĕтелеме тапратрĕ тет. Ун хыççăн старик пушă-па çатăлтарттарса пырать тет. Çапла вара чăххине йăвăççин хăвăлĕ ăшнех хăваласа кĕртсе ячĕ тет те лешĕ пачах çухалчĕ тет* (Вăрнар р-нчи Кĕçĕк Кипек тăрăхĕ, 1910 çул).[19]

*Ампарне çырма хĕрне илсе тухса çунтарсан та Йĕрĕх ку килтен çавах кайман. Лĕпĕш чĕрĕлнĕ эрнере,* 23.04.1875, *çав Василий Иванов пахчинчи Мелĕм-хуçа вырăнне хам кайса пăхсан хӳме юписем çумĕнче сарлаккăшĕ-тăршшĕ 2 вершшу-кран пысăк мар 23 пир касăкĕ (хывакан çын ячĕпе улттăшне тăрăхла касса янă), кивĕ кĕпен икĕ хĕрлĕ тăваткал татăкĕ*

*(пĕринпе пĕчĕк нухрат чăркană), нухрат чăркană шурă хут татăкĕ, пилĕк пуслăх кĕмĕл укçа пысăкăшь икĕ нухрат, хытса ларнă икĕ хура çăкăр татăкĕ, пĕр пуслăх икĕ пăхăр укçа (пĕри хӳмерен тулаш енчерех, тепри çăкăрпа пĕрле юпа çурăкĕнче), çуллă çăмахпа (чустаран тунă çуллă шарик) илсе килнĕ тăм саватпа йывăç чашăкăн икĕ катăкĕ куртăм. Ку япаласене эпĕ естествоиспытательсен Хусанти обществине кайса патăм* (Куславкка районĕнчи Кивъял, 1875 çул).[20]

Йĕрĕх вырăнне киремет шайне хăпарма килхуçи ялти сумлă ватти пулса мăчавар функциййĕсене хăйĕн çине илме пултарни те витерет. маларах ĕнтĕ ку килпе çыхăннисем йăх хăвачĕпе, тăван йăласене çирĕпрех тытса пынине ялта, таврара ят илнĕ. Йĕрĕхĕ те инкек-инкекре, тăшман усалĕнче ялйыш хӳтти пулса тăнă, татăклă сăн илсе çутă кун шанăçĕ пулса тăнă.  Акă, тĕне кĕмен Ассалля XIX ĕмĕр вĕçĕнче – XX ĕмĕр пуçламăшĕнче уйрăм кĕлетре йывăç кĕлетке (кап) упранă. *В дни языческих праздников и обрядов для моления этому истукану-божку и обрядового жертвоприношения, помимо родственников хозяина клети, собирались и другие суеверные чуваши. Внутри клети для обрядового пиршества были сооружены специальные скамейки и стол... Развалины клети и поныне вызывают у верующей части населения чувство страха.* (Патăръел р-нчи Ишлĕ, 1959 çул).[21]

Сăваплă çĕрте çутă укçа-çаврашка (кĕмĕл, калай, тăхлан, шăвăç) вырăнне хĕрлĕ-сарă укçа та (пăхăр, той, йĕç, тен, ылтăн та) хывма тытăнни, ĕç-пуçа ватă арçын йĕркелесе пыни, выльăх-чĕрлĕхпе, тутлă апат-çимĕçпе, пир-авăрпа чӳклени, ятне «киремет» сăмахпа палăртни кунта амалăх витĕмĕ, йĕрĕхлĕх сĕвĕрĕлнине, патриархат туллин палăрнине, ислам витĕмне те кăтартать.

«Киремет», «йĕрĕх» сăмахсем тĕрлĕ çĕрте тĕрлĕ пĕлтерĕшпе, синоним пек те пулни тутарлăх витĕмĕ хушăран хушă вăйланса илнинчен килет. Атăл тăрăхĕнчи халăхсен ăс-хакăлĕпе нумай тĕн хуçаланма пикенни, юлашкинчен тата марксизм-ленинизм та, палăртнă сăмахсен пĕлтерĕшĕсене кăштах тĕссĕрлетнĕ пулмалла.

## 8.3. Йĕрĕх манăçса пыни

Чăвашсем тĕрлĕ тĕнсен пусмăрĕнче пурăннă пулин те çапах хальлĕхе хăйнеевĕрлĕхне çухатман-ха. «Йĕрĕх» сăмах та лексиконтан тухса ӳкмен, тулли пĕлтерĕшĕ нумай енчен йăшнă пулсан та. Тĕпчевçĕсем, ун пирки ыйтсан, час-часах çакăн пек хуравсем илтеççĕ: «илтмен», «темиçе килте пурччĕ», «халь çук ĕнтĕ» т.ыт.те.

Тĕп чăваш çĕрĕнче XIX ĕмĕртех ку ăнлавăн тулли пĕлтерĕшĕ манăçма тытăннă. XX ĕмĕр тĕлне хăшпĕр ялта кăна çын евĕрлĕ йĕрĕх кӳлеписем юлнă. Малтанхи, чăн ĕненӳпе туллин пурăнакансем кăна йĕрĕх тăнă хуралтăсене, унăн çутçанталăкри вырăнĕсене уянă. Мăртса кайнă, нĕрсĕрленнĕ йĕрĕх пĕрнисене ялйыш çапах вĕсем упраннă кĕлете, лаçа сӳтмесĕр те тытман. Хире, Урала XVII–XVIII ĕмĕрсенче куçса кайнă йăхташăмăрсем хушшинче вара йĕрĕх хисепĕ вăрах хушă чакман.

*Темскер Йĕрĕх майлăччĕ, çав вырăн вара путсĕр вырăн, тетчĕ анне. Пуканесем тунă-тăр, вара чӳкленĕ те пуль* (Чĕмпĕр облаçĕнчи Çĕнĕ Малăклă районĕнчи Малаел, 1984 çул).[22]

*Йĕрĕх йоманĕ: унта кăркунне саксам туса, вот хоратчĕç, ташлатчĕç, ĕçсе-çиса* (Çĕмĕрле районĕнчи Чартакан, 1930 çул).[23]

*Йĕрĕх ĕлĕк пулнă. Астăвап. Унта ял вĕçĕнче суккăр хурама пур. Çанта хурансем çакнăччĕ, эп пулă тытса çӳреп. Сăхсăхса вара хурсем пуснă унта, пăтăсем, а çын нумаях пулмасть* (Самар облаçĕнчи Исаклă районĕнчи Йĕкĕрçăл, 1984 çул).[24]

*«Йĕрĕх» сăмах кунта пулнă* (Чĕмпĕр облаçĕнчи Чăнлă районĕнчи Анатри Тимĕрçен, 1984 çул).[25]

*Йĕрĕх хуралтăсенче пурăннă* (Чĕмпĕр облаçĕнчи Чăнлă районĕнчи Вăта Тимĕрçен, 1984 çул).[26]

*Йĕрĕх пуканеллисем ялта ик-виç кил пурччĕ. Халĕ çук ĕнтĕ* (ТР Лениногорски районĕнчи Çĕнĕ Шешкел, 1984 çул).[27]

*Йĕрĕхсем пурри çинчен илткеленĕ* (ТР Аксу районĕнчи Çĕнĕ Аксу, 1984 çул).[28]

*Йĕрĕхе çĕмĕртĕм, пĕрĕшне туеккине исе тохрăм, виç хут çавăрса çапрăм та икĕ пуслăх окçасам тохса карĕç, çĕр полĕ;*

*мана ним те полмарĕ, йĕрĕх ним те туимерĕ* (Муркаш районĕнчи Туçи Олкаш, 1930 çулччен).[29]

*В начале XX века некоторые предприимчивые хозяева, у которых еще имелись фигурки, изображающих Йерехов, стали использовать их как средство наживы, присваивая все, что приносили молящиеся в жертву идолам: деньги, домашних птиц, мед и т.д.*[30]

*Тата Йĕрĕх çинчен акă çапла сăмахсем сарнă, калаçнă. При калат, эпĕ Йĕрĕхе хурама хăвăлĕнче кушак пулса ларнине куртăм тет.*

*Тепри калат, эпĕ пĕрре ирех лашасам çитарса тавăрнатăп, тет те, хурама хăвăлăнчен чăх пулса тухрĕ те уялла тарат, тет. Эпĕ çав чăха хăваласа çитрĕм те лаша йĕвенĕпе вилес патне çитиччен çапрăм, ку чăх вилчĕ пулĕ тесе малалла утрăм. Нумай та каймарăм, каялла çавăрăнса пăхрăм та: хайхи чăх тăнă та уялла татах тарать. Ну, эпĕ те каялла чăха хваламa тапратрăм. Унтан хваласа çитрĕм те йĕвенпе вилеччен çапрăм та пăрахса тавăрăнтăм. Кайран вара те çапнă çиртех вилчĕ, те тата чĕрĕлсе карĕ, курмарăм-пĕлмерĕм, тет.*

*Тата калаççĕ: йĕрĕх çакнă йăвăç çине ан пăхăр, пăхсан тытать, ан кулăр. Йĕрĕх япалине ан тытăр, тенĕ.*

*Йĕрĕх чăх пулса тухнă тенине 1892 çулта каласа пачĕ мана пĕр çын. Эпĕ уна каларăм, суятăн эсĕ, терĕм. Вăл, чăнах, тесе ĕнентерет. Эпĕ çав çынпа 1892 çулта суха пĕрле турăм. Вăл мана çавăн пек: Йĕрĕх, Киремет, Сурăм, Прахăç турă, Вилĕ турри пур тесе, авалхи йăласем çинчен каласа паратчĕ.*

*Кайран вара вăл, Йĕрĕх чăх пулни çинчен нимĕн те пĕлмерĕм, тет. Те чăнах чăх пулчĕ, те Йĕрĕхех пулчĕ пĕлмерĕм, тесе каласа пачĕ вăл мана* (Вăрнар районĕнчи Çĕнĕ Кипек, 1890 çулсем).[31]

Тĕрлĕ ĕмĕрсенчи чăвашсен (пăлхарсен) тĕрлĕ çĕрте тĕрлĕрен тĕнчекурăм-ĕненӳпе пурăнма тивнĕ пулин те ĕненĕвĕнче уйрăм çын ку хĕреслĕхĕн-ха (е исламăн, е иудаизмăн, е т.ыт.), ку вара хамăр чăвашăн тесе картса тăмасть. Вăл çавна ĕне-

нет, ăна çитет. Мĕншĕн тесен православи никĕсĕнче, тутарлăх пуçламăшĕнче те халăхлăх тăрать, уйрăм тĕн тытăннă тата сарăлса вăй илнĕ вырăнсенчи халăхсен йăли-йĕрки, шухăшлавĕ, ăс-хакăлĕ т.ыт.те. Тата чăн, тĕрĕс турăпа (христос-и унта, аллах-и) пурăнатăп тесе шутлакан та (кулленхи ĕненӳре, тĕшмĕшлĕхре, тыткаларăшĕпе т.ыт.те) ниепле те хăйсен тĕнĕ çирĕплетнĕ йĕркепе пурăнса пĕтерейместь, йăлисене те туллин тăваймасть. Кулленхи пурнăçра çутçанталăкран та, хура халăх йăли-йĕркинчен те пăрăнса пĕтерме йывăр.

Кирек хăш саманара пурнăç аталанăвĕ пур. Çулсем, ĕмĕрсем иртнĕçемĕн халăх тĕнчекурăмĕ улшăнса пырать, ютсен витĕмĕ те пур. Чăваш вара çапах çутçанталăкпа килĕштерсе пурăнать, унăн хуçи пулма тăрăшмасть.

Йăх умĕнчи яланхи тивĕçе, Йĕрĕхпе çыхăннă чарусене, сĕмсĕрлĕхе картран тухса кайма паманнине теприсем Йĕрĕх характерне куçарнă. Хăшпĕрисен калаçăвĕнче вăл кутăн, чăкăртăш чунăш пек курăнать. Çакнашкал куçăмлă пĕлтерĕшĕпе çынна та палăртаççĕ*: йĕрĕх пек çулăхать, йĕрĕх пек сыхланать, йĕрĕх патши* (Çĕнĕ Малăклă районĕнчи Упамсар, 1984 çул) т.ыт.те.[32]

